# Трактăр

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТĔЛĔСЕН СОЙУЗĔН
ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА КРИТИКĂ
АЉМАНАХĔ

*ВУНПĔРĔМĔШ КĔНЕКЕ*

II

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары
Абонем.

1935
ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР

# Çергей Миронăвич Кирăв



Социалисăм, çĕнĕ обчăлăх стройĕ, клас тăшманĕсен йулашки семпе тата вĕсен социалисăма хирĕç кĕрешес шухăшпа пирĕн ĕрет хĕсĕнсе кĕрекен агĕнчĕсемпе хайаррăн кĕрешсе çĕнтерсе пырать.

Експлоатацине çуратса тăракан никĕссене тĕппех кăкласа ывă тассине пурнăçланаçемĕн, социалисăм çĕнтерĕвĕсем хăвăртланса пынă çемĕн, тăшмансем социалисăмпа хирĕçесси тата ытларах хайарланса тискерленсе пырать.

Çапса аркатнă, анчах тĕпренех пĕтмен тăшман аллинчен паттар çын, ывăна пĕлми револьуционер, таса чĕрелĕ большевик, паттар коммуниссен партипе рабочи класăн чаплă çулпуçĕсенчен пĕри халăх трибунĕ Çергей Миронăвич Кирăв вилчĕ. Ленин вĕрентнине хирĕç пырса фракци пулса ĕçленĕ Зиновйĕв оппозици йулашкисен аллинчен пĕтрĕ Кирăв йулташ. Çак ушкăн, клас тăшманĕсен интересĕсене пĕтĕçтерсе тăнă фракци, рабочи класпа унăн партине хирĕç пытанса вăрттăн сăтăр тăвас ĕçе пăрахман. Политика кĕрешĕвĕн логики хĕрхенӳсĕр. Уççăн йе вăрттăн ĕçлекен тăшмансемшĕн те социалисăмăн çĕнтерӳлĕ утăмĕсем куçкĕретĕнех паллă пулса пыраççĕ. Империалиссем мĕн вăй çитнĕ таран СССР çине вăрçăпа тапăнма хатĕрленеççĕ. Тĕнчери контрреволюци агĕнчĕсем вырăнне тăрса

йулнӑ ӗлӗкхи оппозицисен йулашкисем хӑйсен хӑватсӑрлӑхне кунсерен туйса пыраççӗ. Политика кӗрешӗвӗн логики вӗсене контрреволюцине уççӑнах сойуз тӑвасси умне илсе пырат. Зиновйӗв оппозицийӗн йулашкисем хӑйсен контрреволюцилӗ ӗçӗсемшӗн йут патшалӑх консульствисенчен укçасем илсе тӑрса ӗçхалӑхӗн йуратнӑ çулпуçӗ çине аллисене çӗклерӗç.

Рабочисен массипе мӗн пур çыхӑнӑва çухатса, тӳрӗ чӗрелӗ пролетарипе колхозниксенчен пулашу курмасӑр, икӗпитленсе, партипе рабочи класа улталаса, çак çынсем мӗскӗн пӗчченлӗхе тӑрса йулчӗç. Пурӑна-киле вӗсем шурӑгвардилӗ кӗрешӗвӗн чи ирсӗр метӑчӗсемпе ӗçле пуçларӗç.

Çак фашисла бандитсен идейлӑ никӗсӗ, вӗсен идеологийӗ пулса тӑнӑ оппозици идеолӑгӗсенчен хӑшӗ-пӗри термидорианстві çинчен контрреволюцилӗ идейӑсем сарнӑ вӑхӑтра, вӗсен партине хирӗç ушкӑнӗсен йулашкисем фашисӑм политикилӗ бандитисӑмӑн представителӗсем пулса пынӑ.

Партин çӗнтерӳлӗ çулйӗрне хирӗç таракан, рабочи класа хирӗç пыракан кирек мӗнле оппозицин те кунçулӗ çавнашкал ӗнтӗ. Урӑхла çул çук! Йе рабочи класпа унӑн партийӗпе пӗрле, йе пролетариатӑн тӑшманӗсемпе, фашиссемпе пӗрле.

Кирӑв йулташӑн вилӗмӗ пире пурсӑмӑра та тата вирлӗрех, çинетӑрса, сыхлӑхлӑ пулса ӗçлеме хушат.

Тӑшман пуррине, вӑл ӗçленине, пире сийен кӳрес тесе пур майсемпе те усӑ курма тӑрӑшнине йаланах асра тытса, вӗсемпе нихӑçан килӗшми кӗрешсе пымала.

Тӑшмансем хӑйсен идеологине илемлӗ литература тата ытти искусствӑсем урлӑ та, кӗнекесем, хаçат-журналсем урлӑ та сарма пӑхаççӗ.

Чӑваш кӗнеки-журналӗсене халӗ те буржуалӑ националиссен, елменевшчинӑн шухӑшӗсене сӗтӗрсе кӗме тапаланакансем пур-ха (Йуманӑн, Хусанкайӑн, Петтокин ӗçхалӑхӗшӗн йут произведенийӗсем).

Пирӗн илемлӗ литературӑ журналӗсен, редактӑрсен, критиксен тивӗçлӗ таран большевикла сыхлӑхлӑ пулас пулат, илемлӗ литературӑ продукцин пахалӑхне вӑхӑтра тӗплӗн хак парса пырса клас тӑшманӗн идеологине парти çивчӗлӗхне вичкӗн çапса хуçмала.

Кирӑв пек маттур большевика, етеме, паттӑр кӗрешӳçе çухатнӑ пролетариатӑн хуйӑхӗ калама çук тарӑн. Кирӑв йачӗ çенӗ социалисӑмла общӗствӑна, ӑна туса пӗтерме пултаракан мӗлйунсен чӗрисенче ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнӗ.

Кирӑв вал аслӑ пролетари революцийӗ туптаса тунӑ тӗлӗнмеле большевиксен класçикла сӑн-сӑпачӗ, обрӑзӗ. Кирӑв вӑл граждӑн вӑрçи фрончӗсенче пролетари полкисене йертсе пыраканӑн политикӑла организатӑрӑн класçикла сӑн-сӑпачӗ.

Кирӑв вӑл большевикла пурӑнӑç енергийӗн, вӑйӗн, хаваслӑхӗн, мӗлйуншар ӗççыннисен пултарулӑх пуçаруне ӗненнин класçикла примерӗ.

Кирӑв вӑл большевикла типтерлӗхӗн, тӗнчери пролетари революцин ӗçне парӑнса ӗçленин класçикла сӑн-сӑпачӗ, пролетарисемпе колхозниксем, академиксемпе пионерсем, инженерсемпе живописçӗсем, хӗрлӗармейцӑсемпе писатӗлсем йуратнӑ тӗлӗнмеле етемӗн обрӑзӗ

Çӗнӗ типлӑ етеме—социалисӑм строитӗлствине, ударнике, большевика—художӗствӑлӑ паха çырса кӑтартасшӑн кӗрешекен совет писатӗлӗсем Çергей Миронӑвич Кирӑв обрӑзӗпе хӑйсене-хӑйсем хаваслантарӗç. Совет писатӗлӗсен Кирӑв пурнӑçне, унӑн революцилӗ çулйӗрне, тӑшмансемпе йепле çирӗппӗн çапӑçнине, çынсемпе хӑйне йепле тытнине, ӗççыннисен мӗлйуншар массисемпе таччӑн çыхӑнса тӑнине т. ыт. те сӑнаса вӗренмеле.

Унӑн пурнӑçӗ совет писатӗлӗсемпе ытти искусствӑ тӗлӗшне ӗçлекенсене калама çук аслӑ художӗствӑлӑ обрӑзӗсемпе хавхалантарӗ. Вӗсем Кирӑв пурнӑçӗ тӑрӑх большевик çинчен тӗлӗнмеле йурӑ хурӗç. Вӑл йурӑ етемлӗхӗн ӗмӗр тӑршшӗпех йанӑрӗ.

# Валериан Владимирович Куйбышӗв



ПСК(б) Партин Тӗп комитечӗ партийе, хамӑр ҫӗршывври тата пӗтӗм тӗнчери рабочи класпа пӗтӗм ӗҫхалӑхне 1935-мӗш ҫулта йанварӗн 25-мӗшӗнче 14 сехет те 30 минутра ПСК(б) Парти Тӗп комитечӗн политбӳро членӗ, ССР Сойузӗн Халӑх комиссарӗсен канашӗн председателӗн заместителӗ тата ССР Сойузӗн Халӑх комиссарӗсен канашӗ ҫумӗнчи Совет Контроль Комиссин председателӗ ВАЛЕРИАН ВЛАДИМИРОВИЧ КУЙБЫШӖВ йулташ чӗре чирӗпе вӑхӑтсӑр вилсе кайни ҫинчен пысӑк хуйӑхпа хурланса пӗлтерет.

КУЙБЫШӖВ йулташ хӑйӗн пурнӑҫӗн йулашки кунӗччченех патшалӑхпа партин пысӑк ӗҫне харсӑррӑн туса пырса кӗрешӳ ӗҫӗнче вилчӗ.

КУЙБЫШӖВ йулташ пролетари революционерен сӑн-сапатне катартакан ҫирӗп ленинцӑ, партипе рабочи клас тӑшманӗсемпе нихҫан та килӗшмен, коммунисӑмшӑн хӑйне хӗрхенмесӗр кӗрешекен ҫын пулнӑ.

Унӑн революцилӗ ӗҫӗ вырӑссен малтанхи революци вӑхӑтӗнче пуҫланнӑ. КУЙБЫШӖВ йулташ хӑй большевикла паттӑрӑн ӗҫленӗ ҫулӗсенче Ленин партишӗн хӑйне хӑй хӗрхенмесӗр кӗрешекен пулса тӑрса, патша тӗрмисемпе ссылкисем витӗр тухнӑ.

Граждӑн вӑрҫи ҫулӗсенче КУЙБЫШӖВ йулташ Хӗрлӗ ҫара политикӑ тӗлӗшӗнчен йертсе пыракан паллӑ ҫынсенчен пӗри пулнӑ.

Хамӑр патшалӑхпа хуҫалӑх строителствине йертсе пыракан тата пысӑк организатӑр пулса тӑрса, КУЙБЫШЕВ йулташ хӑйӗн пӗтӗм вӑйне социалисӑм тӑвас ӗҫе панӑ.

Валериан Владимирович КУЙБЫШӖВ партишӗн хӑйӗн пурнӑҫне парса ӗҫлени, ӗҫхалӑх ырлӑхӗшӗн ывӑнмасӑр, хӑйне хӑй хӗрхенмесӗр ӗҫлени мӗлйуншар пролетарисемпе ӗҫҫыннисемшӗн вӗсен коммунисӑм ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешес ӗҫӗнче пример пулса тӑрӗ.

ПӖТӖМ СОЙУЗРИ КОММУНИССЕН (больш.) ПАРТИ ТӖП КОМИТЕЧӖ.

*В. ПАЙМЕН.*

# ÇАМРĂКЛĂХ.

КАЛАВ.

Курти мучин пурнăçĕнчен 100 çулне кайала илсе пăрахсан, вăл вара çап-çамрăк каччă пулса тăрĕччĕ. Хăçан, ăçта, мĕнле пуçланнă унăн вăрăм, ĕмĕртен те вăрăм пурнăçĕ? Кам пĕлет? Кам, мĕнле сăмахпа ун çинчен каласа парĕ? Унăн тантăшĕсем пирĕн асаттесем çуралнă вăхăтрах вилсе пĕтнĕ, анчах тантăшĕсем мĕн каласси не вăл хăй те каласа парĕччĕ. Ун тантăшĕсенчен аслăраххисем—ун çинчен, вăл йепле, ăçта, хăçан çурални çинчен тĕплĕн каласа пама пултарас çынсем, III Александр патша престол çине ларма хатĕрленнĕ чухнех вилсе пĕтнĕ. Унăн архивĕсем çук, ун çинчен хаçатсенче çырман, унăн тахçанхи пурнăçне пĕлекен çук.

Унăн пурнăçĕ йепле пуçланса кайни çинчен епĕр шухăшласа илме кăна пултаратпăр. Çуралсса вăл Державин вилнĕ чух, Маркспа Енгĕлс çуралнă чух, Пушкин лицейра чух, декабриссен сойузĕ тĕвĕленнĕ чух çуралнă. Вăл хăйĕн пурнăçĕ тăрăшшĕнче пулнă, историшĕн паллă ĕçсене пĕлсе, астуса тăмали çын пулнă пулсан, нумай ĕçсем çинчен каласа парĕччĕ пире. Вăл пире—декабриссен пăлхавĕ çинчен те, Франциири виçĕ революци çинчен те, Маркспа Енгĕлсăн паллă ĕçĕсем çинчен те, вырăс престолĕ çинчи 5 патша çинчен те (виçĕ Александр, икĕ Микулай çинчен), Халтуринпа Желябăв çинчен те, Лавровпа Бакунин çинчен те, икĕ ĕмĕрти вăрçăсем çинчен те, 1905 çулхи революципе Асла Октабĕр çинчен те каласа парĕччĕ. Анчах ăна вĕсем çинчен пĕлме паман. Ăна Йака йалĕн тăваткал лупашкинче ĕмĕр иртерме хушнă. Кам çаган пек хушнă ăна? Ĕмĕр хушнă, йĕрке, патшасен самани хушнă, ун чухнехи йытăла пурнăç хушнă. Ним те тăваймăн, çавнашкал пулнă ун чухнехи тĕнче.

* * *

Октабĕр революцийĕччĕнех 100 çула çитнĕ старик хăйĕн пурнăçне тĕплĕн астумаст. Мĕн-мĕн пулман-ши унăн пурнăçĕнче? Нумай ĕçсем пулнă, нумай çулсем иртнĕ. Анчах ĕçĕсем кĕрхи икĕ хăмăр кун пек, анчах çулĕсем икĕ хăмăр пĕлĕт татки пек—пĕрпекех, уйăрса илме те йăвăр. Вĕçĕмсĕр кунсем, çулсем йерипен шуса иртсе кайнă хыççăн халĕ асра—тĕтре, тĕтĕм пек çăра, сĕрĕм пек усал тĕтре... Çав кăна. Асра уншăн çакă кăна: хĕвелтен ир, шевлерен ир, автанран ир вăранат Курти мучи. Сирет çийĕпчен ĕмĕрхи çĕтĕк сăхманне, тăрат „хура пÿртĕн“ çĕр урайĕнчен, тухат шупка тĕгрен ирĕлекен тула, çакат хура çĕлен пек йавăнан пушша, тытат кĕмĕл саслă йешĕл шăпăра...

Унтан кӗтӳ, ӗмӗр хӑйсем хушшинче вӑрҫса тавлашакан кӗтӳ ӑсатакан хӗрарӑмсем, унтан йешӗл хир... Курти мучин тусӗ—ылтӑн хӗвел... Ку ҫула-ха. Хӗлле урӑхларах. Курти мучин ҫурчӗ сук. Ҫавӑнпа та вӗҫрен вӗҫе, килтен киле сӗтӗрӗнсе ҫӳрет вӑл хӗлӗпех...

Кунта астумалийех ҫук. Вӑл кунсенчен кашнийӗ йепле пусланнине, йепле иртнине викам та асра тытса йулаймӗ. Анчах пӗр куна пурӑнса иртернӗ 400 000 кунран расnах уйӑрса илет вӑл. Ана вӑл нихӑҫан та манас ҫук.

Вӑл куи Куртей йаланхи пекех пиг ир вӑраннӑ Ун пек кӑмӑллӑ ир уншӑн унччен пулман. Унӑн ӗмӗрхи ӗмӗчӗ вӑл кун тулмала пулнӑ. Вӑл кун Уљка сӑмах татса пама пулнӑ. Касхине, кӗтӳрен таврӑнсанах, Куртей Уљка патне хыҫалти сукмакпа тухса шунӑ. Кӗтӳҫӗн чӗри ҫурӑлас пек шакканӑ. Мӗншӗн шаккас мар—пайан вӑл тӗнчипе те чи ӑрӑскаллӑ чӗре пулат, пайан Уљкан вӗри чӗри ун ҫумне ӗмӗрлӗхех ҫыпҫӑнасшӑн...

Халиччен пулман, туйман хаваслӑхпа ҫатан урлӑ сиксе каҫнӑ Курти. Хыҫалти пахчара, йешӗл курӑк ҫинче Уљка хӑйӗн чун савнинэ кӗтсе илмеле. Анчах Курти йешӗл курӑк ҫемҫе мамӑкӗ ҫинче Уљкана курваймач. Унта Уљкан шӑллӗ—Панту кӑна ларнӑ, куҫҫулне Ҫалӑвар ҫырми пек йухтарса ларнӑ вӑл.

— Мӗн пулчӗ, Панту, ма йӗретӗн, аппу ӑҫта?

— Аппана Киҫељов улпут патне тытса илсе кайрӗҫ,— тенӗ Панту айван куҫҫуљ витӗр. Мескӗн Панту, мескӗн Курти пекех, ҫак сӑмахсеве куҫҫуљ витӗр каланӑ вӑхӑтра вӗсен чи ҫывӑх, чи йуратнӑ ҫынни Йака йалнс урӑх нихҫан та таврӑнайас ҫуккине туйман.

Курти хӑйӗн савзине урӑх пӗрре те курайман. Уљка таврӑнман.

Ӗмӗр кӗтсе пурӑннӑ кӗтӳҫ хӑйӗн савнине кӗтсе илеймен, ҫавӑнпа та авланмасӑрах йулнӑ.

Ҫак куна — Уљка ҫухалнӑ куна — Курти ӗмӗр тӑршшӗпе те манман, манас та ҫук...

* *

Ҫулсем тӗрлӗ йӑвӑрлӑхпа кӗмсӗртетсе иртсе кайса та Курти мучин ҫамрӑклӑхне пӗтерсе лартаймарӗҫ. Халӗ вӑл ҫӗнӗрен ҫуралнӑ. Халӗ вӑл „Канаш" колхозри чи паллӑ активис.

Сухалли уван шурӑ, ҫӳҫӗ те шурӑ. Стан ҫуртӗнчен тухнӑ майӑнах вӑл ҫӗтӗк картусне хывса кӑлкантан та шурӑ ҫӳҫне хӗвелӗн ирхи чи ҫемҫе ҫуттипе ҫуса илчӗ. Хӗвелӗ Курти мучи ҫине пӑхнӑ майӑнах ӑшшӑн, чӗререн кулса йачӗ. Курти мучи те хӗвел ҫине куҫве хӗссех пӑхат, вӑл хӑйӗн ҫӗр ҫул ытла пурӑнса та ватӑлман чӗрине уҫса йарсах, нихҫанхи пек савӑнса кулат, хевелпе пӗрлех кулат, унпа ӑмӑртса кулат. Хӗвелпе вӑл пит туслӑ. Кам пӗлет, тен, мӗн пур тӗнчере те вӑл — хӗвелӗн чи ҫывӑх, чи шанчӑклӑ тусӗ пулӗ.

Пӗр 17 ҫул ӗлӗкрех Курти мучишӗн хӗвелтен ҫывӑххи никам та, нимӗн те пулман. Вӑл кӑна ирсенче Йака йалӗн

ĕмĕрхи кĕтӳçипе ăшшăн калаçнă. Пурнăç Курти мучине ытла хытă тулласа пăрахнă вăхăтра хĕвел ăна ачашланă; тĕттĕмрен тĕттĕмччен хирте çӳрекен кĕтӳçе çăмăр йĕпетсен, хĕвел ăна ăшăтса типĕтнĕ. Нумай чухне кĕтӳçĕн хуйхи ытла пысăк пулнă, ун пек чух хĕвел те ним те тăвайман, Курти мучин ытла хытă вĕрекен ăшне пусарайман. Халĕ вĕсем пĕр-пĕрне ытла та лайăх пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ. Йулашки çулсенче Курти мучи хĕвеле те тĕлĕнтерсех пăрахрĕ. Кулать... пĕрмайах кулать Курти, хĕвелтен ирттерсе кулать. Хаљ ĕнтĕ, хĕвел тĕксĕмленнĕ вăхăтра та, ун тусĕ чĕререн савăнать.

Айван хĕвел, пĕлмест курăвать, Курти мучин тусĕ хаљ пĕрре кăна мар. Хаљ унан чи çывăх тусĕ — МТС политпайĕ. Çавăнпа та унăн савăнăçĕ хаљ чарăнусăр, вĕçĕмсĕр...

Курти мучи хыçĕнчевех, стан çуртĕнчен, пит çамрăк ача килсе тухрĕ. Вăл та хĕвелпе куç хĕссе илчĕ, унтан Курти мучине алăран тытсах хăйпе пĕрле илсе кайрĕ.

* * *

Вĕсем Петĕр ку йала килсе лекнĕреннех туслă. Вĕсенчен пĕри тепринчен 100 çул аслă — пĕр ĕмĕр! Петĕрĕн ашшĕ те çук, амăшĕ те çук. Пулнă-и, пулман та-и вĕсем — ăна хăй те пĕлмест, никам та пĕлмест. Астăвать вăл — пĕр хура сухаллă çын ăна хĕл варринче çара çунапа хулана илсе килчĕ. Кайран вара асра çаксем татăкăн-татăкăн килсе тухаççĕ: вокзал, чугунçулĕ, хуласем, унтан Самар. Самартан вĕсене йалсем тăрăх хресченсем хушшине салатрĕç. Вăл ĕç — те 1923-мĕш, те 1924-мĕш çулта пулнă, ун чух Петĕр пĕр 6—7 çулта пулнă пулас. Советра пĕри Курти мучийе кулсах каларĕ:

— Пурăнан, ват-супнă, пĕччен, ил ывăллăха пĕр-пĕр йĕкĕте... вон, кăвак куçли сан çинеле питĕ ăшшăн пăхать.— Кулкаларĕç çапла советра, анчах Курти мучи кулмарĕ. Вăл чăнахах та кăвак куçлă ачана ывăлларĕ. 6 çулхи вырăс ачипе 100 те 6 çулхи чăваш старике нихăçан уйăрăлми туслашрĕç. Пĕрне-пĕри йут чĕлхене вĕрентме тытăнчĕç. Пĕр çулталăкран Петта чăвашла питĕ таса калаçма вĕренчĕ. Курти мучи те вырăсла аванах пакăлтата пуçларĕ.

10 çул ытла вĕсем пĕр-пĕрне пĕтĕм чĕререн йуратса пурăнаççĕ. Петта ку хушăра йалти шкула вĕренсе пĕтерчĕ. Курти мучи ăна тата вĕрентесшĕнччĕ, анчах 6 группă пĕтернĕ хыççăн Петта кутăнланчĕ, урăх шкулта вĕренесшĕн пулмарĕ. Вăл трактăра чунтан-вартан йуратса илнипе трактăриссен курсне вĕренме кĕчĕ.

Халĕ вăл мĕн пур МТС-ĕпе те чи лайăх трактăрис.

Çураки пуçланман-ха. Анчах Курти мучипе Петта тахçанах станра. Вĕсем çĕр акма ĕлкĕрсе пынине те асăрхаççĕ, çав вăхăтрах кашни кун 3—4 сехетрен кайа мар трактăр патĕнче мĕшĕлтетеççĕ.

* * *

Пака йалĕ чугунçулран инçех мар, пĕр 3—4 çухрăмра кăна. Машинă иртсе çӳрени пĕрмайах илтĕнет. Петташăн ĕмĕрех ку

тĕлтен чугунçул хире хурçăпа йĕрлесе тухнă пек. Курти мучишĕн апла мар. „Нумай та пулмаст-ха“ кунта нимле чугунçул та пĕр хăлаç тăршшĕ те сукчĕ. Кĕç çак йĕрпе, хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнеле халăх кăткă пек кĕшĕлтетрĕ те, çавăн хыççăн вара, чугунтан тунă икĕ ансăр йĕрпе „шуйтан ураписем“ мĕкĕрсе, тĕтĕм те вут кăларса чупа пуçларĕç. Лармастчĕç чăвашсем вăл урапа çине. Нумайччен Курти старик те лармасăр пурăнчĕ, унтан вара, пурăнсан-пурăнсан ăна та ларма тиврĕ.

Пайан чугунçулпа çӳрекен „урапа“ çине мар, таçта та кĕрсе ларĕ Курти мучи. Вăл тем çинче те ĕнтĕ ларса курнă. Пĕлтĕр кĕркунне, тырпул уйавĕнче çунатли çинче те ларса вĕççе çӳрерĕ вăл. Икĕ урапали çине кăна ларса курман ĕнтĕ Петтан аслашшĕ,—тӳнет мур, ун çине кăпăр-капăр лараймăн.

Курти старик, Петта, Лекçей—партком çекретарĕ тата бригадир Каттай кĕçĕр тĕттĕмпе МТС-ран киле таврăнаççĕ. Вĕрçĕне „форд“ тĕттĕмре те йăлтăртатса пырат. Йака йалĕн активне политпай начаљникĕ хăйĕн патне чĕнтернĕ пулнă совешчанийе; совешчани хыççăн начаљник вĕсене автомобилпе леçсе хăварма хушнă.

Ку совешчани Йака йалĕн активĕ умне питĕ пысăк задачă лартрĕ Колхоз тикĕсех мар ĕçлет. Пĕр тĕлте çитĕнӳ, тепĕр тĕлте прорыв. Пĕр ĕçшĕн мухтат вĕсене политпай, тепĕр ĕçшен йатлат. „Канаш“ колхоз хĕрлĕ йалав та, чăпта йалав та илсе курнă; вăл хĕрлĕ хăма çинче те, хура хăма çинче те тем чул пулнă. Мĕншĕн капла-ха? Активăн пĕлмеле, сăлтава тупмала

Начаљник пĕтĕм актив умне лартнă задачăран урăх тата кашнин умне уйрăм конкретлă задачă лартрĕ. Курти мучийе вăл выљăх-чĕрлĕх уйрăмне хытăрах сăнама хушрĕ, бригадир Каттайа çтена хаçатне вăйлăлатма, йалкорсене тачăрах йавăçтарма .

Курти мучи хăйĕн ăшĕнче кулкаласа илет: „Хăм... выљăх-чĕрлĕх... выљăх-чĕрлĕхне епĕ ахаљ те хыта сăнап, кунта хăшпĕр çыннисене хытă сăнамала, начаљник йулташ. Шарлас мар-ха,—тет çавăнтах шухăшĕнче ырми старик.—Тĕрĕслес лайăхрах, вара курăпăр“.

* * *

Каттай мĕн пур районĕпе те чи лайăх бригадир шутланат. Вăл пермайах малта, унăн бригадивче дисциплинă пуринчен те лайăх, унăн бригади МТС-ран та, районран та, крайран та темиçе хут премии илнĕ. Йалан ĕçре, вучахри тимĕр пек хĕрсе кайакан Каттай хăшпĕр чух шухăша кайат, ун пек чухне бригадирăн асве çаксем киле-киле тухаççĕ:

Ирхине пыл пек тутлă ыйхăран уйăрăлас килмест... чышса вăратаççĕ... ĕçлес килмест... ирĕксĕрех ĕçлемеле, вăрçса харкашса иртеретчĕç куна... Каçхине Каттай пек çамрăксем пухăнатчĕç улаха... улахра вăрçса-çапăçса пĕтмен каç иртместчĕ. Çурçĕр тĕлнеле Каттай шайкки урам тăрăх, хыçал тăрăх асса çӳрет. Килкартинче урапа йе кăрман урапи ларат-тĕк—Каттай унта пырса çитнĕ те. Кăрман урапин тăватă кустăрмине те кăларса илеççĕ.

4 кустăрмана 4 йенвеле сĕтĕрсе кайаççĕ. Пĕр малти кустăрмине Каттай хăй йатса пырат. Ытгисем çăл кутне пухăнса ахăрса тăраççĕ. Тăваттăн, пуран тăвата йенчен тăрса урапана çăла йарăнтараççĕ. Вара пуçланат Каттай шайккин ирччен чарăнми „савăнăçĕ“...

Урăхла савăнăça Каттай ун чух пĕлмен. Çав кунсенчен вара вăхăт нумай иртрĕ, пурăнăç пĕтĕмпех улшăнчĕ, хаљ тин туйса илчĕ Каттай савăнăç мĕн иккенне. Ак хаљ унăн асăнче урăх картин:

Крайри тĕп хулара бригадă хаçачĕсен редактăрĕсен сљочĕ пухăнчĕ. Сљот чи чаплă çуртра уçăлчĕ. Каттайа унăн хаçачĕ пит лайăх ĕçленĕшĕн крайри сљота йачĕç Акă мрамăрпа гранит тĕслĕ çтена çине темиçе çĕр лампа çутти ўксе шуçăм выљатат. Залра халăх чăп тулли. Кунта крайри мĕн пур районсенчен те делегатсем килнĕ, крайри тĕрлĕ организацисен представителĕсем, рабочисем Сцена çинче, хĕрлĕ сукнапа витнĕ сĕтел хушшинче президиум Ак сљот председателĕ премийе тивĕçлĕ йатсене вулат.

Кĕтмен çĕртен трибуна çинчен „Товарищ Катаев, редактор бригадной газеты колхоза „Канаш“, тени Каттай хăлхинче йанраса кайрĕ. Каттай вырăнтан тăрсах симĕс ковйор тăрах сцена çине хăпара пуçласан, пĕтĕм зал алă çупни аслати кĕрленĕ пек хăлхасене хупласа хучĕ. Председатĕл аллинчен премиилсе вырăна кайса ларичченех алă çупни хаваслăн кĕрлерĕ. Кун пек савăнăça Каттай халиччен нихăçан та курман, илтмен, туйман.

Сљотра кăна мар туйат халĕ савăнăça пирĕн бригадир, ăна вăл ĕçре, кĕрешўре, çĕнтерўре куллен-кунах туйат.

Уйхир станĕвчех хитре тĕслĕ краскăсемпе илемлетнĕ хаçат. Хаçатăн чăн варринче питĕ вата шур сухаллă старик трактăр руљне çамрăккăн тытса ларат. Кам ку? Кăва колхозниксем пăхна майăнах палласçĕ, ку—Курти мучи. Мĕншĕн вăл трактăра çăварлăхласа унăн руљ тилхепине алла йарса тытнă? Çак ўкерчĕк айне пăхсассăн ответ та тупма пулат. Анчах колхозниксем ответне вуламасăрах пĕлеççĕ.

Ĕç çапла пулнă. Çуркунне районри тата политпайри работниксем трактăрис йатне илтме екзамĕн тытнă. Малтан теори тĕлĕшĕнчен екзамĕн пулнă, вĕсене тĕрлĕ ыйтусемпе тĕпчесе тĕрĕсленĕ, кайран трактăрпа çўресе кăтартмала пулнă. Анчах райĕçтăвком председателĕ Васуркин йулташ, мăнтăртарахскер, шўтлеме йуратаканскер, теориле екзамĕн пĕтнĕ хыççăн тăчĕ те, пĕсехине чĕтреткелесе, куçĕсемпе выљаткаласа:

— Йулташсем, ну кă, кам тата екзамĕн тытма желайушчи пур? — тесе хучĕ.

Пурте шăп, президиумра кăна Васуркинтан кăшт кулкаласа илчĕç.

— Ес тата кăндидатсем сĕясе сасăласшăн пулăн,— терĕ пери, Васуркин çине тăрăхларах пăхса. Çав вăхăтра пĕр сасă етемсене шалтах тĕлĕнтерсе лартрĕ.

— Епĕ желайушчи, йулташсем!— терĕ сасă хыçалти кĕтесрен. Йеррипе, лăпкăн калана самахсем аслати кĕрлесе, пĕтĕм ытти

сас-чĕве лапчăтса лартнă пекех, пĕтĕм сасса хупласа хучĕç. Çак сăмахсене калакан çын вырăнтан тăрса, туйипе чул урайне шаклаттарса президиум патнеле утрĕ. Вăл камне пурте курчĕç,— курчĕç те ăнланчĕç: старик шут тумаст. МТС-ран Йака йалĕ йеннеле вĕрекен çил ахалтен мар пайан 10 çухрăм хушши туйапа çул тăрăх танккаса килекен Курти мучин шур сухалне çилемеслĕн ласканă. Вăл Курти мучийе каллех йала таврăсшăн пекки пулнă, анчах старик парăнманнипе кура, вăл, анчăк пек, урасем тавра йавăнса ватă çыннăн пуçĕ çумне йăвашшăн ачашлама тытăннă. Старик хăйĕн тĕллевĕ патне çитес кăмăлĕпе çурхи çанталăка йăвашлатнă.

Районри актив Курти старике лайăх пĕлет. Çавăнпа та унăн йуман пек ватă та тĕреклĕ кĕлеткине курсан кулма пăрахрĕç, сывлăш çавăрмасăр, шăппăн мĕн пуласса кĕте пуçларĕç.

Комиççи председателĕ старикĕн пĕлӳлĕхне ыйтусемпе тĕрĕслеме тытăнчĕ. Ответлет Курти мучи, ыйтусемпе килĕшекен шухăша вăл шурă сухал витĕр тирпейлĕн кăларса комиççи куç умне хурат. Шухăшсем тĕрĕс, çыхăнулă, тĕплĕ.

Трактăрис Ваççа вырăнта тӳссе лараймаст, вăл пĕр тăрат, пĕр ларат, пĕр хĕрелет, пĕр шуралат, чышкисемпе такама йуналаса та илет, хăй çавăнтах тата кулса та йарат. Мĕн пулнă пайан Ваççана? Ваççа — Петтан чăн çывăх тусĕ. Ваççа Петтапа ăмăртат. Вĕсем хăйсем хушшинче çакнашкал догăвăр тунăччĕ — Ваççа райçĕрпайĕн пуçлăхне трактăрис йатне илтмелĕх трактăр ĕçне вĕрентет. Петта хăйĕн аслашшĕне вĕрентет. Срукĕ 3 уйăх. Анчах 2 уйăх та иртмен-ха, Петта хăйĕн обйазателствине тултарнă та пулат. Ну-и, шеҫмă та! Çав вăхăтрах Ваççа райçĕрпайĕн пуçлăхне хăйĕн ăшĕвче тем пек вăрçа-вăрçа илет. „Вот тăмпай! Икĕ уйăх хушши вĕренет, нимле тулкă та çук!“ Çавăнпа та Петтан аслашшĕ трактăрис йатне илме екзамĕн павăшăн çапла вăрçса куҫанса ларат Ваççа. Анчах ку ĕçре Ваççашăн савăнмали те пур. Петта Ваççан бригадине кĕрет. Ваççан бригади тепĕр МТС-чи трактăр бригадипе ăмăртат. Вĕсен хушшинче тунă догăвăрта çакнашкал пункт пур: МТС-чи чи ватă старике вĕрентсе трактăрис тумала. Ку пунктпа, паллах, Ваççа бригади мала тухрĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та Ваççа пайан пĕр шуралат, пĕр хĕрелет.

Пĕлӳсене практикăра тĕрĕслес вăхăт çитрĕ, трактăр гаражне халăх сăрса илнĕ. Гараж алăкĕсем уçă. Гараж хапхинчен йеррине мĕшлетсе, паклатса симĕс тирлĕ тимĕр лаша килсе тухрĕ. Унăн кучĕрĕ урăхла каласан — трактăрисĕ, ĕмĕртен те вăрăм ĕмĕрлĕ, кăлкантан та шурă сухаллă старик, „Канаш“ колкозникĕ, Петтан аслашшĕ — Курти мучи. Çавраka руҫне, сӳс тилхепене, йе вăрăм пушша тыткаланă пекех, тĕрĕс, тăнкă тыткалат вăл. Хыттăн пашкаса, тактлă ĕсĕрсе гараж тавра 3 хут çӳресе çаврăнчĕ тимĕр урхамах, унтан кутăн чакса пырса гараж алăкĕнчен, алăк йуписене перĕнмесĕр кĕрсе кайрĕ, трактăра çаклатмали орудисем патне пырса тăчĕ. Екзамĕн пĕтрĕ, отметкă — „отлично“.

Квалификацилекен комиççи Курти мучийе трактăрис йатне пама йышăнчĕ.

Курти мучи гаражран тухсан ăна 10-15 алă çавăрса илсе йеррипе, ачашшăн çӳлеле сăпкари пек сиктере пуçларĕç.

— Чимĕр, чимĕр, чĕмересем!—савăнăçлă кулса кăшкăрат Курти мучи.—Епĕ мар винават, вон кам винават.—Курти мучин алли Петта çине тĕллерĕ. Вара, йĕри тавра ункăласа тăнă çынсем, урса кайнă пек, Петтана тапăнчĕç, ăна çавăрса тытса тупă пек çӳлеле ывăта пуçларĕç Ваççа та çак вăхăтра, Петта хăйне хура хăма йеввеле тĕртме пăхнине мансах, Петтанăн хăт хăрах пĕççине те пулин тытса çӳлеле ывăтас тесе, „качат“ тăвакан ушкăн патнеле ыткăнчĕ.

Çакна ĕнтĕ колхозниксем пурте лайăх пĕлеççĕ, çтена хаçачĕ çинчи картинă çине пăхса хăйсен колхозĕшĕн мухтанулăн савăнаççĕ. Ку хаçат — Каттай бригадин хаçачĕ. Унăн бригади те тивĕçлĕ мухтанат хăйĕн чи чаплă колхозникĕпе. Хаçатăн редактăрĕ — Каттай хăй. Ун хаçачĕ тавра корреспондентсем йышлăн пухăнвă. Усткорсемпе пĕрле шутласассăн мĕн пурĕ 24 çын. Хаçачĕ хăй те МТС-пе пĕрремĕш вырăн йышăнма тивĕçлĕ.

Курти мучи—выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пахалăх инçпектăрĕ. Ăна çав вырăна политпай начаљникĕ хăй лартса хăварчĕ. Курти мучийе хăшпĕр коњухсем йуратсах каймаççĕ. Малтанхи вăхăтра ăна витене кӳртесшĕн те марччĕ. Анчах вăл витене çӳрес правана вăрçăн пĕтĕм правилисем тăрăх кĕрешсе илчĕ.

Йал ыйха путнă вăхăтра, автансем хăйсен ыйхăлă йуррине йурласа илнĕ хыççăн, Курти мучи туйине илчĕ те пĕрлешӳлĕ витесем тăрăх уттарчĕ. 2-мĕш бригада патне çывхарсан витере тем тапăртатни илтĕнчĕ. Вите алăкне уçса шăрпăк чĕртнĕ майăнах старик çакна курчĕ — пуринпе те таэăçакан „Шăши“ йатлă лашана ыттисенчен уйăрман, лашаэен апачĕ çук. Çитменнине тата вите алăкне те питĕрмен. Курти мучин шурă сухалли çилĕпе кисренет. Вăл вирлĕ, ăша витерекен сăмахсем каласшăн, килкарти тăрăх чупкалат, унта пăхрĕ, кунта хыпаларĕ, сасăпа та шыраса пăхас тесе кăшкăрса илчĕ, анчах ниçта та никам та çук. Вара старик витене йĕркене кӳртме хăй тытăнчĕ. „Шăшийе“ уйăрса тăратрĕ, куритесене çӳп-çапран тасатса лашасене апат пачĕ Вăхăт суталас патне çитрĕ—çавах коњухăн шăршийĕ те çук. Çутăлсан тин витe хыçне тула тухма кайсан, Курти мучи коњух—Мунчук Ваççи вите хыçĕнче виле ӳсĕр çывăрнине курах кайрĕ. Ыйхăран вăрансан Мунчук Ваççи хăйĕн айăпне йышăнса Курти мучийе спаçибă калас вырăнне ун çине правленийе жалăбă çырнă.

Курти мучи правленийе таккаса çитнĕ çĕре Мунчук жалăби правлени сĕтелли çине çитсе выртнă та.

— Сана, Курти мучи, иккĕмĕш бригадă коњухĕ низаконнă витесем тăрăх çӳрет тет?—ыйтрĕ председатĕлĕн замеçтитĕлĕ.

— Тата хăшĕ-пĕри сана фураж вăрласшăн кăна çĕрле çӳрет тесе калакансем те пур,—хушрĕ колхоз счетовочĕ Çемиверстăв.

Курти мучи çаксене илтсен сăмах чĕнейми тĕлĕнсе хытса кайрĕ, чĕтрекен аллинчен туйине ӳкерчĕ.

— Кам калат... ăна?.. кала çиччас!.. епĕ ăна куçĕнчен сурам! —терĕ вăл кăшт пусăрăнсан.

— Калама нелзе, вăл çекрет,—терĕ ăна хирĕç счетовод, анчах председателĕн заместителĕ Кирков ăна пӳлсе çапла каларĕ:

— Курти мучи, кун пирки нумай сăмахламали çук, „не пойман — не вор“ теççĕ вырăссем те, анчах сан çĕрле витесем тăрăх çӳреме кирлĕ мар, ес ватă ĕнтĕ, унтан вăл сан ĕç те мар.

— Как ман ĕç мар? Вĕт епĕ инçпектăр, епĕ выљăх-чĕрлĕх инçпектăрĕ...

— Вот имĕннă, есĕ выљăх-чĕрлĕх инçпектăрĕ, çӳре вăт сурăхсем патне, ĕнесем патне, а лашасем патĕнче сан нечу делăт.

— Как нечу делăт? — харкашат хирĕç Курти мучи, сăмах майăн туйипе те шаккаса илет хăй, — а лаша выљăх мар-и? Мĕн вăл вара выљăх мар пулсан?

— Лаша — тягло вăл, — тесе хучĕ счетовод тавлашăва хутшăнса...

Правлениниче калаçнинчен тулкки пулмарĕ. Курти мучийе „лаша—выљăх мар“ тесе ĕнентерес çук. Вăл хăйĕннех: — раз еп выљăх-чĕрлĕх инçпектăрĕ — епĕ лаша витисене те тĕрĕслеме имейу права! — тесе кăшкăрат вăл.

Правлениран тухнă майăнах шурă çӳçлĕ, шур сухаллă старик сухаллине çиле май вĕçтерсе тӳп-тӳрĕ çулпа МТС йеннеле танккарĕ. Кам старике—тавлашма çеç пĕлет, вăл шухăша кайса куçĕсене сӳннĕ вутпа çутатайас çук, тесе калĕ? Çук, атла никам та калайас çук. Акă вăл çак çулпа тухса утсанах ĕлĕкхине аса илнипе çӳç тĕпĕнченех çӳçенсе илчĕ. Ĕлĕк те вăл пĕрре тĕрĕслĕх шырама çак çулпах утнăччĕ. Тупаймарĕ ун чух тĕрĕслĕхе кĕтӳç Курти. Халĕ вăл шанчăклă утат, халĕ унăн çулĕ тӳп-тӳрех МТС-а, политпайа, начаљник патне.

Кĕнĕ майăнах вăл начаљнике вопроспа хупăрласа илчĕ:

— Мĕн вăл лаша, кала-ха, выљăх-и вăл, выљăх мар-и?

— Мĕн пулчĕ сана, Гордей Иванчă ну, конешнă, выљăх, анчах ахаљ выљăх мар — ĕçлекен выљăх.

Вара Курти мучи „Канаш“ колхозра мĕн пулнисене каласа пачĕ.

Политпайран Курти мучи шурă хут илсе таврăнчĕ. Унта Курти мучийе колхозăн кирек хăш участкине те, хăт хăш вăхăтра та тĕрĕслеме правă панă. Çав шурă хута Курти мучи шурă пир татăкĕпе чăркаса хăйĕн тимĕр арчин тĕпнех пытарса хучĕ. (Арчине Петта илсе панă).

Çак хут Курти мучийе те, „Канаш“ колхоза та пысăк пулăшу пачĕ. Çавна пула ырми старик колхоз кĕлетне пысăк хăрушлăхран хăтарчĕ.

Кĕтӳç пулнă çыннăн куçĕ çивчĕ, таçтанах курат. Пырса тăче пĕрре старик кĕлет пӳлмисене тунă çере, анчах унта урай сараççĕ мĕн. Мереккеле сараççĕ урайне. Пĕр хăмин хĕрри çӳлерех, теприн айаларах, вĕсен хушшине айаккинчен хăма çапса саплаççĕ. Пăхат кĕтӳçĕн çивчĕ куçĕ — куп пек урайа вăл нихçан та курман, „ытла та ырă-çке кун пек урайа сирсе тырра кĕлет айĕнчен йухтарса илме“ шухăшлат хăй ăшĕнче старик.

— Мĕн ку? Мĕншĕн капла саратăр урайа?— ыйтат вăл платниксенчен.

— Çапла сарма хушрӗç пире. Капла тырӑ çӗрмест теççӗ.

— Çтаппан кум, хӑшӗ килсе каларӗ-ха сана ку урай пирки?

— А леш, вӑрӑм çӳçли, мӗнле-ха çавӑн хушамачӗ, мур... а, астурӑм — Çичçухрӑмли.

— Çемиверстӑв-и? — хыпӑнса ӳкрӗ Курти мучи.

— Çавӑ, çавӑ.

Старик правленийе хашкаса чупса çитрӗ, тӳрех пырса тапӑнса сӗтеле чышкӑсемпех шаккаса ыйтас тенӗччӗ вӑл Çемиверстӑвран, анчах тӑрук тем астуса илчӗ те, чейен кулса йарса счетовода алӑ пачӗ.

— Авани-ха, глабух йулташ...

Çемиверстӑв сиксе тӑчӗ.

— Мӗнле глабух тата еп саншӑн, ват-супнӑ, мӗн мӑшкӑласа çӳретӗн!

— Çук, çук, мӑшкӑламастӑп. Сана Куркин çапла чӗнет вӗт, епӗ вӑл пӗр-пӗр Герой тенине пӗлтерет пуле тесе.

— А-а-а, главбух, тин ӑнланса илтӗм. Ну-ну, йулташ ревизор, мӗнле-ха сан ӗçсем?

— Ӗçсем ничево, вот кӗлет урайне пит аван сараççӗ, тырӑ çӗрсе пӑнтахса кайас çук, кам, ес тавçӑрса илтӗн-и ӑна?

Çемиверстӑв çӑхан пек пӑхса илчӗ Курти мучи çине, анчах йӑвашшӑнах каларӗ:

— Çук, пӗлместӗп, платниксене пайан курман та епӗ.

Курти мучи вара дипломатланма пӑрахса „глабух" çине сиксе ӳкрӗ.

— Суйан, тӑшман, есӗ хушнӑ вӗт çапла вредитӗлле урай сарма!

Çемиверстӑв ӑна хирӗç харкашмарӗ, йытӑ пек тулламарӗ, лӑпкӑн каларӗ:

— Çук, çук Гордей Иванчӑ, епӗ платниксене пайан курман, хушма пултарайман, вон, Куркин йулташран хӑт ыйт, кунта платниксен йеччен пӗр-пӗр вредитӗлствӑ пулӗ...

Ку ӗç çапла пӗтрӗ — платниксен бригадирне арӗслерӗç, Çемиверстава айӑплайман — вӑл хушнине-хушманнине никам та курман. Куркин та вӑл ниçта та тухса çӳремен тесе ӗнентернӗ.

Курти мучи кунта платник айӑплӑ маррине чухлат, ӗненет, анчах ыттисене ӗнентереймест. Начальник те: „подозрени кӑна çителӗксӗр мар, доказатӗлствӑ кирлӗ" терӗ.

* * *

Çапла пуçланчӗ кӗрешӳ финалӗ. Каттай кӑларнӑ бригада хаçатӗнче усткор „К. М." каласа панӑ тарӑх, пӗр заметка тухвӑ. Заметкӑ колхозӑн мӗн пур руководствине айӑплат. Заметкӑва ӗненсен: Куркинпа Çемиверстӑв — вредитӗлсем, колхоз председатӗлӗпе партком çекретарӗ — „шлепкесем".

Мӗншӗн айӑплат-ха „К. М." руководитӗлсене? Колхоз патшалӑх умӗнчи обйазатӗлствӑсене пултарас тӗлӗшрен кайа йулнӑ, мӗн пур МТС-а кайала сӗтӗрет, авӑн çапса пӗтересси пӑхса та курӑнмаст.

Ку заметкă тăрăх правлени хăвăрт „реагироват“ тума пуçларĕ. Вăл çав кунах, политпайа хыпар çитермесĕрех, мерăсем йышăннă — Каттай бригадира вырăнтан кăларнă.

— Мĕншĕн вырăнтан кăларнă-ха ăна? Пĕр йенчен вăл — редактăр, тепĕр йенчен кам вăл „К. М.“? Вăл „Каттай Мишши“ пулĕ,— терĕ Çемиверстăв. Анчах Çемиверстăв, чейе пулсан та, „К. М.“ камне пĕлеймерĕ. Ăна икĕ çын кăна пĕлеççĕ, вĕсенчен пĕри — чи активлă усткор, çав заметкăна каласа параканни — „Курти Мучи“.

— Ан тив, кăларччĕр,— терĕ Курти мучи Каттайа,— хăтланччăр, хăйсемшĕн хужĕ пулĕ. Ыранччен тӳс-ха, ыран ман алăра мĕн пур материал пулат.

Курти мучин тусĕ тăман-ха, анчах вăл вăраннă пулас, хĕвелтухăç ани хĕрелнĕçемĕн хĕрелсе килет... Курти мучи тусĕнчен малтан тăрса вăрмана çитнĕ те. Анчах мĕн хăтланат вăл, мĕншĕн катăркас айне упаленсе кĕрсе, куйан пек лăпчăнса выртрĕ вăл?

Акă отвечĕ. Çав вăхăтрах 3 çын катăркас тĕммисене сиркелсе Курти мучи йăпшăнса выртнă тĕмĕ патне пырса тăчĕç. Вĕсене Курти мучи курмасăрах паллат — иккĕшĕ „Канаш“ колхозран, пĕри кӳршĕ колхозран; иккĕшĕ Куркипа Çемиверстăв, виççĕмĕшĕ Куркинăн пултăрĕ — Йегорăв

Çулçăсем çилпе шăпăртатаççĕ. Çилĕ таçта айаккала вĕрнипе калаçакан çынсен сăмахĕсене Курти мучи патне çитерейместь. Курти мучин хăлхине çулçăсем витĕр, ала витĕр суйланса тухнă пек иртекен сăмахсем кăна пырса кĕреççĕ.

— „Çак тĕмме... асту... çĕр те... пăт... Çĕпĕре пойĕс... çиччасах... хатĕр... икĕ пин.. леш Куртукĕ.. çапса пăрахмала... Каттай...“ — йулашки сăмахĕсем вуçех илтĕнми пулчĕç. Унтан Курти мучин çулçăсем витĕр хĕсĕнсе тухакан куçĕ аран-аран çакна курса йулчĕ: Йегорăвĕ кăсйинчен темле пĕчĕк, йăвăр йапала кăларса йысвăпне тыттарчĕ те, çак икĕ етеме труках хыпалантарма тытăнчĕ.

— Елкĕретпĕр, пĕр-икĕ кун хушшинчех сисеймĕç-ха, унччен епĕр Челябăран иртетпĕр...

Етемсем çак вырăнтан уйрăлса тĕрлĕ йеннеле утрĕç — пĕри йал йеннеле, иккĕшĕ станцă йеннеле. Тĕмĕ айĕнче выртакан старик йеррипе тăрса иккĕшин хыçĕнчен йăпшăна-йăпшăна утре. Икĕ етем пысăк уçланкăна çитрĕç те, унти йумансем çумне кăкарса тăратнă лашасем çине утланса ларчĕç.

— Çуранах каймастпăр-и? Лашасем çуккине хăвăртрах сисĕç,— ыйтат счетовод.

— Çук, тип çырмана çитсен, вĕсене тип çырма курăкĕ çинче хăварăпăр...

Ĕмĕр тăршшĕне те Курти мучи кун пек хыпаланман, чупнă вăл каскăн выļăхсем, айаккала таракан выļăхсем хыççăн, анчах усал етемсем хыççăн халиччен чупса курманччĕ, ку ĕçĕ те йăвăртарах. Чупассине те тата етемсем кайнă йеннеле мар, совçем урăх йеннеле чупат вăл. Ăçта чупат вăл? Ăçта чупмалине пĕлет вăл, кун пек пулассине кĕтмен пулсан та, хăвăрт, пĕр

çекундăра тавçăрса илчĕ вăл — „уйхир станне çитес... унтан зăрман леш хĕррине"..

Петта Курти мучин пĕртен-пĕр наçледникĕ. Вăл хăйĕн пĕр-тен-пĕр „тăванĕн" лайăх йăлисене хăйĕн пурнăçне кĕртнĕ. Вăл та аслашшĕ пекех хĕвелпе пит туслă. Пайан Петта тăвайккилĕ зырăна сухалат. Пайан вăл, нормăна 1,8 çитерсе, бригадăн çĕн-герӳне татса памала. Вара вĕсен бригади ăмăртура çĕнтерет, зара вĕсен бригади çинчен крайри конкурс ăмăртун комиççине матерйал параççĕ. Петта бригадăшăн, хăйĕншĕн те конешнă, савăннипе пĕлĕтпе çĕр хушшивчен йарăнса тухнă хĕвеле чыш-калаca та илĕччĕ...

Нумай йурăсем пĕлет Петта, анчах темшĕн пуринчен ытла „Наш паровоз, вперед лети" тесе пуçланакан йурă унăн кăмăл-не кайнă. Халĕ те акă, руле çирĕп тытса пынă çĕртех, вăл çак йурра чăвашла куçарас тесе айкашса пырат.

„Пă-ра-вус, ма-ла-а-ла ес чуп,
Комму-у-унра чарăна-атпăр..."

Унтан тăрук шухăш пырса çапрĕ: „А епĕ поет мар-и апла, а йепле тикĕс тухат.. Чăнахах каларĕ пулĕ крайран килнĕ пĕр писатĕл: „Чăваш литературинче сăвă нумай пулни — вăл çамрăк-лăхран, пĕр йенчен литератури хăй çамрăк пулнăран, тепĕр йенчен писатĕлсем çамрăк пулнăран килет" — терĕ... Епĕ те çам-рăк вĕт!"

Çак шухăшсене ту çинчен пĕр ĕмĕлке чупса анни патах татса хучĕ. „Кам ку? Хăй сухаллă пек, те, мур, акапуç сĕтĕрсе килет, мана 1 8 нормăна тултараймĕ тесе пулăшма йаман-ши Ваççана... Ухмах... А вĕт ку асатте!"..— сăмахлансах йанраса кайрĕ шухăш, „вот ват-супнă, велоçипеда сĕтĕрсе килмест-и вăл? Ну да, станран тӳрĕ сулпах чупат, мана йарăнтарса курас темест-и, йе хăй йарăнма вĕренес темест-и... йӳтенех пулĕ вăл пайан, е-е-е, ăна ман тăшмансем, нормăна ан тултартăр тесе, мана чăрмантарма йаман и?"

Çав вăхăтра старик çул çине тухса тăчĕ те, велоçипедне ăвантарса тем кăшкăрма, çухăрма, алăсемпе сулкалама тытăн-ĕ. „Манах чĕнет вĕт ку, мур" тесе, питĕ кăмăлсăрăн чарчĕ Петта „Интĕра"...

Аран-аран тăнланчĕ Петта... Тăнлансан çилĕпе тăвăнса шу-ралса кайрĕ. Старик чыхăнса, хашкаса калаçат:

— Стана çаврăнса киличчен 40—45 минут иртрĕ пулĕ, вĕсем нип çырмана çитеймен-ха, сан çулу тӳрĕ тата пĕрмай анатала, куса çитме пултаран. Вĕсем çул çинче курăнсан вара хăваласа ан çит, йĕрлесе кай, атту вĕсем сана вĕлерĕç, вĕсен кĕски пур...

Петта педале çавăрса йачĕ, сулахай урине педаль çине пус-са малала йарăнчĕ, сылтăм урине йĕнер урлă ывăтас тесе çĕк-лерĕ.. анчах сасартăк тем астурĕ те, сылтăм урине çĕре пусрĕ.

— А норма? Манăн пайан обйазатĕлнă один восемьсот тумала.

— А еп кам?—хĕрӳн ответлерĕ ăна хирĕç старик,— епĕ трак-тăрис, ман хут та пур ун çинчен... чуп часрах!

Спицăсем хĕвел çуттипе кулса илчĕç те курăнми пулчĕç. Хы-залта кăна шчит çинче çутă шуçăм нумайччен куçра выльанчĕ...

Аватала пулсан та, Петта педале пӗрмай ҫавӑрат, педалӗ вимӗскертен ҫакланса тӑмасӑр йарласа ҫаврӑнат. Ава кӑна сисмесӗр урисеве хыттӑн та хыттӑн йарса пусат велоҫипедис, хӑй руљ ҫинех хунӑ кӑкӑрве.

Велоҫипеда пӗрмай малала йарӑнтарса хӑваласа пыниле ҫул ҫине асӑрхама астуман та Петта, тип ҫырмана ҫил пек тулласа анса кайсан тин аса илчӗ... анчах ҫав вӑхӑтра темӗскер шат! туса ҫурӑлса кайрӗ... пӑхрӗ Петта ҫӗреле: камӗрӑ ҫурӑлнӑ... Велоҫипед ҫинчен сиксе аннӑ чух куҫсем сылтӑмала укрӗҫ. Варта чӑн чӑн ут ҫинчен аннӑ ҫынсем те, тимӗр ут ҫинчен аннӑ ҫын та сасартӑк пӗрне-цӗри курчӗҫ.

Тимӗр углӑ ҫынни утне ҫавӑтса икӗ ҫын патне йеррипе ҫывхара пуҫларӗ. Мӗн шухӑшласа утат-ши вӑл? Пӗлет вӗт—вӗсен кӗски пур.. Тӗлӗнмеле,—ун пек чух тан-пуҫ темле улшӑнми тапхӑрлӑ ӗҫлет. Савӑл пек кӗрсе ларнӑ шухӑш кӑларса пӑрахма май ҫук; темле, шухӑш тавра хӑвна ху гипнозланӑ пек пулса тӑрат. Ҫавӑн пек чух йе роклӑ йӑнӑш пулса тӑма пултарат, йе вихҫан урӑх чух тӑвайми паллӑ, пысӑк ӗҫ... „Ан тив, печчӗр, вара сӑрт леш йенче сухалакан Сахар бригади илтӗ.." Ҫак шухӑш савӑлланнӑ Петта пуҫне. „А кӑшкӑрсан, кӑшкӑрсан илтмӗҫ-и?" Ҫук, ку шухӑш ваљљи Петта пуҫӗнче вырӑн йулман...

...Хӗвел ҫуттине хӑйпе пӗрле пухса пыракан „форд" Сахар бригади патве ҫитсе чарӑвчӗ. Начаљник алӑка уҫса сылтӑм урине анчах ҫӗре йарса пуснӑччӗ—темӗскер пӑшал пенӗ пекех кӗрӗслетрӗ. Унтан тепре. Вара „форд" кӗрешме хатӗрленнӗ йытӑ пек шӑлӗсене шаккаса хӑрлатрӗ те, тип ҫырма тӗпнеле йарӑнчӗ...

*

Унччен те темиҫе хут ларса хир тӑрӑх ҫаврӑннӑччӗ Курти мучи Петта трактӑрӗ ҫинче. Анчах ун чух Петтан куҫӗ аслашшӗ ӗҫне ҫивӗччӗн тӗрӗслесе тӑратчӗ. Халљ унӑн хӑй йенчен, самостойатӗлнӑ ӗҫлемеле. Ун ҫинче пысӑк отвӗтлӑх выртат, вӑл МТС-ӑн трактӑр паркӗ ӑмӑвтура малта пуласси не татса памала. Пайан Ваҫҫа бригадинчи кашни трактӑрис палӑртнӑ нормӑсене тултараймасан, политҫектӑрӑн йалавӗ вӗсене лекмест. Петтана мӗнле ӗҫе йанине манса кайсах, хаваслӑн савӑнса ҫамрӑккӑн ӗҫлет вӑл. Вахӑтпа та вӑйран тайӑлман куҫсем руљ ҫинче тата касӑ ҫинче, урӑх ним те курмаст вӗсен хуҫи.

Ҫиренӑ сасси Курти мучийе ӗҫ хавхаланӑвӗнчен вӑратса хӑй патне чӗне пуҫларӗ. Пӗлет Курти мучи, сасси—начаљник машинӗн сасси. Касӑсем урлӑ сарлакан хӑлаҫласа утрӗ трактӑрис начаљник патне. Ҫите пуҫласан старик куҫӗсем сарлакаланчӗҫ. Машинӑн ҫемҫе вырӑнӗ ҫинчи начаљник аллинче Петта выртнине курсан, старик йӑлтах вӑйсарланчӗ, ӗмӗр ытла пурӑннӑ пурнӑҫра вӑл нихҫан та кун пек сасартӑк вӑйсӑрланман, ҫавӑнтах ӳкетчӗ те пулӗ Курти мучи, анчах Петтан йӑваш сасси ӑна ҫӗнӗрен чӗртрӗ.

— Кил, кил кунтарах, асатте,— унтан аслашшĕ сăмах чĕнессе кĕтмесĕрех ун çине ӳкĕтлевлĕн пăхса ыйтрĕ, сăмахпа ыйтнинчен ытларах тарăн куçĕсемпе ыйтрĕ.

— Асатте, ан ман — один восемьсот, пĕр вершук та кайа мар...— çак сăмахсем хыççăн Петта хăй те урăх пĕр сăмах та хушайми вăйсăрланчĕ, пуçĕ унăн начаљник алли çине ишĕлсе анчĕ.

— Тăвăп, ачам, тăвăп один восемьсот, есĕ чĕрĕличченех бригадăра ĕçлĕп,— унтан начаљник çине шывлă куçĕсемпе пăхса ыйтрĕ:

— Ăçта илсе кайатăр ăна?

— Сирĕн стана, унта епĕ халь кăна Самартан килнĕ тухтăра ăсатвăччĕ.

Хусканас умĕн начаљник старик çине пăхрĕ те, темле çак вата, Маркспа пĕр вăхăтра çуралса халиччен пурăнакан етем умĕнче хăй айăплă пек туйăнчĕ. „Вĕт ăна ача вырăнĕнче пăхса ӳстермеле, а епĕр ăна йăвăр ĕç ĕçлеттеретпĕр“. Çавăнпа вăл старикăн шурă çӳçĕсем çине пăхса ăшшăн каларĕ:

— Ата, Гордей Иванччă, ывăлу вĕт, пурпĕрех ес пайан ăнăçулă ĕçлейес çук.

— Çук, начаљник йулташ. Пайан епĕ один восемьсот тумасăр вĕлерсен те таврăнмастăп.

Начаљник урăх сăмах чĕнмесĕрех машинăна хускатрĕ. Çав вăхăтра старик астурĕ те хыçран çапла кăшкăрчĕ:

— А лешсем, лешсем мĕнле?

— Лешсем Гурйанăв аллинче.

Машинăн лăпка чĕтрекен сасси йăвашланса пĕтсе ларнă çĕре трактăр ĕç йурриле кĕрле пуçларĕ. Касăсем прахут хыçĕнчи шыв хумĕ пек хумханса вытса йулаççĕ.

Тăвĕ-и старик один восемьсот? Петтан, бригадăн чысне ӳкермĕ-ши вăл?

Çук!

Анчах çук теме ытла вата мар-и вăл?

Каллех çук. Вата мар! Унăн чĕри пайан суранлă пулсан та, темле савăнăçлă хумпа хумханат. Мĕн хумĕ вăл? Тепле вилĕмрен те вайлă хум вăл. Вăл — çамрăклăх. Вĕт çамрăк пайан ĕçхалахĕ, çĕр çултан иртнĕ старик те çамрăк. Курти мучи те, унăн Петти те пайан 17 çулта кăна.

Итлĕр-ха, вулакан колхозник йулташсем, хăвăр чĕрӳпе есĕр те Курти мучи пекех çамрăк мар-и, есер те вунçиччĕре мар-и?

---

*М. ТРУБИНА.*

# ПРАСКИ ЙĂНĂШĔ.

**КАЛАВ.**

Каç та пулчĕ. Тулли уйăх та пас тытнă чăрăшсене çутатса пăхрĕ. Праски сĕм-вăрмантан тухса хăйсен йалне çитмен-ха. Праскин ĕнтĕ икĕ кунтанпа çуна çинче ларса пырас килми пулчĕ. Икçĕр çухрăм ытла Праски сĕм-вăрман çулĕпе тухат. Вĕçĕмсĕр вăрман. Уй курăнассăн туйăнмаст. Çуна хуллен шăват. Лавăç—ватă çармăс, лашине хăваланçи çеç пулат: чăпăрккипе лашине хӳринчен лăс тутарса илет те, лаши вара хӳрипе авăсса лĕп-лĕп чупат, пĕкĕ çинчи шăнкравĕ шăлтăрт-шăлтăрт! тăват.

— Е-е-ей! —тет лавăç, чăпăрккипе лашине питĕ хытă çапас пек хăмсарса. Лаши пĕр вунă метр пек лĕплетсе чупкаласа пырат те, каллех уттипе кайат, çунана аран шутарат. Çул тăрăшшĕпе çапла йерипен пычĕ. Çанталăкĕ чылай сивĕ. Çил çук, тӳлек. Шап-шурă йăвăçсем пĕр хумханмасăр шăпăрт тăраççĕ. Лаша лĕплетет, çуна хуллен шăват. Çуна тупанĕ шăхăрни вăрмана йантратса кайса илтĕнет.

— Миçе çакрăм каймала Атăл урлă каçсан? —терĕ лавăç, сăмахсене çармăсла çавăрса хурса, *х* вырăнне *к*, *у* вырăнне *о* каласа.

— Инçе мар, хăвала лашуна. Ытла çĕрлене йулас марччĕ,— терĕ Праски малала пăхса.

Малта кĕçех уçланкă курăнчĕ. Ку уçланкă Атăл хĕррине анат. Тата 5-6 çухрăм кайсан—Праскисен йалĕ.

Шăхăрат çуна тупанĕ, шăлтăртатат шăнкравĕ. Праски питне тăлăп çухи ăшне шаларах чиксе шухăшна кайса ларса пырат.

Праски шухăшĕ—çул тăрăшшĕпе пĕр шухăш—тăвансем патне часрах çитесси, вĕсемпе курнăçасси. Пит тунсăхланă, пит курас килет Праскин хăй тăванĕсене, вĕсем мĕнле пурăннине пĕлес килет. Тăватă çул ĕнтĕ Праски килтен пăрахса тухса кайни. Тăватă çултанпа Праски киле килсе курман, пĕр хыпар та килтисенчен илмен. Сĕм-вăрманти леçничи çуртне ĕçе кĕрсе, Праски хăй те киле пĕр хыпар йамасăр пурăннă.

Праски леçничи çуртĕнче договăрпа ĕçленĕ. Ĕçукçи уйăхне 50 тенкĕ илнĕ. Праски леçничи кăнцелерне тирпейленĕ, леçничи арăмне килти ĕçĕсене тума пулăшнă. Леçничи кил йышĕнче Праски килти сын вырăннех пулнă: пĕрлех апат çинĕ, леçничи хватерĕнчех выртса-тăрса пурăннă, леçничи ăна тумтир те туса панă. Праскипĕн леçничи патне ĕçе кĕни таçтан ырлăх татăлса аннă пекех туйăннă: пит кăмăллă, пит хĕпĕртет Праски çак ĕçе кĕнĕшĕн.

Леçничи çуртне кĕриччен Праски пурнăçĕ начах урăхла пулнă. Тăхăнмалăх тумтирĕ, кĕпи-йĕмĕ, тăли-çăпати те хăйн чух пулман. Праски пиччĕшĕ Иван пит чухăн пурăннă. Вун çичче

ҫитнӗ йӑмӑкне — Праскине те, хӑй ачисене те Иван тумтир таврашӗ туса парайман, ҫӑкӑр-тӑвар ҫитнине курман. Вӑл та ҫук, ку та ҫук, пӗрмай ҫукпа тарӑхса пурӑннӑ Иван килйышӗ. Ачи-пӑчи Иванӑн сахал мар: пиллӗк. Икӗ хӗрачи — Наҫтукпа Униҫ ҫеҫ ӗҫ патне ҫыпҫӑнкаланӑ. Наҫтук вунулттӑра, Униҫ вунтӑваттӑра. Ыттисем — виҫҫӗ ывӑлачи — ҫӑкӑр ҫеҫ ыйтма пӗлетчӗҫ-ха.

Ӗҫлемен ҫын пулман Иван, пит ӗҫченччӗ, хӗлӗн-ҫӑвӗнех ӗҫлетчӗ вӑл. Хӗлле Лариван Ваҫҫине пӗрене турттарса паратчӗ. Ирхине ирех Иван Лариван Ваҫҫин урхамах пек лашисене кӳлетчӗ те, пӗр пӗчченех икӗ лавпа каскасем тийесе килетчӗ. Ҫуркунне йе ҫула, хӑй турттарса купаланӑ каскасенех Кӗтӳҫ Ваҫукӗпе пӗрле хӑма ҫуратчӗ. Лариван Ваҫҫи патӗнче хӑма ҫурсах пулӗ Иванӑн ҫурӑмӗ кукӑрӑлнӑ. Тӑп-тӑп пичӗ-куҫӗ ырханччӗ. Кашни ҫул ҫапла ӗҫленӗ. Кашни ҫул Иван турттарнӑ, Иван ҫурнӑ хӑмасене Ваҫҫа Ентри пасарне, 50-60 лав та пулӗ, ҫу каҫа кайа-кайа сутатчӗ. Канлӗн, йака пурӑнна Лариван Ваҫҫи. Ҫав хушӑрах ҫурӑмне ватса асаплӑн пурӑнна Иван, ҫитменнипе тарӑхса.

— Сире турӑ ҫапла асаплӑ, чухӑн пурӑнма ҫырнӑ, есӗр ҫыннисем ҫавӑн йышшисем, — тетчӗ Ивана Праскисен мӑнаккӑшӗ — Селле аппа, хӑй упӑшкинчен пӗр хӗрачипе тӑлӑха йулнӑ пулин те, тӗреклӗ пурӑнакансксер. Праски мӑнаккӑшӗ патне мӗн ӗҫлеме пултарнӑранпах тӗрлӗ ӗҫсем тума ҫӳренӗ.

— Праски, ҫавна пырса ту-ха, куна ту-ха, — тетчӗ мӑнаккӑшӗ. Ӗҫлетчӗ Праски. Ҫӗрулмипе ҫӑкӑр ҫиесшӗнех кунӗ-кунӗпе ӗҫлетчӗ. Хӑйсен пӳрчӗ пит тӑвӑр пирки, мӑнаккӑш патне ҫывӑрма та кайкаланӑ Праски.

— Пирӗн патӑрта выртса-ҫисе пурӑнатӑн, ӗҫлесе те пулин парас мар-и санӑн пире! Кӗпе кайса ҫу-ха, Варуҫҫин пуҫ ыратат — тет мӑнаккӑшӗ. Шартлама сивӗре Праскине ҫӗтӗк сӑхманпа, урине пир тӑла сырнӑскере, пӗр ҫухрӑма йахӑн ҫырмана кӗпе чӳхеме хӑваласа йаратчӗ. Шӑла ҫыртса тухса кайатчӗ вара Праски. Мӑнаккӑш хӗрӗ мӑнтӑрккаскер, аван тумланса лармаран лармана ҫеҫ, ҫамрӑклах каччӑсене пӑхтарса ҫӳретчӗ. Ӗҫленӗшӗн мӗн те пулин парӗ-ха, тесе ӗмӗтленетчӗ Праски. Мӑнаккӑшӗ, хӗл варринче те пӑр татакӗ ыйтса илеймӗн тенӗ пек, пит хытӑскер, выҫӑхскер, хӑй хӗрӗнчен кӗскелсе, кивелсе йулнӑ кӗписене те памастчӗ Праскине.

— Пӗчӗкле те пайтах ҫӑкӑр ҫитернӗ сана, — тетчӗ вара Праскине мӑнаккӑшӗ, хӑйӗнчен мӗн те пулин ыйтсан. Нумай тарӑхнӑ Праски ҫукпа, ӗҫрен хӑй усӑ курмасӑр нумай ӗҫлене...

— Ей-ей! Ка-ей! — тет лавӑҫ, чӑпӑрккине хӑй пуҫӗ тӗлӗнче ҫавӑркаласа. — Ҫитетпӗр-и час? — лавҫӑ тӑлӑп ҫухине пичӗ ҫинчен сирсе Праски ҫинелe ҫаврӑнса пӑхрӗ.

— Ҫитетпӗр, хӑвала лапуна часрах! Вӗтлӗхрен тухсан сылтӑмала кайакан ҫулпа тыт! — терӗ Праски хӑй шухӑшӗсене татса.

— Ей-ей-ка! Кӑвала тетӗн! Кӑвалас полат те, лаша чопмаст, сӗлӗ ҫисе корман, колкос мар вӗт. Ҫапла... сӗлӗ ҫок, ҫӑкӑр ҫок, порте ҫок!

Йулашки сӑмахсене лавӑҫ такама ҫиленсе каланӑ пек каларӗ. Пас тытса лартнӑ сухалне аллисемпе сӑтӑркаларӗ те, чӑпӑрккине тытса лаша ҫурӑмӗ ҫине сулчӗ. Лаши хӳрине авӑсса илсе хӑй чупнипе лӗплетрӗ. Ҫуна шӑват пасӑрхи пекех, ӗнерхи пекех. Уйӑх ҫути пас тытнӑ йӑвӑҫсене тӳлеккӗн ҫутатать, пас пӗрчисене кавакӑн-симӗсӗн йӑлтӑртаттарать. Праски каллех шухӑша кайрӗ. Лавӑҫ колхоз ҫинчен асӑнни Праски шухӑшне колхоз пуҫланни ҫине, Праски килтен пӑрахса тухса кайни ҫине тӑрӑнтарчӗ. Хаљхи пек астӑвать Праски, пӗрре рикран икӗ лавпа портфӗллӗ ҫынсем килчӗҫ. Шкулта пуху пулчӗ. Тепӗр кун йал пӑлханчӗ. Праски пиччӗшӗ Иван, халиччен сайра кулса, сайра йатлаҫакансккер, халӗ кула-кула хӑйне Лариван Ваҫҫи пуҫҫапса тилмӗрни ҫинчен каласа кӑтартать, хутран-ситрен хӑй Лариван Ваҫҫине йатлаҫса илет.

— Ҫавӑ кирлӗ ӑна, сыснана! Пайтах мана аврӗ! Темӗн чухлӗ ӳксе пуҫҫапсан та хӗрхенмели ҫук ӑна, йытта! Халлех тытса кайччӑр! тет Иван, ҫӗр каҫах сывӑрманскер, чухӑнсен пуххинче пулнӑскер. Ирхине ирех Праскисем патне мӑнаккӑшӗ пычӗ. Хӑй шурса кайнӑ, сӑмси, ахаљ те шӗвӗртерехскер, татах та шӗвӗрӗлнӗ пек, пичӗ-куҫӗ тискерленнӗ.

— Есӗ пирӗн пата пырса ан кӗр ӗнтӗ. Кирлӗ мар пире есӗ ӗҫлени! Йал ҫинче, епӗ сана тарҫӑра усранӑ, тесе калаҫаҫҫӗ тет. Ах тур, тем курса ларӑн ку чухнехи етемсемпе! — терӗ Селле аппа, Праски ҫине сиввӗн пӑхса.

— Урӑх йамӑпӑр, — терӗ Праски инкӗшӗ, Праски хутне кӗрес кӑмӑлпа.

— Аҫта пӗлетӗн, кин, тен мана та, Праскине ӗҫлеттернӗ тесе айӑплӗҫ. Ав, Лариван Ваҫҫине тытса кайрӗҫ, пурлӑхне сутаҫҫӗ тет ӗнтӗ. Кайри касри Левенти таврашӗсене тапкалантарма тытӑннӑ теҫҫӗ. Ах, тем курса ларӑпӑр, тем курса ларӑпӑр. Ан пырса кӗрех пирӗн пата. Епӗ сана, тӑлӑха, аннӳ вилсен, хам ҫийес ҫӑкӑра ҫитерсе ӳстернине никам та асӑнмӗ, пӗр ҫӗклем шыв тухса ӑснине пурте курӗҫ. Пырса ан пирӗн патӑртан, кин, уйранпа виҫӗмкун пӗҫернӗ пашалу, ахалех йӳҫсе кайаҫҫӗ, — терӗ Селле йулашкинчен, Праски инкӗшӗ ҫине кушак пек йӑпӑлтатса пӑхса.

Праскине аван пек те туйӑнатчӗ ҫав вӑхӑтра. Пуйансене тыта-тыта кайаҫҫӗ. Кашни кун пуху. Кӳршӗ-аршӑ лара-тӑра пӗлмест — пӗр-пӗрин патне ҫӳреҫҫӗ, колхоз пулать теҫҫӗ. Пӗрле ӗҫлемеле, пӗрле пурӑнмала пулать; пуйан-чухӑн пулмасть теҫҫӗ. Ҫынсем нумайӗшӗ колхоза ҫырӑнаҫҫӗ.

— Кӗресчӗ-ха пирӗн те колхоза, — тет Праски инкӗшӗ, ырхан питне халиччен пулман ӗмӗтпе саванӑҫлӑн ҫутӑлтарса. Хӑй икӗ кунташпа апат ҫимеппе пӗрех пурӑнать, ҫӑкӑр ҫук. Ачисене пайан, вӑрлахлӑх хӑварнӑ ҫӗрулмине илсе, виҫшер ҫӗрулми пӗҫерсе панӑ. Праски, халиччен мӑнаккӑш патӗнче ҫиелесе пурӑнанскер, халӗ кӗр виҫӗ-тӑватӑ кунтанпа килтех ҫиме пӑхать, ҫимели нимӗн те ҫук... Иван ӗнтӗ киле те сайра килсе ҫакланать: колхоза кӗретӗп, колхоз тӑватпӑр тесе ҫӳрет, тепле ӗҫе суйланӑ ӑна, киле килме те ӗлкӗреймест.

Пуйансене йалтан йарса пĕтерчĕç. 32 кил колхоза çырăнчĕç. Йал хуллен-хулленех лăплана пуçларĕ. Селле аппана, тăлăх пурăнат тесе, тĕреклĕ пурăннă пулин те, нимĕн те тумарĕç.

— Ентĕ санăн колхоза кемели çеç йулчĕ,—терĕ Иван Селлене, Селле вĕсем патне пĕр ирхине ирех пырсан.

— Кĕрĕр хăвăрах, колхозу пулин. Епĕ колхоза кĕрсе ларма ухмаха йермен-ха!—терĕ Селле сиввĕн.

— Епĕр кĕнĕ, хаваспа кĕтĕмĕр,—терĕ Праски инкĕшĕ.

— Пирĕн пĕр çул—колхоз! Чĕререн-вартан йуратса кĕтĕм колхоза! Кайам-ха, Лариван Ваççи амларне тасатса тирпейлеме каланăччĕ-ха мана колхоз пуçлăхĕ,—терĕ те Иван, тумланса килтен тухса кайре.

— Калама килтĕм, астăвăр, ан çыхланăр колхозпа,—тесе темĕнле усаллăн пăшăлтатма тытăнчĕ Праски мăнаккăшĕ, Иван тухса кайсанах.—Илтрĕм епĕ, ăслă çынсем калаççĕ, ырри çук теççĕ колхозра. Кĕрен колхоза—лекрĕн вара серепене. Хам пĕлместĕп те, илтнĕ ĕнтĕ... Улпут тарçисем вырăнне пулатăр. Колхозпа пурăннă çынсем те пур вĕт, кунта мар, таçти айакри чăвашсем патĕнче пур теççĕ те, пит ырă мар тет ĕнтĕ колхозри пурăнăç. Выçă, çĕтĕк-çатăк пурăнаççĕ тет колхозниксем.

— Епĕр халĕ те çĕтĕк-çатăк, выçă ларатпăр, колхозра выçă лармăпăр тетпĕр-ха, пĕр кĕнĕскерне тухас мар, тен, сан сăмах чăн çине пулмĕ,—терĕ Праски инкĕшĕ, Селле çине пахмасăр.

— Тата пушшех чухăна йулма-и!?—терĕ Селле шăл витĕр.

— Сире, пурлăхла çынсене, йурĕ кĕмесен те, пирĕн колхоза кĕрсе нимĕн те çухатмали çук. Есĕр ĕнтĕ хăвăр пурлăхăра колхоза кĕрсен çухатасран хăратăр пулĕ,—терĕ Праски инкĕшĕ мăнаккăшĕнчен тайăлмасăр.

Селлешĕн ку сăмахсем вут çине краççин сапнă пекех пулчĕç: хĕрелсе, куçĕсене чарса, вăл ним каласа пама аптăрарĕ. Мăшлатса, сиввĕн Праски патне пычĕ те: ата, есĕ те пулин хăтăлса йул, тухса кай ку шуйттан килĕнчен, тесе, Праскине пўртрен çавăтса тухса хăй патне илсе кайрĕ. Хăй патĕнче мăнаккăшĕ Праскине колхозри хăрушлăхсем çинчен тем те каласа пĕтерчĕ.

— Çылăха-намăса пĕлмен çынсем колхоза кĕреççĕ. Колхозра хĕрарăмсемпе арçынсем пĕрлех мунча кĕреççĕ тет. Арçынсем хĕрсене пусмăрласа пăсса пĕтереççĕ те, вара хĕрсен никама качча кайаймасăр, ĕмĕр-ĕмĕрех колхозра тарăхса ĕçлемеле пулат. Пуç пĕтни, çамрăк ĕмĕр иртни çакăнта пулат. Сана хĕрхенсе калатăп, хам ачах вĕт есĕ. Аçу-аннў выçлăх çул вилсен хам тăрантса усрарăм сана. Саншăн чĕре çурăлат манăн. Тем намăс курăн есĕ колхоза керсе. Пур унта путсĕрсем, намăса çухатнă хĕрсем, колхоза кĕресшĕн. Есĕ те колхоза кĕрсех йулатăн пулсан—манран пил ан кет! Колхоза кĕресех тесе çырăнтăн пулсан, епĕ сана ылханатăп. Ман ылхан çитĕ. Пиччу ыр пурăнаç кураймарĕ, çавăн пек есĕ те ыррине кураймăн. Халех колхозран тух! Тухмасан, ылханатăп!..

Чылайччен каларĕ мăнаккăшĕ Праскине. Йатласа та, йăпатса та калат. Селле каланă хăрушлăхсене аса илсен, çўç-пуç вирелс

тăрат. Пĕтĕм пуç тăнĕ пăтранат. Вунçичĕ çулхи айван Праскин пĕтĕм кăмăлĕ, шухăшĕ мăнаккăш сăмахне парăнчĕ. Праски, мăнаккăш сăмахне халиччен те пит вырăна хурса пурăнаканскер, çав кунах колхозран тухма шут тытрĕ.

— Пиччуран уйăрăлас пулат вара,—тет мăнаккăшĕ Праскине. Вăл калани мăка çĕçĕпе пуснăнах туйăнчĕ.

— Уйăрăлас пуљ вара,—тет Праски, куççулне çатса.

— Ата, уйăрăл, пайанах тух колхозран, пайанах уйăрал пиччуран та, колхоза кенĕ килйышра пурпĕрех ырри пулас çук, иал кулли, ах, тем намăс кăтартеç мана ку путсĕр тăвансем!— ӳпкелешрĕ, туллашрĕ мăнаккăшĕ.

Праски çав каçах—колхозран тухатăп, пиччерен уйăралатăп тесе, йалканашне кайса каларĕ те, хăй каланине çыртарса хăварчĕ. Праски хăй çапла тунипе килтисене кӳрентерессине пĕлет, анчах ăна мăнаккăш çĕнтерсе илчĕ...

Пит йăвăр. вăхăт çитрĕ Праскишĕн. Сивĕччĕ ун чух. Праскисен çимели нимĕн те çук. Никам патне ĕçлеме кайма çук. Мăнаккăшĕ—çак самана тĕр-тĕрĕ иртсе каймасăр, колхозсем пĕтмесĕр ĕçлеттерместĕп, тет. Пиччĕшепе инкĕшĕ, хăш чух Наçтаçпа Униç те пуйансенчен колхоза йулнă çуртсене тасатма, вăрлăхсем суртлама, çĕрулми çуйлама çӳреççĕ. Праски килтех тĕршĕнсе ларат. Пиччĕшĕ Праски колхозран тухнăшăн текех мăкăртатат.

— Ырăлăхран пăрăнат, ухмах! Йăлăнтарнă пек çӳрет. Ăсран кайнă мăнакка хыççăн кайса нумайах пурăнăç кураймăн.

Туйат, сисет Праски кам çинчен сăмах пынине, анчах пиччĕшне хирĕç нимĕн те чĕнмест.

— Виçĕ кун ĕçлесех колхоз уссине куртăмăр: чухăнсене пулăшу комитетĕнчен çăнăх пачĕç,—терĕ инкĕшĕ Праски кăмалне колхоз йенне çавăрса, ыран ĕçлеме илсе кайас шухăшпа. Çапла каласа инкĕшĕ сĕтел çине çур çăкăр пырса хучĕ.

„Колхозра ухмахсене çăкăр пэрса илĕртеççĕ“, теннечче ĕнер мăнаккăшĕ. Хаљ Праскине çав сăмах аса килчĕ.

„Çăкăр парса илĕртсе чухăнсене колхоза кертеççĕ те, есĕ çине-ха, ĕçле, тесе, вара колхоз çумне хытă çыхăнтарса хураççĕ, чейе вĕт вĕсем, коммуниссем!“ тенине те аса илчĕ Праски.

Пиччĕшсем апат çиме ларчĕç. Инкĕшĕ Праскине те чĕнчĕ. Праски нимĕн шарламасăр кантăкран урамэла пăхат, шăн кантăка чĕрнипе кăтăр-кăтăр хырат...

— Кил, ларса çи тата, ыран вара колхоза ĕçлеме кайапăр. Иксĕмĕр акă халех правленине кайса сана тепĕр хут колхоза кĕртсе килĕпĕр,—терĕ пиччĕш, çăкăра ачисене пайласа парса, Праски валљи те пай касарса.

Праскин, пит çийесси килнĕ пулсан та, инкĕшне пиччеш выçă ларакан ачисем валљи хатĕрленĕ çăкăра ларса çиме кăмал çĕкленмерĕ. Пиччĕшне инкĕш калаçнине хирĕç пĕр сăвар уçмасăр вал, кăмăлсăр пек пулса, урамалах пăхса ларчĕ. Пиччĕшĕн, Праски йунарнишĕн, çилĕ тулса килчĕ пулас.

— Мĕн кирлĕ сана? Мĕн çитмест?! Кама хăрататăн çакнашкал йăлăнтарса, чĕрӳне кӳттерсе! Колхоза кĕрес-тĕк—кĕр пайан!

Ман килте икĕ тĕрлĕ çын ан пултăр! Колхоза кĕмесен, тух та кай мăнакку патне! Ан пултăр манăн килте икĕ тесле! Антраса, сўткеленсе çўретĕн çав, ухмах, тĕшмĕш айне путнă çын сăмахене!

Иван малтанхи сăмахĕсене хыттăн, çилĕпе каларĕ. Праски, пиччĕш ăна кунащкал калассине кĕтменскер, питне хупларĕ те, йĕрсе йачĕ, вара çĕтĕк сăхманне тăхăнса, саплăклă çăм тутрине пичĕ çине ўпĕнтеререх çыхса, пўртрен тухса кайрĕ.

Мăнаккăш патĕнче çĕр каççан, тепĕр ирхинех, Праски çармăс йеннеле ĕç шырама, тăранса пурăнма кайрĕ. Тăван йал курăнми пуличченех вăл йалĕ çине куççулĕпĕ тулнă куçĕсемпе çавăрăна-çавăрăна пăхса утрĕ...

Халĕ ĕнтĕ хуйхăрмаст Праски тăванĕсенчен уйăрăлса пурăннăшăн, хĕпĕртет вăл леçничи патĕнчи пурăнăçпа. Праски шучĕпе, леçничи патĕнчи пурăнăç çителĕклĕ, пуйан, таса, культурăлă пулнă. Праски хăй аван пурăнса час-часах пиччĕшĕн чухăн пурăнăçне аса илет, хĕрхенет Праски хăйĕн чухăн тăванесене. Халĕ Праски тăванĕсем вальльи кучченеç илсе пырат. Хĕпĕртеттерет ĕнтĕ Праски пиччĕш ачисене те, инкĕшне те, пиччĕшне те, пурте кăмăллă пулĕç. Пaçтукпа Униç вальльи Праски пĕрер кĕпелĕх ситцă илнĕ. Арçын ачасем вальльи пĕрер шалаварлăх хура ситцă пекки пур, инкĕш вальльи тутăр, пиччĕшне леçничи хăйĕн кивĕ пиншакне парса йачĕ.

„Тăхăнччĕр пĕрер си, ытла çĕтĕк-çатăк çўреççĕ"—терĕ хăй ăшĕнче Праски, çак асăннă йапаласен тĕркине хăй çумнерех туртса. Калама çук пахан туйăннă Праскийе çак кучченеççем. Мĕн тĕрлĕ савăнĕç ĕнтĕ Пaçтукпа Униç! Вĕсем çине ку таранччен хытă улачаран пуçне нимĕнле ситцă тавраш çакăнса курман. Мĕскĕнсем, ситенеççĕ ĕнтĕ вĕсем çукпа тарăхсах, çын синче çукпа вăтанса, хĕсĕнсе ўсеççĕ.

— Санăн килтисем колкозра-и?—пачах татса ыйтрĕ лавăç.

— Колхоза кĕрсе йулнăччĕ манран, колхозрах пулĕ,—терĕ Праски, тăлăп çухине тути çинчен сирмесĕр. Праскин çак самантра хăйĕн шухăшĕсене татса лавăçпа калаçассн килмен

— Колкозра пулсан аван. Епĕ вăт колкозра мар—начар.

— Епĕ колхоза кайса курман, пĕлместĕп, хăшĕ-пĕри колхозра лайăх пурăнат, теççĕ те, темĕн, пирĕн пичче ĕмĕрте те аваннине кураймĕ, пит чухăн пулнă. Çăкри-йашки ситсе пырсан—йурĕччĕ те, вăл та тепле?

Лавăç урăх нимĕн те шарламарĕ. Уттипе пыракан лашине чăпăрккипе хўринчен сулса илчĕ те, лаши лĕплетрĕ.

„Качакийе те пулин те пур, те çук? Ситмен пурăнăçпа качакине те сутрĕç-и тен"—шухăшлат малала Праски.—Хăмăр качака пурччĕ. Качаки вара пит çўлеле хăпарма пурататчĕ. Малтан тислĕк купи çине хăпарса тăрат, унтан аслăк çине сикет. Аслăк çинчен кĕлет тăррине, унтан пўрт тăррине. Хăвалаcа антарас тесе йапалапа персен, качаки шулап вĕçне пыратчĕ те, ме-ке-ке-ек! тесе çухăратчĕ, хăш чух пўрт тăрринченех кĕрт çинеле сике паратчĕ, çапах аманмастчĕ, аманмали

те çук: пӳрчĕ ытла лутра, пĕчĕккĕ, тислĕк купинчен кăшт çеç çӳлĕрех. Шухăшласа пынăçемĕн Праскин куç умнех тухса тăчĕ урамала пĕр пĕчĕк чӳречелĕ, таткаланса пĕтнĕ чĕренче витнĕ лапчăк пӳрт. Ун умĕнче нăчăр-начăр чăвашла хапха. Пайтах çукпа тарăхнă çав пӳртре Праски. Ах, пит хĕрхенес килет пиччĕшне те, ачисене те. Вилĕм-çĕтĕм пулман-ши? Килтех-ши пурте? Вăрçмĕ-ши мана пичче, çиленмĕ-ши инке, епĕ вĕсенчен уйăрăлса кайнăшăн? Шухăшсем вĕçĕмсĕр, вĕçĕмсĕр...

— Çитрĕмĕр пой, ăçта кĕмеле?—терĕ лавăç.

Тĕлĕрсе пынă пек ларса пыракан Праски тăлăп çухине усрĕ те, уйхапхи патĕнче ларакан йăмрасене курах кайрĕ. Çитнĕ. Çуна уйхапхи патне хывнă кĕрт çинчен çăмăллăн шуса йăрăнса йала кĕчĕ. Çынсем çывăрман—хăйă çутисем кашни килрен пекех курăнаççĕ.

— Хĕрĕнчи килрен шутласа пиллĕкĕмĕш киле кĕретпĕр: чăвашла хапха, пĕчĕк пӳрт,—терĕ Праски, хăйсен пĕчĕк пӳртне хай курассине кĕтсе. Пăхат Праски хăйсен тĕлнеле, пăхат—курăнмает Праскисен пĕчĕк кантăкран тĕксĕм çутă, темĕнле... нумай çутă курăнса кайрĕ пек. Патнерех шăват çуна. Татах пăхат Праски. Шалт тĕлĕнмеле. Праскисен килĕ тĕлĕнчех тейес пулат, нумай кантăклă пӳрт... Вăйлă çутă кантăксенчен урамала çап-çутă ӳкнĕ. Кантăксем пысăк, шурăпа карнă. Пĕр кантăк, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк... пахча йенче тата кантăксем пур. Хытса кайса пăхат Праски. Лавăç лашине çак çурт умне тăратрĕ—пиллĕкĕмĕш киле кĕме калана вĕт-ха ăна. Пĕр самантлăха Праски çуна çинче пĕр тапранмасăр ларчĕ, тĕлĕнсе хытса кайнă пек умри çурт çине пăхат...

— Йăнăшрăмăр пой, чăвашла хапхалă пĕчĕк пӳрт ăçта? Малала оттармала пой?—терĕ лавăç, Праски патне лаша пуçĕнчен çавăрăнса пырса.

— Çук, пиллĕкĕмĕш кил çаках та, пирĕн мар пек,—терĕ Праски, хăй те йăнăшнă пулĕ тесе, именсе.

— Пиллĕкĕмĕш килех полчĕ терĕм те...—терĕ лавăç, умри çурт çине татах çавăрăнса пăхса.

— Пирĕн мар пек те, çапах кĕрсе пăхар-ха,—терĕ Праски, çуна çинчен хуллен анса, вырăсла хапха калинкки патне хăйусăррăн утрĕ. Пĕрикке йарса пуссапах Праски чарăнса тăчĕ, каллех утрĕ.

— Утне кĕртес пой?—терĕ лавăç, лашине хапха патнеле уттарса.

— Кĕртесси кĕртмеле те-ха,—терĕ Праски именчĕклĕ сасăпа, каллех утса пынă çĕртех чарăнса тăрса.

— Мĕншĕн кĕместĕн часрах?—терĕ лавăç, хапхана пырса перĕннĕ лашине пуçĕнчен тытса.

— Хам та пĕлместĕп, те кĕрсен лайăх, те кĕмесен: пичче пӳрчĕ марçке-ха, пирĕн мар. Ата, кĕрт еппин лашуна карташне, килнĕскер кĕрсех тухар.

Çапла каласа Праски калинккене хуллен шăлтăрт тутарса уçрĕ те, карташнеле пăхрĕ. Карташĕнче çĕнĕ хуралтсем уйăх

ҫути ҫинче илемлӗн курӑнса кайрӗҫ. Карташӗ тикӗс, тап-таса, пӗр йур купи те курӑнмасӑ. Таҫта хуралтсем патнеле хур какӑлтатни илтӗнчӗ.

„Кӗрсе-туса тӑрас мар. Пиччӗшне шыраса ку ҫурта килсе кӗнӗ тесе йал кулӗ, йут ҫын патне кӗрсе ҫӳресен, ҫын тем калӗ“ шухӑшлат Праски. Карташнеле йарса пусна урине кайала туртса илчӗ, кутӑн чакса калинккене хуллен хупрӗ.

— Амма кайала?—терӗ лавӑҫ, лашине карташне кӗртме хатӗрленсе тӑнӑскер.

— Ҫук, кӗместпӗр кунта. Пирӗн пиччесем урӑх вырӑна куҫса ларнӑ пулмала, йе, ҫуклӑхпа тарӑхса, пичче йалтан килйышӗпех тухса кайнӑ пулӗ. Аҭа, ҫавӑр лашуна, мӑнаккасем патне кайас,—терӗ те Праски, хӑвӑрт ҫуна ҫине пырса ларчӗ.

— Ак, тамаша! Килӗна топайман,—терӗ лавӑҫ, лашине кӑмӑлсӑр ҫавӑтса.

— Уттар лашуна ҫак урампала айалала, ӑҫта кӗмелине калӑп,—терӗ Праски.

Лавӑҫ лашине ҫемҫен турткаласа ҫул ҫине кӑларчӗ те, ҫуна анатала ҫӑмӑллӑн шурӗ.

Праски тарӑхат. Унӑн чунӗ тӑванӗсемшӗн хуйхӑрат. Мӗнле-ши пичче-инке, ачи-пӑчисем? Ӑҫта-ши вӗсем? Кам туса лартнӑ-ши пиччесен ҫурт вырӑнӗ ҫине ҫакнашкал пуйан ҫурт? Темиҫе тӗрлӗ те шухӑшларӗ Праски, ҫунтарчӗ хусканнӑ чӗрине.

Праскисене хирӗҫ урампала пӗр ҫын пырат, кӗрӗк ҫухине тӑратнӑ, аллисене хыҫалала тытнӑ. Праски ҫак ҫынран:

— Иван ӑҫта пурӑнат ҫав?—тесе ыйтрӗ.

Ҫын чарӑнса тӑчӗ те:

— Мӗпле Иван кирлӗ сана? Кам ес?—терӗ.

Праски патверех пырса пӑхрӗ.

— Чухӑн Иван текенни, ман пичче,—терӗ Праски, Ҫимун пиччене палласа.

— Е-е, Праски-ҫке ес. Хаҭ килтӗн-и? Пиччу ӑҫта пурӑннине, хӑвӑр киле маннӑ-и мӗн ес?—терӗ Ҫимун.

— Манман та, пирӗн пӳрт ҫук унта—терӗ Праски.

— Ха-ха-ха!—урама йантратса кулса йачӗ Ҫимун.—Аҭа, каламастӑп, хӑвах курӑн. Ха-ха-ха! Килне ҫухатнӑ! Иванӑн килне, ха-ха! тупайман! Пелместӗн-ҫке есӗ. Уттар лашуна кайала. Ха-ха-ха! Пиччӗш килне паллайман Ҫапла ҫав, палламала мар пулаҭ хаҭхи пурнӑҫра,—терӗ Ҫимун кӑмӑллан.

Праски Ҫимун пичче каланине пӗтӗмпех ӑнланса илеймерӗ, анчах Ҫимун кӑмӑллан калаҫни Праскийе ыррӑн туйӑнчӗ. Праски лавӑҫне кайала каййма каларӗ. Лашана ҫавӑрса тепӗр хут сӑртала хӑпараҫҫӗ. Праски Ҫимунран пиччӗш ҫинчен ыйтса пӗлесшӗнччӗ, анчах Ҫимун, лавӑҫ лаша ҫавӑрнӑ хушӑра, таҫта, такӑш киле кӗрсе кайнӑ. Праски пӑхкаларӗ, ҫук. Ывӑннӑ лаша сӑртала хуллен, йӑвӑррӑн хӑпарат. Праски урамӑн икӗ айккипе ларакан пӳртсене пӑхса пырат. Акӑ ку виҫӗ кантӑклӑ пӳрт Аҭтуксен, упа йунапарри—Ларик пиччен, тепри Ивушсен, Ивуш ҫумӗнче вара—Праскисен килӗччӗ те, хаҭ...

Лаша малтан пырса чарăннă хапха патне хăйех туртăнса пырса тăчĕ. Ай, мĕнле пысăк пӳрт, ăшĕнче çап-çутах! Праскийе каллех именчĕклĕ шухăш пусарса илчĕ.

„Пиччен мар, пиччен мар, ăçтан пултăр унăн кунашкал çурт? Çимун пичче шӳт турĕ, ăçтан хăйса кĕрес?“ — çак шухăшсемпе Праски, лаша хапха умне чарăнса тăрсан та, çуна çинчен анмасăр çутă кантăксем çине пăхса ларчĕ.

— Кĕрер-и? — терĕ лавăç.

— Ата, мĕн пулин пулат, кĕрсе пăхар, — терĕ Праски йулашкинчен, хăй те çуна çинчен анчĕ.

Праски хапха калинккине паçăрхи пекех хуллен уçрĕ те кĕчĕ. Карташĕнче каллех хур какăлтатрĕ. Сивĕ, тӳлек сывлăшра унăн уçă сасси йанăраса илтĕнчĕ. Лавăç, хапхана йар уçса пăрахса, лашине карташне кĕртрĕ.

Çав самантрах, хур сассине илтсе пулӗ, пӳртрен кĕрĕкне тӳмелекелесе пĕр хĕрарăм тухрĕ.

— Иван, çитрĕн те-и ес? — терĕ вăл, лаша пуçĕ патнеле пырса. Вара, лавăçа палласа, хăйне хăй: Иван пулмарĕ пулас, тесе, Праски йеннеле çавăрăнчĕ те, Праскийе курса ун патнеле утрĕ. Праски инкĕшне сассинчен те, уттинчен те палларĕ. Хĕпĕртенипе Праски чĕри пĕçерсе кайнă пек пулчĕ, пыр тăвăрланса килчĕ. Пĕр самантлăха Праски калас сăмаха калаймасăр тăчĕ.

— Епĕ, Иван хуларан çитрĕ пулӗ, тесе. Кĕрĕр пӳрте. Паллаймарăм-ха епе сире, камсем пултăр есĕр? — терĕ инкĕш ăшшăн, Праски патне тачах пырса.

— Епĕ-çке, инке! — тесе йачĕ Праски темĕнле улшăннă сасăпа.

— Ай, Праски! Есĕ-и, ачам?! — терĕ инкĕш тĕлĕнсе хĕпĕртенĕ сасăпа. Инкĕшне Праски ыталанса илчĕç.

— Сирĕн-и ку кил, пирĕн-и? Пирĕн мар пулӗ тесе, кĕмесĕр тăратпăр, — терĕ Праски, тăлăпне хывса çуна çинчи йапаласене илме тытăнса.

— Пирĕн, хамăрăнах. Кăçал туса кĕтемĕр. Хамăрăн, хамăрăн. Ата хăвăртрах пӳрте, шăнса кайрăн пулӗ, — терĕ инкĕш ăшшăн Праскийе пӳртеле туртса.

— Манăн ута ăçтала тăратас-ши? — терĕ лавăç Праски инкĕшĕ патнеле пырса.

Праски инкĕшĕ, Праскийе курнипе çав самантлăха лавăç çинчен мансах кайнă пек пулнăскер, халĕ лаша патне хăй пычĕ, лашана васкаса тăварма тытăнчĕ.

— Лашине витене хупар. Ĕне кĕçĕрлĕхе картара та çĕр каçĕ. Халĕ лашана утă парас, вара, шăварсан, селĕ парас.

Лавăçпа иккĕш часах лашана тăварчĕç. Праски çуна çинче выртакан йапаласене илсе тăлап çухи çине пас тытса кайнине сиплекелерĕ те инкĕшĕ хыççăн пӳртеле утрĕ.

— Пӳрт ăшăнса çитеймерĕ пулĕ-ха. Икĕ кăмакине те хаӆ çеç хутса çунтартăм. Йур тыттисене пусса лартнисене кайса йусарăмăр та, ĕлкĕреймерĕм. Ах шăнтăн пулӗ, ачам. Вĕри апат çитересчĕ-ха сана.

Çапла калаçса Праскипе инкĕшĕ пÿрте кĕчĕç. Праски пÿрте кĕрсенех йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ. Малти çтена çумĕнче, карса хунă икĕ кантăк хушшинче, çутă çунакан лампă çакăнса тăрат. Лампă тĕлĕнче хырса çунă шап-шурă сĕтел. Урайĕ таса, шурă. Пÿртре ăшаланă аш, çу шăрши кĕрет. Кăмакара чăн та темĕн чăшлатса çатăртатат. Кăмака çăварне, кантăксене карна пекех, шурăпа карнă. Кăмаки чăлт шурă. Çтена çинче çÿлте, кăмака умнерех, тирĕк-чашăк хуракан çÿлĕк. Унта шурă турелккесем купаланса выртаççĕ. Çÿлĕк тĕлĕнчех лутра шкап пекки пур. Ун çинче çап-çутă сăмавар йăлтăртатса ларат, тата шурă алшăллипе витнĕ темле йапала купаланса тăрат. Кăмакапа çтена хушшинче ирĕк, тухса çÿреме те йурат. Унта, çтена çумĕнче, пит çумали, шуçран тунăскер, çакăнса тăрат. Ун айĕнче, пĕчĕк пукан çинче шуç тас ларат. Пит çумали çывăхĕнчех çÿлте, çтена çумĕнче, пĕчĕк çÿлĕк пур. Унта шăл тасатмали шчоткăсем, икĕ пĕчĕк кăвак коропкă тата пĕр татăк сарă супăнь курăнат. Кăмака çине пусса хăпаракан картлашка çинче куçĕсене хĕскелесе пысăк, мăнтăр, хăмăр кушак ларат. Çтенасем çумĕнче сарă сăрпа сăрланă сак. Пĕр айккинчи çтенара шурă, пысăк, çăтах хушă алăк курăнат — шалти пÿрте кĕмелли алăк. Праски инкĕшĕ пÿрте кĕрсенех ештеленме пуçларĕ. Хăй вĕçĕмсĕр ăшшăн калаçат. Ура шăнчĕ пуль тесе, Праскийе кăмака çинчен çăматă илсе пачĕ. Праски тумтирĕсене çакрĕ, тирпейлерĕ. Вара инкĕшĕ Праскине сĕтел патне лампă çутинерех çавăтса пычĕ те, ачашшăн хăмăр куçĕсенчен пăхса илчĕ, хура çÿçĕсене йăкатнă пек, пуçĕнчен шăлса илчĕ. Праскийе, сивĕ пуль тесе, кăвак саттин кĕпе çинчен пысăк шальтутри пĕркентерчĕ. Курăнат, чĕререн хĕпĕртенĕ инкĕшĕ Праски килнĕшĕн. Аçта, мĕн ĕçре пурăннине ыйтса пĕлчĕ Праскирен. Праски тăвата çул хушши хăй çинчен килтисене хыпар туманшăн ÿпкелесе илчĕ. Килйышĕсем ăçта саланнине те сăмавар лартнă хушăра каласа паче инкеше. Иван хулана, патшалăха тырă сутма кайнă. Паçтукпа Униç каçхи шкула — колхоз активĕн шкулне вĕренме кайнă. Митук ĕнтĕ икĕ çул-таппах хулара, йалхуçалăх техникумĕнче вĕренет. Васукпа Ваньук техникă кружокне, шкула чупнă. Сакăр сехет тĕлне пурте килте пулмала. Вĕçĕмсĕр ăшшăн калаçат инкĕшĕ, Праскийе хăна тăвасшăн ештеленет. Пăлтăрти чăлана тухат те пакетсем, хутаççем йăтса кĕрет. Кăмаки патне пырат те питлĕхне уçса, чашкăрса ларакан апатне, пиçмен-ши тесе, тытса пăхат. Сакайне кĕрсе пĕр чĕрес пыл, кĕленче панкăпа варени илсе тухрĕ. Вăрт-варт çеç çавăрăнкалат савăнăçлă инкĕшĕ. Халиччен хи ырхан пичĕ халь çавракаланнă, çамрăкланнă пек туйăнат. Инкĕшĕн хура куçĕсем Праскийе савса пăхаççĕ. Пуçĕнчи утукланă шур тутăр йăка, тикĕс, тăп-тăп тăрат. Херлĕ чечеклĕ пумаçей кĕпе, ун çинчен шурă сапнуп çыхни Праски инкĕшне пит килĕшет. Çемçе çăматтипе сасă кăлармасăр çăмăллăн уткалат. Хăй вĕçĕмсĕр ăшшăн калаçса сĕтел çине апатсем хатĕрлет. Икĕ турелкке çине çимĕçсем лартрĕ. Пĕрин çине тăпăрчă пÿремечипе çăмарта кукли, теприн çине çу сĕрнĕ тулă хăпартлуве, тутлă шăршă çеç çапса тăрат. Çимĕçĕсене ĕнер пĕçернĕ тет.

Хутаҫран, пакетсенчен турилккесем ҫине пренек, печени, конфет кӑларса купаларӗ. Вазӑсем ҫине варени, пыл хурса лартрӗ. Варенине те, пренӗк таврашсене те пахча ҫимӗҫ тӑварлакан савӑтран купӑсташӑн илнӗ, тет. Пылне кӑҫал колхозра панӑ, тет. Пурӗ виҫӗ пӑт та 12 кӗренке илнӗ, тет.

Праски мӗн курнипе, илтнипе, тӗлӗнсе хытса кайса инкӗшӗ ӗҫленине пӑхса ларат. Вӑл инкӗшӗнчен ним ҫинчен ыйтса пӗлме аптранӑ, сӑмахсем те чӗлхе ҫине килмеҫҫӗ пек, Праски пӗр чӗнмесӗр ларат.

Часах сӑмавар та вӗресе тухрӗ: пӑс сирпӗтет. Лавӑҫ кӑштӑртатса пӳрте кӗчӗ. Лашине тирпейлени ҫинчен каларӗ. Инкешӗ кӑмакаран вӗретнӗ сӗт кӑларса лартрӗ. Сӑмаварне сӗтел ҫине лартса Праскипе лавӑҫа чей тултарса пачӗ. Чей ӗҫме тытӑнчӗҫ.

Инкӗшӗ ҫаплах калаҫат:

— Ех, Праски, ачам! Есӗ килте ҫуккишӗн спӗр пиччупа пит хуйхӑрса пурӑнтӑмӑр. Колхоза кӗнӗ ҫулах вара пиччу час-часах калатчӗ: „Епӗр тырӑ нумай илтӗмӗр, ҫӑкӑр пур, ӑҫта-ши, мӗнле пурӑнат-ши пирӗн Праски? Тутӑ-ши? Тумланнӑ-ши?“ тетчӗ вара. Хӑш чух колхозра ӗҫ калама ҫук тӑвӑнса килетчӗ, ӗлкӗрмеле мар. Кунӗн-ҫӗрӗн тенӗ пек ӗҫлеттӗмӗр. Савӑнаттамӑр вара ӗҫ ӑнса пынӑшӑн. Пиччу вара йаланах: „Ах, пирӗн Праски ҫук! Вӑл пулнӑ пулсан, тата нумайтарах ӗҫлеттӗмер, ӗҫӗ те тата час рах пулатчӗ, пӗр килтенех пилӗк ударник пулаттӑмӑр“ тетчӗ вара.

— Тӑватсӑр та ударник пулнӑ еппин есӗр?

— Тӑватсӑмӑр та. Колхоз пуҫланнӑ ҫулах пирӗн пек нумай ӗҫлекен килйыш пулман. Тырри те мӗн колхоза кӗнӗренпе пӗрмайах ӑнса пулчӗ те, колхозниксем аван пурӑнакан пулса кайрӗҫ. Епӗр те ҫынсенчен йулман. Халиччен чухӑн пулнӑ пулсан, хаљ ӗнтӗ пурнӑҫ майне ӳкрӗмӗр, хӗпӗртесе ӗҫлес, пурӑнас килет...

Хӑналат инкӗшӗ Праскипе лавӑҫне. Сӗтел ҫинчи ҫимӗҫсене сӗнет, чейне, сӗтне йара-йара парат, хӑй пӗрмайах калаҫат. Пӗтӗм калаҫни унан пӗр шухӑш тавра—колхоза кӗнипе пурнаҫ йусанса кайни ҫинчен каласа парас килет унӑн, колхоз ҫинчен калаҫнипе кӑмӑлӗ тулат.

— Ах, Праски, нихҫан манас ҫук епӗ ҫав куна!—тытӑнчӗ инкӗшӗ, лавӑҫа чей тултарса парсан.—Ах, Праски! тӗлӗнсе хытсах кайрӑм, йӗрсех йатӑм еп ун чух. Хӗпӗртенипе те ҫын йӗрет иккен. Пӑхатӑп чӳречерен—пирӗн умма лавсем килеҫҫӗ. Чӑн малтапхи лав ҫинче тулли михсем ҫине пиччупа бригадир ларнӑ. Лаша пӗкки тӗлӗнче хӗрлӗ йалав. Чупса тухрӑм хирӗҫ, шутлатӑп лавсене: пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ... вуннӑ... Пӗтӗмпе пирӗн тырӑ вӗт! Хамӑр ӗҫлесе илнӗ тырра колхозниксем пире, ударниксене, хисеплесе киле хӗрлӗ обозпа килсе леҫрӗҫ. 400 пӑта йахӑн тырӑ илтӗмӗр. Хӗрлӗ обозпа килнӗ йулташсене пӗрер курка чей тултарса ӗҫтерем терӗм, пӳрте 5—6 ҫын кӗчӗҫ те, ыттисене кӗрсе тама вырӑн та ҫук.

— Тӗртсе йӑвантарса йар ес ку пӳрте, Иван,—теҫҫӗ колхозниксем кула-кула. Ку тырӑпа есӗ пилӗк кантаклӑ пӳрт пиллӗк

илетĕн, теççĕ. Чăн та вара çав çулах епĕр пĕр вăтамрах пӳрт, внçĕ кантăклăскер, илтĕмĕр. Хаҫ ăна выҫăх пӳрчĕ турăмăр. Кăçал çĕнĕрен ирĕкрех пӳрт тăвас терĕмĕр. Хурамалтан çĕнĕ пӳртех çер аллă пăт парса илтĕмĕр. Колхозра кашни çулах епĕр тырă нумай ĕçлесе илнĕ. Пирвайхи çул пиччу колхозра лашасем пăхрĕ. Çулла пĕр кун сиктермесĕр тăватсăмăр та питĕ тăрăшса ĕçлерĕмĕр. Пирвайхи çулах епĕр ĕне, сурăх, кайăк-кĕшĕк туйантăмăр. Кăçал акă пирĕн пĕр ĕне, пушмак пăру, вуникĕ сурăх, тăвата ратлă сысна çури, кăвакалĕ, хурĕ, кăркки, чăххи-чĕппи... пурте теслĕрен пур. Кăçал икĕ пысăк сысна пусрăмăр: пĕри 7 пăт, тепри 9 пăт туртре. Унсăр пуçне вунвиçĕ хур, вăтăр икĕ кăвакал, çичĕ кăркка пусрăмăр. Çулла, тырăсем вырнă вăхăтра, килте апат пĕçерсе апатланмастпăр та; халĕ, хĕлле, килтех çийетпĕр-ха. Хĕлле столовăйра лаша пăхакапнисене, ĕне сăваканнисене çеç çитереççĕ. Нихçан та çак пурнăçа курасса сунманччĕ, колхоза керсе пурнăçа майласа йатăмăр. Калама çук хĕпĕртетĕп çав колхоза кĕнĕшĕн. Есĕ ĕнтĕ ан кай, Праски, пурăн килтех, кĕр колхоза...

Инкĕшĕ каланине Праски. куçне илмесĕр, умри çимĕççене аствсе пăхмасăр итлесе ларат. Вĕçĕмсĕр тĕлĕнет Праски. Пĕр шухăшласан тĕлĕкри пек, ĕненмеле мар пек туйăнат, анчах инкĕшĕ мĕн калани Праски куç умĕнчех. Праскишĕн сасартăк тĕлĕнмеле ĕç пулса тăнă пек туйăнат. Аса илчĕ Праски мăнаккăш колхоз çинчен мĕн-мĕн каланине.

„Сире турри çакнашкал асаплă, чухăн пурăнма çырнă“ тени те аса килчĕ. Пĕрмайах мăнаккăш Ивана çак сăмахсемпе хăртатчĕ. Çук иккен: суйана тухрĕç мăнаккăш сăмаххисем. Мăнаккăш çинчен шухăшласан Праскин кăмăлĕ пăсăлчĕ: мăнаккăшпе унăн йуратас килми пулчĕ.

Ĕçтерет, çитерет инкĕшĕ хăнисене. Калаçса ларнă хушăран сăмах мăнаккăш çинчен тапранса кайрĕ.

— Мĕнле пурăнат вăл? Кĕнĕ-и колхоза?—тесе ыйтрĕ Праски.

— Пурăнкалат найăк-найăк, ӳпкелешет хăйĕн пурнăçне. Ĕлĕкхи пурлăхĕ халĕ ĕнтĕ унăн пĕтнĕ: тырри-пулли çук, пурнăçĕ хĕсек. Выҫăхĕсене, малтантарах хĕрĕпе иккĕш шут туса, сутса пĕтерчĕç: выҫăхĕсем колхоза кайасран хăрарĕç. Халĕ ĕнтĕ çука йерчĕç. Хуралтăсене сутаççĕ. Хăш чух пирĕн пата киле-киле туллашса кайат вара. Епĕр пĕтсе лартăмăр, есĕр, памăса пĕлмесĕрех, çак саманара хăвăр пурнăçупа пирĕн пек çынсенчен мăшкăласа пурăнатăр. Пĕтермеле сирĕн пурлăха, пурне те пĕр пек тумала, тет вара

— Хăй, мăнакки, колхоза кĕр тесен, мĕн тет вара?—терĕ Праски.

— Ай-йуй, вилĕп кайап, колхоза кĕресси ап пултăр, тет. Хĕрĕпе иккĕшĕ те вара пĕрик ернелĕхе таçта кайа-кайа çухалаççĕ: çектантсемпе йĕрмешнĕ, колхоза вилсен те кĕрес çук,— терĕ инкешĕ, лавăçа виççĕмĕш стакан чей тултарса парса.

— Епĕ те колкоза пит кĕресшăн та, ман кин кĕмест, пойан çын кĕрĕ полнă, айок колкоза, тет,—терĕ лавăç. Вал, Праски

инкеше каланине тӗлӗнсе итлесе ларнӑскер, халӗ тин ҫӑвар уҫса сӑмах хушрӗ.—Пирӗн ҫок,—тесе, вӑл сӑмахсене темӗнле хурлӑхлӑ сасӑпа, кӑмӑлсӑр каларӗ. Хӑй ҫутӑ пуҫлӑ, ырхан пит куҫӗ пӗркеленчӗк, хӑрах куҫӗ шывланса тӑрат. Шӑлсӑр ҫӑварӗпе апата мӑкалтаттарса чӑмлат, ватӑ куҫӗсемпе мӗскӗнӗн пӑхкалат. Шурӑ пир кӗпи ун ҫинче хура та, саплӑклӑ, мӑйӗнчи тутӑр таткаланчӑк. Праски лавӑҫа колхоза кӗрейменшӗн хӗрхенсе илчӗ, колхоза кӗме пӳлсе таракан кинне унӑн ҫиленсе вӑрҫас килчӗ.

„Пирӗн мӑнакка пек“—терӗ Праски хӑй ӑшӗнче, йулашкинчен.

Лавӑҫ чей ӗҫсен кӑмака ҫине хӑпарҫа выртрӗ.

Пӑлтӑрта ура сассисем илтӗнчӗҫ. Такам ҫинҫе, уҫӑ сасӑпа кулса йачӗ, кулас килсех уҫҫӑн кулат. Унччен те пулмин алӑк уҫӑлчӗ те, тулти сивве пӳртеле вӑркӑнтарса Наҫтукпа Униҫ кула-кула кӗчӗҫ. Праскийе курсан хӗрсем пӗр самантлӑха шӑп пулса пӑхса илчӗҫ те, савӑнӑҫлӑн: Аппа! Праски! тесе пӗр-пӗринчен ӑмӑртмала пек, Праскийе йарса илчӗҫ. Праски сӗтел хушшинчен тухрӗ, тӑванӗсемпе ыталашрӗ. Хӗрсем виҫҫӗшӗ те пӗрпӗрин ҫине пӑхса кулкаласа илчӗҫ.

— Ай ҫитӗнсе кайнӑ!

— Паламала мар!

— Ытла тӗлӗнмеле!

Хӗрсем пер-пӗрне пӑхкаласа, пӗр самантлӑха палтӑртатрӗҫ, ҫаврӑнкаларӗҫ. Кулкаласа сӑмахлаҫҫӗ.

— Ну, ҫитӗ ӗнтӗ, салтӑнӑр та ларӑр чей ӗҫме. Праски аппу кӗҫӗрех каймӗ-ха,—терӗ амӗш, Наҫтукпа Униҫ ваљљи чей тултарса.

Хӗрсем хура пуставпа тул туртнӑ кӗрӗкӗсене, пуҫри ҫемҫе, хӑмӑр шӑтӑкла тутрисене патана ҫакрӗҫ те, фуфайкӑпа кӗпе вӗҫҫӗнех йулса, кӗписене турткаласа сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗҫ. Вӗҫӗмсӗр савӑнӑҫлӑ калаҫу. Йанраҫҫӗ уҫӑ сасӑсем—ҫамрӑк сасӑсем. Каласа ӗлкӗрме ҫук Праскин: ӑҫта, мӗнле пурӑнни ҫинчен Наҫтукпа Униҫ сывлама нами ыйтаҫҫӗ. Праски пӗтӗмпе йӗркеле каласа парат.

— Ӗнтӗ сана йамастпӑр унта,—терӗ Униҫ Праскийе.

— Епӗ те ҫапла каларӑм-ха,—терӗ амӑшӗ.

— Упа пек, сӗм-вӑрманта, пӗр пӗччен ҫуртра епӗ пурӑнас ҫук: йалти пек мар унта,— терӗ Наҫтук.

— Епӗ виҫ кунтанах тарса килетӗп унтан, пирӗн кунта, колхоз клубӗнче, ернере иккӗ кино пулат, пӗрре ҫпектакљ лартатпӑр, хӗрлӗ уллахсем, ҫамрӑксен пухӑвӗсем тӑватпӑр. Ан кай, аппа, пурӑн кунтах. Ыран кино. Вӗренсе тухсанах кинона кайатпӑр...

Праски тӑванӗсемпе калаҫнӑ хушӑрах хӑй ӑшӗнче шухӑшлат, тӗлӗнет. Сисӗнкӗсӗрех Праски хӑйӗн леҫничи патӗнчи пурнӑҫӗпе тӑванӗсен пурнӑҫне танлаштарса илчӗ: чӗре туртмаст Праскин леҫничи патне каймa. Халиччeнхи лайӑх пурнӑҫ Праскишӗн халӗ тӗксӗмӗн туйӑнчӗ. Унӑн тӑванӗсем тата авантарах пурӑнаҫҫӗ иккен. Чей ӗҫеҫҫӗ, шакӑлтатаҫҫӗ... Праски хӑйӗн пичӗшӗ хӗрӗсене пӑхсах

тӗлӗнет. Наҫтук ӗлӗк начаркка, илемсӗрскерччӗ. Униҫӗ тата лутрашкаскер ҫеҫчӗ. Чӑпасси тетчӗҫ вара ӑна. Пичӗ унӑн пӑшлак, пиҫмен пашалу тӗслӗччӗ. Тумӗсем ҫинчен калас та ҫук: тӑли-ҫӑпати, ҫиҥӗ-тумӗ ҫӗр саплӑк. Халӗ Наҫтукпа Униҫ—ҫитӗннӗ тӗреклӗ хӗрсем. Униҫ кӑштах лутрарах та, анчах Наҫтукран паркарах. Питҫӑмартисем вӗсен иккӗшӗн те панулми тейӗн—пӗр пӑхсан пӑхасах килет вӗсен питкуҫне. Куҫӗсем, хураскерсем, тӑрӑ, чӗррӗн пӑхаҫҫӗ. Хӗрсен тумӗ—ӗлӗк чӑваш хуҫа хӗрӗсем купашкал тумланна-ши? Наҫтукпа Униҫ иккӗшӗ те пӗр тӗслӗ кӑвак кашемир кӗпепе. Кӗпе ҫинчен уҫӑ умлӑ, кӑкӑр-ҫурӑма тӑп-тӑп, илемлӗн кӑтартакан хӑмӑр фуфайкӑ пӗр пекки тӑхӑннӑ. Урисенче шур пурккипе калуш.

Праски ҫаксене курса, вӗҫӗмсӗр шухӑшласа, вӗҫӗмсӗр тӗлӗнет. Хӑйӗн Наҫтукпа Униҫ ваљљи кӗпелӗх илсе килнӗ ситци ытла хаксӑр йапала пек, паха пуласлӑн туйӑнмарӗ тӑвансем ваљљи илсе килнӗ кучченеҫ. Праскин хӑйӗн тумӗ те кӑвак саттин кӗпе кашемир ҫумӗнче ним те мар.

Чей ӗҫсе калаҫса ларнӑ хушӑрах Униҫ пӗрмай чарӑнаймасӑр кула-кула илет. Тем аса иле-иле кулат.

— Мӗн пӗчченех кулатӑн ҫак есӗ?—терӗ Униҫе амӑшӗ, шӳтле пек. Кала-ха пире те, епӗр те кулар.

— Пит кулӑшла-ха,—терӗ Униҫ, каллех кула-кула.

— Шкултан тухсан, парикмахӗрскинче пит ҫутӑ та, унта кӗтӗмӗр. Унта Униҫ кулӑ тупрӗ. Ҫул тӑршшипе тӳсме ҫук кулса килтӗмӗр. Ав халӗ мана та кулӑ йерчӗ,—уҫҫӑн кулчӗ Наҫтук.

— Мӗнле кулӑ, кам пӑрахса хӑварнӑ унта сирӗн ваљљи кулӑ?—терӗ амӑшӗ, хӑй те кулма тытӑнса.

Униҫ калама тытӑнчӗ, хӑй кулатех.

— Арҫын ачасем шкултан килетшӗн: атӑр, колхоз парикмахӗрскине кӗрсе тухар, терӗҫ. Ҫын ҫӳллӗш куҫкӗски пур тет, терӗҫ. Кӗтӗмӗр. Парикмахер пӗр ҫынӑнне пуҫне хырат. Мики пичче пулнӑ вӑл, Мики пичченне хырат. Сухалне те, пуҫне те пӗтӗмпе хырнӑ. Парикмахер Мики пиччен пуҫне хырнӑ хыҫҫӑн, ҫуса одеколонпа сапса йачӗ. Сасартӑк парикмахӗрскине Мики карчӑкки пырса кӗчӗ.

— Пирӗн Мики кунта-и?—тет.

— Кунта-ҫке,—терӗ парикмахер.

Мики пичче, леш, йури ним шарламасӑр ларат, карчакӗ ҫине пӑхмаст, паллат-и-ха тет пулас.

Карчӑка Мики пичче пит кирлӗ пулнӑ мен, ҫын килнӗ тет, кетет, тет, ӗнтеленсе шыраса ҫӳрет.

— Ара, ӑҫта Мики? Мики!—тет карчӑкӗ, пӳртре ҫавӑрӑнкаласа. Пӑхат, шырат—Мики ҫук, тарахса шырат. Епӗр пурте тусейми кулатпӑр. Карчӑк старикне шыраса ҫавӑрӑнкаласа ҫӳрерӗ-ҫӳрерӗ те, Мики пиччеренех: Пирӗн Микине курмарӑн-и, ачам? тесе ыйтрӗ. Леш, Мики пиччийӗ, нимӗн сас памасӑр пуҫне ҫеҫ сулларӗ—курман, терӗ. Татах карчӑк Мики пиччене арҫынсем хушшинче шырат. Шыраса ҫӳрерӗ-ҫӳрерӗ те, Мики пичче ҫине перӗнсех, Мики ҫук, тесе тухса кайрӗ. Пите кулӑшла пулчӗ.

Униç каласа панинчен пурте кулчĕç. Пуринчен ытла Униç хăй кулат.

— Микише карчăкĕ мĕн ĕлĕкренпех мăк сухалпа, лапсака çӳçпе курма вĕреннĕ те, халĕ сухалне те, çӳçне те кастарсан, паллайман ĕнтĕ,—терĕ амăшĕ.

Шакăлтатса, савăнăçлă-калаçса чей ĕçсе тăранчĕç. Наçтукпа Униç Праскийе тепĕр пӳлĕмне йертсе кĕчĕç. Вăрăмрах, ирĕк пӳлĕмре маччаран çакăнса тăракан молни лампă çап-çутă çунат. Пӳлĕмре икĕ сĕтел. Пĕр сĕтелли çине шурă клейонкă сарнă. Унта çĕвĕ çĕлемели машинă ларат. Праски тытсах пăхрĕ.

— Атте иртнĕ хĕлле патшалăха тырă парса илсе пачĕ,—терĕ Наçтук.

Тепĕр сĕтелли çинче кĕнекесем, хаçатсем купи-купипе выртаççĕ, тата... громкоговорителлара парат.

— Кунтах пур-çке сирĕн радио,—терĕ Праски тĕлĕнсе.

— Пур,—терĕç Наçтукпа Униç. Ваŋушпа Ваçук аппаланаççĕ вĕт.

— Хăш чух чăвашлах калат. Пит тĕлĕнмеле вара, —терĕ Наçтук.

Праски пӳрт ăшчиккине ытараймасăр ăмсанса пăхат. Çтенасем çинче Ленин, Сталин, Молотăв, Крупскайа сăнĕсем. Турăш никĕш кĕтесре те курăнмаст. Сĕтелсем таврашĕнче 5—6 венски пукан. Кантăксем умĕнче чечексем. Кăмака çумнерех пĕр тимĕр кроват, хăмăр утийал витнĕскер, икĕ шурă питлĕ минтерне хăпартса тăрат. Кăмакан икĕ айккинче икĕ шурă алăк—пĕчĕк пӳлĕмсене кĕмелли алăксем. Пӳртри сывлăш лĕп ăшă, типĕ. Çĕнĕ пĕренесенчен кăштах сухăр шăрши кĕрет. Сылтăм йенчи çтена çинче çакăнса тăракан пысăк, çутă кантăкла сехет шаккани уççăн илтĕнет.

— Ата пирĕн пӳлĕме,—терĕ Наçтук Праскийе аларан тытса. Икĕ айккинеле уçса йамали алăка уçса йарса хĕрсем виççĕшĕ те пысăках мар пӳлĕме кĕчĕç. Униç шăрпăк чĕртсе сĕтел çинче ларакан лампăна çутрĕ. Пӳлĕмре пĕр кантăк, ун тĕлĕнче сĕтел ларат. Сĕтелĕн икĕ айккинче Наçтукпа Униçĕн кровачĕсем. Пĕрне хура-кĕрен тĕслĕ ваткăлă утийалпа витнĕ, теприне хĕрлĕ утийалпа. Вырăнĕсем тирпейлĕ, капăр. Мамăк минтерĕсем хăпарса çеç тăраççĕ. Кроватсем тĕлĕнче, çтена çумĕнче икĕ чĕнтĕрленĕ вĕçлĕ питшăллисем çакăнса тăраççĕ. Сĕтел çинче икĕ айккинче кĕнекесем, тетратсем купаланса выртаççĕ. Кантăк умĕнче хулăм куçкĕски йалтăртатса тăрат.

— Ав, тепри, шăллăмăн пӳлĕмĕ,—терĕ Униç, Праскийе тепĕр пӳлĕмеле туртса. Наçтук лампине йатса пычĕ. Ку пӳлĕмре те леш пӳлĕмри пекех пĕр кантăк, сĕтел. Çтена çумĕнче кĕнеке тулли икĕ пир сумкă çакăнса тăраççĕ. Ку пӳлĕмре те икĕ йăвăç кроват. Леш пӳлĕмри пекех вырăнсем тирпейлĕ, таса. Маччаран аероплан моделĕсем çакăнса тăраççĕ.Аероплан çунаттисем çине „Максим Горйки“ тесе çырнă. Сĕтел айĕнче педаŋнăй автомобил пур. Кĕтесре, пĕчĕк çӳлĕк çинче, килте тунă фотоаппарат. Кантăк айккинче, курăнакан çĕрте, шкулти уроксен раçписанийĕ, ача-пăча тунă тĕрлĕрен ӳкерчĕксем, унтах балалайкă çакăнса тăрат.

— Митук çук-ха. Митук пулсан вĕсене, шăллăмсене, кухњăна вырнаçтарт те, кунта хăй пурăнат,—тере Наçтук.

Хĕрсем ку пĕчĕк пӳлĕмрен тухса пысăк пӳлĕме сĕтел çывăхне ларчĕç.

— Пит аван пӳрт тунă есĕр. Пит аван!—терĕ Праски, татах йĕри-тавра ăмсанса пăхса илсе.

— Аван пек хамăра та, кунтан аваннине ентĕ малашнеле кĕтетпĕр: колхозăн çĕнĕ техникăпа тунă пысак çуртсем пулĕç акă, ун чух вара тата ырăрах пулĕ,—терĕ Униç.

— Кăçал колхозниксем чылайĕшĕ пирĕн пек ирĕк пӳртсем лартрĕç. Павăл пичче - пĕрре, Микула пичче—тепре, Варуç аппасем—виççĕ. Ыттисен хут пысăках мар та, çапах таса, çутă, аван пӳртсем. Аван пурăнма тытăнчĕç ĕлĕк чухăн пурнакансем те,—терĕ Наçтук.

Униç Сталин сăнне пăхрĕ те:

— Ав, Сталин вĕт калană... пĕркун Шупашкартан та Сталин сăмахне радио тăрăх каларĕç: колхозниксем тулăх пурлăхлă пурăнăçпа пурăнмала тесе.

— Пĕтĕмпе каласа памарăн есĕ, сиктерсе хăвартăн,—терĕ Наçтук,—колхозсем большевикла пулмала тенине сиктертĕн.

—Е-е чăнах çаплаччĕçке-ха: колхозсем большевикла, колхозниксем пурлăхлă пулмала тенĕччĕçке-ха,—тӳрленчĕ Униç.

— Пирĕн колхоз кăçал çакнашкал çитĕнӳсем тунă: районта чăн малтан патшалаха тырă леçнĕ,—калама пуçларĕ Наçтук.— Унпăн преми ратлă вăкăр илнĕ. Кăçал пысăк мунча лартнă, клуб туса пĕтернĕ. Армана електрицă лартаççĕ те, пăхса çеç тăр акă, Ильич лампăчкисем пирĕн пӳртре çутатĕç. Пирĕн кашни колхозник ĕне, чăх-чĕп, сурăх, сысна усрат. Сĕт-çу ферми пирĕн колхозан районĕнче пĕр чаплă вырăнта. Лаша витисене халĕ пĕтĕмпе çĕнĕрен тунă. Колхоз килес çултах пысăк çуртсем лартма тытăнат. Пахча çимĕç ферминче пирĕн хамăрăн колхоз пахча çимĕç тăварламали, типĕтмели савăт лартрĕ. Иртнĕ кĕркунне колхоз çырла пахчи ваљљи вырăн хатĕрлерĕ. „Киремет сăрчĕ“ текен вырăн пирĕн илемлĕ çырла пахчи пулат. Ĕлĕкхи пурнăçа хаљхипе танлаштарсан, шухăшласа тĕлĕнсе каймала...

— Атте килчĕ! Атте!—тесе çухăрчĕ кухњара ача. Алăк шăн-шăн, тӳ-ӳн! турĕ. Хĕрсем кухњана тухрĕç. Праски: хаљ пиччене куратăп-çке тесе, пĕрре хĕпĕртесе илчĕ, тепре хăй пиччĕшĕнчен уйăрăлса кайнăшăн шикленсе илчĕ. Праскин халĕ пит килте пурăнас килет, анчах пиччĕш тепле ĕнтĕ... те йышăнат, те йышăнмаст пĕр уйăрăлса кайнă йăмăкне.

Униçпе Наçтук иккĕшĕ те тула тухса кайрĕç. Праски те пиччешьe хирĕç тухам тесе шухăшларĕ, анчах хăйусăрланса сак çине кайса ларчĕ. Инкĕшĕ пиччĕш ваљљи сăмавар лартма тытăннă. Тулта калаçни илтĕнет. Чăн малтан пӳрте Вањуш чупса кĕчĕ, пĕр çыхă кĕнеке йăтна.

— Чăваш писатĕлĕсен кĕнекисем-ха ку кĕнскесем, ну, вулатпăр ĕнтĕ!—тет хăй, Вањуш. Праскийе курчĕ те Вањуш, хăйусăртарах алă пырса тытрĕ. Унччен те пулмин Ваçук грамофон трупи йăтса кĕчĕ. Трупи çап-çутă, йăлтăр-йалтăр тăват.

— Грамофон илнĕ атте! Грамофон!—тет Васук, вунă сулхи-скер, сиккелесе. Праски Васука, пĕчĕккĕскерне, хăй тытса ытала-ласа илчĕ. Васук, кăна кĕтменскер, аппăшĕ ачашланинчен кăшт туртăнса тăчĕ, хăйусăрăн: кайас-ха ман, тесе, аппăшĕ ытамĕн-чен вĕçерĕнсе шалти пӳртеле чупрĕ.

Арçыначасем иккĕшĕ те хура çăматăсемпе, пĕр пек хура пустав костумсемпе. Праскишĕн ачасем иккĕшĕ те калама çук çитĕнсе кайнă. Праски уйăрăлса тухса кайнă чух, Васукĕ пысăк хырăмлă, кукăр уралă, 5—6 çулхи ачаччĕ. Васук пĕрмайах вăйсăр урисене хăй айне хутлатса сак çинче ларатчĕ те, кунĕ-кунĕпех вăхăта пĕртен-пĕр кантăкран пăхса ирттеретчĕ. Çăкăр пĕтнĕ чух Васук, ахаль те пит тӳлекскер, стена çумнерех тĕршĕнсе ларатчĕ те, хырăмĕ выçнă пулин те пĕр шарламасăр, амăшĕ çимели тупса парассине кĕтсе ларатчĕ. Çимели çук пулсан, питне кайăк ури пек пĕчĕккĕ, ырхан аллисемпе хуп-ласа йĕретчĕ. Васукăн тата ĕнсе хыçĕнче пĕр çăпан пурччĕ, „йытă пуçĕ“ текенни. Çав çăпан шăта-шăта йухатчĕ те, ача пит асапланатчĕ. Халĕ Васук кĕрен питлĕ, хырăмĕ туйăнмаст, сыв-лăхлă курăнат. Ав йепле урисемпе тĕреклĕ тапса тепĕр пурте чупса кайрĕ.

Кăшт тăрсан пӳрте Униçпе Настук та кĕчĕç. Настук амăшне пĕр тулли хутаç тыттарчĕ.

— Сахăр илнĕ атте,—терĕ.

Униç сĕтел çине хутпа чăркаса пĕтернĕ грамофон илсе пырса лартрĕ. Йулашкинчен пӳрте, тăлăпĕпе кăштăртатса, Иван кĕчĕ.

— Йăмăк килнĕ терĕç. Килти выльăх килех тавăрăнат мĕн,—терĕ вăл уççăн.

— Килнĕ-ха, килнĕ,—тет Праски инкĕшĕ, сăмавар патĕнче ĕштеленсе.

Праски пиччĕшĕ патнеле йарса пуснăччĕ, пиччĕшĕ хăй йăмăкĕ патнеле паспа шуралнă сухалне йакаткаласа пырса алă тытрĕ.

— Сывă-и? Пит нумай кĕттертĕн-çке,—терĕ Иван.

— Сывах, ху мĕнле?—терĕ Праски хĕрелсе кайса.

— Мĕнлине ху куратăн ĕнтĕ,—терĕ Иван, салтăнма тытанса, кулкаласа.

— Куратăп, куртăм,—терĕ Праски хăйусăр, хуллен. Вара айккинеле пахрĕ, кăмăлсăр пек пулчĕ.

Праски ăшĕнче чĕререн тухас сăмахсем урăхчĕ, анчах тем-шĕн вăл чĕлхе вĕçне çитнĕ сăмахсене каласа йараймарĕ. Праски хăй колхоза кĕрес маршĕн пиччĕшĕнчен уйăрăлса кайни хале Праскийе пит хытă шухăшлаттарнă. „Мĕншĕн мăнакка сăмахне итлерĕм-ши?“ тесе Праски пит хытă ӳкĕннĕ. Хăй ӳкĕннине пич-чĕшне курсанах каласшăнччĕ—калаймарĕ. Тăванĕсем савăнăçла шакăлтатнă хушăра Праски икĕ аллине шальтутри ăшĕнче тытса хурлăхлăн ларнă. Пиччĕшĕ те Праски тем калассине туйрĕ пул-мала: часах кулма пăрахса, хуллен салтăнма тытăнчĕ. Малтан тăлăпне çакрĕ. Вара хура кĕрĕк çинчен çыхнă хĕрлĕ пиçиххине салтса пăтаран çакса йачĕ, пĕр шарламасăр пысăк çăматтисене пăрахса, Униç кăмака çинчен илсе панă чусăнкăна тăхăнчĕ.

— Ăçта-ха пирĕн леш тĕрке?—терĕ вăл, хĕрĕсене пăхкаласа.

— Сарă хутпа чăркани-и?—терĕ Наçтук, кĕнекесем хунă çĕртен пĕр тĕрке илсе тухса.

— Çавă çав, çавă. Кӳр-ха, авантарах курам.

— Ил хĕрӳсем ваљљи, хитре кĕпе пулат акатуйсенче çиç-терме, терĕ гортри прикашчĕк,—тет Иван.

Çапла калаçса, Иван сарă хутпа чăрканă тĕркене салатрĕ. Ачасем пурте ашшĕ патне йапала мĕннине курма пырса тăнă.

— Ай, пурçăн, кăвак пурçăн,—терĕ Униç, йалтăртатакан пурçăна аллипе тытса пăхса.

— Пурçăн илес терĕм. Пурçăн кĕпесем тăханăр. Пирĕн пурнăçра аван тумланма тивĕçлĕ, йака, илемĕ тумланăр, ĕлĕк те начар тумланса тарăхнă,—терĕ Иван.

Наçтук тĕркере миçе метр иккенне шутлама тытăнчĕ. Вунпилĕк метр иккен.

— Хĕрарăм кĕпи çĕлес пулсан, тăватă кĕпе кăштах пулаймаст,—терĕ Наçтук.

— Хĕрарăм кĕпи виççĕ: ху ваљљи, Униç ваљљи, Праски ваљљи, йулашкине Митук ваљљи.

— Айук, мана ан парăр,—терĕ Праски, каллех кăмăлсăр пек пулса.

Праски тăванĕсем ваљљи илсе килнĕ парнесене аса илчĕ. Мĕне тăраççĕ Праски йапалисем çак пурçăн тата тăванĕсен пĕтĕм тумĕ çумĕнче? Мĕне тăрат Праски пурнăçĕ тăванĕсен пурнăçĕпе танлаштарсан? Тутă сарă тулă пĕрчипе хăљчăка танлаштарнăн туйăнат. Вăйлăрах пăралат Праски чĕрине ӳкĕнчĕклĕ шухăш.

— Праски, есĕ мĕн... пирĕн çын пек мар?—терĕ пиччĕшĕ Праски çине тӳр пăхса.—Айук тетĕн, епĕ панине илместĕн?

— Ах, пичче,—терĕ Праски улшăннă сасăпа—епĕ есĕ панине илĕттĕм, пурăнăттăм епĕ сирĕн патăрта, анчах епĕ, есĕр çак пурнăçа тунă чух...—Праски сасси чĕтренчĕ, тутисем турткаланчĕç.—Епĕ... епĕ сиртен уйăрăлса пурăннă, кунта ĕçлемен... Çук çинчен тухса кайрăм та, пур çине килсе кĕтĕм. Йăнăш пулчĕ ман, йăнăштарчĕ мана мăнакка. Пысăк йăнăш турăм епе, пичче, пысăк йăнăш!..

Праски питне хупласа хулпуççийĕсемпе чĕтренчĕ.

— Мĕн ес, Праски? Йăнăш пулнă пулсан, ăна йусама пулат,—терĕ пиччĕшĕ.

— Ара, Праски, ачам, мĕн пулчĕ?—тесе, ĕштеленсе чупса пычĕ Праски патнеле инкĕшĕ.

— Ан йĕр, ан йĕр, аппа,—терĕ Униç Праскийе, ачашшăн пуçĕнчен тытса, усăннă пуçне çĕклесе.

— Кăмăлĕ çемçелсе кайнă ĕнтĕ унăн, иртет акă,—терĕ инкĕшĕ. Хăй кăмака умнеле кайрĕ.

— Ан йĕр, ĕнтĕ йĕрмели иртсе кайнă. Мăнакка калатчĕ: пире турри çавнашкал хурлăх курса пурăнмала çырнă, тетчĕ. Хаљ ĕнтĕ турă пире хурлăх кăтартма пăрахрĕ пуљ, мăнаккана пирĕн вырăна выçă усраса пăхам, терĕ пуљ. Ха-ха-ха! Хытă туртăштарат-ха мăнаккана колхоза кĕменни,—терĕ пиччĕшĕ.

Пиччĕшĕ мăнаккăш çинчен кулăшларах калани Праски кăмăлне уçрĕ. Праски куçĕсене шăлкаларĕ те, вăтаннă пек пулса, тутине çыртса айккинеле пăхрĕ.

— Мĕншĕн йĕртен-ха ĕнтĕ, айван?—терĕ пиччĕшĕ,—йăнăш тунă пулсан, йăнăша халех тӳрлетес. Пĕрле пурăнас, колхоза кĕрес тетĕн пулсан—кĕр, пурăн. Есĕ килнĕшĕн, пĕрле пурăнса пĕрле ĕçленишĕн, пирĕн савăнмали çеç йулат.

Çак сăмахсене илтсен Праскийе çăмăллăнах туйăнса кайрĕ. Хулпуççи çинче пусарса тăнă чул çĕре йăванса ӳкнĕ пекех туйăнчĕ.

Ваҫушпа Ваçук грамофон патĕнче кĕштĕртетеççĕ.

— Радио шăпăрт-çке сирĕн пайан,—терĕ ашшĕ ачасене. Хăй пĕр сĕтелли патне хаçат вулама ларчĕ.

— Астуман та, радиона маннă кайнă пайан, грамофонпа аппаланса,—терĕ Ваҫуш, громкоговорител патне пычĕ те, чăлт çыхăнтарчĕ. Çав самантрах радио сасси илтĕнчĕ. Такам чăвашла сăмахсем калат. Праски радио кĕрлесе кайсанах çак сăмахсене илтрĕ: „Печчен хуçалăх пурнăçĕ кайала чакат. Колхозниксем пуйан пурнăçа çитеççĕ. Пирен колхозниксем пуйан, куҫтурлă пурăнма тытăнчĕç. Хресченен ырă пурнăç патне кайма пĕртен-пĕр çул—колхоз. Колхоз çеç хресчене пуйан, куҫтурлă пурăнăç пама пултарат!“..

Праски, Униç, Наçтук тата арçыначасем чылайччен радио тата грамофон майлаштарса йарса, вырăсла, чăвашла, тутарла пластинкăсене хурса йурлаттарчĕç.

Праски халĕ ĕнтĕ тин килти пек пулчĕ.

Инкĕшĕ сĕтел çине касхи апат хатĕрлеме тытăнсан, Праски те инкĕшне пулăшма тытăнчĕ: инкĕшĕпе пĕрле сĕтел çине çăкăр касса хучĕç, кашни çын ваҫҫи хăйне уйрăм турелкке, çĕçĕ, вилкĕ, кашăк хурса тухрĕç. Сĕтел таврашĕнче шăкăртишакăрти, чăнк-чанк! илтĕнет. Наçтукпа Униç нӳхрепрен йӳçĕтнĕ панулми, купăста, хăйар илсе тухрĕç. Хатĕр çитсен пурте апат çиме ларчеç. Пĕр лавăç çеç темĕн чул чĕнсен те кăмака çинчен анмарĕ: исленсе сывăрса кайнăскерĕн анас килмен кăмака çинчен. Чей ĕçнĕ чух аванах çинĕ,—терĕ лавăç. Килйыш пĕр çĕре пухăнса ларса калаçкаласа апат çиме тытăнчĕ. Пиччĕшĕ Праскирен мĕнле пурăнни çинчен ыйтат. Праски аван вырăн тупнă, анчах килте тата авантарах, тесе калаçаççĕ. Чăн малтан какай йашки, кайран тăварланă çимĕçсемпе кăвакал шаркуне çирĕç, çийелтен çăмарта куклипе сĕт çирĕç. Инкĕшĕ Праскине çулла апат пĕçерсе ĕштеленесси çукки çинчен, мĕн пур апат колхоз столовăйĕнче пурри çинчен хĕпĕртесе каласа пачĕ.

Касхи апат çисен килйышсем харпăр хăй çĕреле саланчĕç. Иван тумланса, правленине кĕрсе тухам-ха, тесе клуба тухса кайрĕ. Арçыначасем хăйсен пӳлĕмне кĕрсе уроксем хатĕрлеме, Униçпе амăшĕ тирĕк-чашăк пуçтарма тытăнчĕç. Наçтук Праскийе хăй пӳлĕмне илсе кĕчĕ, хăй вырăнĕ çинче çывăрттаратăп, терĕ. Праски, çул çинче ĕшеннĕскер, салтăнса выртре. Наçтук сĕтел умне ларса çырма тытăнчĕ.

— Мĕн çыратăн?—терĕ Праски.

— Рабфакра манăн тантăш вĕренет, леш, Вăтакасри Нестар. Астăватăн пулĕ, Йаккусен... Çавна çыру çырас терĕм,—терĕ Наçтук.

Çывăрма выртсан та Праски чылайччен çывăрса кайаймарĕ. Аса плет Праски ĕлĕкхине, танлаштарат халĕхипе—тĕлĕнсех пĕтерейместь. Шухăшлат шухăшлат те, каллех тĕлĕнет. Шухăшланăçемĕн ăшчикре мăнаккăш пирки темĕнле ырă мар, кăмăла пăсакан шухăш тапранчĕ. Кайса кĕмест ĕнтĕ Праски мăнаккăш патне, курас килмест çав унăн шĕвĕр сăмсалă карчăка. Анчах пиччĕш-инкĕш Праскийе хăйсем патне йышăнни Праски кăмăлне каллех çемçетет. Ăшă, таса, çемçе вырăн çинче Праски канлĕн çывăрса кайрĕ.

Тепĕр кун ирхине Праски лавăçĕ пĕчченех çуни çине ларса тухса кайрĕ.

— Ой, сайа колкоз, сайа! Корош!—тет вăл хăйне хăй, Иван пурнăçĕнчен тĕлĕнсе. Çĕрĕпе сĕлĕ, утă çисе тăнă лашине лавăç пайан хăйулараххăн турткалат.

— Ой, сайа колкоз, сайа!—терĕ лавăç уйхапхинчен тухнă чух, йулашки хут Иванăн пурнăçĕ çине çавăрăнса пăхса. Уйхапхинчен тухсан, лашине чăпăрккапа хўри çинчен сулчĕ те, лаши малала хуллен чупрĕ.

1934 ç., октабĕр,
Аслă Куснар.

## *УХСАЙ ЙАККӐВĔ.*

* * *

Карлав аври касмашкӑн кайрам
Ҫап-ҫамрӑк вĕтлех вӑрмана,
Семҫе чĕлхелĕ пĕчĕк кайӑк
Йурри йанратрĕ таврана.

Улатӑпа[1] ӳлет. Пĕр саслӑн
Сӑрлатрĕ сарӑ сӑвӑслан.
Ҫулҫисене ҫапса ҫупмасӑр
Ĕшеннĕн тĕлĕрет вӑрман.

Хура мĕлкĕ иртет. Ӑҫтан-ха?
Пите лекет, ҫеҫке ҫинчен
Мĕлкĕ шӑват. Ӑҫтан? Шаланкӑ
Иккен каркаланат ҫӳлтен.

Татса ил хĕрĕн куҫĕ йевĕр
Сенкер илемлĕ чечеке,
Вара чечек ҫине пӑхса вĕр,
Сывлӑмĕпе ална чӳхе.

Тӳп-тӳрĕ хурӑна йакатрӑм,
Чипер пулат карлав аври.
Кайӑксемпе пĕрле йурларӑм.
Хире тухап. Тӑпра вĕри.

Пит хӳхĕм вĕрене курайрӑм
Ҫап-ҫамрӑк вĕтлĕх хĕрринче,
Мӑнтарӑн йӑвӑҫа еп касрӑм,
Ытараймарӑм умĕнче.

Сĕрме те купӑс тӑвӑп терĕм
Туссен йеккишĕн калама,
Пӳрнесене шӑлса иртерĕп.
Чĕтретĕп ҫепĕҫ йуррӑма.

Шӑхӑрайса кӑна йарсассӑн,
Кару хускалчĕ мӑшӑр ут,
Ҫерем ӳпне ӳкет кас-кассӑн,
Тухат шӑрҫа пек шурӑ хурт.

---

[1] Вӑрман кӑвакарчӑнĕ, култӑк.

Пуç тăррине килсе хупларĕ
Карр-карлакан курак-чакак,
Кĕрхи кĕрпе тырра тултарăп
Кĕлет маччийĕ таранах.

Вучах панче çĕкленнĕ тĕтĕм.
Серте шўрпийĕ пăсланат.
Етем мĕлки кĕске — еп виçрĕм, —
Хĕвел çитет кăнтăрлана.

1931.

# ÇĂЛТĂРСЕМ.

Выртма кайсан, Шуратăл хĕрринче
Вучах çунатчĕ йалккăшса.
Улма пиçетчĕ çапă айĕнче.
Çилсем лăскатчĕç хăмăша.

Кăрик-кик ушкăн кайăк-кăвакăл
Уксе чăматчĕ хум çине,
Вĕсен йепле хăватлă ирĕк хал, —
Сулса çапатчĕç çунатне.

Хитреччĕ сеп-сенкер таса тўпе,
Сĕтле йухатчĕ акăр çул.
Çăлтăрĕсем вылятчĕç кĕтўпе, —
Сехре хăпса сўлетчĕ чун.

Телей ăçта? — тесе, хирте пĕччен
Çўле тинкер пăхса вара
Еп çич çăлтăр, ала çăлтăр синче
Шыраттăм хамăн çăлтăра.

Шыраттăм пуринчен çўлти парка,
Нихçан çĕре ўкми çутта, —
Вăл пултăр усă санлă, йалтăркка,
Ман ăрăскал уççи унта.

Асап, хĕн-хур тултарнă алтăр пек,
Кĕрхи каç пек, хура куçа
Тумлам-тумлам куççуль ўкетчĕ тек, —
Еп ылханаттăм çав каçа.

Çиçетчĕç, сиснĕ ĕмĕр ĕмĕрех
Орион, Венерă, Вегă, Марс, —
Ман хăшĕ, хăшĕ-ши илемлĕрех?
Пурте сип-сивĕ — манăн мар!

Еп çех мар, пит нумайĕш тĕнчере
Йĕрленĕ хăйĕн çăлтăрне.
Мана суратнă чух та тӳпере
Телей шыранă пуль анне.

Манăн несĕл пулнă хурлă тертлĕ чун,
Хура пӳрт тĕнине уçса.
Тӳпе шевле сапса выльанă чух
Ерленнĕ, кăларман сасса.

Ей, çăлтăрсем, есир йалтăраса
Çунатăр, çунăр-ха татах,
Сире кĕл тунă чĕрĕ йун сурса
Хумпа кĕрмешекен бурлак.

Кĕçĕр хуллен ишетĕп кимĕпе,
Тĕркĕш хума пăхса илсен,
Куратăп: кĕмĕл тенкĕ сапнă пек
Йалтраççĕ çалтăр сăнĕсем.

Кĕрик-кик ушкăн кайăк-кăвакал
Шыва ӳксе çат-çат çунат çапсан,—
Йарăнакан çут çăлтăрсем пăл-йал!
Тăваççĕ чăлпăрах ванса.

1934 ç., Мускав.

*Н. ÇТЕПАНОВ.*

# ПИРĔН ТЕ ПУЛĔ-ХА УН ПЕККИ...

КАЛАВ.

## I.

Пурçук (хăй вăл Васса йатлă пулвă, чухăнтарах пурăннăран ăна йалта Пурçук тесе мăшкăласа чĕннĕ) виççĕмĕш хут ĕнтĕ путек çаппи турттарса таврăнат кăçал рошаран[1].

Малтанхи хутĕнче ĕç питĕ ăнăçлă пулса иртрĕ. Ун чухне ăва стрелук та, кушакки те курмарĕ. Вăл вăрмана кайса килнине пĕр çын та пĕлмерĕ пулмала.

Иккĕмĕш хутĕнче те ĕç малтанах ăнăçлă пырсаччĕ; чиперех, никама курмасăрах пĕр лав путек çаппи касса тийесе вăрмантан тухса кайма тăнăччĕ Пурçук, уйа тухасси пĕр çĕр утăм пек çеç йулнăччĕ, сасартăк кĕтмен çĕртенех стрелук:

— Стой!—тесе, ун умне тухса тăчĕ.

Пурçук тарма шухăшламарĕ, тулли лавпа тарсан та хăтăлас çуккиве туйса илчĕ вăл.

— Корнил Корнилăч,—терĕ вара Пурçук, стрелука хисеплĕн чĕнсе,—хут те мĕн ту. Анчах... путексене жалка. Есĕ, Корнил Корнилăч, пĕлтĕр чиркÿ праçникре ман патăма та кĕрсе тухсаччĕ. Ыран каçхине каллех ман патăма çитме вăхăт тупаймăн-ши?

Стрелук, хушăран сыпма йуратаканскер, малтан харкашкаласа илчĕ те, кайран килĕшрĕ Пурçукпа. „Пĕррелĕхе штрафламăп“ терĕ.

Ерех хăй ĕçне турĕ. Акă—виççĕмĕш хут ĕнтĕ—Пурçук лав çине путек çаппи касса тийесе вăрмантан тухрĕ.

Авă, Тукас йалĕ те сулахайра тăрса йулат. Çĕрлехи сĕмлĕх витĕр вăл куçа тĕтрелĕн, тĕксĕмĕн курăнат.

Вăхăтран вăхăта Тукас автанĕсем авăтни çырма урлă йанраса илтĕнет.

— Тепĕр çур çухрăмран епĕр хамăр йала та çитетпĕр. Çырма урлă каçасси çеç тăрса йулат,—тесе хăвалат лашине Пурçук.

Лаши те йалала çывхарнине туйса кал-каллăн утат, хăлхисене вылятат, тулхăрат.

„Кăçал, тепĕр икĕ лав хатĕрлесе хурсан, хĕл каçрăм та вара. Манăн икĕ сурăхăмпа качакана вăл хĕл каçма çитет“— шухăшласа пырат Пурçук.—„Çитес вырсарникун тата ытларикун тепрер лав турттарса килетĕп те, çитет те вара“.

Хыçа йулна роша шурăмпуçпа хĕрелме тытăвчĕ. Тукас автанĕсем вĕçĕмсĕрех авăтма пуçларĕç.

---

[1] Роша—рашча, хысна вăрманĕ.

— Тпр-р-р!—тесе чарчĕ Пурçук лашине. Пурçук умĕнче тарăн çырма. Çырман тĕпĕ те курăнмаст. Вăл пĕтĕмпех тĕттĕм чатăрпа витĕнсе ларнă. Çырманала анакан çул виçĕ утăма йахăн çеç курăнат. Çырма тĕпĕнче шăнкăртатса йухакан шывăн сасси шырлансемпе аран чаваланса хăпарат.

Çак çырмана тулли лавсемпе анассинчен пурте хăраççĕ. Çамрăксем питех хăрасах та тăмаççĕ. Хăшпĕр чухне вĕсем тулли лавсене те çак çулпах илсе таврăнаççĕ. Ваттисен вара, хăравипе, сехрисем хăпсах тухаççĕ ку çырма урлă каçассинчен. Çырма урлă тӳрех каçса киле таврăнас вырăнне, пилĕк çухрăм ытларах кайса, çырма пуçĕнчен Тукас витĕр çаврăнаççĕ вĕсем.

Мĕнле пулсан та çак çырма сахалах инкек кăтартман хресченсене. Мĕн чухлĕ тĕнĕл-турта хуçман-ши ку çырма?

Пурçук кускăча вĕренпе çыхса урапана тормăз пачĕ. Вĕренпе кун пек çыхса вăл хăй ĕмĕрĕнче сахалах лав антарман ку çырмана.

— Но-о, айда,—терĕ лашине ачашшăн Пурçук. Хăй лаша пуçĕнчен тытса лашава çырманала сĕтĕрме пуçларĕ.

Урапа хăрах кускăчĕпе шăвăнса çырманала кăшăлтатрĕ. Кун пек шутарса анма чăнкă тăвайккире те лашана çăмăлах мар. Лаша, урапана кайала тапса чарса пырас вырăнне, вăйпа туртса пырат.

Сасартăк, урапа çатăрт! турĕ те, çавăнтах малала хыттăн туртăнчĕ. Пурçук айаккала сиксе ӳкме те ĕлкĕреймерĕ—унăн сылтăм ури урлă урапа малтипе кайри кускăчисем пĕр самантрах каçса кайрĕç. Çак самантрах Пурçукăн ура туни чăтма çук касса, çурса пĕçерсе кайрĕ.

Пĕр самантлăха Пурçук нимĕн те курмарĕ-илтмерĕ,—лашипе урапи çинчен те мансах кайрĕ. Çырма тĕпĕнче темĕн лач! туса хайаррăн хăр-р, хăр-р тунине илтнĕ хыççăн тин лашипе урапи çинчен аса илчĕ вăл. „Ура хуçăлнă. Лаша мĕнле-ши?"—шухăшларĕ вăл малтанах. Ура çине тăмашкăн хăтлачса пăхрĕ. Çук, урасем пĕве çĕклеймеççĕ. „Мĕн тăвас ха?"

Çырма тĕпĕнче шăнкăртатса йухакан шывăн сасси текех шырланпа çӳлеле чаваланмаст. Унтан хайаррăн хăрлатнă сасă çеç илтĕнет Пурçука „Çынсем çӳреме пуçличченех çакăнта ларма тивет-ши ĕнтĕ? Лаша мĕнле-ши?"—шухăшлат Пурçук.

Пĕр çĕрте, урине çапса хуçнă йытă пек упаленсе, тепĕр çĕрте кутпа шуса анма тытăнчĕ вăл çырманала.

Мĕн чухлĕ вăхăт иртнине те пĕлмест вăл, анчах тул çутăлма тапратнă иккен. Чăнкă анакан çул çырма тĕпне çитиччех курăнса выртат. „Лаша çул çинче курăнмаст, çулран пăрăнса çырманала сикнĕ пулсан?"—шикленет Пурçук.

Чăнах та, хăрлатнă сасă та шырлан айĕнчен илтĕнет. Вăл хуллен çырма тĕпнеле упаленсе çитрĕ. Çырма тĕпĕнче лашапа урапа йунашарах выртаççĕ. Пурçук упаленсе пынине лашийĕ сиввĕн пăхса выртат шурă, алтăр пек пысăк, чарăлса кайнă куçĕсемпе. Аран-аран упаленсе çитсе, Пурçук ури ыратнине шăлне çыртса тӳссе иртерме тăрăшса, упаленсе çӳресех лашине

тăварчĕ. Лашине тăратас тесе çапкаласа та тĕрткелесе те пăхат Пурçук Çук, лаша вырăнтан та тапранмаст. Урисене те хускатмаст. Шурă куçĕсем çеç, пĕр хупăнма пĕлмесĕр чарлаттарса пăхса выртаççĕ лашин. Кĕçех вăл хăрлатма та чарăнчĕ. Сăмсинчен сывлăш аран-аран хăйăлтатса тухма тытăнчĕ. Пурçук лаша пуçĕ умне упаленсе пырса хăйаккăн ларчĕ те, те ури ыратнипе, те лашине хĕрхеннипе пĕчĕк ача пек ӳлесе йĕрсе йачĕ. Лашийĕ ăна, чармак шурă куçĕсемпе те вăрçса, те шеллесе пăхса илчĕ те, куç хупаххисене йеррипен пĕр пĕринпе çыпăçтарса хучĕ...

Пурçук çине çав куççем урăх нихçан та пăхмарĕç. Нумайччен йĕрсе кĕтсе ларчĕ Пурçук лашин куçĕсем уçăласса. Кĕçех лаша сăмсинчен сывлăш та хăйăлтатса тухма чарăнчĕ.

* * *

Ирхине çырмана шыв ăсма аннă хĕрарăмсенчен те Пурçук çавăн пекех ларса йулнă. Халĕ вăл ӳлемен çеç, анчах çапах та унăн куçĕсенчен куççулĕ шăпăртатса йухма чарăнман.

Пурçук инкекĕ çинчен çырмана шыв ăсма аннă хĕрарăмсем часах пĕлтернĕ унăн арăмне.

Ури ыратнипе, йалтан арăмĕпе хăйматлăх ашшĕ тата кӳршĕ çыннисем виççĕн-тăваттăн пыриччен, вырăнтан тапранмасăрах ларнă Пурçук вилнĕ лаши çумĕнче.

Пурçук арăмĕ лаша шăварма аннă Максука лашипех пулăшу пама чĕнсе илчĕ. Максук лашине шеллемерĕ.

Вилĕ лаша майĕнчен хăмăта хывса илчĕç те Максук лашин майне тахăнтарчĕç. Тӳвсе выртакан урапана тăратса лартнă хыççăн, Максук лашине кӳлчĕç. Пурçука урапа тăррине çĕклесе хăпартса выртарчĕç. Çырма тĕпĕнче Пурçук лаши пĕр пĕччен выртса йулчĕ.

— Тирне сӳмелеччĕ, хăйматлăх,—терĕ Пурçук.

— Килсе сĕветĕп ак вара...

Йала çитсен Максук лашине хăй килне кĕртрĕ. Пурçука киле арăмĕпе хăйматлăх ашшĕ çавăтса таврăнчĕç.

— Кин, есĕ Кришук карчăккине чĕнсе килетĕн пулĕ, ларттарас пулат вĕт урине,—терĕ хăйматлăхĕ киле çитсен.

* * *

Ури самайлансан, Пурçук хăй урапи çине хăмăт, пĕкĕ, ĕнерчĕк тийесе Максук патĕнчен туртса таврăнчĕ. Путек çаппи Максук сарайне кĕрсе выртнă. Чармаст вăл Максука та, Максукăн выльăх сахал мар вет!

Пурçукăн картишне урăх лаша пырса кĕреймерĕ. Вилнĕ лаша тирĕ çеç кĕлетре, çамĕсене кĕве çисе йаричченех çакăнса тăчĕ. Кайарахпа вăл та Максук алливе лекрĕ пулас. Урапийĕ те лупас айĕнче нумайччен тписе-хăрса ларнă хыççăн Максук лупасайне кайса ларчĕ.

Çав çулран пуçласа Пурçук вăра Максукпа питех „туслашса" кайрĕ. Кунсерен тенĕ пекех вăл Максук патне çӳре пуçларĕ. Уйри тырпула пухса кĕрсе çапса пĕтерсен тин вăл ун патне кунсерен çӳреме çуркунечченлĕхе пăрахат. Анчах

çапах та, кашни уйăхрах пĕрре, иккĕ кайсах тăрат ун патне. Çуркунне çывхарса килме тапратсанах вара кашни кунах ун патне темиçешер хут чупма пуçлат вăл.

Максук лашисене те вăл халĕ хăй лашине тыткалавă пекех тыткалат: сухалат, сӳрет, кĕлте турттарат, унăн лашисемпе пасара, хăнана тата хăйне кирлĕ ытти çĕре çеç кайаймаст.

Максукăн çĕрĕ çинче те вăл хăй çĕрĕ çинчи пекех ĕçлет: акат, вырат, турттарат, çапат, тыррине çеç хăй кĕлетне хурайманст тата арпи-улăмне хăй лупасĕ тăрне йе ӳплине уралласа лартаймаст.

Пурçук хăй ави çинчен хăй вырса илнĕ тыррине те хăй анкартине кĕртеймест. Кĕлтесене Максук анкартине кĕртсе çапмала; улăмĕ пĕтĕмпех Максука, тыррийĕ — шăп та шăп çурмала.

Йалта Пурçук пĕччен çеç мар, ун пеккисем татах та пур. Вĕсем пурте — çуллă вĕри пĕлĕме хăймапа çийекэн Максук çине кĕвĕçӳлен пăхса, сĕлехесене йухтараççĕ. Вĕсем пурте Масукпа „туслă“, Максука ĕçлесе параççĕ. Хăйсен ал лаптăкĕш пек çĕрĕсене те Максук вăрлăхĕпе, Максук лашисемпе акаççĕ, çурри ытларах Максука параççĕ. Раштав иртсенех вара хăйсем Максук патне „хăнана“ — кĕренкешерĕн кивçен илме кайаççĕ.

Ма парас мар-ха Максукăн вĕсене кĕлет урайне хуçма хатĕрленсе выртакан тыррине? Пĕр пăт парсан, кĕркунне вăл икĕ пăт шăйăрса илет вĕт вĕсенчен!

II.

Ирхине тăрса питсене çукаласа васкавлăн апат çырткаласанах епĕ Максук çурчĕ патне вĕçтертĕм. Максукăн вырăсла хапхи тăрĕнче:

*ВĂТА-КАССИНЧИ*
*КОЛХОЗ ПРАВЛЕНИЙĔ*

текен хăма татки хĕрелсе тăрат. Епĕ колхоз картишне пырса кĕнĕ чухве Васил Петрович (Пурçук) вите умĕсене шăлса тасатат.

— Васил Петрович, — терĕм епĕ ăна, — Мĕтри Иванч килмерĕ-и?

Вăл шăлма чаранчĕ.

— Çук-ха, хам та ăна кĕтетĕп те... Есĕ Микула мар-и çав?

— Çавă, çавă.

— Хăçан килтĕн?

— Ĕнер, каçхине.

— Нумай пурăнас тетĕни-ха пирĕн патра?

— Пайан кайас тетĕп. Мĕтри Иванч лартса кайатăп терĕ те...

— А-а, апла еппин.. Темшĕн, çитеймерĕ-ха. Ăçта ĕçлетĕн-ха есĕ халь?

— Шупашкартах. Епĕ Çĕрпĕве килсеччĕ те, çула май йала кĕрсе тухса, Сĕнтĕрвăррипе таврăнас терĕм.

— Мĕн ĕçре ĕçлетĕн-ха?

— Епĕ кĕнеке-хаҫатсем пичетленĕ ҫĕрте, ĕлĕкхи вырăнтах...

— Хаҫатсем кăларнă ҫĕрте тетĕн мар и ҫав есĕ? Апла пулсан, ҫыр-ха есĕ, „Каваш“ ҫинех ҫыр: Вăта-Кассине почтă хаҫатсем илсе пымаст, те, сăмахран, те, колхоз коњухĕ Ваҫили Петров „Колхозвик йалавне“ ҫĕнĕ ҫултанпа ҫырăнса илет пулсан та, ку тарана ҫитсе те вунҫичĕ хаҫат анчах илнĕ, те, вĕсем те пулин йала ҫитиччен вулама ҫук лутăрканса пĕтнĕ, те. Есĕ ăна чĕрене пырса перĕнмелли сăмахсемпе ҫыр, пултаратăр есĕр ун пеккисене ҫырма

— Епĕ, Ваҫил Петрович, кĕнеке кăларнă ҫĕрте ĕҫлетĕп ҫав, — терĕм епĕ ăна, — хаҫатсем кăларнă ҫĕрте мар.

— М-да, — тесе каллех шăлма тытăнчĕ вăл вите умне.

Старик кăмăлсăрланнине сисрĕм.

— Ҫырăп, Ваҫил Петрович, ҫырăп, обйазатĕљнă ҫыратăп, — тесе хутăм.

Вăл темшĕн мана урăх сăмах чĕнмерĕ.

— Кайса килем-ха еппин епĕ Мĕтри Иванч патне, — тесе, тухса кайрăм колхоз правленин картишĕнчен.

Хапхаран тухма ҫеҫ ĕлкĕрнĕччĕ, мана хирĕҫ колхоз председатĕлĕ — Мĕтри Иванч танклаттарса пырат.

— Мĕтри Иванч, страҫтĕ!.. Капла йурамаст, вăхăтра ҫитес пулат... — терĕ коњух ăна курсан.

— Ҫитеймерĕм ҫав, — пăркаланат Мĕтри Иванч, — хамăрăн Миша пирки кайа йултăм: енер, хăй кĕнекине чернил тăкса варалана та, пайан шкула кайасшăн мар. Хăрат пулмала. Ҫавна шкула кĕртсе хăвартăм.

— Сана ăсатма, Мĕтри Иванч, еп хам пырас тетĕп. Манăн унта, боњницăра кин выртат, пĕчĕк папак туса парасшăн... Туса та пачĕ пулмала та-ха, киле илсе килмеле... Тупнă вăхăтне ача ҫуратма — ҫуратасчĕ ĕҫ пуҫтарса кĕрсен, — тесе мăкăртатса витене кĕрсе кайрĕ Ваҫил Петрович.

— Айда, айда, кайăпăр пĕрле, — терĕ унпа килĕшсе Мĕтри Иванч.

— Мĕтри Иванч, епĕ пайан ăйăра кӳлетĕп, — тесе кăшкăрат Ваҫил Петрович витерен.

— Йара пар, — терĕ ăна хирĕҫ колхоз председатĕлĕ, канцељарине кĕрсе кайас умĕн. Епĕ те ун хыҫҫăн пӳрте кĕтĕм.

Мĕтри Иванч сĕтелрен хутсем кăларса кăсйине чикме ĕлкĕреймерĕ те, тултан Ваҫил Петрович кĕчĕ.

— Хатĕр, тухса ларăр.

— Кайăпăр.

Епĕр тула тухрăмăр. Крыљца умĕнче тăрантас кӳлнĕ тимĕр-кăвак ăйăр тăрат.

— Кĕрсе ларăр улпутсем пек — терĕ коњух пире.

Ҫав самантрах сарайран тунă витерен Михалка—аслă коњух помошникĕ тухрĕ.

— Ваҫил Петрович, мана ваљљи мĕнле кучченеҫ илсе килетĕн? — терĕ вăл.

— Мĕнле кучченеҫ? Лашасене пăхма вĕрентекен кĕнеке, атту есĕ халĕ те вĕсене пăхма типтерлĕ вĕренсе ҫитместĕн-ха.

Вот што, Михалка, есĕ лашасене лайăх тĕрĕслесе парса йар. Пули-пулми çĕре кайма ан пар. Старший коњух хушьарĕ, те. Таврăнсан та лайăх тĕрĕслесе ил.

Епĕр йалтан тухса Çăл тăвайккинчен анса, çула май çăлра лашана шăвартăмăр.

— Мĕтри Иванч, — терĕ коњух тăвайккирен хăпарма пуçласан,— епĕ çак тăвайкки урлă нихăçан та ырă кăмăлпа каçса кайаймастăп, унтан каçса кайас умĕн манăн йаланах кăмăл, çан-çурăм çӳçенет. Ак, пайан та...

— Хăвăн лашу çакăнта вилнĕрен пулĕ, Васил Петрович, — тесе пӳлчĕ ăна колхоз председателĕ.

— Çавăн хыççăн çав... çулйĕр строителствине хутшăниччен питех те йапăхчĕ вĕт çак çул, питĕ чăнкăччĕ тăвайккийĕ, пуш урапана та лашасем аран-аран туртса хăпаратчĕç Халĕ, пĕтĕм йалĕпе виçĕ кун тухса ĕçлерĕмĕр те, нипочом, автомобилсем те çӳреме пуçларĕç. Çулсене çавăн пек йалĕ-йалĕпе тухса тӳрлетме мĕншĕн шут тытман ха епĕр ĕлĕк, — тесе ыйтрĕ вăл хайĕнчен хăй.

— Ĕлĕк çав вăл, Васил Петрович, халĕ мар çав вăл, — терĕ колхоз председателĕ. — Ĕлĕк кашни хăйшĕн çеç çуннипе... Халĕ пирĕн колхоз Ушкăнпа ĕçлетпĕр. Ушкăнпа темле ĕçе те çĕнсе илме пулат.

— Васил Петрович, — терĕм епĕ, — хăçан пулнă-ха вăл ĕç санăн?

— Мĕн?

— Лаша шырлана сиксе вилни хăçан пулнă тетĕп?

— Авлансан тепĕр икĕ çултанах пулчĕ вăл, епĕ авланни ĕнтĕ хĕрĕх пилĕк çул çине кайрĕ пулас.. — Унтан, темшĕн, лахлатсах кулса йачĕ вăл.

— Кулмалли мĕн тупрăн? — ыйтрĕ унран Мĕтри Иванч:

— Хамран хам кулатăп-ха епĕ. Хам çак çулран хăранинчен кулатăп. Пĕлтĕр, колхозниксем патшалăха тыра леçме кайнă чух, çак вырăна тухса тăрса ăсатса йатăм, — тесе чăпăркка аврипе çул айккине тĕллесе кăтартрĕ Васил Петрович.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тетĕп? Ирхине ирех, тырăпа кайакан колхозниксене лашасене парса пĕтертĕм те, хам тӳрех çакăнта вĕçтертĕм.

— Мĕн тума?

— Мĕнле мĕн тума? Çула тĕрĕслеме, Мĕтри Иванч, çула. „Мĕнле иртсе кайĕç-ши?“ тетĕп. Пĕлетĕп-ха хам, çулĕ çатма пекех, çавах та лавсем кайас умĕн çакăнта килсе çула пăхатăпах. Айалтан пуçласа çӳле çитиччен ех çул çинчи кашни лан-кашканах асăрхатăп...

— Вот ку йăлана санăнне пĕлменччĕ, — тĕлĕнет Мĕтри Иванч.

— Çапла вара, çула тĕрĕслесе тухатăп та лавсем килессе кĕтсе тăратăп. „Мĕн шăла йĕрсе тăратăн?“ — теççĕ иртсе кайакан колхозниксем кулса. Епĕ вĕсене: „сире ăсататăп“ тетĕп. Çавăнтах хăшĕн-пĕринне лаша таврашĕсем тĕрĕс мар пынине те асăрхаса тӳрлеттеретĕп...

— Вот, кăна пĕлменччĕ,—тĕлĕнет колхоз председателĕ.

— Вара епĕ вĕсене мĕн курăнми пуличченех пăхса тăрса ăсататтăм,—тесе пĕтерчĕ хайхискер хăйĕн йумахне.

Епĕр тăвайккирен хăпарса çитрĕмĕр. Васил Петрович тилхепене хуллен çеç туртрĕ, лаша çавăнтах чупма тытăнчĕ.

„Ытла лайăх пырат-çке ку ăйăр. Ку Максукăн ăйринчен те иртерет пулмала“,—тесе шухăша кайса пыратăп епĕ.

Сасартăк пирĕн хыçра гудок сасси илтĕнсе кайрĕ. Çавăнса пăхатпăр—тăвайккирен автомобил вĕшкĕртсе хăпарат. Васил Петрович, автомобиле çул парас тесе пулас, лашана çул хĕрнерех тытрĕ. Автомобил пирĕнпе танашсан, ун çинче ларакан арçынпа хĕрарăм пуçĕсене тайрĕç. Мĕтри Иванч та вĕсене пуç тайрĕ.

— Камсем кусем?—ыйтатăп епĕ.

— Хурăнлăх колхоз председателĕпе секретарĕ.

Автомобил пирĕн умма ӳксе, çуннă бензин шăрши кăларса хăварчĕ.

— Ничево,—терĕ коҥух, пирĕн йеннеле пăрăннă пуçĕпе малта пыракан автомобил çине сулласа кăтартса,—пирĕн те пулĕ-ха ун пекки... Ун чухне вара...

— Ун чухне вара путек çаппи касма та автомобилпе кайас тетĕн-им?—терĕ колхоз председателĕ, кулакаласа.

Коҥух пӳлĕнчĕ. Мĕн каламалине тупаймарĕ.

— Çук,—терĕ унтан, сывлăш çавăрса йарса коҥух,—путек çаппи касма мар, кĕçĕн ывăлăма, Петĕре авлантарнă чухне туйа —кин илсе килме—автомобилпе кайăпăр, Мĕтри Иванч...

---

*НЕСТĔР ЙАНКАС.*

# ЙУЛАШКИ ЙУХХА.

~~(ПОЕМĂРАН)~~

I.

Каçăрлат, тăрна пек,
Чăсмак екскаватăр.
Çăткăнăн хыпат вăл
Шахтăран тăпра.

— Зинă, мĕн тăватăр?
— Метро чавалатпăр!
— Вăхăтра кайат-и?
— Кайĕ вăхăтрах!

Хура—ĕçĕ шахтăн.—
Ĕçĕ йывăр шахтăн.
Çывăрасшăн пилĕк;
Сурасшăн, мур, хул...

— Ырмарăн-и, Зинă?
— Ырмарăм пачах та!
Ата, тăрăш ес те,
Зинăран ан йул!

Метроран тухаççĕ,
Метрона кĕреççĕ
Чарăнма пĕлмесĕр
Вагонеткăсем.

— Зинă... хавшăн мар вĕт...
Хăв ларса çўрес пек...
— Хамăр ваҫҫи мар-тăк,—
Камшăн-ши, кĕсен?!

* * *

Шăнăçмаст хаваслăх
Аслă Метрона та—
Çулпуççем килсессĕн
Пăхма, вĕрентмешкĕн.

— Ударницă, сыв-и?
Ĕçсем сан бригадăн
Йепле пыраççĕ?
— Аван, Моисейчă![1]

* * *

Черченкĕ столовăй.
Фарфăр чашăк-тырĕк.
Радио. Естрадă.
Çи, ĕç, савăн, кур!

— Зинă, мĕн çийес тен?
— Мĕн пур—пурте пырĕ.
— Кĕмĕрчленĕ хур пур.
— Çитерĕр—мĕн пур.

* * *

Клубра ак читаҫнă.
Клубрах физплощадкă.
Кам курат спектакаҫ,
Кам вулат калав.

— Зинă, мĕн тăватăн?
— Статйа çăрмаклап-ха.
Намăслас-ха тетĕп
Ик-виç кахала.

* * *

Сĕтелсем—чечеклĕ.
Барак аслă, çутă.
Матрацсем пружинлă.
Вырнаç улпутла!

— Кантăкран кĕресшĕн,
Зинă, кăвак-çутă...
— Кĕтĕр. Çывăрмастăп,
Вĕренеп хутла.

* * *

Магазин тăп-тулăх.
Айала, çўле те
Тавар типтерленĕ.
Куç, ан алчăра!

— Зинă, мĕн илес тен?
— Мĕн кирлĕ—илетĕп.
Пурçăн майкă, йубкă.
Лак туфҫă чăрка!

---

[1] Л. М. Каганович

* * *

Каçăрлаť, тарна пек,
Чăсмак екскаватăр.
Тавлăкпех ĕçлет вăл,
Тасатаť тăпра.

— Зинă мĕн тăватăр?
— Метро тасататпăр!
— Вăхăтрах кайаť-и?
— Кайаť вахăтрах!

II.

Пĕре, кану куњ, метро хĕрĕсем
Чĕнчĕç Зинăна «Восток-кинова».
Курас картина курмашкăн çитсен:
— Пăхмастăп,—тет Зинă,—ку картина.

—Мĕскершĕн?—теççĕ хĕрсем, кĕрлесе,—
Пайан, кану куњ, мĕн-ма канас мар?!
— Кĕместĕп!—тет Зинă. Хăй, хĕрелсе,
Вара çаплала пуçлаť калаçма:

— Картин, кĕçĕрхи, ман пурнăçа пит
Аса илтерет. Ман иртнĕ кун-çул
Вăл—măшкăл, асап... Халђ ак... манăн пит
Çунса хĕрелет... Тăмлаť ав куççуђ...

Зейнап ман чăн ятăм. Зинă тесе
Халђ есĕр, хĕрсем, чĕнетĕр мана,—
Манпа метрора ик çул ĕçлесе
Пĕлетĕр мана йулташ пек кăна.

Аттем манăн пулнă чухăн узбек,
Мана хĕр шутне картсассăн, ăна
Пуйан Мирза-бай пĕтерчĕ пуçпех..
Пĕтерчĕ вăлах кĕтӳç Максума...

Кĕрер, ав, сата, калам пĕтĕмпех,
Хура-шурăна еп куртăм нумай...

---

Сатри аллейпе утса пынă май
Хĕрсем Зинăна итлерĕç тимпех.

---

Пит чухăн пулнăран, çĕр хĕсĕкрен,
Зейнап ăшшĕ—Гаджи мĕн пĕчĕкрен
Арык чавнă тем чухлĕ байĕнне.
Батрак пулса тăрантнă çемйине.

Санзар Гаджи çĕрмамăкшĕн йухман.
Еметленмен Гаджи çынна тухма.
Бай мулĕшĕн, пĕлмесĕр каç-ире,
Ахлатнă вăл. Бай супнă ĕçкĕре.

---

Пĕрре Гаджи, ĕç хыççăн, ирçинче
Пĕр йурă илтнĕ мĕн ичкирирен.
Вуник çулхи Зейнап çемçен, çинçен
Йурлană мĕн унта йĕре-йĕре.

Салху та çепĕç çеç Зейнап йурри
Çурсах кайнă Гаджийĕн чĕрине.
Хăй Зейнапне ачашлама йури
Гаджи хăйсах кĕнĕ ичкирине.

Аран çуннă шăн-çу ичкирире.
Ак тамаша! Гаджи мĕскер курат!—
Зейнап—пике! Зейнап вуниккĕре!
Ун куçĕсем, агат пек, йăм-хура...

Ун кĕлетки, платан пек, çинçешке...
Мĕнле ăна вăл ĕлĕк астуман?!
Йе ун хĕрне курма вăхăт пулман?
Зейнап—пикех! Зейнап ун мĕнешкел!

Вара Гаджийĕн кăн-кăвак пусне
Кĕрсе вырнаçнă пĕр ĕмĕт: „Кала,
Мĕн патăн-ши мана ес, о, аллах!
Асапсăр, типĕ çăкăрсăр пусне?

Ман хĕр ӳсет хунав платан пекех.
Ку таврарах сайра ун пек пике
Зейнап тăрĕ деханăн ĕмĕрне!“
Гаджи ăшран: „Сутап!“ тенĕ хĕрне.

III.

Каç-каç килнĕ хура-тăва тапăр тăма
Джигит-кĕтӳç пĕр бай кĕтĕвĕпе.
Чĕри Зейнапăн вырăнта тăман,
Ун чĕринче тапранна çил тăман —
Киллеимесен кĕтӳç кăмăлĕпе.

Кĕрнеклĕ пулнă мĕн Максум кĕтӳç,
Патмар та йыштака, саур пекех.
Çавра тута та çырă вичкĕн куç,
Тӳрĕ сăмса та хĕрлĕ кăтра çӳç...
Ун пек джигитшăн çунатех пике!

Чăн малтанхи таса йуратупа
Зейнап йуратнă хăйĕн Максумне.
Çӳренĕ вăл ирччен Хура-Тупа—
Ачашшăн тайанса Максум çумне...

Хăй савнă Максумне кăмăл тума,
Зейнап уппа чух хывнă чимбетнех,

Ҫӳренӗ кӑтартсах чипер питне...
Пурланӑ кулнӑ савнӑ Мӑксумпа...

Максум та савнӑ Зейнапне питех.
„Анчах... Мӗнле-ха кӑтартас пите
Ун ашшӗ умӗнче? Максум начар.
Максумӑн пур дуттар, мӑка ханчар.

Пур вата качака—пусмалискер.
Ун урӑх ним те ҫук. Ара мӗнпе
Калым тӳлес? Мӗскер тӑвас, мӗскер?!
Кӗрешмеле ун пек йӑла-тӗнпе!

Ҳаљ ҫӗнӗ самана! Мӗн-ма хӑрас!?
Йе ҫийӗҫ-ши пуҫа? Апла тарас,
Тарас хӗлле Зейнаппала кунтан.
Тарас Самарканда йе Ташкента...

Кӗрес пӗр-пӗр шкула Зейнаппала.
Унтах та ҫырӑнас комсомола.
Килес те кишлака, вара кайран—
Вӑрҫа тухас тискер йалапала.
Ҫӑлас чухӑн дехкансене байран...“

Ҫапла шутланӑ мӗн Максум. Аллах!
Хӗлле вӑл таратех Зейнаппала.
Чипер Зейнап та килӗшнӗ унпа—
Хӗл ҫитсенех вӑл тарӗ Максумпа.

Ҫук, нимӗн те пӳлмест таса йуратӑва—
Нимле хайар саккун, нимле йӑла.
Зейнап вӑрттӑн ҫӳренӗ мӗн йалан
Максум тӳрри патне—Хура-Тӑва.

IV.

Пуйан та чаплӑ пурӑннӑ Мирза.
„Таса“ имам вӑл. Вӑл чейе шайтан.
Пуҫ тайнӑ ҫухрӑмран ӑна курсан
Кашни дехкан йе чухӑнрах бай та.

Пуйан та чаплӑ пурӑннӑ Мирза,
Четренӗ тарҫисем ун умӗнче.
Пин пуҫ таран ҫӳренӗ чашкӑрса
Ун выљӑхӗ Санзар лапамӗнче.

Пуйан та чаплӑ пурӑннӑ Мирза—
Ҫитмӗл ҫулхи чейе кавак старик.
Ун хыснине дехкан ылттӑн хурсан
Тин уҫӑлнӑ дехканшӑн шыв, арык.

Пуйан та чаплӑ пурӑннӑ Мирза.
Ҫич арӑмпа ирттернӗ вӑхӑта
Вӑл ашкӑнса, асса, супса, урса...
Пӗр-пӗр чипер кӑза пӗлсен-курсан
Ун ӗмӗт пулнӑ авланма тата.

Пуйан та чаплӑ пурӑннӑ Мирза.
Вӑл басмачсен шайкки хӳттипелен
Англи ҫӗрне ҫӗрмамӑкӗ йарса
Ҫул пӳлнӗ пирӗн текҫтиле хуллен.

Пуйан та чаплӑ пурӑннӑ Мирза.
Дехкансене вӑл макӑртнӑ пайтах.
Пуҫ тайнӑ ҫухрӑмран ӑна курсан
Кашни дехкан йе чухӑнрах бай та.

Пуйан та чаплӑ пурӑннӑ Мирза.
Вӑл, кишлака саккун ҫынни пырсан,
Урай варне ука дастӑрхханах
Сарса хурса, кунак тунӑ ӑна.

Пуйан та чаплӑ пурӑннӑ Мирза.
Ҫер пулнӑ ун пин теҫеттин патне.
Памир та тайнӑ пуҫ-ӑна курсан.
Санзӑр таҫтах ӑсатнӑ ун йатне.

V.

Пӗрре Гаджи Мирза хирне арык
Рис шӑварма уҫайса йарсанах,
Пырайса тӑнӑ ун патне старик—
Мирза старик—хӗрӗнкӗ, йарханах.

— Сеҕам алейкум, ыр хуҫа Мирза!—
Пуҫ тайнӑ ҫеҫ Гаджи ӑна курсан,
Ҫак самантрах вӗсем патне Зейнап
Каҫхи апатпала ҫитейнӗ лап.

— Сеҕам! Сеҕам! Санпа адат, Гаджи!
Тӑрӑш, ӗҫле! Ку санӑн-и пике?
Ай-йай, Гаджи! Ай-йай! Сан хӗр йакши!..
Йуратӗ-ши мана вӑл—старике...

Вара Зейнап Мирза умне пырса
Пуҫ тайнӑ та, хуллен; „рехмет!“ тесе
Вӗҫтернӗ хӑвӑрт кишлака. Мирза,
Гаджи умне тайкаланса пырса:
„Мӗн чул?“ тенӗ хӑрах куҫне хӗссе.

Ак тамаша! Гаджи чӗнмен. Ӑна
„Мӗн чул“ тени ӳкернӗ урараи.
Самай тӑрсассӑн вӑл хуллен кӑна:
„Килте,—тенӗ,—кунак пулӑн ыран...“

VI.

Вăл ир темме Гаджи хăй Зейнапне
Арык чавма чĕнмен. Ичкиринче
Вăл ир, йурра хывса Максум йатне,
Зейнап чимбет тĕртнĕ ут хӳринчен.

„Платанлă хӳтĕ Хура-Ту
Шап-шур чимбет уртсассăнах,
Ăçта чĕнет, Максум, сана
Санзар пек тăрă йурату?“

Пĕр çаврăм хыççăнах Зейнап йурри
Пат татăлнă. Зейнап чĕрне таррин
Хăна-пӳлĕм йснне утса пырса,
Шак хытнă пĕчĕк çăварне карсах.

„Çĕр ылттăн çитĕ... Ме! Санпа-адат!
Мĕн чул кирлĕ, вара, сана тата?
Чипер таварăн хакĕ те чипер.
Сана еп мул сĕнетĕп чĕрçипех...
Ну, килĕшсем, Гаджи! Çапсам алла!
Зейнап ман арăм? Йакши?.. Аллах!

Зейнап мĕскер илтет! Пĕтрĕ тĕнче!
Мирза иккен хăна-пӳлĕмĕнче!
Вăлах, вăл асăнат Зейнап йатне...
Гаджи! Мĕскĕн! Сутат мĕн Зейнапне...

Çук! Йышăнмаст Зейнап ку кавара!
Зейнапшăн ку вилĕмпеле пĕрех.
Вăл сутмĕ пурнăçне, мула кура.
Мирза—старик. Зейнап—вуниккĕре...
Сив кĕл часах сӳнтерĕ кăвара...

Ак—ылттăн та чăнкăртатат... Вара,
Зейнап часрах уртат те халатне,
Хуллен кантăкранах сиксе тарат
Хура-Тăва—Максум тӳрри патне.

VII.

Кĕçех ак çĕкленет хирпе хăйăр.
Санзарала анаççĕ çĕр çурса
Çич йуланут. Малта—çӳрен ăйăр.
Мирза мĕн ун çинче—кăвак Мирза!

Санзарăн çыранне çитсе тăрсан,
Ак тамаша! Мĕскер курат Мирза:
Кимĕпеле, Максумпала Зейнап
Санзар урлă ишсе каçаççĕ лап.

Мирза курат: Зейнап чимбетсăрах.
Санзарăн леш йенче—чăтлăхката...
Ара, çухатсанах ку вăхăта
Хĕрпе тарат-ĕçке джигит вара!

Çĕклет басмач винтовкине Мирза.
Хĕрпе джигит, пăхмасăрах калла,
Киме çинчен анса чупма тăрсан,
Тĕллет вăл пашалне:—„Çырлах, аллах!“

Лах-лаxх!.. кулат Санзар каçса-кайсах.
У-ў-ў!... ўлет ăна хирĕç ката...
Зейнап çине аптранă пек пăхса
Максум самант пĕр вырăнтах хытат.

Зейнап кĕç çухăрат шари! кăна.
Мĕскер-ха курăнат ăна, мĕскер?—
Максум кăкри çинчен йун сăрхăнат...
Йунах! Мĕн пултăр урăх хураскер?..

Максум хуллен кăна: „Зейнап, текех
Ан таврăн кишлака...“ тесессĕнех,
Тăрук, касса йанă саур пекех,
Тĕшĕрĕлсе анат кăкри çине...
Пĕр хутлатса туртат урисене.

Вара Зейнап, Максум вилли çине
Ўксе ўхлет те, сикейсе тăрса:
„Ылханăм çиттĕр сан пуçна, Мирза!..“
Тесе, йăрах уçат кăкрисене...
Унтан хуллен утат ката йеннĕ.

Вара тăнчас Зейнап çав йахăнта
Йуххасемпе йерсе унта-кунта
Çўрет. Мускав савăччĕсем кăна
Чăн-чăн етем картне кĕртеç ăна...“

VIII.

Зала пит те аслă,
Залă пит те пысăк.
Залă ак хăйех те
Метрополитен.
Аласен çуппи те
Йарма сaслă музăк.
Залăра лăк халăх—
Айалта, çўлте.

Мĕншĕнех лăк тулнă
Ку залăна халăх?
Мĕншĕнех çупаççĕ
Çынсем алсене?
Мĕншĕн кунта музăк?
Вулакан, пăх халĕ —
Зинă мар-и çавă
Хыват алсине?

Аçта унăн зонтик?
Ăçта редикўлĕ?
Аллинче мĕскершĕн
Ун брезент алса?

Тутинче мĕскершĕн
Унăн ăшă кулă?
Мĕншĕн куç хéсмест вăл
Сиввĕн лăхлатса?
Мĕншĕн ăна пурте
Ал çупса чыслаççĕ?

Мĕншĕнех утат-ха
Вăл сетел умне?
Çĕнĕ коçтум ăна
пырса тытараççĕ.
Кăкри çине «Мĕтро ударникĕ»
значок çакаççĕ.
— Малтах пырăп!—тет вăл,
Илет парнине.

Ак мĕншĕн лăк тулнă
Ку залăна халăх!
Ак мéншĕн çупаççĕ
Çынсем алсене!
Кемсĕртетрĕ музăк.
Вулаьан, пăх халĕ—
Тăхăнат каллех ав
Зинă алсине.

---

**ПОЕМĂРИ ĂНЛАНМА ЙĂВĂР СĂМАХСЕНЕ ĂНЛАНТАРСА ПАНИ:**

**Йухха**—чăваш сăмахĕ, аскăнланса çӳрекен хĕр, проçтитуткă.
**Аллах**—турă.
**Чимбет**—узбек хĕрарăмĕсен пуç çинчен уртса çӳренĕ пĕркенчĕкĕ.
**Дехкан**—хресчен.
**Коран**—тĕн кĕнеки.
**Джигит**—йĕкĕт, хусах.
**Кăз**—хĕр.
**Йарăмĕ**- гӳрри, савни.
**Калым**—хулăм укçи.
**Кунак**—хăна çынни.
**Ичкири**—хĕр пӳлĕмĕ.
**Платан, саур**—Узбекистанра ӳсекен йăвăçсем.
**Агат**—хура мерчен чул.
**Худай**—турăш, иккон.
**Кишлак**—йал.
**Дуттар**—тутапа вĕрсе каламали шăхличă.
**Ханчар**—кинжал, вăрăм çĕçĕ.
**Имам**—çветуй.
**Шайтан**—шуйтан.
**Арык**—уй-хире шыв йамали канал
**Дастăрххан**—узбексен хăна кисе урайне сармали чыслă саркăç.
**Йакши**—аван, лайăх, паха.
**Селђам алейкум**—„сывă-и" тени пулат.
**Екскаватăр**—чаваласа купаланă çĕр урăх çĕре йатса куçармали механи сăмлă машинă.
**Метро**—çĕр айĕнчен трамвайсемпе çӳремели çул.

*УЙĂП МИШШИ.*

# ТĔЛПУЛУ.

*КАЛАВ.*

Кивелерех панă пысăк йăвăç çурт. Шалта тĕксĕмрех аслă вăрăм зал. Пĕренесем çумĕнче нумай пулмасть çапнă тĕрлĕрен плакатсем тăваткалланаççĕ, лозунгсем тăсăлаççĕ. Сĕтелсем, тенкелсем çинче çамрăк-кĕрĕм шавласа ларать. Тин çеç çара илнĕ çамрăксем. Икĕ йенчен те сарлака пысăк кантăксенчен кун çути кĕрсе вĕсен пичĕсем çине ÿкет. Тĕрлĕрен питсем, тĕрлĕрен сăнсем. Акă, уйхир ĕçĕнче, кунĕпе хирте хĕвел çинче, çилре пиçсе хуралнă Иванкка Тимукĕ, Аслă йалтан, çумĕнчи йулташĕсемпе тем çинчен калаçса кулса ларать. Акă, Çĕнйал каччи—тăваткал тулли питлĕ Елекçи Кирукĕ. Йе шупкарах тăса сăнлă Микула, хулара ĕçлет; ырханккарах, шĕвĕр питлĕ путра ача—Антуç Махаљи. Сахал-и вара пайан кунта çамрăк каччăсем? Пурте пĕр тантăшсем вĕсем, пурин те пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт.

Шурă халатлă тимлĕ тухтăрсен умĕнче çарамасланса çÿрене чăрманас минутсем иртнĕ. Кăмăллă тухтăрсем пурне те тĕплĕн тĕрĕслесе суйласа илнĕ. Кашнин чĕрине тахçантанпа çÿсеймесĕр ĕмĕтленсе кĕтнĕ сăмах кĕрсе вырнаçнă, лăплантарнă.

— Йурăхлă.

Мĕн пек кĕтнĕ-ши ку сăмаха? Ура-алăсене, хăлхасене, куçсене тĕрĕслесе пĕтернĕ хыççăн аслă тухтăрпа унтах санăн хусене тытса ларакан Комиççи председателĕ хаљ-хаљ çав сăмаха каласси не кĕтсе вăрттăн вĕсен тутисем çине пăха-пăха илетĕн... Йулашкинчен кĕтнĕ сăмах санăн хăлхунта, чĕрере.

— Есĕ, йулташ, çара йурăхлă, сана илетпĕр.

— Йурăхлă!

Вăл сăмах мĕн пур шухăшсене, ĕмĕтсене пĕтĕмпех çĕнетсе, хăхлатса йарать, кăмăла çĕклет. Пурне те пĕр-пĕринпе çывăхлатать, пĕр тĕвве çыхать, Çакăнта ларакан çамрăксем хăйсем çара ивĕçлĕ пулнишĕн, хăйсем йуратнă çарне кайнишĕн, хĕрлĕ салакăн хисеплĕ йатне илнишĕн савăнаççĕ. Хĕрлĕ салтак! Çар пурнăçĕ! Çĕнĕ пурнăç, урăх пурнăç алăкĕ уçăлать умра! Вĕренÿ, аплă ĕç,—çĕршыва сыхлас ĕç, вĕсене ăшшăн, хаклă хăнасене кĕтнĕ пек, кĕтсе тăран тăван йыш, çивĕч Хĕрлĕ çар йышĕ. Кама пикĕре, кама тинĕсре, çывăхри, таçта инçетри хуласенче, анăçра, тухăçра, кăнтăрта, сивĕ çурçĕрте—пур çĕрте те, пурне те вĕсене кĕтсе тăраççĕ. Куллен кĕтеççĕ...

Вĕсем хаљ кунта кашни хăйĕн пуçĕнче шухăшĕ çитнĕ таран кулас пурнăçа, пуçланас кунсене куç умне тăратма тăрăшаççĕ. Пĕр-пĕрин хушшинче йе аçта кирлĕ унта ушкăнăн-ушкăнăн пухăннă çĕрте пĕр вĕççĕр калаçу, вĕççĕр тупăшу. Кам çарта пулнисене тĕл пулсан йе калаçу иртерекен командирсене

хупăрласа илеççĕ, сывлама памасăр каластараççĕ. Пĕр сăрăнсан уйăрăлма пĕлмеççĕ. Пурне те хăвăртрах чăн куçпа курас килет вĕсен, халех ыйтса пĕлес килет... Асатма килнĕ ашшĕамăшне, арăмне, йуратнă савнине унта вĕсене мĕнле вĕренӳ, мĕнле ĕç, мĕнле пурнăç кĕтнине халех каласа хăвармала пултăр. Вĕсем пурне те халех пĕлсе йулччĕр, санпа пĕрлех хавасланччĕр...

Пысăк залра пысăк пуху. Малта, сĕтел умĕнче призыв комиççи председателĕ тин çеç çара илнĕ çамрăксемпе калаçат. Вĕсен хавалслă хыпарĕсене итлет, йалсенчен, колхозсенчен Хĕрлĕ çара вађђи илсе килнĕ парнесене туйанат.

Акă, Вăрманкас ачи, Ешкер Павăлĕ сăмах илнĕ.

— Пирĕн йалсоветĕнчи призывниксем, Хĕрлĕ çара чăн тивĕçлĕ çынсем пулса кайас тесе, çу каçах пур ĕçре те тимлĕн, пикенсе ĕçлерĕç,—тет вăл.—Вĕсем тăрăшса ĕçленипе, пирĕн колхоза уй-хир ĕçне срукчен пуçтарса кĕртме пулăшрĕç. Патшалăха вăхăтра тырă-пулă парса татрăмăр епĕр. Кăçалхи çул-йĕр планне ытлашшипех тултартăмăр. Хĕрлĕ çара кайма çул çитнĕ çамрăксенчен кам хутла пĕлменни тăрăшсах хутла вĕренсе вулама, çырма пуçларĕ. Суккăр куçпа унта тухса кайас килмест, мĕншĕн тесен хут пĕлмен çын унта та çителĕклĕ усăлă çын пулма пултараймаст. Акă, пирĕн йалсоветĕнчи колхозсенче, йалсенче „1911-мĕш çулта çуралнă Хĕрлĕ салтак" йатлă самођот вађђи икçĕр тенкĕ укçа пухрăмăр, тата хамăртан пилĕкшер тенкĕ хунă, мĕн пурĕ икçĕр аллă тенкĕ, тесе хĕрлĕ пакет тыттарат вăл комиççи председателне.

Зал, унăн сăмаххисене хĕпĕртесе йышăнса, хĕрӳлĕ ал çуппипе витет.

Пĕрре ларма тăнăскер, татах сиксе тăрат Павăл.

— Татах калама манса хăварнă, председател йулташ.

— Кала, кала, мĕн каламалине,—чĕнет лешĕ.

— Пире вунă çынран çиччĕшне премилерĕç. Унсăр пуçне пирĕн ушкăна çара кайма купăс парса парнелерĕç.

Павăлăн ку хыпарĕсене те татах хытă алă çупса кăмăлласçĕ çамрăксем. Унпа пĕрлех савăнаççĕ вĕсем, председателĕ те савăнат...

— Çук, епĕр ĕлĕк кун пек кайман çара,—тет вăл. Епĕр ĕлĕк çартан, çара кайассинчен хăранă пек нимрен те хăраман, çара кайнă чух кућанна пек нихăçан та куђанман. Ăнлантăр-ши есĕр мĕн пур тарăнăшĕпе çак йулташ каланине? Йе хăвăр каланине? Сирĕн сăмахсенчен ытлашши тĕлĕнмели нимĕнех те çук пек. Ун пек рапăртсене есĕр нумай илтме пултарнă, халиччен те. Анчах тарăнрах шухăшласа пăхсан... Иртнĕ вăхăтсене аса илсен, аванах ăнланса илетĕн. Тĕлĕнмеле вăхăтра пурăнатпăр епĕр сирĕнпе. Нихăçан та, нихăш ĕмĕрте те çамрăксем çара çакăн пек кăмăлпа, çакăн пек туртăмпа, кун пек парнесемпе кайман. Нихăçан та, нихăш ĕмĕрте те...

Хăй хыççăн председател каллех калас текеннисене сăмах парат. Тата нумайĕшĕ йат тухнă çамрăксем йалта мĕнле ĕçкленсе ĕçлени çинчен, пикенсе хутпĕлменлĕхе пĕтерни çинчен,

туха-туха каларӗҫ. Колхоз халӑхӗ, тӑван йалйыш вӗсене менлӗ хисеп парса ӑшшӑн, кӑмӑллӑн ӑсатни ҫинчен пӗлтерчӗҫ. Тӗлӗнмеле чӗрӗ сӑн-питлӗ, нумай усӑлнӑ хаҌхи ҫамрӑксем. Вӗсем хӑйсен ҫарне мӗншӗн кайнине пӗлсе, кайас килнипе, йуратса кайаҫҫӗ.

Председатӗл кӑмӑллӑ куҫӗсемпе ачасен хавасне, вӗсен шухӑшӗсене, чӗринчи вут-хӗмӗсене татах тарӑнраххӑн ӑнланасшӑн витӗр тинкерсе умӗнчи ҫӗнӗ ҫар ҫыннисем ҫине пӑхать. Чӑнах та, мӗн пек ӳснӗ вӗсем ӗлӗкхи ҫамрӑксемпе танлаштарсан? Мӗн пек шанчӑклӑ, чӗрерӗн-йунран хамӑр ҫынсем тӑраҫҫӗ пирӗн мухтавлӑ ҫӗршыв чиккинче?—шухӑшлать вӑл.

— Ҫапах та, ӗҫсе усӗрӗлсе ҫӳрекеннисем, ҫапӑҫаканнисем пулмарӗҫ-и сирӗн хушӑра?—ыйтать вӑл пӗр ача ҫине куҫне илмесӗр пӑхса.

— Ҫук, ҫук, ун пеккисем пулман,—илтӗнеҫҫӗ харӑс нумай сасӑсем.

— Сайраран пур,—тет тӗпри.

Ҫав вӑхӑтрах председатӗл ыйтнипе, ҫамрӑксем умне пӗр йакарах тумланнӑ каччӑ тухса тӑрать. Туй Кӗҫтенккийӗ теҫҫӗ ӑна йалта. Унӑн ашшӗ ӗлӗкрэх хӑйсен йалӗнче, ҫывӑхри йалсенче пӗр туйран йулмастчӗ, теҫҫӗ ҫынсем. Ывӑлӗ те ашшӗнчен йулсах каймасть пулас. Пайан та авӑ, вӑл, тантӑшӗсем хӑйсен ӗҫӗсем ҫинчен каланӑ чух ҫаплах пӗр кӗтесре ҫынсем хыҫне пуҫне чиксе ларчӗ. Ҫӳренӗ чух та ӑҫта пынӑ унта ҫынсенчен айакка пӑрӑнма пӑхать. Кунӗпех хӑйне хӑй намӑсланса ҫӳрет. Халӗ те, тӗттӗмрех залра председатӗл куҫӗ тӗлне пулас мар тесе, йӑпшӑнарах ларатчӗ. Анчах ӑнсӑртран пуҫа ҫӗклени шалтах пӗтерсе хучӗ. Кӗҫтенкийе асӑрхарӗҫ, ҫынсен умне чӗнсе кӑларчӗҫ.

Председатӗл ҫынсем йенне ҫаврӑнса тӑма ыйтрӗ. Питсем хӑлха таран хӗрелсе кайнӑ Кӗҫтенкийӗн. Именчӗкӗн, куҫ харшн айӗпе пӑхса, умӗнче ларакан тантӑшсем йенне ҫаврӑнса тӑчӗ вӑл.

Зал тулли ҫамрӑк сасартӑк пӗр сасӑпа кӗрлесе ахӑлтатса кулса йачӗ.

Кӗҫтенкин икӗ куҫайӗ те кӑнкӑвак кӑвакарса йунӑхса ларнӑ. Сулахай йенчен ҫамки йӗкел пысӑкӗш суранланса хӑпарса тухнӑ. Питкуҫне, такам, тӗрӑшсах ҫивӗч чӗрнисемпе чӑрмаласа пӗтернӗ. Йурать ха, ҫурса таткаласа тӑкнӑ кӗпине никам куриччен киле пытарса хӑварма ӗлкӗрнӗ.

Ачасем ун ҫине пӑхса йӗплӗн кулни Кӗҫтенки ҫанҫурӑмне сивӗ шывпа сапнӑ пек сӑркӑлтаттарса илчӗ. Вӑл никама ним чӗнме аптӑраса, ниҫтала пӑрӑнма пӗлмесӗр куҫӗсене пӗрре ҫӗреле, тепре йулташӗсем ҫинеле ҫавӑрать. Аллинчи мӑн сӑмсаллӑ шурӑ тӑваткӑл йӗрлӗ хӑмӑр картузне аптӑранипе пӗр вӗҫсӗр муталаса тӑрать.

— Акӑ, курӑр, пурте ун ҫине пӑхӑр,—тет председатӗл.—Пирӗн хушӑрах кунпеккисем те пур.

Пӗр татӑксӑр кулӑ Кӗҫтука пырса ҫапӑнать. Кӗҫтук чӗнмест. Пӗр шӑтӑк пулсан ҫӗр тӗпне сикӗччӗ вӑл, ҫакӑнтан...

Нихҫан та вӑл кун пек вӑтанман ҫынсенчен, никам та ӑна кун пек намӑслантарман. Хӑй те питех вӑтанакан марччӗ хаҫиччен. Пайанхи ҫынсен кулли ӑна витӗрех витрӗ. Вӑл пӗччене намӑсланмала сӑнпа килнӗ иккен ҫара кайма.

— Хӑш йалтан есӗ, йулташ?—ыйтат предҫедатӗл Кӗҫтукран.

— Пилеш кассисем.

— Мӗн пулчӗ капла сана?

— Усӗрпе.. Лаша ҫинчен ӳксе суранланса пӗтнӗ иртнӗ каҫ...

— Нихӑҫан манми уйӑрлас терӗн пулӗ йалйышпа, тантӑшсемпе?

Кӗҫтенкки чӗнмест. Унӑн чӗлхи ҫыхланат темшӗн. Чӗлхе ҫӗтнӗ мӑнӑн,—теме те хатӗр вӑл ҫак вӑхӑтра...

Ҫынсемпе пӗрлех кулса йанӑ хыҫҫӑн, кулма чарӑнса:

— Йулташсем,—пуҫларӗ предҫедатӗл—хаҥхи ҫамрӑксем Хӗрлӗ ҫара тивӗҫлӗ ҫын пулас тесе, колхозсенче, хапрӑк-савӑтсенче, чи хастарлӑ ҫынсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем урӑ ӑспуҫпа, хисеплӗ йатпа ҫӗршывӑн чи хисеплӗ ӗҫне тума—патшалӑха, унӑн ӗҫне, унӑн ирӗкне тӑшмансенчен сыхлама кайма хатӗрленӗҫҫӗ. Ун пеккисенчен нумайӑшӗ кунта тухса каларӗҫ пайан. Аванҫке вӗсем ҫине пӑхма, вӗсем каланине итлеме! Чун савӑнса кайат сире курсан. Анчах ҫав вӑхӑтрах пирӗн хушӑра ҫакӑн пеккисем те сайраран тупӑнаҫҫӗ. Мӗнле, лайӑх-ши, урӑ пуҫпа, парнесем туйанса йӗркелӗ тухса килнӗ ҫамрӑксен ҫак йулташ ҫине пӑхма? Хаваслансах кулатӑр-ши ӗсӗр унтан? Питех мар пуҥ. Мӗне пӗлтерет-ха ку? Мӗнрен килет? Мӗншӗн сийенлӗ, мӗншӗн намӑс ӗҫ ку пирӗншӗн?..

Вӑл самайччен ҫамрӑксемпе кӑмӑллӑн, уҫҫӑн калаҫрӗ кун пирки. Пурне те ӑнланмала чӗлхепе калаҫрӗ. Итлекеннисем шӑп итлесе ларса вӑл каланине хапӑлларӗҫ, алӑ ҫупрӗҫ.—Чӑннине калат предҫедатӗл йулташ...

Ҫак картипа курса, ҫак йышпа пӗр шухӑшлӑ, пӗр хаваслӑ, пӗр кулӑпа ларчӗ пайан кунта Саҥкка. Унӑн ачаранпах сисӗмлӗ чӗрине тата ытларах хумхантарат ку йыш, тата ытларах шухӑшлаттарат... Тӗрлӗрен ҫынсем пур ҫав пирӗн хушӑра. Хӑшӗ нумай уҫӑлнӑ, ҫӗкленнӗ, нумай ӑнланнӑ пирӗн пурнӑҫра. Ҫав вӑхӑтрах теприсемпе сахал мар ӗҫлемеле-ха, тет вӑл хӑйне хӑй, предҫедатӗл калаҫнипе килӗшсе.

Калаҫу пӗтсен, Саҥкка ҫынсемпе пӑтранса, калаҫса тула тухма алӑк патне ҫывхарнӑччӗ, ӑна хыҫалтан такӑшӗ хыттӑн хулӗнчен тытса чарат. Вӑл тӗлӗнсе хыҫалала ҫаврӑнса пӑхрӗ. Ҫав вӑхӑтрах тата хытӑрах тӗлӗнсе савӑнса кӑшкӑрса йачӗ.

— Есӗ те кунта-и, Веҥук? Ӑҫтан лекме пӗлтӗн? Мӗнле?..

Сип-симӗҫ ҫӑра ҫерем ҫине чупса тухса нумайччен Саҥккапа Веҥӑ пӗр-пӗрин аллине хытӑ чӑмӑртаса тӑчӗҫ.

— Епӗ шалт тӗлӗнсе кайрӑм. Кам мана капла йарса илчӗ-ха?—тесе шухӑшласа тӑратӑп. Есӗ пулнӑ иккен! Мӗнле малтан курман-ха сана епӗ?

— Темле курман вара, пӗлместӗп.

— Ну, кала, кала. Ӑҫтан лекме пултартӑн есӗ кунта? Ӑҫта пурӑнатӑн? Ӑҫтан килтӗн? Мӗнле?—пӗтӗмпех пӗтӗмпех кала! Ой,

курманни нумай пулатçке? Курасса та шанманччĕ те, шухăшламан та епĕ...

— Салтак йачĕ тухрĕ ĕнтĕ, Саҥкка. Хĕрлĕ çара кайатпăр. Мана та илчĕç. Пурăнасса колхозра пурăнатăп. Мĕн мĕнле пурăнасси? Аван.

Сăмахпа калайми хаваслăх çавăрса илчĕ вĕсен чĕрисене. Иккĕшĕ те ним чĕнме аптăрарĕç малтан. Чăнах та мĕнпек савăнмала! Нумай пулат-и-ха, ача çуртĕнче пĕрле тăватă çул шавласа пурăнни?

Унтанпа ĕнтĕултă çул иртнĕ. Ултă çул! Пит те хăвăрт иртсе кайрĕç-çке вĕсем. Вăхăт вĕсене иккĕшне те нумай урăхлатнă. Иккĕшин те аллисем пысăкланнă, çирĕпленнĕ вĕсем. Аллисене тытсассăнах ăна туйрĕç. Хăйсем те ӳсе патмарланса кайнă. Малтанхи сăмахпах пĕр-пĕрне ун çинчен аса илтерчĕç Саҥккапа Веҥа.

— Ха, мĕн пек ӳсе кайнă есĕ!—кулкалат Саҥкка.

— Хăв та кун пек пысăк марччĕ-çке есĕ? Астăватнп, мĕнле пĕчĕкскер çӳреттĕнччĕ?—тет Вениамин.

— А санăн сассу çинçеччĕ тата. Хĕр сасси пекчĕ. Халь ав, мăн çын пек хулăмăн калаçатăн.

— Мăн çынсем пултăмăр пулĕ ĕнтĕ.

Иккĕшĕ те пĕр-пĕрин çине пăхса кулаççĕ. Ачалла уйăрăлнă хыççăн халь мăн çын шутне кĕрсе тĕл пулни çавтери сисĕнет. Иккĕшин те сăмси айĕпе тин хырнă сайра мăйăх йĕрри палăрат... Мĕн пек ӳссе улшăннă вĕсем унтанпа!

Анчах Вениамин пичĕ çинче çавă-çавах ĕлĕкхи шурă сăн. Унта çемçешкелĕх йĕрĕ, унăн кăпăшка ӳтпĕвĕ çинчен пĕлтерсе тăракан шупкалăх йулнă. Унăн ачашра иртнĕ лăпкă ачалăх кунĕсем çав шупка пит çине хăйсен хуйхăсăр, шухăшсăр, тутă пурăнăç йĕрне çаптарса хăварнă. Хура куçĕсене вăл халĕ теваскатмасăр выҥатат. Сăмаххисене çемçе сасăпа вăраххăн, тытăнчăклăрах кăларат. Тӳмелемен çурхи-кĕрхи хула сăкманĕ айĕнчен кăштах тусанланарах панă хура коçтумĕ курăнат. Шурă йархăнах кĕпи çуххисене хура пиншак çухи çине кăларса ик йенне сарса хунă. Ăна ĕлĕк те „тăрнаккай, вăрăм мăй“ тесе кулатчĕç те ачасем, халь татах вăрăмăн курăнат унăн çара мăйĕ. Имшерккескер, хăй те самайах вăрăм вăл, Вениамин.

Çăв вăхăтрах Саҥкка хĕвелре пиçсе хуралнă сăнне çутăлтарса çиçсе тăрат. Йулашки кунсенче кулă ун питĕнчен каймаст. Пурнăçра çавтери пысăк ĕçсем, паллă вăхăтсем çитсе килни ăна савăнтарат, хумхантарат.

Телейлĕ çамрăк ĕмĕр! Пихçан асран каймн телейлĕ вĕренӳ вăхăчĕ! Çирĕпленсе пиçсе çын пулма пулăшнă ĕç. Чĕрене вĕçсĕр хускатса çунтарса тăракан, вĕççĕр ĕмĕт—шанчăксемпе çӳле çĕклесе малала йăхăрса тăракан илемлĕ, хĕрӳллĕ çамрăк йурату... Пит те пуйанçке ирĕкре чечекленен пирĕн йешĕл çамрăклăх!

Хыçра çирĕм икĕ çул. Тĕтреллĕ инçелĕхре курăнми пулса çухалакан телефон йупилĕ вăрăм çул пек чăсăлса çухалаççĕ вĕсем асра. Йупасем вĕççĕр çулăн вăрăмĕшне картласа паллă тăваççĕ; инçеленнĕ çемĕн хăйсем те курăнми пĕчĕкленсе инçет

тĕтрелĕхне путса ирĕлеççĕ. Епĕр те хамăр пурăнăçри иртсе йулнă çулсен йĕркине асра çавăн пекех курмастпăр-ши? Саҧкка час-часах ун çинчен шухăша кайса тăрат вара. Иртни çинчен шухăшласан таçта инçетре, инçетре кăшт çеç асра уçăлакан сăнсем, асаилӳсем унан умне тухса тăраççĕ. Шухăшланă май вĕсем çывăхлăнса тасарах, витĕртерех курăнаççĕ. Йе ĕнер çеç пулса иртнĕ пек туйăнаççĕ... Вениаминпа курни Саҧккана иртнĕ ачалăха аса илтерчĕ. Пĕрле пурăнса ирттернĕ чечен ачалăха. Унăн асăнче манма пуçланă йулташĕсене, йуратăвĕсене, ун чухнехи ĕмĕт-туртăнусене вăратре çĕнетрĕ. Ытарайми кунсемччĕ вĕсем! Манми чĕвĕл йыш пуранатчĕ вăл ача çуртĕнче. Çершыв вăрçăпа, выçлăхпа йухăнса çитнĕ хыççăн, йăвăр вăхăтсем пурăнса иртернĕ пулсан та, тăлăх ачасене ваҧҧи çителĕклĕ пурăнăç туса панăччĕ унчухне.

— Манман пуҧ-ха çав ача çуртне?—ыйтат Саҧкка Вениаминран.

— Манман пуҧ-ха, тет тата. Аçтан манатăн вăл вăхăта, Саҧкка?

— Çапла çав. Манăн асран та каймаççĕ унти кунсем, унти ачасем. Аçта кайса сапаланса пĕтрĕç-ши хаҧ вĕсем?

— Кам пĕлет? Аçта кирлĕ унта вĕренеççĕ пулĕ, ĕçлеççĕ пулĕ. Унчухнех пысăкланса çите пуçланă хĕр-каччăсем пурччĕ те...

— Пулĕ. Леш Ваҧăсем, Паҧăсем, Ивансем пысăкчĕ çав. Пирĕнтен аслисем, пуçлăхсемччĕ.

— Кашнийех хăй çулĕпе, хăй майлă пурăнăç пуçларĕç пулĕ. Епĕр ак, Хĕрлĕ çара кайатпăр...

— Тĕрĕсех çав, тĕрĕс! Мĕн чухлĕ ача, мĕн чухлĕ хĕрччĕ унта... Курăпăр-ха, тесе уйăрăлтăмăр унчух. Аçтан куран хаҧ вĕсене? Сайраран çеç темле тĕл пулатăн вара хăш-пĕрине. Нумайĕшĕ Мускавра, Ленинградра, Чулхулара, Хусанта аслă шкулсенче вĕренеççĕ, теççĕ. Леш вăрăм Хĕлип пурччe, вăл таçта Мичурин патĕнче вĕренсе килчĕ, хамăр республикре ĕçлет пулас. Кам хаçат ĕçĕнче, кам учителре, театăрта, рабфакра, техникумра... Нумай çĕрте ĕçлеççĕ, вĕренеççĕ вĕсем.

Саҧккапа Вениамин калаçура хăйсене хăйсем манса кашласа ларан хурăн пахчи çумĕпе утса çӳреççĕ. Вăрăм, йаштак шурă хурăнсем кĕрхи çилпе чӳхенсе саралнă çулçисене тăкаççĕ. Мĕн чухлĕ чупман-ши вĕсем çак хурăн пахчинче.

Кĕрхи тăрă уйар кун. Таса тӳперен кĕр хĕвелĕ, йулашки кунсем тесе пулĕ, ăшшине шеллемесĕрех ăшăтса пăхат. Авă, çырма урлă пĕр-ик çухрăмра вăрман.

Вăрманала хурăн çулĕ—мăн çул кайат. Çав çулпа нумай майăра çӳренĕ вĕсем ушкăнĕ-ушканĕпе. Октăбĕр, май уйавĕсем чух килçурта, пӳлĕмсене решелеме сипсимĕс чăрăш лăссисем хуçса килетчĕç, çуркунне тĕрлĕрен чечексем татса килетчĕç...

Хурăн пахчи çумĕнче пысăк сатчĕ вĕсен.

— Астăватăн-и,—татах Веҧăна калаçтарат Саҧкка—мĕнле пикенсе ĕçлеттĕмĕр епĕр çак сатра? Улма йăваççисене хуйăрсенчен тасататтăмăр, йăваç тунине шурă извĕç шывĕпе сĕреттĕмĕр,

таврари çĕрне чавса çемçететтĕмĕр, тĕрĕслеттĕмĕр. Улми мĕн чухлĕ пулатчĕ унта? Улмаççисем аран йăтса ларатчĕç. Илемлĕччĕçке! Улмисем пит те тутлăччĕ.

— Ĕçленĕ çав, сахал мар. Пурте пулнă.—Кĕскен çеç ответлет Веньă.

— Хĕпхĕрлĕ, пулса çитнĕ улмасене йешчĕкĕ-йешчĕкĕпе тататтăмăр. Каççерен сыхлама килеттĕмĕр.

Вениамин та Саньккапа пĕрле кунта irттернĕ кунсене аса илсе шухăша кайнă. Ĕлĕкхи пекех сахал калаçат вăл, йе чĕнмест. Çав вăхăтрах Санькки пĕр чарăнмасăр калаçат. Çумĕнчи йулташĕ ăна итлени итлеменнине те асăрхамаст. Çав тери хыпăнса, хумханса кайнă ун чĕри. Вăл, çак таврара пĕрле пурăнса иртернĕ ачалăх кунĕсене тепĕр хут аса илсе хăй умне тăратат. Вениаминпа йунашар утса пынă çĕртен хăйне хăй ытларах калаçса пырат.

— Аса ил-ха, мĕнле чи малтанхи йурату шухăшĕсем пуççене килсе кĕнине. Мĕнле вăйлăн пирĕн çамрăк чĕресене çавăрса илнĕччĕ вĕсем... Манăн сарăрах çӳçлĕ, илемлĕ чăпчăмăр хĕрлĕ питлĕ Нинă пурччĕ унчухне...

— Астăватăп, астăватăп ара.

— Мĕн чул чĕрене çунтарман-ши вăл манăнне? Иксĕмĕр те пĕр-пĕрне çав тери йурататтăмăр. Çав вăхăтрах пĕр-пĕрне курсан вăтанса хĕрелеттĕмĕр, айаккала пăрăнаттăмăр... Çынсенчен те, хамăртан та вăтанаттăмăр... Хамăр çапах пĕр-пĕрне курмасăр пĕр сехет те тăраймастăмăр, нихăш кĕтесре те сăмах хушма вăй тупаймастăмăр... Малтанхи йурату вĕт-ха!

Пире шкулта хăш чухне киносем килсе кăтартатчĕç. Пĕрре çапла, кино вăхăтĕнче тĕттĕмре йунашар тăнă çĕрте çынсем куриччен епĕр Нинăпа чи малтанхи хут пĕр-пĕрин аллине шыраса тупса чăмăртарăмăр. Икĕ ачаш вĕри алă кăшт сĕртĕннипех чĕресене хĕрӳ çулăм çунтарса илчĕ. Ах, ытла та хытă ӳсĕртет-çке вăл çулăм! Чи телейлĕ самант пулнăччĕ çав самант пирĕншĕн. Унчухне епĕр малтанхи хут йурату мĕнле хăватпа икĕ çамрăк чуна пĕр-пĕрин çывăхне туртнине туйрăмăр. Малтанхи хут йурату мĕнле пире телейлентерме пултарнине ăнлантăмăр...

Нинă манăн çамрăк чĕрере çурăлас чечек пек тĕлĕрен йуратăва малтанхи хут вăратса кăварлантарчĕ. Хăй чăваш хушшинче ӳснĕ вырăс хĕрĕччĕ вăл. Чăвашла çырма пĕлейместчĕ. Çавăнпа хут татăкĕсем çине вырăсла çырусем çырса мана тыттаратчĕ. Епĕ вырăсла çырма пĕлмен унчух, чăвашла хуравлаттăм унăн çырăвĕсем çине. Çапах та никамран аван ăнланаттăмăр пĕр-пĕрне! Виçĕ сăмахпах хăйусăр кăвар чĕресем мĕншĕн çунине, мĕншĕн, кам çинчен пуçра шухăшсем пăтраннине систерсе ăнланаттăмăр...

Вăл балалайкăпа аван выљама пĕлетчĕ. Уйрăмах унăн пĕр ачаш илемлĕ кĕввине халĕ те манма пултараймастăп. Хăйĕн çинçе пĕчĕк шурă пӳрнисемпе Нинă балалайкă хĕлĕхĕсене мар, манăн чĕрери чи ачаш хĕлĕхсене сĕртĕнсе çав илемлĕ йурату кĕввине выљанăн туйăнатчĕ. Вăл хăйĕн йăваш хăйусăр куçĕсене чĕлĕхсем çине тĕллесе выљанă çĕрте епĕ те унпа йунашар

шухăша кайса лараттăм. Шухăшсем ăçта çитместчӗç-ши унчухне? Йе сайраран пирӗн куçсем тӗл пулса хăйусăррăн çиçсе илетчӗç. Мӗн чухлӗ ăшă ачашлăхчӗ унăн куçӗсенче!

Астăватăп, йулашки кун епӗр ача çуртӗнче. Йулашки ăсату каçне кайма хатӗрленетпӗр. Хӗвел анасси инçе йулман.

— Йулашки хӗвеле ăсататпăр-çке ача çуртӗнче!—тетпӗр иксӗмӗр. Йулашки кун! Кайран... Ырантан пуçласа хамăр тӗллӗн пурăнма пуçлатпăр. Унчух вăрттăн тӗл пулса çырусем тыттарасси çук. Курса калаçма та никамран та именсе тăмали пулмӗччӗ. Унчух пӗр-пӗрне мӗн каламалине пурне те, пурне те калăттăмар. Каламали нумай, нумай...

Нинă йулашки хут епӗ йуратнă кӗвве выљаса пачӗ мана. Савăнăçлă иртерне ăсату каçӗ хыççăн епӗр унпа кăштах хурланнă салху чӗресемпе ачашшăн сывпулашсаччӗ...

Унтанпа иксӗмӗр тӗл пулманпа пӗрех. Иксӗмӗр икӗ çӗреле уйăрăласа кайрăмăр, икӗ çӗрте вӗренсе çитӗнтӗмӗр. Ача чухнехи хушăри савăнăçа, çав телейлӗ манми кунсене кайала тавăраймарăмăр...

Кӗрхи çилӗ уççăн, вӗрсе илчӗ. Çулçăсем вăркăша-вăркăша вӗçсе ӳкеççӗ. Таврара кӗркунне. Вăл хăйӗн уçă сывлавӗпе шăхăрса чупан çилӗпе, тачка хăмăр пӗлӗчӗсемпе чӗрене салхулатат. Иртнӗ илемлӗ çуркунне, илемлӗ ăшă çу аса килет... Çавăн пекех чечен ачалăх та...

...Саҥкка вăхăтлăха чарăнчӗ. Çук, вăл вăхăтри асаилӳсене, чӗрере капланса килен сисӗмсене сăмахпа каласа пӗтереймӗн. Сăмахсен кăшăлне шăнăçтарма та çук вӗсене. Пирӗн пуйан, анлă чӗлхе те сисӗмсен умӗнче пит чухăн, хӗсӗк иккен...

Малтанхи ачаш илемлӗ йурату! Вăрттăн вӗри йурату! Мӗн чухлӗ телейлӗ самантсем, телейлӗ вăхăтсем, кунсем, асаилӳсем çыхăнаççӗ унпа! Тин çеç çурăлнă калама çук илемлӗ ачаш чечексене сивӗ çил тивесрен хӳтӗлесе —тимлӗн ăшăтса усранă пек, Саҥкка та хăй чӗринчи çав малтанхи манми йуратуне, сарă хӗрӗн çурхи сарă чечекпе илемлӗ ачаш сăнне, унчухнехи унпа çыхăннă телейлӗ самантсем çинчен йулнă асилӳсене чӗри тӗпӗнче никам кӗрсе хускатми кӗтесре ачашласа усрат. Вăл хаклă асаилӳсем пайан кун та унăн чӗрине шалтан уйрăмах канлӗн çутатса, ăшăтса йăпатаççӗ...

Нумайччен калаçса уткаласа çӳрерӗç Саҥккапа Вениамин. Нумай иртнине аса илчӗç вӗсем. Калаçура вăхăт иртни те сисӗнмерӗ. Хӗвел каçа сулăнчӗ. Саҥкка йулташне аллине сӗнчӗ:

—Ну, ме, тыт. Сывпулса тăр-ха пайанлăха. Кайаччен курăпăр-ха. Çитес кунсенче тухса кайатпăр пулӗ. Сана ăçта йаратпăр, терӗç?

— Чикӗ çывăхӗнчи çара йараççӗ мана. Сана?

— Мана та çавах. Аванçке, тен, пӗрле пулăпăр.

— Аван пулӗччӗ.

Вӗсем уйăрăлса харпăрхăй çулӗпе утрӗç.

Çак кӗтмен çӗртен тупăннă тӗлпулу Саҥккана киле пырсан та нумай шухăшлаттарчӗ. Çав ача çуртӗнче пулнă ачасемпе тӗл пулсан вăл йаланах çапла хумханат вара. Вӗсене йуратса,

вĕсен йышăнче пĕрле чупса саванса, вĕренсе, пĕрле ĕçлесе тăватă çул пурăннă вĕт-ха. Унчухне вĕсемпе сыхса тăракан çыхăну, йурату халĕ те сÿнмен унра...

— Чикĕри çара кайатăп. Колхозра ĕçлетĕп.

Вениаминăн çак сăмаххисем сасартăк унăн пуçне килсе кĕчĕç. Саңккана шухăша йачĕç.

Мĕнле-ха апла? Вăл пуп ачи-çке. Ăна Хĕрлĕ çара илмеле те мар, шутпала. Илнĕ. Тен, хăй кам иккенне пытарнă-и тен вăл комиççи умĕнче? Атте çук, анне анчах. Тăлăх ÿснĕ, ачаранах. Ача çуртĕнче пурăннă. Халь колхозра ĕçлетĕп, тесе кĕнĕ пулĕ комиççине. Апла илме пултарнă ăна. Çук, кунта мĕн те пулсан тĕрĕслесе çитереймен пек туйăнать.

Саңкка Вениамин мĕнле çынне аван пĕлет. Вăл пуп ачи. Ашшĕне контрреволюцилĕ ĕçсемшĕн 1922-мĕш çулта персе вĕлернĕ. Ун хыççăнах вăл амăшĕпе пурăннă. Анчах нумайах та тăман, темле майпа шăлнĕпе иккĕшĕ тăлăх ачасен çуртне лекме пултарнă.

Вăл ача чухне хăй йулташĕсемпе питех хутшăнса пурăнма йуратмастчĕ. Час-часах хăйулăрах ачасем вĕрентекенсем çинчен, шкул пуçлăхĕ çинчен мĕн калаçнисене лешсен патне кайса калатчĕ, систерсех тăратчĕ. Вĕрентекенсем те, шкул пуçлăхĕ те ăна питех килĕштеретчĕç. Анчах ачасем килĕштерсех каймастчĕç. „Ачаш, Тăрнаккай" тесе витлесе чĕнетчĕç йе „Пуп çури" тетчĕç. Аслисен умĕнче çуланма йурататчĕ вăл. Хăйĕн шăлнĕпе кăмăллă пурăнаймастчĕ.

Çавсене аса илчĕ Саңкка. Амăшĕ вĕсен патне тăтăшах килсе тăратчĕ. Кучченеçсем леçетчĕ. Шкултан тухнă хыççăн та пайанчченех Вениамин амăшĕпе пурăнать. Халĕ колхозра, тет... Тен, кам пĕлет, йусаннă та пулĕ вăл? Пирĕн ирĕклĕ çĕршыв, пирĕн хăватлă ÿсĕм, коллективлă ĕç, кĕрешÿ, çĕнĕ пурăнăç, вĕренÿ мĕн чухлĕ çынсене урăхлатаççĕ! Кам пĕлет, Вениамин та чĕрипе пире кирлĕ, пирĕн шанчăка тивĕçлĕ çын пулнă пулĕ? Апла пулсан, вăл Хĕрлĕ çара кайма та пултарат, аллине пăшал тытма та тивĕçĕ пур унăн...

Анчах, ашшĕне персе вĕлернине маннă-ши-ха вăл? Совет влаçĕ çине çиллине пытарса çÿремест-ши вăл? Кĕрешĕ-ши çав влаçшăн çара кайсан? Тен, манма пултарайман та пулĕ. Кaçарман та пулĕ. Амăшĕпе пурăнать. Амăшĕ ирĕн-каçăн пире ылханса хăйĕн упăшкишĕн кульанать-и тен. Çук, апла пулсан Вениамин та ашшĕне манма пултарайман, ашшĕне шеллеме пăрахайман.

Саңккасен йалĕнче халапçă Тимахви—Пăшатан Тимахвийĕ пурччĕ. Граждăн вăрçи вăхăтĕнче партизан пулса нумай çапăçусенче пулса курнăскер. Саңкка аван астăват ăна. Выртмана кайсан Тимахви текех унчухнехи çапăçусем çинчен, хăй çинчен каласа кăтартатчĕ ачасене.

— Манăн аттене 1905-мĕш çулта пăлхавсенче кĕрешнĕшĕн, патшана хирĕç хресченсене пĕрлештернĕшĕн Çĕпĕре йарса вĕлерчĕç. Çавна епĕ ĕмĕрне те манас çук. Хам çамрăк пулнă-ха унчух, 12-13 çулта анчахчĕ. Килте аттесĕр нумай асапланмала пулчĕ, пит те йăвăр килчĕ пире пурăнма. Çавăнма та ачаранах

епӗ аттене вӗлерекенсем ҫине тарӑхса ӳсрӗм. Кайран патшине сирпӗтсенех унӑн йыттисене пӗтерме хам ирӗкпе вӑрҫа кайрӑм. Нумай асап куртӑм, темиҫе хут амантӑм, анчах вилӗм тӗлне пулаймарӑм. Хырӑма та штыкпа та, пуҫӑпа та шӑтарчӗҫ, айӑк шӑммине те кӑларса илчӗҫ—чӗрӗ йултӑм. Халӗ те сиртен ирте-ретӗп-ха, каччӑсем! - тесе кулатчӗ Пӑшятан Тимахвийӗ.

Ҫавӑн ҫинчен шухӑшларӗ Саҥкка. Тӑван атте-анне! Ӑҫтан манӑн вӗсене часах? Ача-пӑча чӗринче ӗмӗрлехе вӗсен сасси, сӑмаххи, вӗсен хаклӑ сӑнӗ йулат-ҫке...

Ҫук, Вениамин та хӑй ашшӗне манман. Апла пулсан, мӗнле Хӗрлӗ ҫара кайтар-ха вӑл? Мӗнле аллине пӑпал тытса Совет влаҫне сыхлатӑр? Йе ыран-пайан вӑрҫа тухса каймала пулсан? Татӑклах пирӗн майлӑ, чӗрипех пирӗн ҫын пулсан та, йӑвӑр вӑхӑтсенче иккӗленсе тӑма пултармӗ-ши вӑл? Унӑн пуп ҫем-йинче ачашра ӳссе туйаннӑ ҫемҫешкелӗх халӗ те йулнӑ. Хас-тарлӑ, хӑйуллӑ ҫивӗч хӗрлӗ салтак пуласси не кӗтме ҫуках унран. Ку паллах...

Йулашки ҫулсенче пире пур ҫӗрте те сийен кӳрекеннисем унпеккисем мар-ши? Пирӗн пурнӑҫ ҫынсене ҫӗнетет, йусат, анчах йусанманнисем йунсанмалах вӗсем. Совет влаҫӗ пулнине хирӗҫ ҫынсем хӑйсен шухӑшне пӑрахмаҫҫӗ. Тен, Вениамин та ҫавсен хушшинчен мар-ши?

Тем тӗрлӗ шухӑш пӑтранат Саҥкка пуҫӗнче. Аптӑраса кӗ-неке вулама тытса ларнӑччӗ;—кӗнеке те вуланмаст.

— Вӑт тупӑнчӗ ӗҫ!—тет вӑл хӑйне хӑй. Мана мӗн-ха унпа? Кайтӑр, кайтӑр, кӗрештӗр—мана мӗн ӗҫ? Тен, ҫынни шанчӑклӑ ҫынах пулӗ, есӗ кунта уншӑн пуҫна ватса лар.

— Ҫук капла шухӑшлама та йурамаст,—тет тата хӑйне хи-рӗҫ Саҥкка.—Паллах, Вениамин хӑй кам ачи иккенне комиҫҫине пӗлтермен, колхозник, тесе докумӗнт тӑратнӑ. Апла пулсан, вӑл пытанса, суйса Хӗрлӗ ҫар ӗретне тӑрасшӑн. Пӗлме ҫук, унта лексен пӗр-пӗр киревсӗр ӗҫ туса хурӗ, хӗрлӗ салтакӑн тивӗҫне йатне ҫухатӗ... Ана ҫара илнӗ чух вӑл камне тӗппипе пӗлей-мен, ана шанса ҫара илнӗ. Кам айӑплӑ кунта? Пӗлетӗн, сан ҫине никам та тӗллесе кӑтартас ҫук. Вӑл камне тӗпчесе тупсан та, сана айӑплас ҫук. Есӗ айӑплӑ та мар унта. Есӗ илмен ӑна, есӗ айакри ҫын, пӗлӗш-хурӑнташ мар.

Анчах ку ӗҫ ӗҫхалӑх патшалӑхӗн ӗҫӗ. Ӑна ҫӗнӗ хӑват пама ҫара кайатпӑр. Уншӑн кирлӗ вӑхӑтра пуҫа хума та хатӗр... Вени-амин сӑтӑр туни Совет ҫӗршывне сийенлӗ пулат, сан ӗҫне пӗ-терсе хурат. Ку ыйту мана та пырса лекет. Патшалӑх ӗҫӗ—манӑн ӗҫ пулса тӑрат.

Йулашкинчен татӑклах ҫапла шухӑшласа хучӗ Саҥкка. Ко-миҫҫи председатӗлӗ те вӑл шухӑшланӑ пекех калатчӗ. Ҫара мӗнле ҫынсене илнине хамӑрӑн тӗплӗн тӗрӗслемеле, тетчӗ.

— Манӑн сӑмах тӗрӗс пулмасан, сийенех пулмӗ, пӗлсе тӑнӑ ҫинчех шарламасан...

Пӗрре шухӑшра татнӑ ыйту Саҥкка пуҫне урӑх анӑратмарӗ. Вӑл шурӑ хут илчӗ те комиҫҫи председатӗлӗ йачӗпе ҫыру ҫырчӗ.

* * *

Акӑ, ҫара тухса каймали кунсем килсе ҫитрӗҫ. Кашнӑ кун ҫамрӑксем ушкӑнӑн-ушкӑнӑн ӑҫта каймали ҫӗре туха-туха кайаҫҫӗ. Кӑнтӑрла та, ҫӗрле те комиҫҫи председателӗ вӗсен хушшинчех, тӑван ашшӗ пек тирпейлесе лартса канашсем парса йӑвашшӑн ӑсатат.

Саӊккан ушкӑнне, каҫ каймала пулӗ тесе, каҫа пухӑнма хушнӑ. Каҫ кайаймарӗҫ. Ирхине шапшурӑ ҫӗнӗ йур ҫуса лартнӑ. Тулта нойабӗр. Атӑл ҫинче пӑрахутсем ҫӳреме чараннӑ. Сайраран ҫеҫ кайала ирте-ирте кайаҫҫӗ. Саӊккасен автобуспа каймала пулат.

Умра машинӑсем кӗтсе тӑраҫҫӗ. Сулхӑм сывлӑшра бензин шӑрши. Саӊккасен ушкӑнне йулашки хут тӗрӗслеме йӗркелесе тӑратрӗҫ. Пурне те хушамат тӑрӑх чӗнсе тӗрӗслеҫҫӗ. Саӊкка пур хушаматсене те тимлесех итлесе тӑчӗ. Анчах Вениаминӑн хушамачӗпе йачӗ кайакан ҫамрӑк салтаксем хушшинче тухмарӗ, кайнисен хушшинче те, кайаканнисен хушшинче те вӑл урӑх курӑнмарӗ.

Карели, Октабӗр 1934 ҫ.

*ИЛЛЕ ТУКТАШ.*

# ВĔÇЛЕНМЕН ЙУРАТУ.

1.

Ун чĕри, çурхи чечек пек,
Аравасăр витĕмлĕ
Йăлтăрти хĕвел кĕрнекпе
Йăпанса вăл çитĕнвĕ.

Кăмăлне унне уçасшăн
Кăçĕ ўкнĕ сулхăнăн;
Нимĕн хуйхăсăр, ачашшăн
Çитĕнсе хĕр пулвă вăл.

Ўснĕ вăл нимле асапсăр,
Тулли кăмăл йуххипе.
Хĕвелçавăрăнăçĕ сап-сар
Сан-сăпатне уçвă пек.

Кăкăрти кăвар хĕрсессĕн
Чĕри кăлтах сикнĕ мĕн.
Çавăн чух çулсем хĕреслĕн
Тĕлпулчĕçĕ иксĕмĕрĕн.

2.

Вăл мана савмашкăн пулчĕ
Ĕмĕр ăшă кăмăллăн;
Вăтанса тутийĕ кулчĕ
Вăрттăвăн та, уçăмлăн.

Анчах, кĕр çывхарнаçемĕн
Шупкалат хитре çеçке;
Унăн та чĕри кичемĕн
Пăрланса пирченчĕ-çке,

Увăп та ăшри кăварĕн
Чĕлкĕшмерĕ хĕмĕ те.
Ман çинчен вăл астумарĕ —
Сўнчĕ вара ĕмĕтĕм..

Мана манчĕ... хĕрхенмерĕ...
Урăх каччă тупрĕ вăл.
Анчах мĕншĕн кисрентерчĕ
Чĕрене ку çилтăвăп?

Мĕншĕнех вăл улталарĕ
Ним ўпкевсĕр йекĕте?
Мĕншĕн çамрăк кăкăра ман
Йăвăр хуйхă йĕкĕлтет?

3.

Тусăм нимĕн те чĕнмерĕ...
Пĕрлешмерĕ çулăмăр.
Йурату ман вĕçленмерĕ —
Мĕншĕн ĕнтĕ çунăпăр?

Тен, вăл çунĕ йуратушăн,
Çунĕ чун илемĕшĕн.
Авалах çунса-çке уншăн
Çут тĕнче кинемĕшех.

Авалах çапла вĕт пулнă
Йурату хăвачĕ те.
Кашнийех унпа салхулăн
Çуннă та, сывалнă та.

4.

Ĕнтĕ еп текех çунмастăп
Ăшхыппи хĕрарăмшăн.
Улталавнă чунăма та
Сутмăп пĕчĕк парăмшăн.

Ан тив, кăмăлăм лăплантăр,
Мавшăн халĕ пурĕпĕр:
Мава урăх савмасан та —
Унсăр пуçнех йурă пур.

Унпала тек ачашланмăп,
Унсăр пуçнех сăвă пур.
Чун савнийĕм манăн хамăн,
Унпа тупа тăвăпăр.

Кăмăла вăлçавăраймĕ;
Ун мăшкăлех пулмăпăр.
Йурăра-и, сăвăра-и —
Манпа пĕрле куллăм пур.

Хӗлӗхлентӗр ӳҫӑ сассӑм,
Нимӗн чул ан ӳкӗнтӗр.
Вӗҫкӗн шухӑш лӑплансассӑн
Савнисӗрех хӳхӗм мӗн.

5.

Етем кӑмӑлӗ пӗрре те
Ним инкексӗр пусӑрнмӗ.
Пуҫра — чӑрсӑрлӑх вӗретӗ,
Ӑшра — мӑшкӑл пусӑмӗ.

Камӑн тап-таса чӗриӗ
Кӑмрӑкланнӑ варкаса,
Камӑн шухӑшӗ вӗриӗн
Ҫавра ҫил пек алхасат,

Камӑн ӗмӗчӗ ҫӗпре пек
Кӑпӑкланса хӑпарат,
Камӑн ӗмӗрӗ тӗпретӗ
Хавхаланчӑк кӑкӑра —

Ҫавӑ пӗлӗ йуратма та,
Пӗлӗ мӗншӗн ҫуннине;
Вӑл ҫӗнтерӗ ылхава та,
Тупӗ хӑйӗн „шӑпине".

Ӑраскал та уншӑн ҫитӗ,
Ҫитӗ телей тупӑмӗ.
Ҫавӑнпа, савни пирки те
Урӑх йурӑ хутӑм еп.

Урӑх йурӑ кӗвӗлерӗм
Ҫӗнӗ тусӑмҫӑм ҫинчен.
Мана намӑслӑх тивмерӗ
Йутрисенӗн йӗрӗнчен.

6.

Ҫӗнӗ тусӑм Мускавра ман
Ҫӗмӗрттерет шахтӑра.
Кайлипе турам-турамӑн
Чуллӑ ҫӗре тустарат.

Ирӗн-каҫӑн, ывӑнмасӑр,
Вӑл патварлӑх кӑтартат.
Комсомолкӑн вӑй пулмасӑр
Камӑн пултӑр-ха тата?

Пӗччен мар вӑл. Метро ҫарӗ —
Комсомоли унпала.
Ӑмӑртмашкӑн вӑл пуҫларӗ:
„Ҫивӗч пул та, тух мала!"

Ӑмӑртса вӗсем ӗҫлеҫҫӗ:
— Норма тултӑр вӑхӑтра!
Инженер-и, йе ес слесӑр —
Ӑмӑрт ҫакӑ походра.

Манӑн тусӑм та патварӑн
Хавхаланат ҫак ӗҫре.
Ҫийӗ-пуҫӗ чаплах мар ун,
Анчах чунӗ ҫепӗҫрех.

Ӑшӑрах ун чунхавалӗ,
Йӑвашрах пек кӑмӑлӗ.
Ҫавӑнпа та епӗ халӗ
Сӑвӑларӑм ҫӑмӑлӑн.

7.

Касхине хӗвел ансассӑн
Тусӑм тухӗ бульвара.
Унпала еп тӗлпулсассӑн —
Пурнӑҫ ҫитрӗ пуль вара!

Кӑнтӑрла хӗрсе ӗҫлен-тӗк
Касхине ес йурӑ туп.
Ҫакӑнта ҫитсе вӗҫлентӗр
Вутлӑ-хӗмлӗ йурату!

Мускав, 34.

*ИВАН ИВНИК.*

# НОВЕЛЛӐ.

Кантӑка еп уçатӑп та, так çеç,
Çӗрӗпех тӗрмешетӗп
Çак каç:
Каçхине çеç хам савнӑ редакци
Панӑран, знаш, пӗр пӗчӗк заказ.

Еп ларап та,
Пӗр вӗççӗр шутлатӑп,
Чылай хускатап шӑмшакка.
Çавӑнтах, тӗлӗнетӗп ытла та,
Алӑкра ман
Тахшин шаккат.

— Кӗрӗрсем, ан именӗр, йурат! — теп,
Шухӑшсем
Вакланайрӗç икке.
Алӑк уçрӗ те кӗчӗ... тӑратӗ
Ман патра етем мар... кролик иккен.

Именмерӗ сайка.
Вӑл даже
Чӑмӑртарӗ манне алла;
Чӑмӑртарӗ те хушрӗ: — Йулташӑм,
Сан патна ман пӗррех халлап.—

— Пит аван, — теп,—савсах еп итлӗп
(Ман çапах сӑвӑ çеç çырмала).
Çакӑн хыççӑн хай кролик
Йевитлӗн
Пит имшер туртса йачӗ халлап:

— Ес куратӑн,
Йепле начаркка еп,
Ав, йепле имшеркке çӳреп.
Завкомра, еп пӗлеп, пӗтӗм анӑп,
Завкомпа йатлаçап кӗçӗр еп.

Пӗрре мар вӗри йунлӑ оратӑр
Ман çинчен каласа пуђ сӑмах.
„Апла та капла... куратӑр
Кролик пирӗн... ӗрчетӗр ӑна“.

Пит хӗрӳлӗ калатчӗ докладчик:
„Кролик усрăпăр, кашни йулташ“...
Ак еп халъ — хуйăха кам чухлат-ши? —
Выҫап та шăнатăп тулта.

Темӗн муршӗн, оратăр самахӗ
Саҫҫимех тăрантмаст мана,
Ҫавăнпа
Унан пуҫӗ мана халъ
Купăста пуҫӗ пек
Туйăнат.

Умра пултăрччӗ утă та сӗлӗ,
Оратăр йурри кирлӗ мар саҫҫимех.
Завкомри тăмпăшал хăҫан ҫакна пелӗ?
Самăрланăттăм епӗ
Тинех. —

. . . . . . . . . . . . . . . . .
Вăл пӗтерчӗ.
Кантăкра ир хӗвелӗ
Пикенсех шăратат сар ҫу.
Еп пăхап та,
Умра — ҫак новеллă,
А пӳртре вимле кролик та ҫук .
Шупашкар, 1934.

С. ЕЛКЕР.

# ТĔНЧЕ ВĂРÇИ КУНĔСЕМ.

МЕМУАР.

(Малали. Пуçламĕшĕ „Трактăр“ альманахăн 5, 6, 9, 10-мĕш кĕнекисенче).

## XXVIII.

1915 мĕш çулхи декабĕрĕн 6-мĕш касĕ. Çак кас манăн пурнăç историнче нихçан та манми паллă вăхăт пулса тăчĕ. Шăпах çичĕ уйăх пĕр тăмасăр выртнă хыççăн, çак вăхăтран пуçласа епĕ тин çеç утма вĕренекен ачи пек çĕнĕрен утма тытăнатăп.

Тулта тĕттĕм. Вичкĕн хĕвелачăç çилĕ Дунай урлă вашлаттарса пирĕн хула хĕрринче ларакан бараксене тустарат. Кармашса çитме çук çӳлте тăракан пĕчĕк кантăксем, чалăшлатса çăвакан сивĕ çамăр çапнипе, вăхăтран вăхăт сасартăк çатăртатса илеççĕ. Имшерĕн çутатаççĕ сарă хăмалă барак ăшчикне сĕтелсем çине çутса лартнă краççин лампиcем.

Манăн „кӳршĕ“ Игнат, кас пулсанах пĕрре шавласа илнĕ хыççăн, такăш кĕтесселе картла выляма кайса çухалнăччĕ. Акă вăл, чылай вăхăтран, икĕ костылĕ çине уртăннă та сӳрĕк кăмăллăн таклаттарса таврăнат.

— Охо! Игнашкăн ĕççем ăнман пулас пайан—ирех киле таврăнчĕ. Пит-куççем те салхулă!—тăрăхласа илет унтан урасăр Тимофей. Чăн та, Игнат карт вăййинче ĕçĕ ăнмасан, йаланах çакăн пек салхулăн сĕнксе таврăнат.

— Ăнмарĕ... Икĕ пачкă табак илес укçана—16 геллĕр йăлтах выляса йатăм. Ыран ĕнтĕ каллех пайок сутмала пулат,—тесе хучĕ Игнат хăй кроватĕ çине йăвăррăн чăсăлса выртса.

— Игнат, есĕ пĕлместĕн: епĕ, вĕт, сан пекех тăрса ларма пултаратăп ĕнтĕ,—терĕм епĕ Игната хаваслă кăмăлпа, вăл курмасла халиччен виç-тăватă хут та урасене кроват хĕрринчен усса ларса пăхнăскер.

— Ну?! Чанах-и?.. Давай, ларса кăтарт мана!—кăшкăрса йачĕ те Игнат, йăпăрт-йапăрт çĕкленсе ман йеннеле тăрса ларче.

Епĕ ларса кăтартатăп.

— Ей ну, братцы, Васылйĕв чĕрĕлет! Куратăр-и, йепле вăл тăрса ларчĕ!—Ур-ра!..—пĕтĕм вăйпа кăшкăрса йаче Игнат епĕ ларма пуçланишĕн хамран та ытларах хĕпĕртенипе. Çак вăхăтрах вăл аллисене шап-шап-шап! çупса хыттăн çупăрласа илчĕ. Йĕри-тавра выртакансем пурте пирĕн йенне пăхса шăппăн йăлкăшаççĕ.

— Тен, утма та пултаратăн, Васылйĕв? Çитет сана çичĕ уйăх ухмаха персе выртнипе!.. Ну-кă, ме сана костылĕсем,—тет хай Игнат, кроват айне хувă костылĕсене илсе тыттарса.

Игнат хистенипе килĕшетĕп. Пĕр вунă утас та пулин утса пăхас килет çур çул ытла пĕр тăмасăр йăваланса выртнă хыççăн.

— Чим, есĕ пĕччен хаљ нийепле те утайас çук. Часах тӳнсе кайатăн. Сана ике йенчен иккĕн тытса пымала,—терĕç мана ытти кӳршĕсем.

— Ах, хам çавăтăттăм сана—пултараймастăп! Сывăрах çынсем кирлĕ,—тет манăн хыпаланса ӳкнĕ Игнат. Акă вăл аманнă урине кровачĕ çине чĕркуççилесе, теприпе урайне пусса тăрат те, хутнă кăмака умĕнче халап çапса ларакан çынсем йенне пăхса кăшкăрат:

— Беспалăв!.. Андрейĕв! Килĕр-ха кунта!

— Мĕскер тума, хохол? Картла выљдама вĕт санăн пĕр пус укçу та çук!—йĕкĕлтесе илет ăна хирĕç кăмака патĕнчи Ваçкă Беспалăв.

— Ах, кацап ты, йавăл! Картла выљассипе кунта? Вăн, Васылйĕв утасшăн. Ăна тытса пыма кирлĕ,—хĕрӳленсех кăшкăрат манăн Игнат.

Беспалăвпа Андрейĕв часах çитсе тăчĕç. Акă çĕклеççĕ вĕсем мана икĕш икĕ хулран лайăххăн тытса Икĕ хулайне те тыттараççĕ Игнат костылĕсене.

Уртăнтăм костыљсем çине. Тӳррĕн пусрăм сывă урана. Тепри тăрат уссăр çакăнса. Кĕске вăл. Унăн лаппи пĕр шит шăпах çитмест урайне. Шăмшак сăркаса кайрĕ. „Сывалсан та мĕнле çӳрĕп ĕнтĕ епĕ ку урасемпе?.. Начар пулат пурнăç!" çакăн пек шухăш пуçра çиçсе иртрĕ.

— Ну, айта, ут, ут! Хăйулăн йарса пус. Епĕр сана ӳкерместпĕр,—теççĕ мана çавăтнă çынсем.

Хама ура йарса пуссанах чикеленсе кайассăн туйăнат. Акă пĕрре йарса пусрăм,—иккĕ, виççĕ.. Пусмассерен ура сыпписем шăтăртатса, шăнăрсем йĕппе тирнĕ пек чикĕшеççĕ.—Ай. йарăр, Ваççă! Выртарăр часрах вырăн çине! Ай, пулмаст, пулмаст!—кăшкăрса йатăм пĕр пилĕк-ултă утас йарса пуснă хыççăн, ыратнине тӳсеймесĕр. Анчах та çавăтнă çынсем епĕ йăлăннине итлемеççĕ.

— Ут хаљ, ут! Урана пăртак çемçетмеле. Малтан утнă чух пурин те çавах ыратат вăл,—теççĕ вĕсем мана малалах çавăтса кайса. Кăмака патне утса çитрĕмĕр.

— Ей, çул парăр, çул! Çын чĕрĕлсе тухрĕ,—кăшкăрат Андрейĕвĕ, кăмака тавра пухăнса тăнă çынсене сирĕлме хушса. Пурте пирĕн йенне çаврăнаççĕ. Пире иртме уçса пачĕç ирĕк çул.

— Аха, ача ӳссе çитрĕ—утма вĕренет!—тесе хучĕ çак хушăрах кăмака патĕнче тăракансенчен пĕр шутникĕ. Пурте ахăрса кулса йачĕç.

— Тахçантанпах выртатчĕ-ха вăл... Ман пекех, вилĕмрен çӳç пĕрчи вĕçĕнче çеç тытăнса йулчĕ,—тесе хушрĕ тепри, тин çеç сывалса утма пуçланă хĕрлĕ çӳç-сухаллă ватă салтак.

Акă, кăмакаран иртсе вунă-вуникĕ утаса йахăн карăмăр та, кайала таврăнатпăр. Йăлтах ывăнса çитрĕм. Урана аран илсе пусатăп. Хам пĕчченех пулсан çавăнтах кĕрĕслетсе ӳкмеле. Анчах, Андрейĕвпа Беспалăв хама йăтнă пекех çавăтса пынипе, ӳкме памаççĕ. Костыљсем çине хытă уртăннăран, ырхан алсем

ывăнса çитсе тăрлатсах чĕтрекен пулчĕç. Акă кроват патне çитетпĕр. Ку вăхăтра ĕнтĕ урана та илсе пусаймастăп. Алсем çинче йăтса пынипе ура сĕтĕрĕнсе çеç пырат. Темскер йăвăр ĕç туна пек, хамăн пĕтĕм шăмшак тарласа лачах шыва ӳкнĕ.

— Ут, ут ĕнтĕ тепĕртак!—хистет çаплах Беспалăв, ку тапхăрта ĕнтĕ хăй те мана хăвăртрах кроват патне çитерсе выртарасшăн тăрăшса.

Çак самантрах санитарсен пӳлĕмĕнчен Лукач сиксе тухрĕ! Вăл, мана сĕтĕрнĕ пекех çĕклесе пынине курсан, тĕлĕннипе тăпчарăнса тăчĕ.

— Мĕскер тăватăр есĕр?.. Мĕншĕн ку капла?!—ыйтрĕ вăл, Васкă Беспалăвпа Андрейĕв çине пăтарас пек пăхса.

— Утма вĕрентрĕмĕр,—тет ăна хирĕç Васкă, хуллен ихĕрсе илсе.

— Утайман çынна уттарма йурат-и вара çапла? Кам хушрĕ сире?—тăрăнчĕ Лукач Беспалăвсем çине.

— Хăй хушрĕ... О, вăл малтанах пит те аван утрĕ,—терĕç ăна ман тавра тăракансем.

— Епĕ хам...—тесе хутăм хам та Лукач сассине хирĕç. Лукач кулса йачĕ.

— О-ох!—тесе тарăнăн сывласа йатăм, кроват хĕррине çитсе тăратсанах ун çине йăвăррăн чăсăлса выртса.

— Вăйу çук хаљ сан, Васийĕв... Тата икĕ ернесĕр урăх ан та хускан,—терĕç мана йулашкинчен Андрейĕвпа Васкă. Игнат та вĕсемпе килĕшет. Вăл, мана кайала çавăтса çитерессе тӳсеймесĕр кĕтсе тăнăскер, тĕрлĕрен ыйтусем парса тĕпчемешкĕн тытăнат.

Пĕр саманта чĕнмесĕр тăнă Лукач куçĕсем ман куçсемпе тĕллешрĕç. Йăлл кулса йачĕ вăл тулли кăмăлпа. Кулнă майпе пырса тăчĕ кроват хĕрринех.

— Вăт, каларăм вĕт епĕ сана вилместĕн, тесе... Сывалатăн! Часах акă ыттисем пекех çӳрекен пулатăн. Вăрçă чарăнсан Расçейăна кайатăн, унта ура туса параççĕ... Ех, пурнатăн вара!.. Авланăн та акă,—терĕ вăл сăмахне каланă хушăрах куçĕсемпе ăшшăн йăлтарса тăрса.

— Аванччĕ есĕ каланă пек пулсан. Анчах та выçă вилмĕпĕр-и ку Австри çĕрĕнчен тухса кайиччен? Чăн та, Лукач, вилес пек выртнă чух пĕр есĕ анчах мана ĕмĕт парса тăтăн. Ырă çын ес, шухăшпа ӳкме памастăн,—терĕм епĕ Лукача.

— Вилместĕн. Кун пек суранпа та вилменскер, выçăпа вилетĕн-и вара есĕ! Чуна усрамалăх çитереççĕ вĕт,—терĕ вăл йерипен малала утма пуçласа.

Лукач кайсанах, Беспалăвпа Андрейĕв та хайсен кровачĕсем çине кайса ларчĕç.

Çапла, шăпах çичĕ уйăх кайала—майăн 5-мĕш кунĕнче аманса урaран ӳкнĕ хыççăн—декабĕрĕн 6-мĕшĕнче тин ура çине тăтам. Ку хама—çĕнĕрен çуралса ӳссе, çĕнĕрен утма вереннĕ пекех туйăнчĕ.

Тепĕр ерне йахăнран епĕ пикенсех утма пуçăнатăп. Ик-виç хутчен çын пулăшнипе пĕчиккĕн çеç утса сăнанă хыççăн, малала хам тĕллĕнех утма тытăнатăп.

## XXIX.

Декабӗрӗн вӑта кунӗсем.

Ҫӗр питне ал‌тапни хуламӗш йур ҫуса витнӗ. Ҫанталӑк ерне ытла ӗнтӗ сивӗ, шӑнтсах тӑрат.

— Мӗнле ку капла? Сивӗри москаљсем килсе тулчӗҫ те, Венгри ҫӗрӗнче те хӗлле пула пуҫларӗ,— теҫҫӗ австри ҫынни-сем ҫурри выљатса, ҫурри тӗлӗнсе.

— Ох, зимно, зимно! (сивӗ, сивӗ!)—тесе ҫӳреҫҫӗ пӗрӗнсе кӗнӗ чехсем, словаксем.

Чӑнлас ах та, кунашкал йур ҫуса ерне ытла шӑнтса лартнисем Венгри ҫӗрӗнче сайра ҫулсенче ҫеҫ пулат, теҫҫӗ выранти ҫанталӑка пӗлекенсем.

Ҫак шӑнтса тӑракан кунсенчен пӗр иркине.

Нумай вахӑт хушши курӑнман хӗвел, пӗр талхӑра тӗтре пӗлӗтсем хыҫӗнчен тухса, шурӑ йур ҫиттине витӗннӗ Венгри ҫӗрӗ ҫине хуйхӑлӑн пӑхат Унӑн шупка сарӑ ҫутти, ҫухен шӑннӑ пӑра ирӗлтерниие шывланнӑ кантӑк куҫӗсем витӗр барак ӑшне кӗрсе—кроватсем тӑрӑх, чирлӗ ҫынсен пичӗсем ҫийӗпе кичем тӗрри тӗрӗлет.

Ирхи „визит“ пуличченех пирӗн санитарсене пурне те сасартӑк кӑнцелере чӗнсе карӗҫ.

— Ку ырра мар!—терӗ Лукач санитар, хӑйсене писӑр пырса чӗнсенех, чӗри тепӗнче шиклӗх хускалнине туйса.

Пӗр сехет йахӑнран санитарсем таврӑнаҫҫӗ. Анчах мӗнле пырса кӗреҫҫӗ-ха вӗсем кайала? Лукачпа Ҫедлак иккӗш те кӑвакарса кӳтсе кайнӑ; Бартӑпа Шарла ахаљ те йаланах сул-хӑмӑн ҫӳрекенскерсем, такам ҫине тарӑхнӑ пек сиввӗн те ҫил-лессӗн пырса кӗчӗҫ. Лазар Чик пӗчӗкҫеҫ те паллӑмар сани-тар—чех ҫынни пуҫне усса салхулан таврӑнат. Пӗр Томшич ҫеҫ хӑйӗн малтанхи сӑнӗпех. Вӑл, пысӑк чӗлӗмне паклаттарса пырса, барака таврӑнсанах тӳрех санитарсен пӳлӗмне кӗрсе карӗ.

— Ну, мӗскер хыпарпа? Фронтала ӑсатмаҫҫӗ-и, асту?—кӑш-кӑрса ыйтат латыш Барух, хӑй умӗпе иртсе кайакан санитар-сенчен. Лукач, Ҫедлак, Чик урай варрине чарӑнса тӑчӗҫ. Шар-лапа Барта, нимӗн шарламасӑр, Томшич хыҫӗнчен пырса пӳлӗме кӗрсе кайрӗҫ.

— Ех-ха!.. фронта... Халех каймала,—терӗ чарӑнса тӑнӑ сани-тарсенчен—Лукач, ассӑн сывласа йарса.

— Халех... малтан маршӗвӑй полкӑна йараҫҫӗ, ӗнтӗ,—хушса хурат Ҫедлак, хӑйсем умне пӗрерӗн-икшерӗн пырса пухӑнакан уксак-чӑлахсем ҫине тӗмсӗлӗн пӑхса.

— Фронта?! Ех, савнӑ тӑвансем, есӗр вӗт пирӗн! Уйӑраҫҫӗ апла сире?—куљанса илчӗ алӑк ҫумӗнчех выртакан, санӗ пичӗ сарӑхса типсе ларнӑ Салар вырӑсӗ Колеҫин.

— Уйӑрлатпӑр... пурӑнсаччӗ кунта ҫур ҫула йахӑн. Ех, кал-лех ӗнтӗ таҫта, ҫӑвана!. Хаҫан-ши чарӑнӗ ку йунлӑ вӑрҫӑ? Килте вӗт арӑм, ачасем...—никампа та мар, хӑй пуҫӗпе ҫеҫ калаҫнӑ пек калаҫса илчӗ Ҫедлак; ҫак вӑхӑтрах кӑрт та кӑрт! сиккелесе илеҫҫӗ унӑн хыганка пичӗ ҫинчи шӑнӑр вӗҫӗсем.

— Манайман-ха иртнӗ ҫапӑҫусенче тӳсни курнисене те. Ех, мӗн чухлӗ тертленнӗ Карпатсем хушшинче! Хӗлле.. Пӗҫкӗкӗ таран йур. Пӗрре чашлаттарса ҫӑмӑр ҫӑвать, тепре тӳсме ҫук сивӗ, шӑнтса пӑрахать. Вӗҫсӗр ҫилтӑман ахӑрать... Ҫак хушӑрах атакӑсем. Пӗрре малала, тепре кайала чакмала.. Ех, мӗн чухлӗ ҫын пуҫне хучӗҫ унта!.. Епӗ те, вӗт, шӑнса пӑсӑлса урасене тӑм илнипе тухрӑм аран-аран. Сывалнӑ хыҫҫӑн, икӗ уйӑхран санитара йачӗҫ Акӑ, хаљ ӗнтӗ каллех ҫав вӑрҫа, хӑрушӑ вилӗм вӑрҫине!— терӗ Лукач, хӑй умӗнче ларакан сивӗ чукун кӑмакана тӗлленӗ ҫап-ҫавра та хӑмӑр куҫӗсене мӑч-мӑч-мӑч сиктеркелесе.

— Ҫапла... Есӗ Карпатра, Лукач, епӗ—Ҫербире, Балкан тӑвӗсем ҫинче хӑшкӑлнӑ. Ун ҫинчен ӗнтӗ каласа тӑма та вӑхӑт ҫук,— хушса хучӗ Ҫедлак.

— Шалкӑ сире ӑсатса йама! Пӗрле пурӑнса, пӗр ҫемйе ҫыннисем пекех пӗр-пӗрне хӑнӑхса ҫитнӗччӗ вӗт,— пӑшӑрханса илет пухӑвса тӑнӑ вырӑссенчен пӗри, сулахай аллипе сулахай ури типнӗ тата майӗ чалӑшса ларнӑ, пысӑк мар ҫамрӑк ҫын.— Леш, Барта пеккисем пире шалкӑ мар!—хушса хурать вӑл ҫавӑнтах, кӑшт айаккала пӑхкаласа.

— Пурте Лукачпа Ҫедлак пек пулсан, пирӗн вӑрҫӑ та халех пӗтсе ларӗччӗ. Анчах, ҫав Барта пеккисем те хаљ сахал мар вӗт-ха. Мадйарсем курайманҫҫӗ вырӑссене. А мӗн, Австри фронтве пӗр нимӗҫсемпе мадйарсем ҫеҫ тытса тӑраҫҫӗ вӗт. Чехсем, словаксем, хорватсем—вӗсем вӑрҫасшӑн мар, май килсенех полки полкипе вырӑссем йенне тыткӑна куҫаҫҫӗ... Чӑн та, мӗн тесе вӑрҫаҫ вӗсен пӗр нимӗҫсемпе мадйарсем ҫеҫ пуҫ пулса таракан патшалӑхсен йачӗпе?—сӳтсе йавма тытӑнчӗ пухӑннӑ ҫынсем варрине тухса тӑнӑ Барух.

Сӑмах ҫинех тенӗ пек, шӑп ҫак вӑхӑтра санитарсен пӳлӗмӗнчен кайала тухнӑ Барта Лукачсем патне пырса тӑчӗ. Тӑнлаймарӗ вӑл Барух мӗн ҫинчен каланине. Ҫавах та „мадйарсем" тенине илтсен, шанми куҫӗсене чарса пӑрахса; малтан Барух ҫине, унтан Лукачпа Ҫедлак ҫинеле чӑр-р пӑхса илчӗ.

— Ох!—терӗ вӑл, сасартӑк чӑмӑртанӑ аллисене вырӑссем ҫинеле кӑнтарса.—Фронта кайсан, тепӗр ҫирӗм москале вӗлерместӗп-и? Пӗр шеллемесӗр пӗтерӗп вӗсене!—Ку сӑмаха Барта йаланхи пекех ҫурри словакла, ҫурри мадйарла ҫӑрӑлтарса каласа хучӗ.

— Ан мухтан, Барта! Тен пӗр москалне те вӗлерейменӗн, тӳрех хӑна тӗнтсе хурӗҫ. Казаксен аллине лексен, вӗсем сана бац! мӑйран касса пӑрахаҫҫӗ. Ха ха-ха!—кулса йачӗ Бартӑран тӑрӑхласа, пӗр кроват пуҫне таӑнса тӑнӑ Васкӑ Беспалав.

— Е-е, басама курва! Куш!..—кӑшкӑрса пӑрахрӗ Барта, тӑрук Беспалӑв ҫинеле тӑратнӑ алӑпа ыткӑнса пырса. Беспалӑв, ҫӑмӑл шӑмшаклӑскер, йӑпарт айаккала сиксе ӳксе Барта аллинчен хӑтӑлать.

Пурте шӑп. Лукач та, Ҫедлак та хӑвӑрт ҫиленсе кайнӑ Бартана сӑмах калама шикленеҫҫӗ. Барта хӑй ҫӳлех мар, анчах та хулан пӳлӗ ҫамрӑк, аллисемпе чукун кӑмака тӑррине пӑчӑр-

таса тытат̆ те сăмала пек хура куçĕсене çиçтерсе Лукач çинеле пăхса тăрат̆.

Пĕр авкана шăпланнă ушкăна Çĕпĕр вырăсĕ — Андрейĕв хускатат̆.— Ай-ай, се не добре, Барта! Васька, ведь, шутит, а ты сердишься,— тесе хучĕ вăл хуллен пуçне сулласа.

— А ти!?... е-е-е, москаљ!..— шăл витĕр кăшкăрса, кашкăр сурăх çине сикнĕ пек сиксе ўкрĕ Барта Андрейĕв çине. Çак самантрах вăл Андрейĕва пĕрре айакран чышса креват̆ пуçĕ çинеле тĕксе йачĕ. Андрейĕв, нимĕн чĕнмесĕр, айаккине хыпашласа креват̆ çине тăрса ларчĕ.

— Ой, нем сабод, Барта!—терĕç хуллен Çедлакпа Лукач, кĕтмен çĕртенех хăвăрт шăртланса çитнĕ санитара ўкĕтлесе.

Анчах та Барта ўкĕте кĕме мар, пушшех те йĕркерен тухса кайат̆. Вăл Лукач çине талхăрса пырса, ăна кăштах çапса йараймаст. Телейе, çак вăхăтрах унта тепĕр мадйар санитарĕ— Шарла пырса тăрат̆. Вăрăм та хура, хыткан ўт-тирлĕ етем— Шарла. Барта пекех шăртлă мар.

— Нем сабод! Нем сабод, Барта!—тесе пўрнипе йунаса илчĕ вăл хăйĕн йулташне. Унтан пулнă ĕç çинчен тĕпчесе пĕлет те, Бартана, темскер йăпаткаласа, хăйпе пĕрле тулала çавăтса тухса кайат̆.

— Çавăн пек пирĕн Австрире. Мадйарсемпе славенсем хушшинче килĕшў çук,—терĕ Çедлак, мадйар санитарсем тухса кайнине алăк йенне çаврăнса пăхса.

— Вĕсем умĕнче пули-пулми çинчен калаçма та хăрушă хаљхи вăхăтра. Çитет, шарлас мар!—хушса хучĕ Лукач, çаврака пысăк куçĕсене хĕссе илсе.—Кайас... йăпаласене пуçтармала Хатĕр пулас,—терĕ вăл çакăн хыççăнах хăйсен пўлĕмĕ йепне васкаса. Çедлакпа Чик та унпа пĕрлех çаврăнса утаççĕ.

— Çапла... Патриотсем вĕсем—мадйарсемпе нимĕçсем. Вĕсем националисăм сĕрĕмĕпе суккăрланнă. Хăйсен нацисенчен пуçне урăх никама та йуратмаççĕ... Çавăн пек пулма вĕрентеççĕ вĕт хаљхи вăхăтра кашни патшалăхрах харпăр хăй халăхне,—каллех сўтсе-йавма пуçларĕ пĕр креват̆ пуçне кайса ларнă Барух.

— Камсем вĕрентеççĕ вара ун пек пулма? Вĕсем те—ак çавăн пек усал халăхсем! Етем мар—сыснасем!—кăшкăрат̆ Барух сăмахне хирĕç, каллех кăмака умнеле пынă Беспалăв.—Ну, мĕнле сап, хытă ыраттарчĕ-и?—ыйтат̆ вăл çав хушăрах хăй патнеле пыракан Андрейĕвран.

— Чылайах ыратса кайрĕ. Хытă çапрĕ вĕт, сволăч!—тет ăна сăнĕ-пичĕ хĕрелсе кайнă Андрейĕв. Барта çапнă тĕлти айак пĕрчисене хыпашласа. Утма пултаракансем пурте Андрейĕв тавра пухăнаççĕ.

— Да-а.. етем чунлĕ мар вĕсем мадйар-нимĕçсем, тискер кайăксем!

— Ха, ахалех вĕт! Ахалех çапрĕ сывмар çынна..

— Е ей, çапни анчах-и, персе йе чиксе пăрахнисем те сахал мар пулаççĕ кунта. Пуринчен ытла лагĕрсенче, шăна вырăнне çеç хураççĕ тыткăнри çынсене!—тет тепри, лагĕрте ĕçленĕ чух хуçнă урине пирĕн баракра сыватнă пысăк сухал-уссилĕ украинĕц.

— Камсем вĕрентеççĕ тетĕн есĕ, Беспалăв? Влаç—патшалăх влаçĕ, правительствă, улпутсем-чиновниксем вĕрентеççĕ çапла пĕр-пĕрне курайми тума. Австрире, Германире — вырăссене хирĕç хĕтĕртеççĕ. Российăра нимĕçсемпе мадйарсене хирĕç вĕслетеççĕ,—тет Барух сăмахĕсене сĕртерсе.

— Çук, çук, Барух. Пирĕн Раççейра ун пек вĕслетни курăнмастчĕ епĕ тыткăна лекиччен. Халĕ тен урăхланчĕ пуљ. Халљхине пĕлместĕп,—тавăрчĕ Беспалăв çăмăллăн çатăлтатса.

— Хе, калаçатăн есĕ! Ес ан шутла—ун пек пулма пире улпут-чиновниксем хăйсен çăварĕсемпех каласа вĕрентеççĕ тесе. Вĕсем хăйсем сапа калаçас та çук. Ку ĕçе вĕсем хаçат-журналсем урлă тăваççĕ. Вăрçă пуçлансан тин мар, вăрçи пуçланиччене вĕт, йепле çырма пуçларĕç вырăс хаçачĕсем? „Нимĕçсем—варвăрсем, тискер кайăксем... Вĕсем вырăс халăхне таптасшăн. Пирĕн усал нимĕç пусмăрне Раççейра анчах мар, пĕтĕм Йевропă çĕрĕпех çапса салатса пĕтермеле“. Вăрçă пуçлансан тӳрех: „Ан хĕрхенĕр нимĕçсене!“—тесе çырма тытăнчĕç хăш-пĕр хаçачĕсем. Нимĕçсен, мадйарсен хаçачĕсем те çавăн пекех вырăссене хирĕç хĕтĕртсе çыраççĕ. Вăт мĕнле анкă-минкĕлетеççĕ халăх пуçне.. Ăна вĕт, пирĕн халăхсене пĕр-пĕрне ытларах курайми тума, вăрçă вутне ытларах хĕртсе йама çапла тăваççĕ... вăт... терĕ Барух. Вăл татах малала темскер каласа кайасшăнччĕ, анчах ăна Беспалăв кăшкăрни пӳлсе лартрĕ.

— Мĕн есĕ тата, нимĕçсене ырă çын тетĕн-им? Тискер те тискер вĕсем. Тĕрĕс çыраççĕ пирĕн хаçатсем. Вĕсем тискеррине пурте хамăр куçпах куртăмăр ĕнтĕ. Тен, есĕ анчах халљ те пĕлместĕн пулĕ çакна?.. А мĕн тесе нимĕç-мадйар хутне кĕмеле сан?!—вăрçса тăкрĕ Беспалăв Баруха.

— Епĕ мадйарсене, нимĕçсене ырă теместĕп Вĕсем чăнах та тискер, усал ĕнтĕ халљ. Анчах çав хаçатсемех урăхла, лайăха вĕрентсе çырнă пулсан—вĕсем халљхи пек тискер пулас çукчĕ. Вĕсем вĕт пирĕн пек мар—хаçат-журналсене нумай вулаççĕ. Мĕн вуланисене ĕненсе пурне те чăн вырăнне хураççĕ... Вуланă-и есĕ Раççейра чух вырас хаçачĕсене?—терĕ Барух Беспалăва. Ку тĕлте ăна халиччен калаçман çĕнĕ çын сасси илтĕнсе пӳлсе лартрĕ.

— Ан хурла Раççейа!.. Латыш-йеврей тавраш йалан вырăс халăх пĕрлĕхне пăсса йама тăрăшат,—терĕ ку çĕнĕ сас чĕтренчĕклĕн йантратса.

Барух сасă йенне çаврăнса пăхрĕ. Кăна алăкран виççĕмĕш кроват çинче ларакан пысăк хура сухалла çын, подпрапăршчик пулнă Абрамушин кăшкăрат иккен.

— Раççейа епĕ хурламастăп, Абрамушин. Анчах, унта та хаçатсем вăрçă вутне вĕрсе варкăштараççĕ. Хамăрпа вăрçакан халăхсене ытларах курайми тума вĕрентеççĕ тетĕп çеç,—терĕ ăна Барух.

— Аташатăн! Йе пĕлмесĕр, йе пĕлсех, йури елеклетĕн есĕ Раççей çине! Вăрçа Раççей мар, ăна Германипе Австри пуçласа йачĕç. Раççей таса, вырăс халăхĕ ырă кăмăллă!—мĕн сасси ситнĕ таран мĕкĕрсе кăшкăрса хучĕ Абрамушин.

— Ах, Абрамушин! Пĕлетĕн есĕ: нимĕçсем те, мадйарсем те хăйсем çинчен çаплах калаççĕ вĕт: „Ку вăрçа Францине Раççей пуçласа йанă, çавăнпа есер айаплă“ теççĕ вĕсем,—хĕрӳленсех калама пуçларĕ Барух. Анчах та ик виçĕ çын харăс Абрамушин майлă пулса кăшкăрни ăна хупласа лартрĕ.

— Абрамушин тĕрĕс калат. Пирĕн вырăссем нимĕç-мадйарсем пек усал мар. Анчах, кунта тӳснĕ хыççăн епĕ хам та ĕнтĕ хĕрхенес çук вĕсене,—терĕ Андрейĕв.

— Чăн, ку вăрçа Раççей мар, Германипе Австри пуçланă. Ун çинчен ĕнтĕ такам та пĕлет. Барух вăл йаланах Раççей йатне варалама тăрăшат вырăс халăхне усал „тевтонсемпе“ пĕр карт çине лартат,—терĕ Абрамушин хавассăн кăшкăрса. кăмака тавра тăракан çынсем пурте хăй майлă пулнипе паттăрланнăскер.

Барух хăй сăмахĕсене никам та ăнланманнине кура, шăртланса хумханмашкăн тытанат. Çакăн пек хумханнă чухне ăна йаланах тытамак чирĕ тытса ӳкерет. Çавăнпа та, ӳкичченех хумхавас мар тесе, Барух хăвăрт çĕкленсе Абрамушин йенне—ласт! алăпа сулат те, хăй кровачĕ çине кайса выртат.

* *

Кăнтăрла тĕлĕшĕ.

Кăнцелерти писăр санитарсем патне иккĕмĕш хут чупса пырат. Писăр пырса кайсан пĕр чĕрĕк сехетренех ман кроватпе йувашар алăк уçăлат. Уçă алăкран чи малтан пĕчĕкçĕ чех санитар Лазар Чик, унтан мадйарсем—Шарлапа Барта, йулашкинчен словаксем—Лукачпа Çедлак, умлăн-хыçлăн сиксе тухаççĕ. Вĕсем пурте урăран пуçласа пуçа çитиччене çарçыениле тумланнă. Пуçĕсем çинче кăвак салтак картусĕ, çийĕсенче тĕксĕм кăвак шинел, урисенче ансăр сукнапа чĕркесе тăхăннă тимĕр тĕплĕ ботинкăсем. Кашнин çурăмĕ çинчех хăйсенчен пысăк тумтир арчисем. Пилĕкĕсенче пиçиххирен çакса йанă кĕске шпагăсем.

Алăк патне çитсе, ăна уçса тухса кайас чух, Барта варт кайала çаврăнса тăрат те пурне те илтĕнмеле кăшкăрат:

— Москали!.. Кĕçех ак Кийĕв, Петербург, Мускав—пурте пирĕн пулаççĕ. Ан макăрăр: Мускава илсен варçă чарăнат. . Унччен пурнăр-ха Австрирех,—терĕ те сиввĕн ехĕрсе йачĕ Бартапа пĕрлех унăн хурамша вăрăм йулташĕ—Шарла та типпĕн кулса илет.

Алăк патĕнчех хăй кровачĕ çинче сĕнксе ларнă мăн сухал Абрамушин—хăвăрт хускалса, питне-куçне пĕркелесе лартрĕ. Кăшкăрасшăн пулчĕ вал темскер Барта çинеле. Анчах хăйаймарĕ. Йулашкинчен ман çинеле пăхрĕ те:—Ăнлантав-и? Вăт мĕн пирки хавасланаççĕ вĕсем, йытăсем—тесе хучĕ вал самси витĕр мăкăртатса.

Çак самантрах варринчи алăк йари уçăлса кайат. Барака хăвăрт шурă халатлă Каталина кĕрсе тăрат.—А-а, Барта! Барта!—нӳрĕ сасăпа кăшкăрса йачĕ Каталина. Чупса пычĕ вăл алакран тухма пуçланă Бартапа Шарла патнеле. Чупса çитрĕ

те тӳрех ыталаса тытрě Бартана. Лешě ăна çурăмěнчен лăпкаса хăй çумне тытса пăчăртарě. Вěсем тытăнса тăмаççě. Виççěш те пěрле шавлăн шакăлтатса часах тухса кайрěç.

Алăк патне çитнě Чик Лукачсене кěтсе йулчě.

— Мухтав турра! Йавăл тухса кайрě,—терě Андрейěв, кăвак куçěсене йăлли йăлтăратса йарса.

— Ан хěпěрте! Пěре кайнă вырăнне тата икě йавăл килсе йарěç акă.—тесе хучě ăна, Лукачпа Çедлак патнеле вашкăртса пыракан Беспалăв.

Çедлакпа Лукач, барак варривчи уçлăха çитсен, кăшт вăхăта чарăнса тăчěç. Мěнпур утма пултаракансем пурте вěсем патне тěпěртетсе пухăнаççě.

— Ну, сывă пулăр, пурте!—терěç вěсем картуссене илсе çавăрса.

— Сыв пулăр ěмěрлěхе! Епěр ěнтě пěр-пěрне урăх кураймăпăр,—терě Лукач йěри таврa пухăнса тăнă çынсене хăвăрт алă парса çавăрăнса Çедлак та алă парса тухрě, анчах вăл ăшě кӳтнипе вимěн те чěнеймест.

Пухăнса тăвă çынсене Лукач алă парса çаврăнкаланă хушăра епě хамăн кроват çине тăрса лартăм Акă вăл мана курах карě. Хайхи, тӳрех утса пычě те ман пата:—Сывă пул!... ан ман пире. Епěр вěт сана нумай пăхрăмăр. Ак халь ěнтě—есě утма пуçлатăн, анчах пире илсе кайаççě,—терě вал, васканипе манăн алла хăйěн сылтам алли вěçěпе çеç кăшт тытса илсе.

Йулашкинчен вěсем, вěсемпе пěрле пěчěкçě Чик та, алăк патне çитсе тăрсан каллех картуссене хывса сулчěç те:—Ну, сывă пулăр!—терěç. Лукач кăсйинчен шурă тутăр кăларса унпа куçěсене шăлчě. Урах калаçасси пулмарě Виççěш те, Ваçкăла Андрейěв йари уçса тытнă алăкран, хыпалансах тухса кайрěç.

— Телейлě çул пултăр!—кăшкăрса йулчěç баракри вырăссем.

Лукачсем тухса кайнă вăхăта санитарсем пӳлěмěнчен ватă Томшич таплаттарса тухрě. Унăн тутинчен йăланхи пекех пысăк хура чěлěм тăрат çакăнса.

Акă, икě йеннеле уçăлакан пысăк йăвăç алăк хытăн хаплатса хупăнат. Улт-çич уйăх пире пăхса пурăннă, пурте йуратакан словак санитарсем куçран çухалаççě. Барак ăшěнчи халах пěр авкана шăп пулса тăрат.

— Ех, кайрěс вěт, дядя Миша, пирěн йуратнă тусcем!—терě тахăшě урăй варривче темěн шухăша кайса тăракан Томшича. Вăл кашт çеç типпен йăлкăшнă пек пулчě те:

– Да. Остався тилько един Томшич!—тесе кăкăрне тăклаттарса илчě. Урăх нимěн те чěнмерě, хăвăрт утăмсемпе кăрăслаттарса тулала тухса кайрě.

— Кайрěç. Авăвччě çынсем,—тебě сассем илтěнчěç чылай вăхăт сикленмесěр тăнă вырăссем хушшинчен.

Барух ман кроват вěçне пырса ларчě. Ларчě пěр тапхăр вăл йăвăр шухăшпа сěнксе. Унтан сасартăк пуçне çěклесе ман ҫинеле пăхрě:—Пăхса вěçě курăнмаст!.. Царăнат тетěн и есе пирěн Раççей, Кийěва йе ытти хуласене панипе? Çук! Вăл Мускавпа Петербурга çухатсан та килěшӳ ыйтас çук халь.

Мĕншĕн тесен Раççей пĕччен мар. Ăна Франципе Англи пулăшаççĕ. Анчах. çак вăхăтрах Германипе Австри те часах парăнас çук.. Ăçта ĕнтĕ, хăçан пулма пултарĕ ку йунлă вăрçăн веçе? Вĕçĕ курăнмаст! Çакна шутласан, пĕтĕм ăшчик хĕсĕнсе килет... Мĕн чухлĕ çын пĕтет, мĕн чухлĕ пурлăх çаралат!.. Анчах, пире мĕнле усă?! Çук!..—терĕ те Барух, сылтăм аллипе хăйĕн чĕркуççине хăй чышса илчĕ.—Ах, кайас-ха, выртас манăн кăмăла хумхатма йурамаст вĕт... тытамак!—тесе хуче вăл, тепĕр тапхăр сĕнксе ларнă хыççăн ура çине çĕкленсе.

Барух хăй вырăнĕ çине кайса выртат.

Барак ăшчикĕ ыйăха кайнă пек тăрат шăпланса.

* *
*

Çĕнĕ çул çитсе тăчĕ.

Ку вăхăтала пирĕн хушăран сывалса çитнисене ик-виçĕ ушкăн та лагĕрсене кăларса йачĕç. Вăл ушкăнсемпе Ваçкă Беспалăвпа Андрейĕв та тухса кайрĕç. Куљанса, шикленсе тухса кайаççĕ лагĕре йама тунисем. Мĕншĕн тесен, лагĕрти çынсем выçăпа, йăвăр ĕçсемпе тертленсе пурăнни пире паллă.

— Ах, хăйамат! Икĕ комиççине ултала калаcа йулнăччĕ, виçĕшĕнче ултал аймарăм. Сывалнă, терĕç. Ех, пĕтес пулат ĕнтĕ!—терĕ Ваçкă лагĕра тухса кайнă чух.

## XXX.

Утма пуçласан шăпах уйăхран, епĕ сурансене çыхакан барака чăн малтанхи хут хам урапа утса карăм. (Унччен сакăр уйăх йалан ноçилкăпа йăтса çÿренĕ). Çул çинче такăнса мĕн ÿкесрен, хампа пĕрле пĕр санитар утса пычĕ.

3-мĕш баракран сурансене çыхакан барака çитме 60-70 метăра йахăн. Унта икĕ барак пуçĕпе иртсе каймала. Ку вырăна епĕ çăмăллăнах утса çитрĕм.

Сурансене çыхакан пÿлĕме кĕрсен, унта ĕçлекен, мана нумай асаплантарнă хирург тухтăр хăй куçĕсене хăй ĕненмерĕ. Чăр-р! шăтарса пăхрĕ вăл чарнă куçĕсемпе ман çине—пÿлĕм алăкĕ патĕнче икĕ костыл çинче уртăнса таракан хăрак çын çине. Ĕненмерĕ, патарах утса пычĕ —Хăш баракран? —ыйтат вăл манран.—Виççĕмĕшĕнчен,—тетĕп епĕ. Тухтăр палларĕ. Йăлл кулса йачĕ.—О-о, это ты, русски? Ну, добре? лепши?—тĕпчет вăл манран çемçе сасăпа

— Добре, лепше, пан доктор,—тетĕп епĕ ăна.

Тухтăр каллех йăлкăшса кулчĕ. Ман çĕмрĕлнĕ ура кĕскелсе хам пÿрен йăвăррăн çакăнса тăни çине тинкерсе пăхрĕ. Унтан сĕтелсем патĕнче таракан тепĕр тухтăрпа фелдшĕрсем патне кайса темскер канашланса илчĕ.

Пĕрремĕш хут илтрĕм епĕ ку хирург тухтăр хампа ăшшăн калаçнине, чи малтанхи хут куртăм вăл йăлкăшса кулнине. Халиччен сиввĕн курăĕнă тухтăр кĕтмен çĕртенех ăшă кăмăлпа калаçни мана çавтери хаваслантарса йачĕ.

Мана сĕтел çине чăсса выртараççĕ. Икĕ тухтăр, фелдшĕр, çестра, медик студентсем—пурĕ çич-сакăр çын сĕтел тавра

пухӑнса тӑраççӗ те, ман сурансене пӑхкаласа нимӗçле канашлаççӗ. Акӑ çавӑнтах лентӑлӑ метр виçи илсе пыраççӗ те унпала урасене виçеççӗ, кӗскелнӗ урана туртаççӗ. „Чим, кусем!.. каллех операци тума шутламаççӗ-и? Ма килтӗм-ха кунта хам тӗллӗнех утса? Вӗсем çӗмӗрӗлнӗ урана туртса чӑсасшӑн пулмала“— текен шухӑш пуçа пырса кӗчӗ.

— Есӗр каллех операци тӑвасшӑн? О, çук! Нийепле те кастарма памастӑп текех, — терӗм епӗ, хама чӑсса хунӑ çӗртен сасартӑк тӑрса ларса.

— Мӗн тет вал?—теççӗ тӗлӗннӗ тухтӑрсемпе студентсем, хӑйсем хушшинчи пӗр пысӑк фелдшӗр çинеле пӑхса. Фелдшӗр ман сӑмахсене нимӗçле куçарса пачӗ. Пурте кулса йачӗç. Хайхи тухтӑр мана мӗн тӑвасси çинчен каласа пама хушрӗ. Фелдшӗр çурри чехла, çурри нимӗçле пакӑлтатса, мана çапла ӑнлантарат:

— Есӗ инвалид пулатӑн... сана Раççейа йараççӗ. Машин çине ларатӑн та — ту-ту-тут! тӳрех Раççейа, — тесе пӗлтерет.

„Тӗлӗк-и ку, йе чӑнах? Чӑнласах та Раççейа каймала пулӗши вара? Апла епӗ каллех куратӑп-çке тӑван çӗршыва, куратӑп атте-аннене, куратӑп тӑвансене!..“ — çакӑн пек савӑнӑçлӑ шухӑш хыпса илчӗ ман пуçра.

Тухатӑп та сикетӗп сурансене çыхакан пӳлӗмрен. Хамӑн савӑннипе ӑшчик тулса ларнӑ. Часрах пӗлтересчӗ, тетӗп ун çинчен Игната тата ыттисене те.

* *
*

Раççейа йарасси çинчен пӗлтернӗ кунхинех мана пӗрремӗш барака куçарса ытти инвалидсемпе пӗрлештерчӗç.

Пӗрремӗш барак пысӑк мар. Унта пурӗ те аллӑ çынна йахӑн çеç. Кусем пӗтӗмпех йӑвӑр суранлӑ йе чирленӗ çынсем. Çак чирлисем хушшинче пӗр кӗтесре — Раççейа йама уйӑрса хунӑ инвалидсем. Вӗсем улттӑнччӗ, епӗ пырсан çиччӗн пултӑмӑр. Çичӗ çын пурте урасӑр. Ман çумра выртакан инвалид—кӗрнеклӗ ватӑ украинӗц, Ставропӑлђ кӗпӗрнисем. Унӑн икӗ ури те татӑк. Пӗр урине пӗç кӑкӗнченех, теприне чӗркуççирен айалтан татнӑ.

Лӑпкӑ, шӑпӑрт тӑрат пӗрремӗш барак ӑшчикӗ. Кунта чун парса тӑраканӗ те виç-тӑватӑ çын çеç. Кусем те хӑйсен кроваçӗсенчен аран хӑпӑнакан, сывалсах çитеймен вӑйсӑр етемсем. Вӗсенчен пӗри — Михайло Близенчук, хӗрӗхеле çитнӗ ырхан, анчах та хытӑ шӑнӑрлӑ каскӑн мужик; тепри — Харйкӑв кӗпӗрнисем, ӳт-тирӗ типсе ларнӑ, çамрӑк украинӗц; виççӗмӗш — алӑсӑр çамрӑк çын — Олђош Вйаткӑ кӗпӗрнисем. Пӗр çаксем çеç каççерен, барака тухтӑр йе комендант тавращӗ пыман вӑхӑтсенче, çаптараççӗ тӗрлӗ халлапа йе шӑратаççӗ тӗрлӗ йурӑсем.

— Айда, дядько Михайло, грянем какую нибудь украинскую! — тесе пуçлат вара тӑтӑшах, хӑй кровачӗ çине пӗкӗрӗлсе ларнӑ çамрӑк украинец.

Çакӑн хыççӑнах тытӑнаççӗ хайхисем украин йуррисене шӑратма. Вӗсен çумне вара ытти сывалма пуçланисем те хутшӑнса йерипен туртӑнаççӗ:

Олђош украина йуррисене пĕлмест. — Давай вырăсла! — кăшкăрат вăл, Близенчук крсвачĕ пусĕнче тăраканскер. Лешсем итлемеççĕ, çаплах йантрагаççĕ хăйсен йуррисене.
Олђош кĕвĕçет. Акă кайат те ларат вăл хăй кровачĕ çине. Пуçлат унта ĕнерме фронтри йурăсен кĕввине.

Олђошăн пĕр йуратнă йурă пур. Ку йурра вăл фронтра вĕреннĕ. Çак йурă сăмахĕсем Олђоша анчах мар, ытти салтаксене те кăмăла кайаççĕ. Мĕншĕн тесен, вăл йурă сăмахĕсенче фронтри салтакăн асапĕ, пуçлăхсем çине ӳпкелешни офицерсем çине тарăхни тата ыттисем те илтĕнеççĕ. Вăл йурăра патша вăрçине хирĕç пăлханма пуçланă салтакăн чунĕ курăнат. Çавăнпа та фронтра тертленнĕ салтаксене пурне те кăмăла кайаççĕ ку йурă сăмахĕсем. Олђош пит те лайăх чухлат: пĕр çак йурра йурлама пуçласанах вăл хăйне итлемен Близенчука çĕнме пултарат. Ак хайхи, украинцăсем йурласа пĕтерессе кĕтсе илет те, майлă минут çитсенех чăсса йарат çак йурра:

Хорошо тебе на воле
Сыпать ласковы слова;
Посидел-бы ты в окопах,
Испытал-бы то, что я...
Мы сидели в открытых ямах,
Славно дождь нас промочил...
. . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . .

Пĕччен пуçланă Олђош сасси çумне — малтан ун çывăхĕнче вырткансем, унтан Близенчукпа ытти украинĕцсем те хутшăнаççĕ. Хăватлăн шăранса тухат кивĕ „Çтенкă Разин“ кĕввипе йарăнтаракан çĕнĕ йурă.

— Аван ку йурă. Анчах епĕ ун сăмахĕсене пĕлместĕп, — теççĕ хăш-пĕрисем йурласа чарăнсан. Олђош ури çине сиксе тăрат:

— Вĕрентетĕп... Вăл манăн çырса хунийех пур вĕт. Епĕр ăна окопра чух йурлаттăмăр, — тет те вăл, кĕçех матрасĕ айĕнчен çĕтĕлсе пĕтнĕ хут татăкĕсем туртса кăларса, çак йуррăн сăмахĕсене вуласа пама тытăнат.

Тухтăрсем пырса çӳрес вăхăтра, йе мадйар-нимĕç санитарсем пулнă хушăра барак ăшчикĕ шăпăрт. Час-часах никам калаçни те илтĕнмест. Хушăран хушă çеç чирлĕ çынсем ăнтрашса йани илтĕнсе чĕре тĕпне хускатат.

Кичем те тунсăхлă çакăн пек сехетсенче пурăнма. Анчах та мана ун пек сехетсене иртерме Игнат Краснокуцки пулашат. Кашни кун пырса ларат вăл ман пата 3-мĕш баракран. — Ну, Васылйĕв, есĕ как Раççейа çитнĕ, çыру çырса пĕлтер манăн арăма. Арăмран хыпар илмесен, атте патне йар... Пĕлтер вĕсене; Игнат пурвăçĕ вачар... тыткăвра пурте вилес пек выçă пурнаççĕ тесе çыр. Васкасах йаччĕр сухари... Адрĕс сана паллă: Воронĕж кĕпĕрни, Острогожски уйес, Алексейĕвски вулас, хутор Алексейĕвкă, Ивану Краснокуцкому... Темĕн пулнă вĕсене: вуна çыру пулĕ çырса йатăм, хирĕç пĕр хыпар та çук! — тет мана Игнат кашни курмассерен.

Çак баракрах тупăнчĕ Лукач йеверлĕ тепĕр лайăх санитар. Петр Братуш йатлă вăл.

Братуш — хорват, лутра тăлпан çын, пĕлӳлĕх йенчен Лукачпа Çедлакран нумай малта тăрат. Вăл пĕтĕм чунĕ-чĕрипе славен халăхĕсене йуратакан. славен халăхĕсем хушшинче пĕр тăванлă çыхăну туса хурасшăн çунакан пан-славенист. Баракра дежурни тăнă чух пуçлат вара вăл хăйĕн шухăшĕсене сарма. Кам каласçма пултарат. пурин умне те пыра-пыра тăрса, тăнлавтарат ăна славенлăх çинчен:

— Вырăссем, хорватсем, чехсем, словаксем — епĕр вĕт пурте пĕр тымартан тухнă славен нацийĕсем. Мĕн тума вăрçмала-ха пирĕн пĕр пĕрин хушшинче? Мĕскершĕн вĕлермеле пирĕн пĕрнепĕри çак хăрушă вăрçăра? Ку вăрçăра пире, Австрире пурăнакан славенсене, нимĕçпе мадйарсен тивлечĕшĕн çеç йун тăктарасçĕ, — тет Братуш. Йе çак хушăрах вăл пĕтĕм славен халăхĕсен пĕр сойузлă республик тума кирли çинчен калат, тата Австрири славенсем нимĕçсемпе мадйарсем айĕнче пусмăр тӳссе пурăнни çинчен пĕлтерет. Çакăнпа пĕрлех Братуш Австри аллинчи славенсем хăçан та пулин ирĕке тухасса та хытă ĕненет.

— Пулĕ вăхăт. Акă пирĕн Загреб хули çинче те хамăрăн ирĕклĕ республик йалавĕ варкăшса тăрĕ... Хорватсем, кроатсем, чехсем, словаксем, словенсем. çербсем — пурте ирĕклĕн тăрса хăйсен аслă вырăс тăванне алă парĕç, — тет вăл хăйне хăй çĕклентерсе йарса.

* * *

Тата уйăх çурă ытла кĕтсе пурăнтăмăр епĕр пĕрремĕш баракра хамăра Комаромран кăларса йарасса. Хăçан ăсатасси паллă марпа иртекен вăхăт тӳсме çук вăрăмăн туйăнат. Сывалакан шăмшак хăйне кирлĕ таран çиме ыйтат Анчах та çиме халиччен хи пекех сахал параççĕ. Кунĕн-çĕрĕн выçлăх хăвăрăлтарат. Çак выçăпа каллех чирлесе кайса Комаромрах пĕтессĕн туйăнат. Йулашкинчен аранах çунмалипех çунса кĕтнĕ кун çитсе тăчĕ.

Мартăн 11-мĕшĕнче каçпала. Пирĕн баракка кăнцелерти писăр пырса кĕчĕ. — Савăнăр, сире ĕнтĕ ыран ăсататпăр, — терĕ вăл пирĕн умма, çиччĕн харăс выртакан инвалидсем умне, пырса тăрса. Пире калама çук савăнăç йарса илчĕ. Анчах ку савăнăç нумайа пымарĕ Ăна часах çак писăр хăйех сирсе йачĕ. — Чим, халех пурте ан хĕпĕртĕр-ха. Ыран сире кашнинех тухтăр пăхат. Камăн та пулин суранĕ пĕтĕмпех тӳрленсе çитмен пулсан, ун пеккисем кайаймаççĕ, — хушса хуче вăл тепĕр минутран. Çаква илтсенех пĕр самантра хыпса илнĕ савăнаç каллех сирĕлсе хуллен сӳнме тытăнат. Мĕншĕн тесен, пирĕн пурин те сурансем ырра тӳрленсе çитмен.

— Ой, апла манăн шанчăк çук! — терĕ ман çумра выртакан Ставропăльукраинецĕ, хăш-ш сывласа йарса.

Писăр пирĕн хамарпа пĕрле Комарома мĕнле тумтирсем пынине ыйтса çырчĕ те, тухса кайрĕ.

Каç пулчĕ. Анчах пуçра шухăшсем хумхатнипе пĕр чĕптĕм те çывăрайман.

Акӑ мартӑн 12 мӗшӗ. Ирхине тӑхӑр сехетре тухтӑр пырса кӗчӗ. Вӑл пырсанах епӗ пӗрре савӑнса, тепре хӑраса чӗтресе илтӗм. Мӗн тӑвас тейӗн? Тухтӑр пӗр сӑмах калат-тӗк, ҫавӑ пулса тӑрат: вӑл — ӑсатмала тесен — ӑсатаҫҫӗ, йулмала тесен — йулас пулат! Пӗрре хӑварсан вара татах тепӗр виҫӗ уйӑх ҫак шӑтӑкрах выртмала. Виҫӗ уйӑх таршшӗнче темӗн курасси те пур. Акӑ мӗнле шухӑшсем хумхатса йачӗҫ манӑн чӗрене.

Тухтӑр пурне те пӑхса тухрӗ. Мана — кайатӑн, терӗ. Ех, савӑнӑҫ! Ку савӑнӑҫӑн вӗҫӗ хӗрри курӑнмаст. Йепле савӑнас мар? Вилес ҫӗртен чӗрӗлсе, таҫти ҫичӗ йутсен выҫлӑхлӑ тыт кӑнӗнчен хӑтӑлса — каллех тӑван ҫӗршыва, тӑванусене, аҫу-аннӳне курма таврӑнатӑн-ҫке!

— Ҫи'ӗ ҫынтан иккӗшӗ йулаҫҫӗ, — терӗ тухтӑр. Ман ҫумри Ставропӑль ҫыннине те хӑвармала турӗ Хытӑ тархасларӗ ку украинец: — Йар мана, тухтӑр, йар! . Епӗ кунта выртса пушшех пӑнчӑхатӑп, — тет вӑл тухтӑра тилмӗрсе. Анчах тухтӑр килӗшмест Тарахнӑ инвалид, ватӑ ҫын, ӑшӗ кӳгсе ҫитнипе ача пек ӳлесе макӑрса йачӗ.

Тухтӑрпа пӗрле пынӑ писӑра хам пата чӗнсе илетӗп. — Парӑр ӗнтӗ мана килтен йанӑ 3 тенкӗ укҫана, — тетӗп. Вӑл укҫа ман пата октабӗр уйӑхӗнче ҫитнӗччӗ. Анчах та, халь есӗ увпа нимӗн те илес ҫук тесе, унчух ӑна алла паманччӗ.

— Мӗн тӑватӑн халь укҫапа? Епӗр ӑва сан пата почтӑпа йаратпӑр, — тесе хучӗ писӑр каллех. Ҫакна каларӗ те, тукса кайрӗ. Ҫапла, килтен аран тупкаласа йанӑ укҫа тӗпренчӗкне ҫак майпа йӑлтах типӗтсе хучӗҫ.

* * *

Кӑнтӑрла тӗлӗнче пирӗн барак алӑкӗ умне мӑшӑр лаша кӳлнӗ нысӑк каретӑ ҫитсе тӑчӗ. Пилӗк инвалид, хӗрлӗ-хӑмӑр тӗ'лӗ тумпа тумланнӑскерсем, тухса лартӑмӑр лав ҫине.

Пире ӑсатса йама виҫӗ баракри утма пултаракансем пурте пухӑнса пынӑ. Пурте ырӑ ҫул сунаҫҫӗ. Пӗри те тепри Раҫҫейа ҫитсен тӑванӗсем патне ҫыру йама ыйтаҫҫӗ

— Телейлӗн кай!.. — Сывӑ йул! — Хӗрӳлӗн алӑ парса уйрӑлтӑмӑр каретӑ ҫумӗнчех хӑрах костыль ҫинчеууртӑнса таракан Игнатпа.

Акӑ каретӑ тапранса кайрӗ. Тӑрса йулнӑ халӑх варкӑштарат картуссемпе. Игнат, ҫийӗнчи кӑвак халат кӑсйинчен шурӑ тутӑр кӑларса, малтан шывланнӑ куҫӗсене шӑлса илчӗ, унтан вӑл тутӑрпа епӗр хула хушшине кӗрсе кайиччӗнех пире сулласа йулчӗ.

— Сывӑ пулӑр, есрел баракӗсем! Нумай пурнӑҫ сӳнчӗ, татах та нумай сӳнӗҫ ха сирӗнте вӑрҫӑ чарӑниччен, — терӗм епӗ йулашкинчен, хам тӑхӑр уйӑх тертленсе пурӑннӑ бараксем ҫине тинкерсе пӑхса. Вӑл бараксем, ҫийӗсене сӑмала хучепе витнӗ, айаккисем сарӑхса ларнӑ вӑрӑм бараксем, тӗксӗмӗн лӑпчӑнса йулаҫҫӗ симӗсленме пуҫланӑ каштансемпе ҫӳлӗ акацисем айӗнче.

## XXXI.

Йерипен шаклаттарса йуртаççĕ пирĕн лашасем чуллă Комаром хушшипе. Епĕр, пĕр йуяташпа, каретă хыçне тунă ларчăк çине кайала пăхса ларнă, пире таврара мĕн пурри йăлтах курăнса пырат. Йепле ырă, йепле уçă пек туйăнат çултаlăк йахăн гоçпитăљсенче йăваланса пăчăхнă хыççăн ирĕкре ларса пыма!

Акă, пырса кĕретпĕр Дунай кĕперĕ сине. Кĕперĕ — çӱлĕ тӱпелĕ, йăвăç сарса тунăскер.

Илемлĕ картин уçăлат. Анлăн сарăлса, тулли шывне хуллен йавăнтарса йухат çуркуннехи Дунай. Аслă шыв тăрăх шăваççĕ тĕрлĕрен прахутсем, тулли баржăсем. Дунай икĕ йенĕпе те икшер-виçшер хутлă чул çуртсем. Вĕсем шурă, симĕс, хĕрлĕ тăррисемпе лараççĕ пăтравлăн улаланса. Тӱрĕ урамĕсем тăрăх халăх вĕшĕлтетет. Анчах, ку халăх хушшинче, мĕн вăйпитти арçын пурте кăвак салтак тумтирĕпе... Пĕтĕм хула çине, тулăх Дунай çине лăпăстатса сивĕ çăмăр пĕрĕхет. Инçех мар, хулан пĕр хĕрринче ларакан коçтол тăрринче, çурăк саслă чан кăрăнлаттарат Çавтери лайăххăн туйăнат пире уçă çантаlăкра çаксене курса пыма. Пурне те манса пĕтĕм кăмăлпах савăнмала Анчах та çак вăхăтрах хырăм выççи — ху мĕнлине тата мĕнле пурнăçра пурăннисене аса илтерсе, пур хаваслăха та пусса çĕмĕрет.

Дунай урлă каççанах пирĕн каретă хулари тĕп гоçпитăљ умне пырса чарăнат. Ку гоçпитăљрен тата икĕ лавпа тăхăр инвалид тийенсе тухрĕç.

* * *

Каçалапа пире хула айăккинчи чукунçул станцине çитерсе антараççĕ. Çанталăк уйартат. Çурçĕр йенчен сивĕ çил кĕрлеттерет. Станцă умĕ пылчăк, лапăрка.

Пуйăс кĕтнĕ вăхăтра вокзал çумĕнчеларатпăр. Пирĕн тавра халăх вĕркĕшет. Унта словаксем, мадйарсем — хĕрарăмĕ, арçынĕ, ватти-вĕтти хутăшах. Арçынсенчен çурри ытла кăвак тумтир тăхăннă çарçыннисем. Вĕсем хушшинчех капăр тумланнă çамрăк офицерсем, йака гетрлă, шпорлă урисем çине сăмса тăрăх тӱррĕн пăхкаласа, вокзал ӱмĕнчи перрон тăрăх каллĕ-маллĕ утса çӱреççĕ.

Нумайĕшĕ тăшмансем тесе пăхаççĕ пулмала пирĕн çине. Ку — вĕсем йĕрĕнсе пăхнинчен сисĕнет. Анчах, çак хушăрах хĕрхенекенсем те пур. Илемлĕ хĕрсем, арăмсем, ватă карчăксем, татăк-уралă йе татăк алăлă çынсем çине хурлăн пăхса тăраççĕ-тăраççĕ те, тӳсеймеççĕ: хăшĕ çăкăр татăкĕ хуçса тыттараççĕ, хăшĕ укçа пăрахса параççĕ.

Манăн пĕр йенче—хăрах ури ĕçлейми пулнă, чипер сăн-сăпатлă çамрăк инвалид. Вăл Комаромри тĕп гоçпитăљрен тухнă тăхăр çынран пĕри.

— Епĕ выçах аптрамастăп ха. Ме, çи есĕ... ай-эй, ес ытла та ырхан! — тет вăл, хăйне хурса панă çăкăр татăкне мана

сĕнсе. — Вообче, есĕр пурте ырхан. Сире начар пăхнă пулĕ? — тесе хурат çамрăк инвалид, çав хушăрах манпа пĕрле пынă çынсем çине пăхкаласа.

— Ырхан çав.. Епĕр вĕт вихçан та ыррăн тăраниччен çисе курман, — тетĕп епĕ ăна.

— Вă-ăн мĕнле! — тĕлĕнет инвалид. — Ну, епĕр тĕп госпитăльре австрийцăсемпе пĕрлех выртрăмăр та, апат-çимĕç йенчен аптраман. Акă, пайан та, лайăх çисех тухрăмăр, тата пĕрер буханкă çăкăр çул çине парса йачĕç, — тет вăл, айаккине хунă тулли хутаç çине кăтартса.

— Аван пулнă апла сирĕн. Çавăнпа санăн сăн-пиг те чипер, — ăмсанса илетĕп епĕ ку инвалид пурнăçне.

Çамрăк инвалид куçĕсене умра тăракан хĕрсем çине куçарат.

— Ех, хĕрĕсем.. пиçсе çитнĕ çырла пек! Гатмала та ĕммеле анчах. Кусем — словак хĕрĕсем пулмала, пурте сарă сăнсăпатлă; лешсем мадйарсем пулмала, — тет вăл, кăшт айаккарах виççĕн тăваттăн тăракан хура куçхаршилĕ, çырăрах сăнлă хĕрарăмсем çине кăтартса.

— Вĕсем йалтан килнĕ хĕрсем пулмала Хресчен хĕрарăмĕсем кунта çакăн пек тумланаççĕ, — тет çамрăк, куçĕсене хĕрсем синчех выльатса — Ех, илемлĕ-çке пĕри!. Ах, ыталăттăм епĕ ăна!. Анчах та, çук.. епĕр ĕнтĕ инвалид çке. Епĕр австри çыннисем те мар. Пире вĕсем таçти тăшмансем тесе шутлаççĕ, — кĕçех пăшăрханса илет манăн çĕнĕ йулташ, хăйĕн чакăр-кăвак куçĕсене хĕрсем çинчен ирĕксĕр ман çинеле куçарса.

— Ват мĕвле есĕ. Лайăх çисе пураннипе ӳт тирӳ те тулса çитнĕ те, шухăшу та выльат сан текех Куçусем хĕрсем çинчен илĕнмеççĕ мĕн! — тетĕп епĕ ку йулташа, кăшт шӳт тукаласа.

Инвалид йăвашшăн кулса илчĕ.

Ку çамрăк çын, сăнран паха пулин те, кăшт селĕпрех, вырăсла такăнкаласа калаçат.

— Вырăс мар пулĕ-ха ку Естонĕц пулĕ-и, йе кам?.. Малтан хăш кĕпĕрнине ыйтса пĕлмеле, вара чухлама пулат, — тесе шутларăм хам ăшра.

* *

Хĕвел авнă вăхăтра Будапешт йенчен пуйăс хашлаттарса çитрĕ.

Çитнĕ пуйăс чарăнсанах пире ун çине çĕклесе лартрĕç. Ку пуйăспа Будапештран татах 30—40 инвалид ларса тухнă

Пуйăсра пурте хытă вакунсем. Пире, ӳт-тирсĕр çынсене, ларса пыма кансĕр. Кашни вакун пуçĕсенчех пăшаллă австри салтакĕсем.

— Мĕскершĕн капла ӳ у хуралсем? Епĕр ахаль те тарма пултарайас çук вĕт! — тесе ӳпкелешеççĕ пирĕн инвалидсем, хамăр пурнăçа илемсĕрлетсе тăракан хĕç-пăшаллă австри салтакĕсене кура.

Епĕр пĕр куппене хай вокзал умĕнче паллашнă çамрăк инвалидпа пĕрлех ларнă.

Акă пуйăс тапранат. Манăн çĕнĕ йулташ, вакун кантăкĕнчен пăхса перрон çине пырса тăнă словак хĕрĕсене тепĕр хут куç-

ласа илчě. Вăл хăвăрт картусне хывса тытса унпала хěрсем йенне суллама пуçлат.

— Ну, пăрах ĕнтĕ... лар! Пурěпěр вěсем сана йуратас çук — тěксе илетěп епě йулташа

— Ах, ытла та илемлě пěри! Ун пек хěр епě халиччен ниçта та курман. Хěрлě питлě, кăвак куçлă. . Пěтěм чуна тытса илет! — тет вăл, çаплах вакун чӳречинчен ӳпěнсе

— Чунна тытсан та есě ăна качча илейес çук. Качча илме мар, урăх курма та пултараймастăн. Пурнăçăнта пěрре куртăн та, çав сехетрех ěмěрлěх уйăрăлтăн,—тетěп епě.

— Чăн,—тет çамрăк, пуйăс тапранса кайнипе хěрěсем куçран çухалнă хыççăн ман йеннеле çаврăнса ларса,—ěмěрте пěрре!.. Çирěм виçě çул пурăннă—ăна курман Акă хаљ, пайанхи кун, çак сехетре курăнса чуна тыткăна илчě те часах куçран çухалчě. Тен, пайантан епě ттах хěрěх аллă çул пурăнăп, анчах ăна урăх никçан курас çук. Тфу! вăт пурнăç!.. Мěншěн вăл çакăн пек пулмала пулнă-ши, е? — терě те çамрăк инвалид, пěр самант шухăша кайса ларчě.

Пуйăс хăвăрт йарăнат. Вăл Комаром хулине хыçа хăварса Дунай улăхěпе çӳлеле хăпарат. Йěри-тавра тикěс уй-хир Икě йенěпе те йешěрме пуçланă клевěр анисем, симěсленекен абрикос, виноград пахчисем тăра-тăра йулаççě. Тӳрем уйрах сěвек лупашкалă васансем. Вěсем хăйсен пăтранчăк шывěсене чукун-çул айěпе шăнкăртаттарса, Дунай йеннеле йухтарса выртаççě. Кăнтăрпа хěвелтухăç хушшинче унта та кунта кăваккăн карăнса таракан Карпат шěврешкисем курăнаççě.

Пирěн вакунри санитар, хăй словак пулмала, пирěн тěлти кантăк уйне чарăнса тарса нумайччен пăхса пычě йешěрме пуçланă уй-хир çинеле. Йулашкинчен вăл, пирěн йенне çаврăнчě те, çапла каласа хучě:—Çакăнта ěнтě чи тырпулăлă, çимěçлě çěршыв.. Тěрěссипе каласан, Австрийе пěр Венгри айлăмě çеç тăрантарса пурăнат.

Çакна каларě те санитар, пирěн йенчен хăйне тивěçлě сăмах илеймесрен пулас, часах вакун пуçнеле утса кайрě. Санитар кайсан, вăл капласа тăнă кантăк уçăлат. Ку кантăкран хěвеланăç йенчи симěсленекен аслă уй-хир курăнат. Тин çеç анса ларнă хěвел урисем çӳлеле каранса, тěнче хěрринче купаланса таракан хура пěлěт хěррисене йунпа сăрланă пек хěретсе хунă.

Манăн йулташ чěмсěрленчě. Вакун ăшěнче сивě çапма пуçланипе вăл хăйěн картусне пусса лартрě, çӳхе паљто çухависене тăратса йарсе, пуçне унăн ăшне хупласа хучě.

— Çывăрас килет-им сан?—сăмах хускататăп йулташпа.

— Çу-ук, сивě витме пуçларě,—тет вăл.

— Калаччě-ха, братец: хăш кěпěрверен пулатăн есě?

— Симбирской ..

— Хăш уйес?

— Курмышский.

Вăл—Кăрмăш уйесě тесенех:—е-е-е, чăвашах ку иккен!—шухăшларăм епě хам ăшра. Вара, тӳсеймерěм, тӳрех чăвашла перcе йатăм:

— Апла, чăваш мар-и есĕ?

Çамрăк инвалид шартах сиксе илчĕ те, куçĕсене чаркаласа пăхса йăлл кулса йачĕ:—Чăвас... есĕ те чăвас-и вара?—терĕ вăл хăйĕн лăпкă куллипе пĕрлех.

— Ей, айван! Мĕнле есĕ туймастăн епĕ чăвашне? Тата ыйтма та шутлмастăн ху епĕ ăçти çынне!—кăшкăрса йатăм епĕ шăмăлă аллăмпа инвалида çурăмĕнчен лăпкаса.—Епĕ чăвашсене сăнранах паллама ăста пулаканччĕ. Анчах сана нимпе те пĕлеймерĕм вĕт,—тетĕп.

Хаваслă калаçу пуçланат. Пĕр-пĕрин çинчен тĕпчетпĕр, тĕпĕ-йĕрĕпех паллашса çитме тăрăшатпăр.

Манăн çĕнĕ йулташ Скворцов хушаматлă. Салтака ăна вăрçă пуçланнă çул кĕркунне илсе кайнă. Австри тыткăнĕнче вăл çулталăк ытла пурăннă.

— Ей, йулташ, епĕ чăваш курманни нумай пулат, çавăнпа та сана курнипе пит те савăнатăп,—тетĕп Çкворцова çаплах хамăн ытамран вĕçермесĕр.

Анчах манăн Скворцов пĕрре те чăвашла калаçмаст. Епĕ чăвашла, вăл вырăсла таварат.

— Мĕншĕн есĕ чăвашла калаçмастăн?—ыйтатăп епĕ тĕлĕнсе.

— Вырăсла калаçма хăвăхнă епĕ. Çавăнпа пуљ вырăслах калаçас килет манăн,—тет вăл.

— Апла есĕ пĕр чăваш та курман тыткăна лекнĕренпе?—тетĕп.

— Вообче епĕ чăвашсене пĕлесшĕн интересленмен. Çавăнпа та, тĕл пулнисене те палламасăрах иртерсе йанă пуљ тен,—тесе хурат Скворцов.

— Апла тăк есĕ вырăсланнă „чăвас". анчах та çавах ху тĕрĕс калаймастăн-çке вырăс сăмахĕсене?—систерсе илетĕп чăвашла маннă вырăсла вĕренсе çитеймен Скворцова.

— Епĕ? . Пирĕн чĕлхе çавăн пек ĕнтĕ... Пирĕн патра вĕт сирĕн пек калаçмаççĕ: есĕр „ш" тенине—пирĕн „с" теççĕ. Сирĕн „йашка", „лаша" теççĕ; епĕр —„йаска". „ласа"—тетпĕр. Çакăн пек калаçнисем вырăсла калаçнă чух та сисĕнеççĕ çав, мур!—тесе хучĕ ман Скворцов тинех чăваш чĕлхипе.

— „Ш"-па „с"-ра çеç мар, пуринче те сисĕнеççĕ сан. Çавăнпа та тĕрĕсрех калаçма вĕренмеле,—тетĕп Скворцова вăл кўреннĕ пек пулчĕ. Анчах та, çакăн хыççăн тинех чăвашла калаçма тытăнат.

Çанталăк тĕттĕмленсе çитрĕ Уйар тўпере çăлтăрсем чалхăраççĕ. Тулта сивĕ. Пирĕн пуйăс сахал тăркаласа хăвăрт вĕçтерсе пырат. Вакунăн тĕрлĕ кĕтессисенче сапаланса ларнă инвалидсем пурте сĕнке-сĕнке çывăрма тытăнаççĕ.

— Ăçта ĕнтĕ, тўрех Раççейа илсе кайĕç тетĕн-и есĕ, Скворцов?—ыйтатăп тĕлĕрме пуçланă йулташран

— Ним калама та пĕлместĕп. Анчах тĕлĕнетĕп: мĕнле касарĕç-ха пире фронт урлă?—тет вăл, пĕр самантлăха ыйхине сирсе йарса.

— Германи, Швеци урлă йараççĕ пулĕ,—тетĕп хайхиве.

Унччен те пулмарĕ, пирĕн пуйăс пĕр пĕчĕк станцăна çитсе чарăнчĕ.

— Анмала!.. Ей, тӑрӑр, пурин те анмала!—кӑшкӑрат вакун тӑрӑх утса пыракан ватӑ санитар.

— Акӑ сана—Раҫҫейе!—терӗмӗр Скворцовпа пӗр-пӗрне куҫсенчен пӑхса илсе.

---

Пуйӑс ҫинчен ансанах станцӑра вырӑсла кӑшкӑрашса калаҫнисем илтӗнсе кайрӗҫ. Акӑ, чукувҫул тӑрӑх имшеррӗн ҫунакан хунарсен ҫуттинче куратпӑр та вӗсене: ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе уткаласҫӗ кунта сывӑ вырӑс салтакӗсем. Вӗсен ҫийӗнче лӳчӗркенчӗк шинелсем, ҫӗтӗк-ҫатӑк кивӗ тушуркӑсем.

Епӗр часах пӗлтӗмӗр: кусем тыткӑнра пурӑнакан Раҫҫей салтакӗсем.

— Утӑр, утӑр маларах—кам утма пултарат!—кӑшкӑраҫҫӗ вӗсем пире. Утайманнисене иккӗн-виҫҫӗн тытса хӑйсем йӑтса кайаҫҫӗ.

— Ӑҫта илсе кайатӑр пире?—тӗпчетпӗр епӗр ку ҫӗтӗк салтаксевчен.

— Лагӗре илсе кайатпӑр. Пире вӗт йатарсах сире илсе кайма хуса килчӗҫ.—теҫҫӗ вӗсем.

— Мӗнле лагӗре?

— Саморине..

Чылай утса сылтӑмала пӑрӑнсан, пире вагонетсем ҫине лартса, Самори лагӗрне илсе кайрӗҫ.

Станцӑран вувӑ километрта тӑракан лагӗре ҫитрӗмӗр ире хирӗҫ. Кунта пире вырнаҫтарчӗҫ пӗр сивӗ барака Ни кроват, ни нарсем, ни матрас тавращӗ ҫук аслӑ баракра. Ларатпӑр халтӑркаса ҫара урайӗнче. Тул ҫутӑлсан тин кашни икӗ ҫын пуҫне пӗрер стружкӑ матрасӗ пырса пачӗҫ.

## XXXII.

Тул ҫутӑлсан пирӗн пата лагӗрти кӑнцелер тавращӗнче ӗҫлекен вырӑссем пырса тулчӗҫ. Ыйтаҫҫӗ, тӗпчеҫҫӗ вӗсем пирӗнтен, шыраҫҫӗ хӑйсене ҫывӑх, палатӑран ҫынсене.

Кӑнцелерте ӗҫлекенсенчен пӗри чӑваш салтакӗ—Павлӑв. Павлӑв—Йетӗрне уйесӗнчи Палтай вулӑс ҫынни. Вӑл манпа пӗр ҫулхискерех. Ҫар вӑййине те епӗр унпа пӗрлех Мокшан хулинче вӗревнӗ мӗн. Анчах та вӑл урӑх ротра пулнипе епӗ ӑна ун чух палламан. Павлӑв ҫырӑва лайӑх пӗлекенскер. Ҫавӑнпа та ӑна кӑнцелере ӗҫлеме илнӗ.

Пит те хӗпӗртесе ҫунатланчӗ Павлӑв пире—Скворцовпа иксӗмӗре—курнипе. Кӑнцелерте кашт йерҫсенех чупса пырат вӑл тӳрех пирӗн пата. Иртен пуҫласа кӑвтӑрла иртиччен ҫич сакӑр хут пычӗ каласма

Павлӑв тыткӑна Перемышӑлта патӗнче лексе йулнӑ. Нумай каласа пачӗ вал мана Самори пурнӑҫӗ ҫинчен.—Ку лагӗрте 40 пин ҫын—Раҫҫей салтакӗ пурӑнат. Начар пирӗн пурӑнаҫ. Выҫӑпа нумай чирлеҫҫӗ, нумайӗшӗ вилеҫҫӗ. Шутла-ха, ӑҫтан пурӑнатӑн пӗр чӗрӗк кило ҫӑкӑрпа?!—тет вӑл мана ытти сӑмахсем хушшинчен.—Ҫавах та, мухтав хамӑн телейе! Епӗ ак кӑн-

целерте ĕçлекелетĕп те, кирек ăçта çакăн пек çывăха тухкаласа çӳремех чармаççĕ. Çакна пула вăхăт иртни те питех сисĕнмест Ытписене, бараксенче ахаљ пурăнакансене вĕт, тимĕр картаран ниçта та кăлармаççĕ. Пĕр-пĕр çĕре ĕçлеме илсе кайнă чух çес конвойпа илсе тухаççĕ. Ара, конвойпа çӳрени—ирĕке тухса çӳрени пулат-и вăл? Тфу! Вăл чисти касмăкри йытта алă вĕççĕн çавăтса çӳренипе пĕрех. Кăшт ĕретрен пăрăнан тăк, кĕçех пăшал кучĕ пырса лекет!—хушса хурат Павлăв, çавăнтах хăй пурнăçĕ кăшт ыттисеннинчен çăмăлтараххипе йăпанса.

Анчах та, манăн Павлăвпа пурăнмала пулмарĕ. Çитнĕ кун хинех, каçалапа, мана ытти вайсăррисемпе пĕрле, лагĕр тулашĕнчи лазарета илсе кайса вырнаçтарчĕç.

Икĕ салтак, вĕсенчен пĕри Павлăв, пĕтĕм лагĕр урлă йăтса кайрĕç мана барак-лазарета.

Çакăн хыççăн Павлăвпа та, Скворцовпа та уйăрăлатпăр.

* *

*

Самори (урăхла Шумора)—пысăк лагĕр. Ку лагĕр бараксен хули йевĕрлĕ Вĕçĕ-хĕррисĕр, шутсăр бараксем йĕрки йĕркипе шакăртатса лараççĕ хăйăрлă тӳрем çĕр çинче. Баракĕсене пурне те айакĕ-çийĕпех сăмала хучĕпе витсе лартнă. Çак йышлă бараксенче кăткă пек вĕшĕлтетекен çынсене пурне те батаљйонсем, ротсем çине уйăрса хунă. Кашни тăватă барака йĕплĕ пралуксемпе тытса карталанă. Вăл картасен пĕртен-пĕр хапхи умĕнче кунĕн çĕрĕн хĕçпăшаллă австри салтакĕ. Батаљйонтан батаљйона тивĕçлĕ сăлтавсăр никама та çӳретмеççĕ. Ăçта та пулин каймалах пулсан та, унта конвойпа пĕрле çеç яраççĕ.

Лагĕрти барак коменданчĕсем, кăнцелерте ĕçлекенсем, санитар йе фелдшĕр пеккисем—пурте тыткăнри салтаксемех. Çаксем çеç лагĕр хушшинче çӳрекелеме ирĕклĕхпе пăртак усă кураççĕ.

Лагĕрти çын куллен 250 грам кукуруз çăкăрĕ, тата вицĕ хутчен кукуруз кĕрпинчен пĕçернĕ шӳрпе илсе тăрат. Ку апат—чуна усрамалăх анчах.

Тыткăнра чылай вăхăт пурăнакансен тумтирĕсем пĕтсе çитнĕ. Лӳчĕркеннĕ кивĕ шинелсемпе, çĕтĕк-çурăк, таса мар гимнаçторкăсемпе, кăвакарнă шурччас сăн-питпе, имшеррĕн лапсăргатса çӳреççĕ выçă çынсем барак таврашĕнче. Выççине пăхмасăрах, кашни ирпеле темиçе çĕршер çынна тĕрлĕрен ĕçе хуса каяççĕ.

* *

*

Самори госпиталĕнче мана йулташ тата вицĕ чăваш тупăнат.—Ех, пăх халĕ кунта... ăçтан кăна чăвашсем килсе тултăмăр!—хепĕртесе илчĕç епĕ пыриччен унта пулнă чăвашсем. Вĕсенчен пĕри—Чикме уйесĕсем, тепри—Çĕрпӳ уйесĕнчен, виççĕмĕш—Уфа кĕпĕрнинчи Çтерлитамак чăвашĕ. Ку чăвашсем, тула тухса лармав чух, ман кроват çинчен сирĕле пĕлмеççĕ.

Хавассăн калаçатпăр. Çĕрпӳ чăвашĕ Куçмин хăшпĕр чух йурласа та илет. Вырăссем, украинцăсем пире палламаççĕ:—Мĕнле халăх есĕр? Тутарсем-и, йе мордвасем?—теççĕ, халиччен илтмен чăваш йуррисене тинкерсе итлесе. Вăрçă хăрушлăхĕ-

сем ҫинчен аса илсе калаҫасси пире пурне те йӑлӑхтарнӑ. Ҫавӑнпа та, пӗрлешнӗ йулташсемпе пуринчен ытла килти пурнӑҫ ҫинчен калаҫатпӑр. Пит те илемлӗн, тутлӑн аса килеҫҫӗ йут ҫӗрте тӑван йалта пурӑнса ирттернисем. Аса килеҫҫӗ ачалӑх кунӗсем, йал хушшинче йӗкӗтле выљаса кулнисем. Паллах, ҫамрӑклӑх кун-ҫулӗнче те инкек-синкекпе тӗксӗмленнӗ тапхӑрсем кашни ҫынӑннах сахал мар. Анчах пирӗн ун пек тӗксӗм тапхӑрсем ҫинчен калаҫас килмест. Пирӗн иртнӗ кунсенчи „телейлӗ" сехетсем ҫинчен ҫеҫ, тата пулас ҫулсенчи ҫутӑ кунсем ҫинчен ҫеҫ ӗмӗтленсе калаҫас килет.

Епӗр Саморине ҫитсен тепӗр куннех ҫанталӑк ӑшӑтса йачӗ. Ҫӗрле, малтанхи аслати авӑтса, вӑйлӑ ҫӑмӑр шавласа иртрӗ. Аслати хыҫҫӑн Венгрире чӑн-чӑн ҫуркунне пуҫланса кайрӗ. Талккишпе йешӗрекен Дунай улӑхӗ хӗвел шевлипе ҫиҫсе йалкӑшат.

Кӑнтӑр кунӗсенче час-часах тухса ларатпӑр барак ҫумӗнчи симӗс курӑк ҫине. Кунта лагӗрти пек хуралҫӑ-мӗн ҫук, ҫавӑнпа та хӑшпӗр чух тимӗр карта тулашне те тухкалатпӑр. Пирӗн госпитӑљпе Дунай ҫыранӗ хушшинче австри ҫар ушкӑнӗсем вӑрҫӑ вӑйӗи вӗренеҫҫӗ. Вӗсем хушшинчех супне тӑрлӑ хӗрлӗ калпак тахӑннӑ босњаксем (босни салтакӗсем) хӑйсене уйрӑм ушкӑнпа сиккелеҫҫӗ.

Дунай леш йенче шултра бук вӑрманӗ ларат. Тин ҫеҫ симӗсленнӗ вӑрман тӑрринче кунӗн-ҫӗрӗн шӗвӗ кӑвак тӗтӗм мӑкӑрланат. Унта тыткӑнри вырӑссем еҫлеҫҫӗ. Ку вӑрман ӗҫӗнче выҫӑлӑ пурӑнӑҫпа чирлекенсене, йе алли-урине амантнисене пирӗн госпитале илсе пырса хураҫҫӗ.—Апат лагӗрти пекех начар. Пурӑвма кансер. Ҫынсене выљӑх вырӑнне хурса хӗне-хӗне ӗҫлеттереҫҫӗ,—тет ҫав вӑрманта ӗҫленӗ ҫӗртен чирлесе пынӑ Уфа чӑвашӗ.

Раҫҫейри хӗрлӗ хӗрес общчӗстви тӑрӑшнипе Самори лагӗрне вырӑсла кӗнекесем те чылай йаркаланӑ. Анчах ку кӗнекесем пурте турӑпа ҫветуйсен пурнӑҫӗ ҫинчен калаканнисем ҫеҫ.

Кӗнекесем вуласа тӑрас йенчен ку ӗҫе йеврейсем лайӑх йӗркеленӗ. Пирӗн госпитӑљ баракӗнче икӗ йеврей выртат. Вӗсем патне кашни ик виҫӗ кунра пӗрех тепӗр сывӑ йеврей ҫӗнӗ кӗнекесем илсе пырат те, киввисене (вуласа пӗтернисене) илсе кайат. Анчах ӑҫтан тупаҫҫӗ вӗсем ҫавтери хулӑм та хытӑ хупӑлӑ кӗнекесене, епӗр ӑна пӗлместпӗр. Паллах, вӗсем турӑ ҫинчен калаканнисене мар, урӑхла кӗнекесем вулаҫҫӗ.

* * *

Икӗ ернерен пӗтӗм Саморири инвалидсене пӗр ҫӗре пуҫтарса уйрӑм барака хупаҫҫӗ. Унта пурне те комиҫҫи пӑхса тухат.

Комиҫҫи хыҫҫӑнах, мартӑн 27-мӗш кунӗнче, инвалидлӑх иртме пултарайманнисене—пӗтӗмпе 190 ҫын—Самориpен кӑларса йачӗҫ.

— Ну, ӗнтӗ, хаљ тинех Раҫҫейа!—тесе пысӑк савӑнӑҫпа хавасланса тухрӑмӑр Самориpен.

Хурланса, пӑшӑрханса тӑрса йулчӗҫ госпитӑљ карти умне манӑн чӑваш йулташсем епӗ унтан тухса кайнӑ чух.

— Раççейа ситсенех çырса пĕлтер пирĕн çинчен хамăр тăвансене!—терĕç. Çакăн пек пулчĕ вĕсен мана ăсатса йанă чухнехи йулашки сăмахĕ. Паллах, ку сăмах хыçĕнче вĕсен кашниннех ку самантра сăмахпа кăларса калайми йăвăр шухăш чĕрене пусса тăрат. Вăл шухăш: „Есĕ каран та хăталатăн... анчах пирĕн тахçан вĕçерĕнмеле, вĕçерĕниччен тата темĕн курмала-ха кунта!“ тет вĕсенĕн ăшĕнче.

Савăннипе, хумханнипе нумайĕшин ĕçесси те, çийесси те килмест. Манăн ирхине панă çăкăр татăкĕ каçченех кăсйере çаплаланса çӳрет.

Пирĕн çĕр тăхăрвунă сын çумне Будапешт йенчен пуйăспа татах 75 инвалид ларса çитрĕ. Тĕрлĕрен инвалидсем пирĕн хушăра: урасăрри, алăсăрри, икĕ ури те икĕ алли те çуккисем, суккăррисем, чĕлхесĕррисем, чахуткăпа вилес патне çитнисем тата ытти йышшисем те нумай.

Çакăн пек етем ванчăкĕсемпе тулнă пуйăс, хĕвел анас умĕн хускалса, Саморирен çурçĕреле—Морав сăрчĕсем йенне йарăват.

## XXXIII.

Саморирен тухсан, вырăнĕпе чылай тăркаласа, пирĕн пуйăс пĕрмайах çурçĕр йеннеле мĕшĕлтетрĕ. Тепĕр кунхине Морав сăрчĕсем урлă каçрăмăр. Ку сăртсем хушшинче пуйăс темиçе тĕлте те туннелсем витĕр тухат. Вăрăм туннелсем ăшĕнче каçхи пекех тĕттĕм, тĕлĕ-тĕлĕнче çеç хунарсем çутатаççĕ.

Морав сăрчĕсем Карпатсенчен чăнкăрах та чуллăрах. Кăвак чулла сакăлтасем çивче вĕтлем-хуввав çеç çитĕнет.

Венă хули айаккипе çĕрле иртсе карăмăр.

Иккĕмĕш кун каçхине чехсен тĕп хулине — Прагăна çитрĕмĕр. Прагă станцинче пирĕн пуйăс, пĕр пысăк йуханшыв урлă каççанах, асла кĕпер вĕçĕнче чарăнса тăчĕ. Чылай тăмала пулчĕ Прагăра. Чукунçул станцинчен пуçласах шыв хĕррипе икĕ йенĕпе те çӳлĕ чул çуртсем лараççĕ карăнса.

Пирĕн пуйăса хирĕç — çичĕ хутлă катмар шурă çурт. Епĕр вăл çуртăн таваттăмĕш хучĕ тĕлĕнче тимĕр кĕпер çинче тăратпăр. Йуханшывăн икĕ айккипе те чăсăлса выртакан чуллă урамсем електричĕствă çутипе çиçсе йалкăшаççĕ. Вăл урамсенче трамвайсем, автомобилсем каллĕ-маллĕ чупса вĕркĕшеççĕ

Правуссем кăшкăрашнипе тата електричĕствă хунарĕсен çутипе вăраннă инвалидсем пурте пăрăнаççĕ вакун кантăкĕсем çумне

— Ах!..—ахлатса йачĕ çак вăхăтрах ман айри сак çинче выртса пыракан чахуткăлă вырăс инвалид.—Калăр-ха санитара: антарса хăвармĕç ши мана хут çак хулана — госпитăле! — терĕ вăл хăй çывăхĕнчи ытти инвалидсене.

— Ха-ха-ха!... — кулса илчĕ унпа тĕлме-тĕл тепĕр сак çинче ларакан урасăр инвалид.—Чаплă хулана курса ытараймарăн пулас .. Мĕн, Раççейа кайнă çĕртенех анса йулса, выçăпа вилес тетĕн-им есĕ? — терĕ вăл ахлатакан инвалида.

— Ан кул есĕ, ухмах!.. Мана сывлама йăвăр. Чахуткă пыра тытса илчĕ... Капла епĕ пурĕпĕр çул çинчех, Раççейа çитиченех, вилетĕп, тесе хучĕ ман айри инвалид хăйĕнчен кулнă урасăра. Ку сăмахсене вăл аран-аран, чыхăнса, тытăнкаласа çеç каласа пачĕ.

Вакун пуçĕнчи купере ларакан санитара чĕнсе пычĕç. Санитарĕ — нимĕç. Çавах та каласа ăнлантарчĕç ăна чахуткăлă сын мĕскер ыйтнине

Санитар пуçне суллакаласа илчĕ. — Ес тут мир лейд!.. Лейдер ес ист унмеглих... (Пит те шел!.. Анчах, çавах та апла тума çук) — терĕ вăл пăртак шутласа тăнă хыççăн. Урăх нимĕн те шарламарĕ, каллех уттара пачĕ хăйĕн пӳлĕмĕ йенне.

* *
*

Виççĕмĕш кунне, ире хирĕç, пирĕн пуйăс пĕр станцăра чарăнат. Нумай тăчĕ пуйăс. Пурте тарăхатпăр: — мĕскершĕн çакăн пек пĕчĕк станцăрах сехечĕ-сехечĕпе тăратса тинкене кăлараççĕ?! — тесе йатлаçатпăр.

Акă, унччен те пулмаст, пирĕн пуйăс çумнех таçтан шăтăкран тухнă тарăн фурманкăлă лавсем кĕмсĕртетсе пырса тулчĕç. Пĕтĕмпе 30-40 лава йахăн. Кашни лав пуçĕнчех йамшăк австри салтакĕ, лавсем хыçĕнче пăшаллă хуралсем.

— Авăр, авăр!.. Пурин те анмала!—илтĕнчĕç кăшкăрнă сасăсем. Пирĕн санитар та, вакун тарăх утса çӳресе, пурне те часрах пуç тарĕнса тухма хăвалат.

Пурте тухаççĕ, хатĕрленеççĕ. Епĕ те çӳлти сак çинчен анкаласа, халăхпа пĕрле вакун алăкĕ йевне шăвăнатăп. Анчах, çак самантрах. ман айри сак çинче выртакан чахуткăлă сын хускалмаст. Вăл, пичĕпе вакун стени йенне пăхса выртнă та, çӳхе шинелне пуçĕ çинченех витсе хунă. Акă нимĕç санитар ун патне пырса тăчĕ. Тĕкет ăна вăл çурăмĕнчен аллипе.

— Ауф! Ауф, рус! — тытса лăкат айаккинчен. Анчах та лешĕ хускалмаст. Акă санитар, инвалидăн пуç çинченех витĕннĕ шинелне сирсе пăрахат те, унăн пичĕ çине пĕшкĕнсе пăхат.

— Йа, ер ист гешторбен! (Апла, вăл вилнĕ!)—тесе хучĕ санитар.

Чахуткăлă сын çĕрле вилсе кайнă.

— Вăт, ĕнтĕ, урăх нимĕн те кирлĕ мар. Етем Раççейа çитрĕ! — тесе хучĕ пĕр кун маларах çеç унтан тарăхласа кулнă урасăр инвалид, хăй вакунран тухма алăк йенне утнă чух, вилнĕ çын çине сивĕ куççемпе пăхса иртсе.

— Чикĕ урлă Германийе каçараççĕ пулĕ. Çавăнпа антараççĕ пулмала, — теççĕ пирĕн инвалидсем пуйăс çинчен аннă чух.

Анчах та мĕн чухлĕ ĕметленни, хĕпĕртени, ик-виçĕ кун хушши хавасланни каллех ахалех пулса йулчĕ.

Пуйăс çинчен ансанах пире пурне те фурмансем çине лартса, тепĕр шăтăка—Терезиенштат лагĕрне илсе кайса хупрĕç.

Терезиенштат—Германи чиккинче, сурçĕрпе хĕвелтухăç йенчен туратланса килекен Рудец сăрчĕсем çумĕнче пытанса ларат. Ку лагĕр хăй те чылайах çӳлĕ выранта. Çавăнпа та кунта,

ăшăнса çитнĕ Венгри айлăмĕнчен пынă хыççăн, пире сивĕ аптратат.

Лагĕр çумĕнчех мăкланса ларнă авалхи крепăç ишĕлсе ларат. Унăн шурă чултан тунă хулăм стенисем, форчĕсем çул хĕррипех чылай вырăна чăсăлса пыраççĕ.

Лагĕрте нумай халăх пурăнат. Ку халăха Самори лагĕрĕнчи пекех бараксем тăрăх—батаљйонсем, ротсем çине уйăрса пĕтернĕ. Батаљйонсем хушшисене йĕплĕ пралукпа карталаса тухнă.

Пире сыввисенчен уйрăм —„Инвалидсен лагĕрĕ“ текен бараксене вырнаçтарчĕç. Кунта тăватă пине йахăн инвалид пурăнат.

Çĕнĕ лагĕре çитсенех пире унта пурăнакансем сырăнса илчĕç. Вĕсем пурте хăйсен сывăх палатăран çыннисене шыраççĕ.

— Ну, хăçан йараççĕ Раççейа?—ыйтатпăр епĕр.

— Паллă мар. Тен йамаççĕ те пулĕ,—татса хураççĕ тарăхнă сăн-питлĕ çиллес инвалидсем.

Пире часах паллă пулат: Австрирен йаракан инвалидсене пурне те Терезиенштата пухса çак лагĕре хупаççĕ иккен. Вĕсене Раççейа Германипе Швеци урлă ăсатмала Австрипе Германирен йаракан вырăс инвалидсем вырăнне çав вăхăтрах Раççейран нимĕç инваличĕсем пырса тăмала. Çапла вара, пĕрпĕрипе вăрçакан патшалăхсем хăйсен йурăхсăра тухнă çар çыннисене хире-хирĕç улăштарса тăма килĕшнĕ. Ку ĕçе 1915-мĕш çулхи кĕркуннех пуçласа йанă пулнă. Анчах та, хĕле кĕнĕ хыççăн, улăштару ĕçĕ çуркуннеччене чарăнса ларнă Çакна пула, хăшпĕрисем ку лагĕрте çур çул ытла кĕтсе пурăнаççĕ. Хăшĕ виç-тăватă уйăх кĕтеççĕ, йе пирĕн пек хаљ çеç çитнисем те пур.

Епĕр çитиччен малтан, çуркунне пулнăранпа чи малтанхи хут ку лагĕртен пĕр ушкăн инвалид кăларса йанă-мĕн. Анчах çакăн хыççăн Раççейе йарас ĕç каллех шăпланса ларнă Епĕр çитнĕ вăхăтра никам та нимĕн пĕлмест лагĕрте: те йама пуçлаççĕ малалла, те çук? Йарас пулсан та, тахçан йама тытăнаççĕ— ку никама та паллă мар, выçă, чирлĕ çынсене пĕр кун кĕтсе пурăнасси те пĕтĕм тинкене кăларат. Тен, пуçĕпех пĕтсе ларат ку инвалидсене улăштарас килĕшӳ?! Вара, кĕтсе пурăнни те ахалех. Кĕтсе пурăннă хушăрах, выçăпа, чирпе, тĕрлĕрен суранпа хавшăрканă çынсем нумайĕшĕ вилсе пĕтме пултараççĕ. Акă мĕн пирки кашни куна, кашни сехете тӳсеймесĕр шартланса йăвăррăн ирттерсе йараççĕ лагĕрти инвалидсем.

— Пире хут, çурри пĕтнĕ çынсене, Раççейре те ыррийех пулас çук. Çавах та ачам-пăчамсене, тăвансене курса вилес хут йулашкинчен,—тесе пуплешеççĕ ватă салтаксем.

— Ну, çавах та, ху килĕнте пулсан—хăвăн ачу-пăчу йе тăванусем мĕнле те пулин пăхаççех пăртак,—тесе йăпатаççĕ хăйсене хăйсем теприсем.

* * *

Терези лагĕрне çитсенех пире икĕ кунччен харăс икĕ пысăк комиççи пăхса тухрĕ. Ку комиççи сывалса йусанас пек çынсене инвалидсенчен уйăрса илсе, вĕсене каллех хăйсем тухса

килнě лагěрсене кайала кăларса йачě. Ача пек куççульпе макăрса кайаççě хăйсене кайала таврăнмала тунă вырăс салтакěсем. Чăн та, пěрре Раççейе кайатăп тесе хавасланнă çыннăн, камăнха таврăнас килтěр кайала — çав выçлăхпа тыткăн лагěрěн усал тěрмине! Çакна хăй куракан çыншăн ку тўсме çук йăвăр йапала.

Тата уйăх ытла пурăнмала пулчě манăн çак Терези лагěрěнче. Ку вăхăт—маншăн хăй выçлăхěпе халиччен Австрире курса тўснě выçлăхсенчен пуринчен те ирттерекен чи усал вăхăт пулса тăчě.

Çиме йевчен -- çын пуçне кашни кун 250 грам çăкăр, кăнтăрлапа каçхине çуршар мискă çăнăх шўрпи. Урăх вара, выçă вилсен те—ни ěçмели ни çимели—нимěн те памаççě. Çакна пула, шěввěн йурса паракан çăнăх шўрпи пире çавтери тутлăн туйăнат. Епěр ăна мискă тěпне пěр тумлам йулмиччен чěлхесемпе çуллаçах ěмсе йаратпăр.

Выçлăх пуснă инвалидсен ни ыйхи, ни канăçлăхě çук. Камăн утма вăйě пур, çавсем пурте ир пуçласа каçченех барак таврашěнче пуçа усса каллě-маллě уткалаççě, йе хăше-пěри хăçан ыванса ўкиччен, тимěр карта хěррипе темиçе хут утса çавăрнаççě. Утаççě вěсем, типсе путса ларнă салху пит-куçлăскерсем, хăйсене такам курăнми алăпа хыçран çаптарса пынă пек — васкаса, пěр сăлтавсăр хыпаланса. Вăй çуккисем лараççě сěнкěе барак çумěнче, йе выртаççе баракри хăйсен тасамар, ванчăк улăмлă матрасěсем çинче. Тěрлěрен инвалид вěркěшет бараксен тавраш. нче: хăрах ураллисем, икě ури те çуккисем, татăк алăлисем, куççăррисем, чахуткăпа хавшаса пěкěрěлсе аннисем тата ыттисем те. Кусем — пурте йунлă вăрçă таварěсем.

Кăнтăр кунěсенче вăй çуккисем те тулала тухса лармах тăрăшаççě. Мěншěн тесен, барак ăшěсенче тěксěм те таса мар.

Икě хут чус хăмине тăратса çапса тухнă вăрăм бараксен ăшěнче кашнинчех икě ěрет икшер хутлăн сарнă нар сакки. Нар ěречěсем варрипе тата çтена икě хěррипе те барака тăрăх уçă проходсем выртаççě. Ку проходсенче ирпе каçхине пěр таттисěр халăх вěркěшет. Кăнтăрла çеç вěсем пушанаççě.

Нарсем çинче çумма-çуммăн сарса тухнă улăм тўшексем. Вăл тўшексем çинче—кивелнě çўхе одейалсем, стружкăпа (çункавпа) тултарнă вараланчăк питлě минтерсем. Çакăн пек вырăнсем çинче выртса тăраççě вăрçă вуче витěр çунса тухнă çěмрěк çынсем—патша Раççейěн инваличěсем. Кашни барака икçěр инвалид таран шанăçат.

Кăнтăр кунěсенче никам та ларасшăн мар ку бараксенче. Мěншěн тесен зěсенче тěксěм, сиве, тусанлă. Каççерен çеç ирěксěр барака кěнě çынсем, пěчěк лампăсемпе çурта çутисем таврара ушкăнě-ушкăнěпе пухăнса ларса, кичем вăхăта сисěнкěсěр ирттерес тесе—картла, лотола, доминола выляççě, йе иртипутснипе малашлăх çинчен имшерěн сўтсе-йавса халлап-йумаха çапаççě.

*(Йулашки пулат).*

# К. В. ИВАНОВ „НАРСПИ“ АВТĂРĚ.

*УХСАЙ ЙАККĂВĚ.*

## К. В. ИВАНОВ ÇИНЧЕН.

### I.

1908-мěш çулта Чěмпěр (халĕхи Ульйанăвск) хулинче „Чăваш йумахěсемпе халлапěсем“ йатлă кěнеке ҫичетленсе тухнă. Вăл кěнекере М. Феодăрăвăн „Арçури“ йатлă легенди, Шупуççыннин „Хитре Чěкеç“, „Йантрак Йантравě“ поемисемпе перле Константин Васильевич Ивановăн „Нарспи“ йатлă пысăк поеми пулнă. Çакă кěнекерен чăваш литературин историйě пуçланса кайнă тесе хăйуллăнах калама пулат. Унччен чăвашла кěнекесем тухнă пулсассăн та пěр писатěл те чěрене ыталаса илмеле произведени парайман. Ку кěнекере чăваш чěлхин пуйанлăхě тата чылай ăста çыракансем палăрнă. Кěнекери произведенисенчен чи хăватли, чи пысăкки те илемли „Нарспи“ пулнă. „Нарспи“ çапла ěнтě чăваш литературин никěсěнчи чи паха пысăк чулсенчен пěри пулса тăрат.

Константин Васильевич Иванов 1890-мěш çулхи ийунěн 2-мěшěнче халĕхи Пушкăрт республикинчи Пишпулек районěнче, Слакпуç йатлă йалта çуралнă.

Унăн ашшě — Пуйан Васинкка — хăйěн йалěнчи çěрсене кăна акман. Тим шывě патěнчи Чěпěнлě аулěнчи пушкăртсенчен çěр тара илсе, тулă нумай акса пуррăннă. Пуйан Васинкка хăйěн вăхăтěнче хуçалăхне питě хăвăрт ÿстерсе пынă, йалхуçалăх машинисем тупаннă, тата ытти те. Вăл капиталисăм çулěпе пыракан кулак пулнă. Хытă ÿссе пырса, пысăк хуçалăх тытма ěмěтленнě, çынсене ěç вăхăтěнче тара тытнă, хăйěн чейелěхěпе експлоатацилеме пěлнě, йалти улпуга тухса пынă, вăл Михетер пек кивě капанěсене çěртсе лартман, тыррине вакунěвакунěпе айакка ăсатнă, хăйěн мулне çултан çул ÿстерсе пынă.

Кěçтенттин çуралнă çěршыв илемле. Мал йенне Урал тăвěн тымарěсем тăсалаççě. Силпипе Чипикарăн улăхěсем çурхи вăхăтра пěтěмпех çěмěртлěхсен çеçкисемпе шуралаççě. Мал йенне Слакпуç йалěнчен пуçланса пысăк вăрмансем кайаççě. Унти çěршыва, питěрех те Силпи улăхне, Кěçтенттин „Нарспи“ поеминче питě витěмлě кăтартса панă. Слакпуç йалě хăйěн çутçанталăкěпе кăна мар хитре, вăл ытти йенчен те илемлě. Вăл хăйěн чěлхипе тата такмак йуррисемпе, халлапěсемпе питě пуйан йал. Кěçтенттин пěчěк чухнех халлапсемпе йурăсене итлеме йуратнă.

Çичě çула çитнě Кěçтенттин тăван йаленчи шкула вěренме кěнě, анчах вěренсе тухайман. Вěрентекен тийечук Таниле кăйттăм-кайттăм вěрентни пурне те пěлме тăрăшакан ачан кăмăлне кайман, çавăнпа ашшě ăна Кекен йалне, Марйе аппăшě патне

ӑсатнӑ Кӗҫтенттин питӗ лайӑх вӗреннӗ, Кекен шкулне пӗр ҫултан вӗренсе тухвӑ та, 1901-мӗш ҫулхине Белебей хулинчи шкула вӗренме кӗнӗ. Унта пӗр ҫул вӗренсенех, ӑна тата малала вӗрентес тесе Чӗмпӗрти чӑваш шкулне ӑсатнӑ.

Кӗҫтенттин, шкул ҫумӗнчи хатӗрленмели сӑнавлӑ пайӗнче икӗ ҫул вӗренсен, 1905-мӗш ҫулхине пӗрремӗш класа куҫнӑ. Анчах вӑл унта вӗренсе тухайман.

1905-мӗш ҫул пӗтӗм Раҫҫей революци вут-хӗмӗпе хыпӑннӑ. Мускавпа Питӗр урамӗсенче баррикадӑсем ҫӗкленнӗ. Йапун вӑрҫинче выҫлӑхпа вӑйран кайнӑ хресченсем улпутсен кил-ҫурчӗсене ҫӗмӗрнӗ, вут пенӗ. Революци хумӗсем — хуларан хулана, йалтан йала ӳкекен тӑвӑлсем — дворенсен лӑпкӑ хулине — Чӗмпӗре чӗтретмесӗр иртмен.

Чӗмпӗр шкулӗнче вӗренекенсем шкулти йӗркене хирӗҫ тӑрса пӑлханма пуҫланӑ. Чӑваш хушшинче миҫҫионерлӑ политикӑпа илсе пыракан И. Й. Йакӑвлӗв тата унӑн майлисем, чӑваш хура халӑхне революци йухӑмӗнчен пӑрса йарас текенсем, Чӗмпӗрте вӗренекенсене ӳкӗтлесе те пӑхнӑ, анчах революци сывлӑшӗпе ҫунатланнӑ вӗренекенсем хӑйсен пӑлханулӑ шухӑшӗсенчен пӑрӑнман.

Кӗҫтенттин вӗренекен класри ҫамрӑксем 1905-мӗш ҫулхи нойабӗр уйӑхӗнче пулнӑ пастовкӑна хутшӑнаймасӑр йулна. Вӗренекенсем вара 1907-мӗш ҫулхи йанварӗн 10-мӗшӗнче вырӑс чӗлхине вӗрентекен реакционер-шовинист — Кочурова шкултан хуса кӑларас тесе петици ҫырса йана. Кӗҫтенттин ҫав пӑлханусене таччӑнах хутшӑнса ҫӳремен пулсан та, хӑйӗн пултарулӑхӗпе пастовкӑ ӗҫне тата вӑйлатса йама хал панӑ. Кочуров класа пырса хӑйӗн „ҫылӑхӗсене каҫарттарнӑ пек" пулса, вӗренекенсене ӳкӗтлеме тытӑннӑ, ӑна хирӗҫ петици ҫырса панӑшӑн ӳпкеленӗ. Вӗренекенсем ун ҫинчен „чӑвашсене мӑшкӑлат" тесе ҫырнӑшӑн, кӑмӑлӗ хуҫӑлнӑ имӗш, ҫаванпа „У меня самые закадычные друзья — чуваши" тесе калана. Кочуров класран тухса кайнӑ-кайманах, Кӗҫтенттин сиксе тӑнӑ та, класри туска ҫине пысӑк пыл катки умне Кочурова тата чӑваш пупӗ В. Никифӑрӑв сӑнне ӳкерсе хунӑ, айне „катка хыҫӗнчи туссем" тесе ҫырнӑ.

Вӑл ӳкерчӗк вӗренекенсен кӑмӑлне ҫӗкленӗ, пастовкӑн тӗп шухӑшне йарса илнӗ. Чӑнах та, Кочуровӑн чӑн чӑн йулташӗсем ҫав пыл катки умӗнчи чӑваш пупӗ майлисем кӑна пулнӑ. Пастовка политикла ҫӳлӗ тапхӑра хӑпарайман, Кочуров вырӑнне В. Феодӑрӑва, чӑваша лартсавах лапланнӑ.

1907-мӗш ҫулхи февралӗн 20-мӗшӗнче Патшалӑхӑн иккӗмӗш пухӑвӗ уҫӑлсан, Чӗмпӗр шкулӗнче каллех пӑлхану пуҫланат, сарлаканҫах аслӑланса кайат. Ҫав кун И. Й. Йакӑвлӗв ҫурчӗ тӑрринче тип хӗрлӗ йалав вӗлкӗшет. Миҫҫионерсен шкулӗ чӑрсӑр пӑлхавҫӑсене пурне те шкултан хӑваласа йанӑ.

Ҫавӑн пирки 17 ҫулхи Кӗҫтенттин Иванов та килне таврӑннӑ.

## II.

Кӗҫтенттин тӑван йалӗнче хресчен ӗҫне тунӑ, хушӑран чӑваш халлапӗсене, йурри-такмакӗсене пухнӑ.

Вӑл ҫав ҫул Ёпхӳ кӗпӗрнинчи Благовешченск савӑтӗнчи учитӗлсен ҫеминарине вӗренме кӗме ыйту панӑ. Илмен Вак халӑхсем вӗренекен Бирск хулинчи шкула кӗме тӑрат. Унта та илмен. Патша йыттисем вирлӗ ӗҫлене, вӗсен куҫӗсем курман кӗтессем пулман. Пур ҫӗрте те „пӑлхавҫӑ“ сӑмаха пӗлнӗ, пичет пуснӑ хутсем пур ҫӗре те ҫитме ӗлкӗрнӗ.

Кӗтмен-туман ҫӗртенех ҫав кӗркунне Слакпуҫ йалне Кӗҫтенттин патне ҫыру ҫитнӗ. Вӑл ҫырӑва Чӗмпӗрти шкулӑн пуҫлӑхӗ И. Й. Йакӑвлӗв ҫырнӑ, вӑл Кӗҫтенттине Чӗмпӗре пыма чӗннӗ. Чавашсен миҫҫионерлӑ кулҍтурине ырми-канми илсе пыма шӑпа тытнӑ пиҫӗхсе ҫитнӗ хайар И. Й Йакӑвлӗв чухласа илнӗ, вӑл Кӗҫтенттине хӑйӗн аллинчен вӗҫерсе йарасшӑн пулман. Турӑ кӗнекисем куҫарма чӗннӗ.

Кӗҫтенттин Чӗмпӗре кайасшӑн пулман, унта ӑна йепле киревсӗрлӗхсем кӗтнине вӑл сиснӗ пулӗ. Анчах вӑл вӗренесшӗн пулнӑ, ҫав шухӑш ӑна каллех Чӗмпӗре йертсе пынӑ. Чӗмпӗрте пӑлхав вӑхӑчӗсем иртнӗ. Пӗтӗм Раҫҫейри хайар реакци пуҫланнӑ Револҍуци йенне туртанакансене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Револҍуци ҫынни-сем тӗрмесенче ларнӑ. Чӑвашсен пирвайхи револҍуцилӗ поечӗ ҫамрӑк Тайӑр Тимкки, револҍуцилӗ кӗнекесене чӑвашла кӑлармали вӑрттӑн типографи тума тӑрӑшнӑшӑн, катӑргӑна лекнӗ. Хӑйула уҫӑ сӑмах калама никам та хӑйман, реакци вӑйлӑланнӑҫем вӑйлӑланса пынӑ. Чӗмпӗр чиркӗвӗсен чанӗсем йанӑрнӑ.

Кӗҫтенттин кунӗн-ҫӗрӗн, канмасӑр тенӗ пек, кӗнеке куҫарнӑ. Вӑл, пуйан ҫын ачи пулнӑ пулсан та, ку вӑхӑтра килтен пулӑшу илмен, хӑй вӑйӗпе ӗҫлесе укҫа тупнӑ. Унӑн ашшӗ, Пуйан Ваҫинкка хӑйӗн мулне хыткукар пек тыткаланӑ, „Укҫа тимӗр касат, ҫичӗ пус укҫа ҫичӗ чул айӗнче“ тенӗ вӑл. Вӑл тата хытӑрах пуйасшӑн пулнӑ.

Кӗҫтенттин куҫарас ӗҫре питӗ нумай ӗҫленӗ, Л. Н. Толстой шкул ачисем валҍҍи ҫырнӑ тӑватӑ кӗнекине тата Баранӑв ҫырнӑ кӗнекене куҫарнисене тӳрлетсе редакцилес ӗҫре вӑл хӑйӗн вӑйне нумай хунӑ. Нумай вулавӑ, ҫав вӑхӑтрах хӑй йурагна поечӗ Лермӑнтӑв ҫырнӑ „Калашник хуҫа ҫинчен хывнӑ йурӑ“ йатлӑ поемине татаултӑ сӑввине куҫарма ӗлкӗрнӗ. Ҫав вӑхӑтрах „Нарспи“ поемӑпа „Тӑлӑх арӑм“, „Иҫӗ хӗр“, „Тимӗр тылӑ“, „Выҫӑ аптранӑскерсем“ йатлӑ халлапсем ҫырнӑ. Пӗр ҫул хушшинче ҫакӑн чухлӗ ӗҫ тума хӑватлӑ талант кӑна пултарнӑ. Ҫав ҫултах вӑл „Шуйттан чури“ йатлӑ трагеди, „Ватӑ вӑрман шухӑшӗ“ легендӑ ҫырма тытӑннӑ, анчах ҫырса пӗтереймен.

Литературӑ ӗҫӗпе ларнӑ вӑхӑтрах Кӗҫтенттин учитӗле тухас тесе вӗреннӗ, тата картинӑсем ӳкернӗ. Унӑн пур ӗҫре те пысӑк пултарулӑхӗ палӑрнӑ.

Вӑл ӗҫтел-пукан тума вӗрентекен Николай Никаворчӑн сӑнне ӳкернӗ. Ҫак ӳкерчӗк ҫине пӑхсан тӗлӗнетӗн: умӑнта чӗре

ҫын тăрат. Ҫавăн чухнех вăл К. В. сĕтел-пукан тăвакан маҫтерскойсенче ĕҫленĕ, екзамĕн парса вĕрентекен йатне илнĕ.

Кĕҫтенттин ĕҫре йăпану тупнă, пĕтĕм йăвăр ĕҫне маннă. Анчах Чĕмпĕр хули, йаланах тапак тĕтĕмĕпе тулли пĕчĕк пӳлĕм йăлăхтарса ҫитет. Вăл, ҫутҫанталăк илемне курса уҫăлса ҫӳрес тесе, 1909-мĕш ҫулхи ҫуркунне Беļайĕв ҫĕрвиҫевҫĕпе пĕрле Сызрăļ уйесне кайса, кĕркуннечев плансем ӳкерсе ҫӳрет. Ҫав кĕркуннех хăйĕн тăван йалне таврăнат. „Ватă варман шухăшĕ“ патлă ҫырса пĕтермен сăввинче ҫапла ҫырат вăл:

Асап килсен, хĕн килсен,
Шухăшласа ларатăп:
Ҫамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Ăҫта есĕ ҫухалтăн?

Ҫамрăк кунсем, ыр кунсем
Йртсе кайрĕҫ тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕҫ хура пĕлĕт пек.

Чăнах та, патша саманинчи миҫҫионерсем хушшинчи „хура пĕлĕт пек“ килсе хуплана йăвăр пурнăҫ Кĕҫтенттине канăҫ паман.

1909—10-мĕш ҫулхи хĕле килĕнчех иртерет. Ĕҫчен етем вăхăта пĕртте сайа йамаст. Килĕнче стоļар ĕҫĕпе хăйĕн хĕсĕк вăхăтне тултарат, икĕ шкап тата ытти йапаласем тăват.

1910 мĕш ҫулхи ҫуркунне И. Й. Йакăвлĕв Чĕмпĕре килме сĕнсе ҫыру йарсан, Кĕҫтенттин татах унта кайнă.

Вăл каллех кĕнекесем куҫарнă, куҫарвă кĕнекесене тӳрлетнĕ тата хĕрсен сăнавлă шкулĕнче рисованипе уроксем пана. Тăвата ҫул хушшинче Кĕҫтенттин хăй тĕллĕн ним те ҫырман. Унăн, ĕҫ хушшине путвăскерĕн, литературă ĕҫне илсе пыма пушă вăхăчĕ пулман.

Тепĕр йенчен, пурнăҫ хĕсĕнвĕҫемĕн хĕсĕнсе пынă, аслă вырăс шовинисăмĕ хайарланнă. 1905—6-мĕш ҫулсенче революцийе хутшăннă чăвашсене хĕсĕрлеме тытăннă патша правителствипур чăнлăх шухăшсене ҫиме тытăннă. Вырăс шовинисĕсем Чĕмпĕр шкулне те пĕтĕмпех вырăслатма тапăннă, т. ыт. те. Кĕҫтенттин питĕ йавăр пурнăҫа лекет, хăйен хуҫăлвă кăмалне пусарас тесе, ĕҫке-ҫике йарăнса кайат. Ҫакă хĕсĕк,—киревсĕр пурнăҫра, хăйĕн сывлăхне ҫухатат, унăн хырам каттарĕ пуҫланат.

Хырăм каттарĕ Кĕҫтенттине пĕтерсех пынă, вăл пĕтĕм ӳтпирепе типнĕ, ҫав вăхăтрах тата унăн ӳпке чирĕ—туберкуļоз пуҫланнă. Кĕҫтенттин вилĕм умĕнче тăнă.

Вăл 1914-мĕш ҫулхи кĕркунне Чĕмпĕр хулинчен килне таврăннă. Икĕ чир пĕр етемпе кĕрешнĕ, сываласси ҫинчен шухăшласси пулман; хырăмĕ те ӳпки те ҫĕрнĕ. Кĕҫтенттин пĕр хĕл хушши вырăн ҫинче выртнă, хăйне вырăн ҫумне пăталаса хунă хăрушă чирсемпе кĕрешнĕ. 1915 ҫулта мартăн 26-мĕшĕнче вилнĕ. 29-мĕшĕвче ăна пытарнă.

## III.

Кĕҫтенттин Иванов ҫамрăкла, 17-ре чухне „Нарспи“ йатлă поемăна ҫырнă. Ача чухнех унăн пултарулăхĕ палăрнă. „Нарспи“ ҫырма пуҫличчен Кĕҫтенттин вырăссен М. Лермăвтăв

çырнă „Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă, тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă йурра“ тата ытти сăввисене йуратса куçарнă. Лермăнтăв хăйĕн произведенисенче никама пăхăнми пĕччен-лĕ индивидуалисăма ырлат, çав вăхăтрах фаталисăма — „турă çырнинчен иртес çук“ тенĕ шухăша пуç тайат. Лермăнтăвăн вăйлă пĕччен етемсене ырлакан шухăшĕ Кĕçтенттин кăмăлне кайнă, çав шухăш „Нарспи“ поемă витĕр те пырат.

Çилпи йалĕ—пуйан йал,
Ларат вăрман ăшĕнче.
Кантур пекех çурчĕсем
Ват йăмрасем айĕнче.
Йалĕ тавра укăлча,
Çĕнĕ çатан укăлча,
Кив капанлă анкарти,
Тĕрлĕ çимĕçлĕ пахча.
Аслă урам тăршшĕпе
Хăма витнĕ çурчĕсем,
Урам икĕ айккипе
Йем-йешĕлех сачĕсем.
Çуртсем тавра кил-карти,
Чул хӳме пек çавăрнă.
Сарă хапха килсерен
Чĕнтĕрленĕ тăрăлă.
Çилпи йалĕ—аслă йал,
Хула тейĕн инçетрен.
Ахăр кунти чăвашсен,
Мулĕ пур-тăр çав вĕсен!

Ку картин тăрăх пăхсан, Çилпи йалĕнче пĕр чухăн етем те çук, пурте пуйан пурăнăçпа пурăнаççĕ, никамăн пӳрчĕ те çĕрсе тайăлман, „сарă хапха килсерен чĕнтĕрленĕ тăрăлă“, кунти тĕнче питĕрех те телейлĕн, кунта нимле хĕн-хур та çук:

Çăтмах пекех туйăнат
Çилпи чăваш йалĕнче.
Вăхăт иртни сисĕнмест
Савăнăçлă кунсенче.

Çилпи пек йалсем, паллах ĕнтĕ, çĕр пичĕ çинче ниçта та пулман, Иванов хăйĕн шухăшĕпе çавăн пек таса, нимле кĕрешӳсĕр патриархаллă йал курасшăн пулнă, çавăнпа вăл ăна шухăшласа кăларнă. Вăл пурăнăçри чăн-чăн йал пулман, романтикăла поезири йал пулнă.

Пурăнăçсем, ах, аван
Аслă Çилпи йалĕнче! —

тесе такмаклани тĕрĕсех пулсан, Нарспи те хайар Тăхтаман упăшкине вĕлерсе тармĕччĕ, Кантăр варне кайса çакăнмĕччĕ.

Иванов малашне „çăтмах пекех туйăнакан“ Çилпи йалĕ çинчен сырма пултараймăн. Чăн-чăн пурăнăçри паттăрсен, Сентнерпе Нарспи хĕн-хурĕ пĕтĕмпех те Сетнерĕн мул çуккинчен пуçланса кайат. Сентнерпе Нарспи пĕрле пурăнма тăрăшаççĕ, анчах Сетнерĕн мулĕ çитмест. Иванов малтан, „Çилпи йалĕ—пуйан йал“ тесе çырнă пулсан, малала пурте пуйан марри, „сарă хапхасем килсерен“ пулманни сисĕнет. Пурин çурчĕ те кантур пек мар иккен, чухăнсем те пур:

Йал вĕçĕнче, тукасра
Пĕчĕкçеççĕ пӳрт ларат,—

тесе çырнă Сетнер çурчĕ çинчен. Поемăн тĕп шанăрĕ Михетерпе Сетнер хушшинче тăрат. Михетер йалти кулак, вăл хăйĕн мулĕ çинчен йепле мухтанат:

„Михетере мӗн ҫитмен?
Мӗнӗм ҫук-ши ҫуртӑмра?
Кӗмӗл тевкӗ, тӗртнӗ пир
Сахал шим мӗн ҫӳпҫемре?
Ҫу, сӗт-турӑх, сӑра-пыл
Тулли мар-и нӳхрепре?“
Чӑн сӑмахӑн суйи ҫук:
Михетерӗн мӗн ҫитмест.
Пӗтӗм йалта пӗр пуйан,
Ӑна никам ҫитеймест.
Унӑн ҫурчӗ хула пек.
Кӗрсен витӗр тухма ҫук.
Хуралтисен тӑрриве
Чӑх-чӗп вӗҫсе ҫитес ҫук.
Карташ тулли йапала
Купаланса выртаҫҫӗ,
Кӗлет тулли тыррисем
Тӑкӑнас пек тӑраҫҫӗ.
Урхамах пек лашисем
Утӑ-сӗлӗ ҫийеҫҫӗ,
Унӑн выљӑх-чӗрлӗхсем
Пичӗке пек ҫӳреҫҫӗ.

Михетерӗн пӗтӗм хӑвачӗ—мул. Вӑл ҫавӑнпа вӑйлӑ.
Сетнер йалти чухӑн, унан пӗтӗм хӑвачӗ акӑ ҫаксенче тӑрат:

Чипер ача Сетнерӗн
Урхамах пек лаши пур,
Ватӑ карчӑк амӗш пур,
Вӗри йунлӑ чӗри пур,
Икӗ вӑйлӑ алли пур,
Тӑшман пуҫне пӗтерме
Вӗри вут пек ҫилли пур.

Ҫапла ӗнтӗ Михетерӗн мулӗ пур, Сетнерӗн икӗ вӑйлӑ алли пур. Иванов йалти кулаксемпе чухӑнсене курат, анчах вӑл йалти клас кӗрешӳне курмаст, паллах, ӑна ҫул кӑтартса йе татса парасси ҫинчен каламали те ҫук. Михетер хӑйӗн мулне чухӑнсеве експлоатацилесе пухни те курӑнаймаст. Сетнерӗн тӗп тӑшманӗ—мул. Мула пӗтермесӗр тӑшмана пӗтерме ҫук. Сетнер мула хирӗҫ аллине ҫӗклеймест, ҫавӑнпа вӑл имперкке пек курӑнат. Вӑл мула хирӗҫ кӗрешме те пултараймаст, мӗншӗн тесен Михетер аҫтан, мӗнле меслетпе пуйса кайнине ӑнланса илеймест. „Нарспи“ геройӗсем тӗнчере пӗр йапала урлӑ каҫайманҫҫӗ, вӑл йапала—„турӑ ҫырса хӑварни“. Пурте тӗнчере „турӑ ҫырнӑ“ тӑрах пурӑнаҫҫӗ, ҫавӑнпах Михетер пуйан, Сетнер чухӑн.

Ҫамрӑк пуҫӑм пӗтмӗччӗ,
Мулам ҫукки пӗтерчӗ,
Вал та пулин йурӗччӗ,
Ҫын ухмаххи пӗтерчӗ,
Ҫын ухмаххи йурӗччӗ,
Усал тӑшман тупӑнчӗ,
Усал тӑшман пӗтӗччӗ,
Турӑ ҫырни курӑнчӗ.—

тесе йурлакан Сетнер хайар кӗрешӗве хутшӑнма пултараймаст.

Поема сарлакан, анлӑн пымаст, „тура ҫырнинчен“ тухайман етемсем кашни хӑй тӗллӗн, пӗччен кӗрешеҫҫӗ. Нарспи—хӑйула чӑваш хӗрӗ, хӑйӗн хӑватне кӑтартат, анчах вӑл каллех пӗччен кӗрмешет, ватӑ упӑшкине—Тӑхтамана наркӑмӑш парса вӗлерет. Тахтамана ҫапла вӗлерни—Нарспи кӗрешӳре тӳрӗ ҫул тупайманнине, кӗрешӳн аслӑрах ҫулӗ ҫине тухайманнине кӑтартат.

Иванов хӑйӗн произведенинче хӗрарӑм правасӑр пулнӑ иккенне, тӗнчере мул пурне те илме пултарнине хирӗҫ тухат. Ҫаксем пӗтӗмпе буржуалӑ-демократи револјуци кӑларса тӑракан ыйтусем пулса тӑраҫҫӗ. Иванов йалти клас кӗрешӳне туйса илеймен.

Поэмăн тĕп паттăрĕ—Нарспи хĕрарăма укçапа сутса йанине хирĕç тăрат. Нарспи Михетере хирĕç çапла каласа ÿпкелет:

Мĕншĕн çапла ху хĕрне
Парса йатăн кашкăра?
Саншăн çав пур ырăлăх
Мĕн пурĕ те укçара.

Вăл вахăтра ку ыйту питĕ çивĕчĕ ыйрăнта тăнă. укçа тыткăнĕнчен тухма тăрăшнă Нарспи сăмахĕсем револьуцилĕ, малала чĕнекен шухăш-ĕмĕтсем пулнă. Пурăнăçра чура пулса тăракан хĕрарăм çын ыйрăнĕнче шутланмании, ăна „çÿçĕ вăрăм та ăсĕ кĕске“ тесе хисеплени вăл вăхăтра саккунлă пулса, пысăк ыйрăн йышăнса тăнă. „Хĕр йĕрринче“:

Пăйахамçăм, пăйахам,
Хуçа тума илтĕн пулсан,
Тĕпел сыппа мана йар,
Хăрхăм тума илтĕн пулсан,
Алăк сыппа мана пар.—

тесе йурланă.

Нарспи тискер чăваш йалĕнче лайăх çемйе тăвассишĕн кĕрешет, увăн ку кĕрешÿри ĕмĕчĕ çакă:

Тату, ырă килĕшсе
Иккĕш пĕрле пурăнсан,
Сĕр хут ытла телейлĕ
Йурлă çын та пуйанран.

Нарспи телейлĕ çемйепе пурăнасшăн суват, анчах мулпа укçа увăн çулĕ çинче чарса тăраççĕ.

Поэмă хăрушă „тăватă вилепе“ пĕтет Вăл урăхла пĕтме те пултарайман, мĕншĕн тесен „турă çырни“ тăрăх пыракансем мула çĕнтерме чăннипех аслă кĕрешÿ çулĕ çине тухайман. Иванов хăй те класлă кĕрешĕве ăнланса илеймен ĕнтĕ.

Йулашкинчен хирĕçÿсем пĕтеççĕ. Сетнерĕ, Михетере вăрăсенчен упраса хăвараснăн пулса, вилет. Нарспи, пĕччен йулвăскер, Кантăр варне кайса çакăнат.

Иванов поэмăна çапла пĕтерни патша саманинчи йăвăрлăха кăтартат.

Кăçал мартăн 26-мешĕнче К. В. Иванов вилнĕренпе 20 çул тултарчĕ. Çав майпа увăн пултарулăх çулне тепĕр хут аса илтĕмĕр.

Аслă Октабĕр револьуци тивлечĕпе çуралнă çĕнĕ самана ĕлĕкхи саманара, хайар патша саманин пусмăрĕнче ĕçленĕ писатĕлсемпе поэтсен пултарулăхне, вĕсен произведенисенчи чи лайăх ахахсене хаклат. Елĕкхи саманара ĕçленĕ К. В. Иванов произведенисенче, çитменлĕхсемпе йунашарах. пирĕншĕн чăннипех хаклă йенсем пур. Вĕсемпе пирĕн тивĕçлĕ таран усă курмала.

*Д. ДАНИЛĂВ.*

# „НАРСПИ“.[1]

Октабĕр революцичченхи чăваш литератури çинчен калаçнă чух пирĕн вулакан чи малтан „Нарспийе“ тата „Арçурийе“ аса илет, вĕсене паллă произведенисем шутĕнче хисеплесе тăрат, вĕсене йуратат.

Халĕхи вулакан çак произведенисене йуратни мĕнрен килет-ши? Хăшĕ-пĕрисем çапла калаççĕ: „Нарспипе“ „Арçурийе“ пурте ăнланма пултаракан, питĕ илемлĕ, таса чĕлхепе çырнă, теççĕ, çак произведенисене çавăнпа йуратаççĕ, теççĕ. Çапла калани́нче тĕрĕсси пурах ĕнтĕ. Анчах çак произведенисене рабочисем, колхозниксем, хĕрлĕармейцăсем, студентсем, вĕренекен çамрăксем йуратса вулани „Нарспипе“ „Арçурийе“ питĕ илемлĕ чĕлхепе çырнинчен çех килмест.

„Арçурийе“ вулависем çак произведенине кулăшла йе култармала çырнине лайăх астăваççĕ. Мĕнрен, камран кулат-ха „Арçурийе“ çыракан М Феодăрăв? Мĕнрен тата камран култаратха вăл вулакансене? Тĕрлĕ турăсене ĕненсе, вĕсенчен хăраса пурăннинчен кулат М. Феодăрăв. „Арçурире“ турăсем камшăн хăрушшине, вĕсем каман пуç-тăнне, кама хĕсĕрлесе, пусса тăнине аванах кăтартнă. Çурчĕ йухăннă, çапах та хăйĕн „тăван“ йалне пăрахса кайма пултараймаи, анкарти хыçне те сехĕрленмесĕр тухма пултарайман, тĕп-тĕттĕм, чухăн хресчен Хĕветĕр—акă кам вăл тĕрлĕрен турăсенчен хĕн-хур тӳссе пурăнакан. Çав Хĕветĕр пек чухăнсемех патша хуçи кулавайсене, вăл вăхăтри мĕн пур тискерлĕхе тӳсеймесĕр хутаç çакса ыйткалама тухса кайнине те астутарат М. Феодăрăв. Турăсемпе патша пусмăрлăхне астутарса (ăна анлă, тарăн кăтартайман пулин те), çав пусмăрлăхран хăраса, чĕтресе пурăннинчен кулса, М. Феодăрăв вулакан кăмăлне, унăн ăс-тăнне çав асăннă пусмăрлăха хирĕç çавăрма шутлани паллах. Çак шухăш, çак ĕмĕт—„Арçури“ произведенийĕн тĕп шухăшĕ пулса тăрат.

„Нарспи“ автăрĕ К. В. Иванов хăйĕн поеминче хĕрарăм чуралăхне хирĕç тăрат. Хĕрипăраç ашшĕ-амăшĕ ăсĕпе мар—хăй ăсĕпе, хăйне валĕçи мăшăр ашшĕ-амăшĕ ирĕксĕрленипе мар—хăйĕн чĕри саввă тăрăх суйласа туптăр; йуратăва авалхи йĕркесен сăнчăрĕнчен хăтарма тивĕç!—акă çак шухăшсене илемлĕн сăнласа кăтартнă К. В. Иванов хăйĕн „Нарспийĕнче“. Автăр, упăшки хăйĕн арăмне (Тăхтаман Нарспийе) мĕнле хĕнесе, асаплантарса пурăннине кăтартса, каллех хĕрарăм ирĕклĕхĕшĕнех тăнă.

Кунсăр пуçне К. В. Иванов: чухăнсем—çынах, вĕсем пуйансенчен мулĕ çуккипе кăна уйрăм тăраççĕ, вĕсен телейсĕрлĕхĕ—

---

[1] Уйрăм кĕнекен тухнă „Нарспи“ поемă умсăмахĕ.

вĕсен çук пурнăçĕнче кăна, тесшĕн пулнă. Çапла ĕнтĕ автăр етемсем хушшинче „танлăх“ çукки мĕнрен килнине те тавçăрса илнĕ. Анчах вăл чухăн хресченсен пурнăçне çийелтен кăна пĕлнĕ (тĕпчесе пĕлмех те тăрăшман пулас). Вăл чухăнсемпе пуйансем пĕрисем теприсемшĕн хайар тăшман иккенне, вĕсен танмарлăхĕ—пĕтĕм патша йĕрки, çĕрулпучĕсемпе капиталиссем çав танмарлăха сыхласа тăнинчен килнине ăнланса илнине ни „Нарспире“, ни унăн ытти произведенийĕсенче те курма çук. Ытах вăл çав хаљ калавă чăнлăха ăнланса илсе, хăйĕн „Нарспине“ çав чăнлăха астуса çырнă пулсан, паллах, „Нарспи“ урăхларах произведени пулса тухатчĕ-тĕр. Халĕ епĕр вулакан „Нарспире“ унăн автăрĕ етемсем хушшинчи тансăрлăха пĕтерес тĕрĕс çула, хĕрарăм чуралăхне пĕтерес çула тупайманнине витĕрех куратпăр. Çав çула тупайман пирки К. Ивановăн Нарспийĕ, пĕччен, хай тĕллĕн кив йăласене хирĕç кĕрешме пикеннĕскер, кĕрешӳре çийеле тухаймаст

Çапла ĕнтĕ, хĕрарăм чуралăхне, етемсем хушшинчи тансăрлăха хирĕç, çын ăсхакăлĕ, унăн кăмăлĕ, чĕри сисĕмĕсен ирĕклĕхĕшĕн тăнă поет хăйĕн çак шухăшĕсене, ĕмĕчĕсене тĕрĕс татса калайман хăйĕн „Нарспийĕнче“. Ытларах та: поемăра çынсем хушшинчи ĕçсем, çынсен пурнăçĕ йĕрки „турă çырнинчен“ килет тенĕ шухăш та вăйлă палăрса тăрат. Апла пулсан сийенлĕ произведени мар-ши „Нарспи“? Тен, ăна пичетлесе кăларни, ăна хаљхи вулакана сĕнни тăшманла ĕç пулса тамаст-ши? Тен, вулакансем „Нарспийе“ вулама тăрăшнине хирĕç кĕрешӳ пуçласа йамала мар-ши?

„Арçурийе“ кĕскен пăхса тухнă хыççăн, вăл произведенире „Нарспири“ пек хире-хирĕç тăракан шухăшсем çуккине куртăмăр. „Арçурири“ шухăшсем — пурте вулакана малала туртакан шухăшсем. „Нарспи“ ку тĕлĕшрен, „Арçури“ пек, пĕр хирĕçлĕхсĕр произведени мар. „Нарспире“ малала туртакан шухăшсемпе пĕрлех реакциле, вулакансене кайала туртакан шухăшсем те пур Пирĕн вулакансене çав кайала, вулаканăн ăс-тăнне кивĕ пурнăç йулашкийĕсем йеннеле туртакан реакциле шухăшсене лайăх кăтартса памала „Нарспири“ малала туртакан шухăшсене кайала туртакан шухăшсенчен уйăрса илме пулăшмала.

„Нарспи“ автăрĕ етеме мĕн пур тĕнче хуçи вырăнне шутланă çĕртех, етемĕн мĕн пур пурнăçĕ „турă çырнинчен“ килет тени; кивĕ, тискер, чуралă пурнăçри ăнланусемпе кĕрешнĕ вăхăтрах йумăç сăмахĕсем тĕрĕсе тухнă пек кăтартни; чухăнсемпе пуйансем хушшинчи уйăрăмлăха курса тăнă çĕртех — йалти çынсене пурне те пĕр халăх пек туса кăтартни — „Нарспири“ çак хирĕçлĕхсене лайăх курса тăмала. Етем пурнăçĕ „турă çырнипе“ пулса пырат тени, йумăç сăмахĕсем тĕрĕсе тухнине кăтартни, хресченсене пĕр тĕрлĕ „хура халăх“ пек кăтартни — çаксем пурте мĕн пур хаљхи пурнăçа çех мар, поемăна çырнă вăхăтри пурнăçа та хирĕç тăна шухăшсем. Хаљхи вăхăтра вăл шухăшсене социалисăм тăшманĕсем — çапса çĕмĕрнĕ кулаксен йулашкийĕсем, пупсемпе йумăçсем, тĕрлĕрен ессерла-националисла шухăшлама пăрахман етемсем кана хапăл туса йышăнма пултараççĕ. Пирĕн

хаҘхи вулакан — колхозник, рабочи, студент, вӗренекен ҫамрӑк— „Нарспийе" хаҘ кӑтартнӑ реакциле шухӑшсемшӗн мар, „Нарспи" автӑрӗ хӑйӗн произведенинче хӑй пурӑннӑ вӑхӑтри чуралӑхӑн хӑшпӗр йенӗсене хирӗҫ тухса (хӑй вӑхӑчӗшӗн чылайах паттӑр) сӑмах каланӑшӑн, етеме пӗтӗм тӗнче хуҫи вырӑнне шутласа, етем вӑй-хӑватне хӑпартнишӗн йуратса вулат. „Нарспи", ҫак шухӑшсене пула, хӑй вӑхӑчӗшӗн, пурнӑҫ йухӑмне, историне хирӗҫ тӑнӑ произведени мар, истори йухӑмӗпе килӗшсе тӑракан, истори чуппине майлӑ произведени пулнӑ. Ҫавӑнпах пайан кун та епӗр ӑна паха произведенисен шутӗнче хисеплесе тӑратпӑр.

Хӑшпӗр литератӑрсем: „Нарспи", вӑл — ир ҫуркунне сарӑла пуҫланӑ илемлӗ, чуна хӗпӗртеттерекен чечек йевӗрлӗ, теҫҫӗ. Анчах „Нарспи", „Арҫури" пекех, мӗнле „ҫур кунӗсенче" сарӑлма пуҫланӑ чечек иккенне манма йурамаст. „Нарспипе" „Арҫури" произведенисен тӗп шухӑшӗсем Раҫҫейре буржуалӑ-демократла революци тапхӑрӗпе ҫыхӑнса тӑракан шухӑшсем. Ҫапла ӗнтӗ, „Нарспипе" „Арҫури" ҫав асӑннӑ революцийӗн „ҫур кунӗсенче" сарӑлма пуҫланӑ чечексем иккенне лайӑх астумала. Анчах капла калани те ҫителӗклех пулмӗ. „Нарспийе" 1905—7 ҫулхи революци хыҫҫӑнхи тӗттӗм реакци пуҫланнӑ вӑхӑтра ҫырнине пӗрре те манма йурамаст. Ҫав реакци пуҫланнӑ вӑхӑтра ҫырнӑран та пулӗ, К. Ивановӑн поеминче ҫӳлерех кӑтартнӑ реакциле хура шухӑшсем вырӑн тупнӑ. Ытах „Нарспийе" революциле шухӑшлакан поет ҫырнӑ пулсан, вӑл поет, реакци вӑхӑтӗнче те реакциле шухӑшсен айне пулман пулӗччӗ. Анчах ни К. В. Иванов, ни М. Феодӑрӑв революциле шухӑшлакан поетсем пулман Вӗсен произведенийӗсем тӑрӑх, вӗсене иккӗшне те пулса, сарӑлса ҫитеймен буржуалӑ демократсем темеле. Вӗсем иккӗшӗ те чӑваш либералӗсенчен, чӑваш пупӗсенчен уйӑрӑлсах кайайман. Ҫавӑнпах ӗнтӗ „Нарспи" поемӑ та, ытах ана чечекпе танлаштарсан, пӗтӗмӗшпех сарӑлса ҫитмен чечек йевӗрлӗ. Ҫитменнине вӑл чечекӗн ҫуначӗсем хушшинче хайар тӑм ӳксе хӑртса йанӑ ҫуначӗсем те пур. Вӑл чечеке, ӑна шӑтарса пӑхса ӳстерме тытӑннӑ К. Иванов, хӑй демократ-революционер пулайманскер, хайар ҫанталӑкран хӳтӗлеймен. Поемӑна вуланӑ чух, ӑна шкулсенче вӗреннӗ чух, К. Ивановӑн пултарулӑхӗ ҫинчен каласнӑ чух, вӑл мӗнле вӑхӑтра ҫырнине, ӑна мӗнле шухӑшпа ҫырнине, произведенири хирӗҫлӗхсене лайӑх астума кирлӗ.

Ҫак кӗске умстатйара К. Ивановӑн мӗн пур пысӑк ӑсталӑхӗ ҫинчен чарӑнса тӑма май та ҫук. Тӳрех калас пулат: ку тӗлӗшрен „Нарспийе" епӗр пӗтӗмӗшпе пӗлейместпӗр ха, тӗпчеме те лайӑххӑнах тытӑнайман.

Ӑсталӑх йенчен пӑхсан, „Нарспи", чи малтанах, унӑн автӑрӗ халӑх сӑмахлӑхне питӗ лайӑх пӗлнипе, унпа усӑ курас ӑсталӑхӗпе тӗлӗнтерет. Кӗскен каласан, А. Пушкин поет вырӑс халӑх сӑмахлӑхӗпе мӗнле усӑ курнӑ, К. Иванов та чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗпе усӑ курас тӗлӗшрен ҫав А. Пушкинпа пӗр тӳперех тӑрат, теме пулат. Халӑх сӑмахлахӗнчи мӗн пур „ҫӳп-ҫапа" тасатса, вӑл, М. Феодӑрав хыҫҫӑн, чӑваш литератури чӗлхине аталантарас тӗлӗшрен тата тепӗр утӑм малала тунӑ.

К. Иванов çутçанталăка, çынсене сăнласа кăтартас тĕлĕшрен те питĕ пысăк ăстаçă пулнă. Ытах пĕр-пĕр художник унăн „Нарспийĕнчи“ çынсене хут çине, йе пир çине сăрпа ÿкерес тесен, вăл ку ĕçе пĕр чарăнса тăмасăрах тытăнма пултарĕччĕ.

Йулашкинчен, ытах „Нарспийе“ пĕтĕмĕшпе илсен,—унăн уйрăм йуррисем (пайĕсем) пĕрне теприпчен ниййепле те татса илейми пĕрлешсе тăраççĕ. Произведенири мĕн пур илемлетекен сăмахсем, майсем, мĕн пур сăнсем—пурте пĕри теприпе килĕшсе, майлашса тăраççĕ. Çакă—пысăк ăсталăх ĕнтĕ.

---

Октябĕр революцийĕччен темиçе тĕрлĕ хĕн-хур тÿссе пурăннă чăваш ĕçхалăхĕ, Совет союзĕнчи ытти мĕн пур ĕçхалăхĕпе пĕрле, болшевиксен партийĕ йертсе пынипе пур пенчен те çителĕклĕ, културăлă, пуйан, телейлĕ, хаваслă пурнăçа туса çитерессишĕн кĕрешсе пырат. Октябĕр революцийĕ ĕçхалăхне темиçе ĕмĕр хушши мăшкăллăхра, чуралăхра, выçлăхра, тĕп-тĕттĕмлĕхре тытса усрама пулăшнă йĕркене çапса çĕмĕрчĕ те, мĕн пур ĕçхалăхне ирĕклĕ ĕçлеме, ирĕклĕ вĕренме, ÿссе çитĕнмелле кирлĕ майсем туса пачĕ. Хал ĕнтĕ „Арçурири“ Хĕветĕр пек чухăнсем, колхозсене пула, културăлă, пуйан пурнăçпа пурăнма тытăнаççĕ, пурăнаççĕ те. Вĕсем—колхозра, хамăр хапрăк-савăтсенче йертсе пыракан вырăнта ĕçлеççĕ, вĕсен ачисем—хамăр университетсенче, институтсенче вĕренсе тухса тухтăрсем, инженерсем, нумай вĕреннĕ çынсем пулса тăраççĕ. Пирĕн пур наçран хĕрарăм чуралăхĕн йулашкийĕсем те тухса пĕтсе пыраççĕ ĕнтĕ. Коммуниссен партийĕ вĕрентсе, пăхса ÿстернĕ çынсем—рабочисем, колхозниксем, вĕреннĕ çынсем—чăнахах та мĕн пур çутçанталăк пуçлăхĕ пулса çитес тĕлĕшрен кунран кун малала пыраççĕ. Пирĕн тăван çĕршывăмăрта—мĕн пур Совет союзĕнче—литература, искусства хăватлăн сарăлса ÿссе пырат. Ĕлĕкхи вăхăтра пăч-тĕттĕмре пурăннă чăваш ĕçхалăхĕн хăйĕн писателĕсем, музăкçисем, художникĕсем, артисĕсем ÿсеççĕ, çитĕнеççĕ.

Çак ÿсĕм çулĕ çинче тата паттартарах, хăвăртрах, ăнăçлăрах пырас тесен, ĕлĕкхи културăран, вăл пире мĕн пама пултарнине илсе, хамăр пĕлÿне хăпартса, пуйанлатса ĕçлесе пымала. Ку тĕлĕшрен пире В. И. Ленин вĕрентсе хăварнине, халĕ И. В. Сталин вĕрентсе пынине манма йурамаст.

„Нарспи“—пирĕн писателсен културлăхне, пĕлÿне, ăсталăхне хăпартас тĕлĕшрен хăйĕн пахалăхне халĕ те çухатман-ха. Кунсăр пуçне „Нарспи“ вулакансене кивĕ пурнăçан хăшпĕр йенĕсемпе паллаштарас тĕлĕшрен те, вулакансен илемлĕх сисĕмĕсене ÿстерес, çирĕплетес тĕлĕшрен те паха вырăнта тăрат. Çаксене пурне те астусан, К. Иванов вилнеренпе 20 çул тулнине асăнса, „Нарспи“ поемăна çĕнĕрен пичетлесе кăларни—кирлĕ, вырăнлă ĕç темелле.

---

*УХСАЙ ЙАККĂВĔ.*

# К. В. ИВАНОВĂН ПИЧЕТЛЕНМЕН ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕМ.

„Нарспи“ автăрĕн „Чăваш йумахĕсемпе халлапĕсем“ йатлă кĕнекере пичетленнĕ произведенийĕсемпе М. Лермăнтăв поетăнне вырăсларан куçарнă сăввисемсĕр пуçне, тата пичетленменнисем, çырма тытăннă произведенисем те пур. Усраннă алçырăвĕсем тăрах вĕсене автăр çырса пĕтерни-пĕтерменни паллă мар. К. В. Ивановăн пĕтĕм творчĕствине тĕпчесе хак пама пулăшас майпа, унăн алçырăвĕсене пичетлесе кăларатпăр.

Ку алçырăвĕсенчи материалсемпе паллашнă чухне К. В. Ивановăн, „Нарспи“ поеминчи пекех, лайăх, паха йенĕсемпе пĕрлех йурăхсăр шухăшсем те пурриве асра тытас пулат.

К. В. Иванов „Нарспи“ поемăна йепле çырниве татăклăн каласа пама пултараймастпăр, унăн малтанхи вариантĕсемпе черновикĕсем халĕ те пирĕн алăра çук-ха. Халĕ пичетленекен хăшпĕр сыпăкĕсем тăрăх К. В. Иванов планпа ĕçленине, произведенийĕсене тӳрлетсе, улăштарса çырнине кăтартма пулат.

Константин Васильевич хăй виличченех, вилĕм вырăнĕ çинче те темеле, чăваш литературишĕн çуннă, вăл тем пек пысăк произведенисем çырас тесе, тĕрлĕ материалсем пуçтарнă, чăваш йалисене тĕплĕн тишкернĕ. Вăл 1910-мĕш çулхи хĕлле Кайраклă йалĕнче нумай материал пухнă. Çапах та вăл çырайман, хăйĕн аслă шухăшĕсене, пулас хăватлă произведенийĕсене хăйĕн пуçĕнче усранă, вăл вĕсене хăйĕнпе пĕрлех нӳрлĕ çĕр ăшне пытарнă. Вăл çырайманнин айăпĕ—Иванов талантĕ пулманни, йе часах сӳнсе ларни çинчен каламаст. Вăл айăп—пĕтĕмпех тискер патша самани çине тата миççионерсем çине ӳкет.

К. В. Ивановăн чăн-чăн талантне ун чухне хаклакан пулман, вăл нумайтарах, хытăрах поези тĕлĕшпе ĕçлетĕр тесе, ăна никам те хавхалатман. Чăваш миççионерĕсем ăна хăйсен ĕçне тутарттарасшăн пулнă, чиркӳ кĕнекисем куçарма лартнă. „Нарспи“, „Тимĕр тылă“, „Тăлăх арăм“ произведенисене автăр 1907—8 çулсенче çырнă. Ун чухне вăл 17—18 çулхи ача кăна пулнă. 17 çулхи ача çавăн пек паха „Нарспи“ поемăна çырма пултарнă пулсассăн, çитĕнсе çитнĕ Иванов тата вăйлăрах йапаласем çырма пултарасси пире пĕрре те иккĕлентермест.

Анчах та хăватлă таланта миççионерсем çисе йанă, унăн чунне шĕкĕсем пек кăшланă, ăна „Йевангĕли“ кĕнекине, „Библийĕн“ хăшпĕр пайĕсене те куçарттарнă.

Чăваш миççионерĕсем пысăк поета çапла кăкарса лартнă, вĕсемех ăна çамрăклах çĕре кĕртнĕ.

## I. „ШУЙТТАН ЧУРИ“—ТРАГЕДИ.

К В. Иванов 1907—8-мĕш çулхи хĕлле „Пăртта йăхин историйĕ“ йатлă произведеви çырасшăн пулнă. Вăл А. С. Пушкинăн „Араб Петра Великого“ йевĕр автобиографилĕ произведени пулмала пулнă. К. В. çав вăхăтрах çырма пуçланă пысăк произведени—„Шуйттан чури“ йатлă трагеди татăкĕсем пур[1] „Шуйттан чури“ трагедин тĕп шухăшне—укçа çынна аташтарнине илсен, ĕлĕкхи грексен драматургĕсен (Софокл, Есхил) тата Шекспир сывлăшĕ К. В. Иванова перĕнни сисĕнет Трагеди тĕп геройĕ—укçа. Пĕр тăван етемсем—пиччĕшĕпе шăлнĕ. Шăлнĕ вăрçăра аманат, унăн укçа йенчĕкĕ хăйĕн çумĕнче пулнă. Шуйттан хĕтĕртнипе, пиччĕшĕ шăлнĕне персе вĕлерет те, вăрçăран пăрахса тарат, унăн тĕп шухăшĕ çапла:

Текех канăçсăр çынсем
Вăрçăсенче çўретчĕр.
Мана тата мĕн ситмен?
Манăн акă пурте пур!

Ылттăн, кĕмĕл манăн вăл,
Йалти пуйав епĕ вăл.
Укçа пулсан, мул та пур.
Унтан урăх мĕн кирлĕ?

Çынсем укçашăн çунни пире „Нарспи“ поемă тăрăх та паллă. Михетер Нарспийе укçашăн сутат. Иванован ку произведенийĕ тăрăх етем хăйĕн чунне укçашăн шуйттана сутат. Çав вăхăтрах етеме хирĕç пирĕшти тухат, унăнне ыйтат. Етем ăнсăр пулат. Шуйттанпа пирĕшти тĕл пулаççĕ.

План тăрăх трагеди çапла пулмала: етем вăйсăрланса пырат. Вилет те, унăн чунне шуйттан илсе кайат.

Трагеди питĕ пысăк шухăшпа, грексен авалхи трагедийĕ пек сценăсемлĕ пулмала пулни курăнсах тăрат. Малтанхи пайĕнче шуйттанпа пирĕшти тĕл пулни темле пулĕччĕ, алçырăвĕнче вăл валлă мар. План тăрăх, диалăглă трагеди пулмала пек, анчах Иванов кайран хăйĕн шухăшне улăштарнă пулĕ, пйесă формине пăрахăçа кăларса трагедилĕ поемă çырма тытăннă пек туйăнат.

„Шуйттан чури“ трагедине поемă туса çырни М. Й. Лермăнтăвăн „Демăн“ поемине те асăнтарат, унта та Демăнпа пирĕшти тĕл пулса етем чунĕшĕн тавлашаççĕ, пирĕшти Демăна çĕнте-

---

[1] Хăшпĕр йулташсем (Й. Захарăв, Г. Комиссарăв, М. Çироткин) ку произведени пирки йăнăшаççĕ пулас, вĕсем пурте „Шуйттан çури“ йатлă комедийе 1910—11-мĕш çулхи хĕлле çырма пуçланă, теççĕ. Ку шухăш тĕрĕс мар, йачĕ те „Шуйттан çури“ йатлă мар, „Шуйттан чури“, тепĕр йенчен—вăл комеди мар, трагеди пулмала пулнă. К. В. Иванован тăван шăлнĕсемпе йăмăкĕ (Квинтилиан, Петĕр тата Праски) калана тăрăх, „Шуйттан чури“ йатлă трагедине çырса пĕтернĕ пулат. Вăл произведенисĕр пуçне, К. В. Иванован пичетленмен произведенисем нумай пулнă. Чĕмпĕр шкулĕ 40 çул тулнине асăнса йубилей тунă теле вăл пысăк сăвă çырнă иккен. Анчах вăл произведенисем 1919-мĕш çулта граждан вăрçи вăхăтĕнче пĕр çар чаçĕ аллине лекнĕ. Çав произведенисем пĕр пысăк папкăра пулнă. Малашне Иванован произведенисене пухнă чух Ĕпхў, Белебей тата Пушкăрт республикинчи архивсене пăхас пулат.

Пирĕн умра тата тепĕр задачă тăрат—Иванов çырăвĕсене пухасси. Унпа сыхăну тытса пурăннă çынсем, тата унăн йулташĕсем пире пулăшĕç тесе шанатпăр, вĕсем хăйсен аллинчи материалĕсене литература организацийĕ аллине парĕç. *У. И.*

реймест, Çапла вара „Демӑн“ йатлӑ поемӑ шӑрши те сапнӑ теме пулат.

К. В. Иванов хӑйӗн планӗнче „Халӑх калавне улӑштарнӑ“ тесе çырат, анчах чӑваш мифологинче. халапӗсемпе йумахӗсенче кун пек сарлака темӑлӑ йапаласем пуррине татсах калама çук пек. Г. Т. Тимофейӑвӑн „Тӑхӑр йал“ [1] кӗнекинче укçана ылханакан халӑх сӑввисем пур, анчах унта кун пек анлӑ çӳжетлӑ темӑсем çук. Çавӑнпа К. В. Иванов вӑл çӳжета халӑх калавӗнчен илнӗ тени тӗрӗсех те пулмаст, йе илнӗ пулсассӑн та нумай урӑхлатнӑ, тарӑнлатнӑ. „Шуйттан чури“ çӳжечӗ поет пуçӗнче çуралнӑ фантази тени тӗрӗсрех пулат пулӗ.

К. В. Иванов çырвӑ план çапла пулнӑ:

*Пӗлӗт саншӑн тимӗр пулӗ,*
*Тӗнче саншӑн тамӑк пулӗ,*
*Санӑн кӗллӳ тӗтӗм пулӗ.*

## ТРАГЕДИЯ В ТРЕХ ДЕЙСТВИЯХ.

ПЕРЕДЕЛКА „ИЗ НАРОДНОГО РАССКАЗА“.

### ДЕЙСТВИЕ ПЕРВОЕ.

Çеçен хир. Йуман. Ун кутӗнчех пысӑк чул выртат. Вӑрçӑ кӗрлесе иртсе кайат. Аманнӑ чӑваш. Икӗ йулташ. Укçа йенчӗкӗ. Шуйттан: „Ил, ил укçине“. „Сывӑ пул“,—аманнине вӗлерет. Савӑнӑç йурри. Ӑн килсе кӗрет. Сӑмсине çапса çӗмӗрет. Ассӑр йурӑ. „Укӗн!“ тенӗ сасӑ. Ӑнсӑр пулат. Çил тухат. Аçа çапат. Шуйттанпа пирӗшти.

*Ч а р ш а в.*

### ДЕЙСТВИЕ ВТОРОЕ.

Пирӗштисем шӑтӑк тавра. Усал çынна ылханаççӗ. Вӑрçӑра вилнисене пиллесе йурлаççӗ. Унтан вӗсен чунӗсене илеççӗ те, кайаççӗ. Пӗччен çын. Шуйттан йурри. ахӑлтатни. Ӑсатмали йурӑ. Тӑпра йара пуçлаççӗ Аçа çапат, шуйттан ахӑлтатат. Çынсем тарса пӗтеççӗ. Пирӗштисем анса йурласа шӑтӑка тултарма тытӑнаççӗ.

*Ч а р ш а в.*

### ДЕЙСТВИЕ ТРЕТЬЕ.

Килте. Пӗр [2] çул иртсен.

Пӳртре. Амӑшӗпе ачи. Амӑшӗн хуйхӑлӑ йурри. Ашшӗн хуйхӑлӑ..... [3] килсе кӗрет. Пурте хӑраççӗ. Шуйттан! Шуйттан! Мӑйракалӑ! Мӑйракалӑ! Амӑшне те, ачине те вӗлерет. Çӳлте аслати кӗрлет. Пирӗшти чӳрече витӗр: „Мӗскӗн етем“. Пирӗшти йурри. Ку кӗтесре хӗсӗнсе ларнӑ. Пирӗшти. Тепӗр ачи килсе кӗрет. Шуйттан! Кӑна та вӗлерет. Аçа çапат, чӳречерен шуйттан кулса йарат те кунӑн чунне илсе кайат.

*Ч а р ш а в.*

Малтанах:

„Пӗлӗт саншӑн тимӗр пулӗ,
Тӗнче саншӑн тамӑк пулӗ,
Санӑн кӗллӳ тӗтӗм пулӗ“.—

тесе çырни епиграф вырӑнне пулмала пулнӑ. Вӑл епиграфа Иванов хӑй çырнӑ-и, ӑçтан та пулсан урӑх çӗртен илнӗ-и, халӗ

[1] „Тӑхӑр йал“ кӗнекене 1903-мӗш çулта çырнӑ. Вӑл пичетленмен, халӗ Шупашкарти аслӑлӑх библиотекинче усранат.

[2] Малтан „Вунӑ çул иртсен“ тесе çырнӑ та, хуратнӑ.

[3] Сӑмахне уйӑрма çук.

кӑтартса пама ҫук. Трагедине 1907-мӗш ҫул ҫырма пуҫланӑ пулас, мӗншӗн тесен алҫырӑвӗнчи йулашкин „Выҫӑ аптранӑскерсем“ йатлӑ ҫӑвӑ хыҫне „1907 ҫул, декабӗрӗн 30-мӗшӗ“ тесе ҫырнӑ.

План хыҫҫӑн трагедин ҫырнӑ татӑкӗсем кайаҫҫӗ. Чи малтанах 6-мӗш пайӗнчен пуҫланат. Ку алҫырӑвӗсӗр пуҫне автӑрӑн ытти алҫырӑвӗсем пулнӑ пулмала, мӗншӗн тесен, малтанхи пайӗсене ҫырмасӑрах пуҫлама пултараймаш пуҫ Тепӗр йенчен пӑхсан, ку шухӑш тен, тӗрӗсех те мар-тӑр. Н. Шупуҫҫынни поет каланӑ тӑрӑх, „Нарспи“ поемӑна та ҫырма вӑта ҫӗртен „Туй“ йатлӑ пайӗнчен пуҫланӑ, тет.

Пирӗн аларн алҫырӑвӗ иккӗмӗш хут ҫырни пулас, малтан ҫырни (черновик) пулнӑ пуҫ, ҫырнӑ чухне хӑшпӗр вырӑнсенче кӑна хуратнӑ.

Улттамӗш пайра вӑрҫӑ хирӗнче аманнӑ шӑлнӗне вӗлернӗ пиччӗшӗ, укҫа илнӗскер, килне таврӑнат. Ҫавӑнтах тата тепӗр вариант пур, унтан шӑлнӗне вӗлернине кӑтартнӑ. Алҫырӑвӗнче каллех ҫиччӗмӗшпе саккӑрмӗш пайӗсем ҫук

Малала автӑр ҫырнӑ пекех йӗркерен пичетлӗпӗр.

Мана мӗн пит кирлӗччӗ?
Укҫа, укҫа —акӑ вӑл!
Укҫа пулсан мул та пур,
Унтан урах мӗн кирлӗ?
Ылттӑн-кӗмӗл манӑн вал.
Йалти пуйан епӗ вӑл!
Кайӑп киле ыранах,
Ҫитӗп киле каҫченех,
Ылттӑн-кӗмӗл ҫурт лартӑп,
Выҫӑх тытӑп пинӗпе.

Ирттерӗп ҫав пурнӑҫа
Саванса ҫеҫ, кулса ҫеҫ.
Текех канӑҫсӑр ҫынсем [1]
Варҫӑсенче ҫӳретчӗр.
Мана тата мӗн ҫитмен?
Манӑн акӑ пурте пур.
Ылттӑн, кӗмӗл манӑн вӑл,
Йалти пуйан епӗ вӑл,
Укҫа пулсан мул та пур,
Унтан урӑх мӗн кирлӗ!

ВАРИАНТ.

Мӗншӗн кунта кӑлӑх
Манӑн пуҫа ҫухатас?
Етем ҫапла шухӑшлат [2]
Хӑй ашӗнче савӑнса,
Ҫӳлтен, ҫӳлтен ҫавӑнтах
Темле сасӑ илтӗнет:

— Мӗскӗн етем, мӗн турӑн?
Куҫна уҫса пӑх, мӗскӗн,
Ухмах ӗҫу ҫинеле.

---

Чул ҫумӗнче пӗр етем
Пуҫне ҫӗклет йӑнӑшса.

---

Апла пулсан, кай кунтан,
Епӗ сана тӑван мар!
Тӑшман ҫынна нихҫан та
Памап тура панине.
— Вӗлеретӗп! Парсан пар!
— Вӗлер чуну ҫитейсен.
Ватӑ йуман хыҫӗнчен
Шуйттан татах хӗтӗртет:

— Ил укҫине, ил туртса.
Ылттӑн-кӗмӗл ҫап-ҫутӑ
Хутаҫ тулли йалтӑрат,
Ил укҫине—вӑл санӑн!
Ухмах ҫыннӑн куҫӗсем
Йалтӑр-йалтӑр ҫунаҫҫӗ.
Хутаҫ ҫине пӑхнӑ та,
Хутаҫ патне туртӑнат.

---

[1] „Канӑҫсӑр ҫынсем“ тени вырӑнне „Тӗрлӗ ухмахсем“ тесе ҫырнӑ та, хуратнӑ.

[2] Малтан „шухӑшлат“ тенӗ сӑмах вырӑнне „гакмаклат“ тесе ҫырнӑ пулнӑ, кайран хуратнӑ.

[3] Ҫӳлтен илтӗнекен сасӑсем—пирӗшти сассисем. Пирӗшти ӳкӗте кӗме ыйтат, шуйттан хӗтӗртнипе шӑлнӗне вӗлерсе айӑпа кӗнӗ ҫынна ӳкӗнме хушат. *У. Й.*

Анчах шăлнĕ укçине
Хăйĕн айне хурса ларнă,
Ик аллинче ик çĕçĕ,
Йăлтăртатса тăраççĕ.
— Вилсен вилĕп, чĕрĕле
Памăп турă парнине.
Вата йуман хысĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртет:
— Ил, ил, ухмах, мĕн тата
Каллĕ-маллĕ пусатăн?
Акă тăр тăр чĕтресе
Сăвă çӳле çĕклевчĕ,
Анчах чунĕ çитмесĕр
Татах айа ла анчĕ.

Вата йуман хысĕнчен
Шуйттан.. .. хĕтĕртрĕ,
Сăвă татах çӳлеле
Йар улăхса кайрĕ те,
Пиччĕш хăйĕн шăлнĕве
Чиксе хучĕ укçашăн.
Çӳлтен кĕр кĕр аслати
Кĕрлет вĕркет хайаррăн.
Хура пĕлĕт куç харши
Тата хытă пĕрĕннĕ.
Ухмах етем шăлнĕнĕ
Сăвăпала чиксенех
Илчĕ укçа хутаçне,[1]
Ташша йачĕ савăнса
Шуйттан йуман хыçĕнчен
Сиксе тухрĕ ахăрса;
Етем хыççăн шуйттан та
Ташша йачĕ савăнса.
Ухмах çынна курăнми
Йе ыталат аллипе,
Йе чуптăват тутипе,
„Шуйттан чури" тийеçе
Етем укçа хутаçне
Хăрах алăпа йатнă.
Тепĕр аллинчи хĕçпе
Шаккат укçа хутаçне,
Хутаç ăшĕнчи укçи
Шанкăртатат илĕртсе,
Ылттăн-кĕмĕл кĕввипе
Çын такмаклат ташласа.

Тăпра çине çавăнтах
Кайрĕ етем йăванса,
Ăвĕ тухса кайнипе
Ури анчĕ хуçăлса.
Сасартăках çил тухат,
Тухса кĕрлесе кайат,
Пĕтĕм çĕре кисретсе
Аçа шартлатса йарат.

Шуйттан йуман хыçĕнче
Ахăлтатат хăрушăн,
Ансăр етем патнеле
Аллисемпе вăл тăсат.
Вата йуман хыçĕнчех
Ахăлтатни илтĕнет:
Шуйттан çăварне карса
Ахăлтатат савăнса.
Ансăр етем вилнĕ пек,
Кăвакарса кайнă хăй,
Шуйттан ăна пăхат те,
Ахăлтатат хăрушăн
Тĕнче тĕпне хускатса
Çут тĕнчене ишес пек,
Аслă тăват кĕтеслĕ
Çут çанталăка илес пек.

Чул сумĕнче пĕр етем
Ларат хытă йăнăшса.

Тĕттĕмленчĕ, каç пулчĕ,
Çил-тăвăл та лăпланчĕ.
Пĕчĕк ушкăн çар килет
Вилнисене пуçтарма.
Вилнисене пуçтарчĕç
Шăтăк чавма тытăнчĕç.
Сăвăсемпе хĕçсемпе
Аслă шăтăк тăваççĕ.
Улăп-йуман айĕнче
Аслă чулăн сумĕнче
Вилнисене йурăпа
Шăтăк ăшне антарчĕç,
Еречĕпе вырттарса
Виççĕ ӳксе пуççапрĕç
Ури çине тăчĕç те
Виçĕ хутчен пуç тайрĕç,
Тăпра ыран йарăпăр,
Чӳкне ыран чӳклĕпĕр,
Тесен вĕсем уттарчĕç,
Тĕттĕм çĕрте çухалчĕç.

[1] Скобка ăшĕнче „укçа патне сикрĕ те" тесе çырнă.

„Шуйттан чури“ алçырăвĕ çакăнта петет. Вулакан, маларах пичетленĕ плана пăхсан, уççăн курать ĕнтĕ—пĕрремĕш действи тата малала тăсăлмала пулнă. Вăрçă хирĕнче Шуйттанпа Пирĕштн тĕл пулни тата Пирĕшти çынна ӳкĕнме хушни çинчен çырнисем питĕрех те вăйлă вырăнсем трагедин çырнă пайĕсенче пулманни, трагедин тĕп шăнăрне татса хăварни, малтанхи действинчи ĕçсем чи çӳлĕ пăнчăра йепле пуласси çинчен калама çук. Епĕр çакна çех калама пултаратпăр: Трагеди пĕрремĕш действийĕ кăна 10 пайран иртнĕ, йе 20 пайа та çитĕччĕ. Пĕтĕмпе трагедире 3 действи. Çапла ĕнтĕ авалхи литература ӳкерчĕкĕпе, халăх калавĕнчи тешмĕшлĕх тăрăх пуçлана трагеди питĕ пысăка каймала пулнă, урăхла каласан, вăл мистери йевĕр пулĕччĕ. [1]

## II. ЙУМАХСЕМПЕ ХАЛАПСЕМ.

Пирĕн алăри пĕчĕк тетрать тĕлĕнтерет, вăл „Шуйттан чури“ трагедипе пуçланнăскер, малала тата ытти йапаласем çине куçать: унта кĕске пĕчĕк сăвăсем, унтах чăваш халапĕсене çырма пуçлани, унтах Пăрта йăхĕн историне çырма шухăшлани. Ун чухне вĕт автăр 17 çул тултарнă. Вăл хăйĕн çулĕпе ача пулсан та, пултарулăхĕпе темиçе çул хушши ĕçленĕ пысăк поет пек ĕçленĕ. Унăн çавăн чухнехи пултарулăхĕн сарлака диапозонĕ тĕленмеле: вăл Лермăнтăвăн сăввисене куçарать, романтикла мистери йевĕр „Шуйттан чури“ çырать, „Нарспи“, кусемсĕр пуçне чăваш халапĕсене улăштарса çырать. Çакă статйана çырнă майах Иванов халапĕсемпе йумахĕсем çинчен пĕр-икĕ сăмах каласа хăварас килет.

Вăл халапсем çырнă чухне А. С. Пушкин пек ĕçленĕ. Хăй вăхăтĕнче Пушкин халапĕсем тĕлĕшпе халăх чĕлхине тиркесе мăкăртатакан писатĕлсем „Пушкин хресчен сăхманĕ тăхăнса çӳрет“ тесе виртлешнĕ. Пушкин халăх (хресчен) чĕлхинчи ахахсене, лайăх сăмахсене суйлама пĕлнĕ, вăл халăх халапĕсемпе йумахĕсене те хăйĕн пек улăштарса çырнă. К. В. Иванов та çаплах чăваш халапĕсемпе йумахĕсене ахаль çех çырса илмен, хăйĕн пултарулăхĕн али витĕр кăларнă, урăхла каласан, вăл халапсен темисене хăйне пăхăнтарнă, вĕсене хăй пек урăхлатса илемлетнĕ. Халапсене çырасси Ивановшăн „Нарспине“ çырнă чухнехи пекех пысăк пултарулăхлă ĕç пулнă. Ку тĕлĕшпе вăл Пушкинран вĕренни çакăнтан та курăнса тăрать: Пушкин хăйĕн „Сказка о царе Салтане“ тата „Сказка о мертвой царевне и о семи богатырях“ халапĕсен вĕçĕнче çапла çырать:

Я там был; мед, пиво пил—
И усы лишь обмочил.

[1] К. В. Иванов вырăссен М. И. Лермăнтăв поетăн Байрăнла вăйлă çынсене, тăвăллă кăмăла пуç тайнă мистикле философине ырланă. Çавăнпа кунта К. В. Иванов Байрăн произведенисене йуратнă ĕнтĕ. „Шуйттан чури“ трагедине çырнă чухне Байрăнăн „Каин“, „Пĕлĕтпе çĕр“, „Манфред“ мистерийĕсен сывлăшĕ те 17 çулхи Иванова хавхалантарма пултарнă. *У. Й.*

К. В. Иванов та „Тăлăх арăм“ халапне Пушкин пекех пĕтерет:

Еп те вара, хурланса,
Икĕ чува асăнса,
Урхамаха вырттартăм,
Чӳклерĕм те хăвартăм.

Пирĕн алăри тетрат К. В. Иванов 1907-мĕш çулта чăваш халапĕсемпе йумахĕсен циклне çырма хатĕрленнине кăтартат.

Вăл халапсемпе йумахсен планне çапла çырнă:

1. Тимĕр тылă, 2. Тăлăх арăм, 3. Вата вăрман, 4. Хуркайăксем[1], 5. Икĕ хĕр

Ку планра кăтартнисенчен виççĕшне: „Тăлăх арăм“, „Тимĕр тылă“, „Икĕ хĕр“ произведенисене çырнă, ыттисене çырман. Тетратре халапсемпе йумахсен циклне пуçласа йанă сăвви пур. Акă вăл:

Кукашшĕне итлесе
Ларат ача сак çинче,
Хăйă çунат ташласа
Хура пӳрте çутатса,
Ватти тăват çăпата
Хăй йумахне çаптарса.
(Йумах йупа тăрринче
Халап хапха тăрринче).

Ку сăвă хыççăн планра кăтартнă халапсемпе йумахсем каймала пулнă.

Алçырăвĕнче „Ватă вăрман шухăшĕ“[2] йатлă халапăн пуçламăшĕ пур:

ВАТĂ ВĂРМАН ШУХĂШĔ.

Асап килсен, хĕн килсен
Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Аçта есĕ çухалтăн?
Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек.

Айала „Отрывок из легенды про чувашского царя“ тесе çырнă, халапра мĕнле сӳжет пуласси паллă мар.

Ку йапалана çырнă-и, çырман-и, ку ыйту пирки халĕ татăклăн калама çук, мĕншĕн тесен, К. В. Ивановăн пĕтĕм материалĕсене пухман-ха. Унпа пĕрле пурăннă йулташĕсем те Иванов йепле ĕçлеви çинчен сахал пĕлеççĕ. Иванов хăйĕн кăмăлĕ-психологипе питĕ хăйусăр пулнине кура, çырасси-тăвасси çинчен питех ваклашса калаçма йуратман, çынсенчен йутшăнарах пурăннă.[3]

## III. СĂВĂСЕМ.

Кунта пичетленекен сăвăсене пĕтĕмпех йакатса çитерменни курăнат, вĕсене чи малтанах çырнипе хăварнă, ĕçлесе пĕтермен. Вырăс поечĕсен сăввисем йеверлĕ сыпăксем те палăраççĕ вĕсенче.

---

[1] „Хуркайăксем“ тенине хуратнă.

[2] Планра „Вата вăрман“ йатла пулнă.

[3] Хусанкай „Поетпа миççионер“ поеминче К. В. Иванов сăнне тĕрĕс парайман. Унта К. В. темле çăмăлттай кăмăллă етем пулса тухнă. *У. Й.*

* * *

Çывăр, ачам, çывăрах!
Айху тутлă пултăрах!
Сана пăхма илтĕм еп
Амăрт-кайăк, çил, хĕвел.
Амăрт вĕçрĕ килеле.
Хĕвел анчĕ ту айне;
Виçĕ каçран çилĕ те
Вĕçрĕ амăшĕ патне.

Çиле ыйтат амăшĕ:
— Аçта есĕ пултăн-ши?
Çăлтăрсемпе вăрçрăн-и,
Йе хумсене çапрăн-и?
—Тинĕс хумне çапмарăм,
Çăлтăрсене тивмерĕм,
Епĕ ача сыхларăм,—
Ун сăпкине сиктертĕм.

## УСАЛ ШĂРĂХ.

Пĕр пĕлĕт çук, хĕвел çунат,
Кăвак пĕлĕт йăлтăрат,
Пăчă сывлăш вĕри тарат,
Мĕскĕн чечек сарăхат.

Ыраш ави типсе кайнă,
Пучахĕ унăн сăралнă
Пирĕн çырман шывĕ чаке,
Пирĕн арман лăпланнă.

## КĔРКУННЕ.

Шăнтат ĕнтĕ кунсерен,
Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне
Вĕçен кайăк сассинчен
Хуйхă кĕрет чĕрене.
Карти-карти кайăксем
Вĕçет тинĕс леш йенне.

Тăхăнна[1] йывăçсем
Пурте сарă[2] тумтирне.
Хĕвел кулат сайрарах,
Шăрши пĕтнĕ чечексен,
Йĕрсе йарĕ ак часах
Кĕркунне те вăрансан[3].

Малала „Выçă аптăранăскерсем“[4] йатлă сăвă кайат, ăна пĕтĕмпех йакатса çитернĕ сăвă теме те пулат.

Чи йулашки питĕнче кĕркунне çинчен çырнă сăвă татăкĕ пур:

Килсе çитрĕ кĕркунне...
Йывăç пахчи çаралат.
Типсе кайнă çулçисене
Çил вĕçтерсе вылйатат.

---

Малтанах палăртса хăвартăмăр, ку сăвăсене йакатса çырнă сăвăсен шутне кĕртсех çитерме йурамаст. Поет вĕсене малтанхи вариантчĕпех хăварнă

Çав алçыру çинчех çăкăр, пула тата ытти йапаласен хакĕсене çырнă К. В. Иванов ун чухне 9 тенкĕ шалу илсе танă иккен, чухăн пурăннă.

К. В. Иванов вилнĕренпе 20 çул тулнă тĕлне, çакă материала пичетлесе кăларатпăр, малашне тата çĕнĕ алçырăвĕсене тупасса шансах тăратпăр. Вĕсене пичетлесе пывă май тěплĕн хак парса пырăпăр.

---

P. S. Кемарăври чăваш техникумĕнче вĕренгекен П. А. Туринге йулташа, çакăнта пичетленекен материалсене панăшăн, тав тăватпăр. К. В. Ивановпа вĕреннĕ тата йулташлă пурăннă çынсем аллисенче унăн çырăвĕсем пулма кирлĕ. Çав йулташсем хăйсен аллинчи хучĕсене чăваш литератури организацине парсан пит те лайăхчĕ. *У. Й.*

---

[1] „Тăхăннă“ вырăнне темле уйăрма çук сăмах çырнă.
[2] „Пурте сарă“ вырăнне скобка ăшĕнче „Тĕрлĕ тĕслĕ“ тесе çырнă.
[3] Ку сăвва çырма кăна пуçланă та, вĕçне çитермен.
[4] Ăна алйманахăн 10-мĕш №рне пичетленĕ.

## ЧĂВАШ ДЕЛЕГАТСЕМ—ПИСАТЁЛСЕН 1-МЁШ СИЕСЁ ÇИНЧЕН.

*В ПАЙМЕН.*

## I. САВĂНĂÇ.[1]

Колоннăлă залра 16 кун хушши мён-мён пулни çинчен тўрех нетмёшпе каласа пама май çук. Çавăнпа та епе пёр ыйту кăна ...л. Вăл ыйту сиесăн кун йёркинче пулман, анчах вăл ыйтупа ...ни трибунă çине тухакан писатёлех калаçрё. Вăл ыйту — ...нăç.

Пире, 5 телейлё çынна, пирён йатсене делегата суйласси ... ки асăннă майăнах калама çук пысăк савăнăç çаварса илчё, вăл пирёнпе пёрле Мускава çитсе Колоннăлă зала кёчё. Вăл унта ытти делегатсен савăнăçёпе пёрлешсе, хăйён çинчен сасăпах калаçтаракан вăй пулса тăчё.

Тёрлё „сасăлă“ делегатсем те, нимле „сасăсăр“ хăнасем те, пёлйупсен сиеса саламлакан билетсăр представитёлёсем те кун йёркине пăхмасăрах савăнăç çинчен — кёрешў, çёнтерў, ирёклё пултарулăхăн савăнăçё çинчен каларёç.

Ытла нумай калаçмарёç-и ун çинчен? Вăл пирён пайанлăхан калама çук хитре çурчё çинче апликациле хитрелетў кăна, йе çыпăçтарса хунă балкончик пек кăна пулса тăмарё-ши? Çук! Савăнăç çинчен писатёлсем ăнсăртран мар калаçма тытăнчёç.

Çак йапаласене ăнланса илес тесен, унăн историлё вырăнне пахалас тесен, *Макçим Горйкин* çак сăмахёсене аса илес пулат:

> „Револуцичченхи литературăшăн тёп тема пулса таракании — етем драми. Вăл етеме пурнăç тăвăр пек туйăнат, вăл хăйне хăй обшчёствăра ытлашшин туйат, вăл унта хăйне валли ăнăçлă вырăн шырат, тупаймаст ăна, унтан — гарăхат, пётет, йе уншăн тăшман обшчёствăпа килёшет, йе ёçме тытăнат, хăйне хăй вёлерессн патне çитет“.

Револуцичченхи писатёл савăнăç çинчен çырман, ун хăйён пурнăçё те савăнăçлă пулман; кун пек пысăк ушкăнпа мар, пёччен, сахал та начар савăннă вăл. Тёнчери литературăн чи вăйлă обрăзёсем отрицани обрăзёсем пулни ăнсăртран мар. Вёсем писатёлсен чёрери тарăн кисренўсен резултачёсем пулнă.

Савăнăç капиталисамшăн йут категори, вăл капиталисамла тёнчере хуçа пулса тăракан кăмăлăн (вăл кăмăлăн йачё курайманлăх) шухăшри теорилё антипочё кăна пулса тăнă. Тёнчери литературăн лайăх кёнекисем те çав кăмăлранах килнё. Класла, ирсёр, йестествăлăха хирёçле обшчёства курайманнинчен кёре-

[1] Самарти аслă шкулсен студенчёсемпе научнăй работниксен пухăвёнче тухса каланинчен.

шĕве, ҫĕнтерĕве, етемлĕх куљтурине туса ҫирĕплетме чĕнекен йурăсем ҫуралнă.

„Ман курайманлăх хăрушă пек туйăннă та, вара мана Франціре хуса кăларчĕҫ“,—тет Бруно Йаҫенски.

Анчах епĕр пĕлетпĕр, ҫав курайманлăхранах „Я жгу Париж“ ҫуралнă, унранах тата урăх кăмăл та, савăнăҫ йатлă кăмал та ҫуралнă. Ак мĕн каларĕ вăл сйесра ҫав ҫĕнĕ кăмăл ҫинчен:

> „Совет ҫĕрĕ ҫинче пирвайхи хĕрлĕармейцăн шљомне куракан хĕвеланăҫĕнчи револђуционер мĕн туйнине каласа пама питĕ йăвăр, питĕ йăвăр ху йепле савăнăҫпа сасартăках тăвăнса ларнине каласа пама. Ман ҫак трибуна ҫинчен хамăн ĕнер пĕрле ĕҫленĕ йулташсене, границă леш йенчи револђуциле писатĕлсене ҫакна калас килет: —*камшăн Совет союзĕ пĕртен-пĕр тата чăн-чăн тăван ҫĕршыв пулса тăнă, ҫав художник кăна ҫĕнĕ ăслă тĕнче тăваканăн хаваслăхне туйма пултарат*“.

Социалисăм кăна етемлĕхе чăн-чăн хаваслăх пама пултарат, савăнпа та унăн чи лайăх представитĕлĕсем социалисăм ҫĕршывĕн писатĕлĕсен 1-мĕш сйесĕнче савăнăҫ ҫинчен ăнсăртран мар калаҫма тытăнчĕҫ.

Мĕнле савăнăҫ пулчĕ-ха вăл?

Вăл савăнăҫ писатĕлĕн—хăйĕн аслă тăван ҫĕршывĕн ывăлĕн, ҫав ҫĕршыв ăна йуратнине туйаканăн, аслă партипе унăн генилĕ ҫулпуҫĕ ăна йуратнине туйаканăн савăнăҫĕ. Трибуна ҫине тухакан кашни писатĕл: *пирĕн Сталин... пирĕн парти... пирĕн ҫĕршыв...* терĕ.

Вăл савăнаҫ писателен — унăн ĕҫĕ мĕн пур ҫĕршывăн ĕҫĕ пулса тăнине пĕтĕм тĕнчере те пирвайхи хут туйса илнĕскерен савăнăҫĕ.

Вăл савăнăҫ — ҫĕнĕ пурнăҫ пионерĕсен савăнăҫĕ пулчĕ. Ҫапла ăнланчĕ те ăна йаланах лăпкăскер — *Леонид Леонов*. Тулашĕнчен Леонов хумханман пекех, анчах ун сăмахĕсене савăнăҫăн тарăн туйăмĕнчен шăратса тунă... електричĕствă токĕ пĕтĕм Колоннăлă зал тăрăх чупса тухса пин чĕрене пысăк напрйажениллĕ токпа аварларĕ.

> „Пире тĕнче истори чи паттăрла тапхăрĕнче пурăнма пурнăҫ пана, — тесе пуҫларĕ хăй сăмахне „Барсуки“, „Соть“, „Вор“, „Скутаревский“ автăрĕ.—Пирĕн ĕмĕр ҫĕнĕ тапхăрăн ирĕ кăна, анчах пирĕн ҫак ирхи халăхсем аслă социалисăмла ҫул ҫине кĕме тытăннă чухнехи парад нихăҫан та тепĕр хут пулса иртес ҫук“.

Сирĕнне пирĕн телей, йулташсем, тата ҫакăнта — Леонид Леонов „Барсуки“ автăрĕ кăна мар, вăл тата — халђ пире паллă мар калама ҫук лайăх произведенин автăрĕ, мĕншĕн тесен совет писателĕн ўсĕм туртăмĕ (тенденцийĕ) ҫавнашкал.

Вăл савăнăҫ — ватăлман ҫамрăклăхăн савăнăҫĕччĕ. Ҫапла ăнланчĕ те ăна чи ватă, чи кăмăллă делегат, Армении халах писатĕлĕ *Ширван-Заде*.

„Епĕ 76 çулта,—тет çĕнĕ пурнăçăн кăвак çӳçлĕ пионере,—анчах епĕ нихăçан та халҍхин пек ирĕккĕн, çамрăккăн, телейлĕн туйман. Манран час-часах: мĕншĕн есĕ ватăлмастăн, тесе ыйтаççĕ; ыйтаканнисем епĕ Совет влаçĕ вăхăтĕнче пуранниие тăнланса илеймеççĕ курăнат".

Куратăр, çак пĕчĕк сăмахсенчех йепле пысăк вăй. Çав сăмахсен вăйĕ унăн хуçине пĕтĕмĕшпех çавăрса илет те, вара Ширван-Заде кăмăл тулса ларнипе, урăх ним калайми пулса хăйĕн кĕске сăмахне çапла пĕтерет: „Йулташсем, епĕ пĕтеретĕп, мĕншĕн тесен кăмăл ытла тулса çитрĕ". Çак сăмахсене алă çупни кĕрлесе хуплат.

Çамраклăх çинченех тепĕр пионер, Горйки ровеçникĕ, Дагестанăн халăх йурăçи *Сулейман Сталҍский* калат. Унăн йурриш сăмахĕсем çав йурăçăпа сире пуринчен лайăх паллаштарĕç:

„Çак кун ту сывлăмĕ пек уçă
Ĕмĕтсем тулнă тапхăр витĕр
Йалтăртатан пурçăн тумпа
Çамраклăх ĕмĕрĕ патне çитрĕмĕр".

Вăл савăнăç пысăк коллектив пĕрлешĕннин, пĕрлĕх кăмăлĕн савăнăçĕ. Çапла ăнланнă та ана Данирен килнĕ пирĕн хакла, хисеплĕ хăна *Мартин Андерсен Нексе.*

Вăл, ытти йулташсенчен пĕччен çӳле хăпарса кайнипе савăнăç туйакан вак-буржуа çинчен каларĕ:

„Кунта—епĕр хаваслă, телейлĕ солидарнăç куратпăр. Пĕтĕм тĕпчипех урăх ниçта та çынсем хăйсене хăйсем Совет сойузĕнчи пек ĕçре те, праçникре те пысăк пер коллективăн туйаймаççĕ",—терĕ вăл.

Вăл савăнăç инçе-инçе туйăнакан тĕллев сасартăк çывăха килсе ларнин савăнăçĕ. Нумайччен хĕрӳн алă çупрĕ сйес Совет сойузĕн чи ватă писатĕлĕсенчен пĕрне. Трибунă çине тухса тăрсан вăл мана пирĕн йалти Аким мучи пекех туйăнчĕ... Тĕнчипех паллă „Железный поток" автăрĕ çав икkенне темле ĕненес те килместчĕ.

Тарăнăн хумханса, аллисене аптранипе сарса йарса, тăрат *Серафимович* аплодисментсен хумĕ умĕнче, нумайччен сăмах тупса калаймаст вăл. „Аçтан, тăвансем, пуçланчĕ-ха ку?"—терĕ вăл сасартăк. Хаваслăх хумĕ кăшт лăплансан, Серафимович пире мĕнле ĕлĕк вăл, рабочисем нихăçан та хаçата çырма вĕренеймĕç, тесе шухăшлани çинчен, халăхсем хушшинчи хирĕçӳ нихăçан та пĕтес çук, тесе шухăшлани çинчен каласа парат. Халҍ вăл хăй ĕлĕк йăнăшнине, пурте калама çук кĕске вăхăтра пулса тăнине йышăнма питĕ хавас.

Вăл савăнăç—çитес çĕнтерӳсене шанса тăнин савăнăçĕ. Çавăн çинчен каларĕç те пирĕн хĕвеланăçĕпе хĕвелтухăçĕнчен килнĕ хăнасем. Лăпкă, шанчăклăн чĕнчĕ Франциri революцилĕ писатĕл *Жан-Ришар-Блок* пирĕн *Карл Радека* Франциri совет писатĕлĕсен пĕрремĕш сйесĕ вăхăтĕнче ун патне кĕрсе тухма. Çавнашкал шанчăклă чĕнчĕç пире Германи писатĕлĕсем *Вай-*

*скопфпа Оскар Мариа Граф* Германири совет писатĕлĕсен пĕрремĕш сйесне хăнана. Епĕр, вăл ĕç хăвăрт пуласса вĕсем некех çирĕп шанса тăраканскерсем, хăнана пыма сăмах патăмăр.

Вăл савăнăç—вулаканпа писатĕл хушшинчи гачă, татӑлми туслăхăн савăнăçĕ. Çав савăнăçа органичĕски туйса илес тесен, Сойузсен Çурчĕ умĕнче 16 кун хушши писатĕлсене курас тесе тăрса ирттернĕ вулакансене курас пулат, вĕсен ăслă представителĕсем трибуна çинчен калакан сăмахессене илтес пулат. Вулакансен йуратăвĕ çинчен, писателсен çав йуратуран пулнă савăнăçĕ çинчен *Александр Безыменски* те, *Илйа Еренбург* та, *Жан-Ришар-Блок* та калаçрĕç.

Вăл савăнăç—совет писателĕн савăнăçĕччĕ. Илйа Еренбург (ун çинчен необуржуала писатĕл тесе калаçни нумай та пулмаст вĕт-ха) сйесра пĕтĕм сасăпа мухтансах каларĕ:

„Епĕ рйадовой совет писатĕлĕ—вăл ман савăнăç, вăл ман мухтав“.

Кунран вăйлăрах, кунран лайăхрах калаймăн.

Вăл савăнăç—совет прозинче поези тупассин савăнăçĕ. Епĕ *Борис Пастернакăн* çывăх йулташăнни пек уçă сăн-питне лайăх астăватăп. Акă вăл çутăлса кайнă куççемпе, майне кăшт туртарах лараканскер. Зал, оратăр сăмах пуçланипе сисмесĕр, каçса кайсах алă çупат. Акă вăл, нихçан унччен пĕчĕк пухура та председатĕл пулса курманскер, сйесăн заçеданипе опăтсăр, анчах хаваслăн илсе пырат.

Савăнăçпа тулса ларнă Борис Пастернак сăмах илсен, залри савăнăçан пысăк хумĕ хăйĕн çулĕ çинче поетăн савăнăç хумне хирĕç пулат. Поет вара çак икĕ хум вăйĕпе лучăрканса ларнăн туйăнат. Çак тăвăл хыççăн хăйĕн умсăмахне çур сăмахранах татса, куççуль тухичченех хумханнă поет хăйĕн малтанах хатĕрлесе хунă сăмахне, калама çук лайăх сăмахне, вулама тытăнат. Çав сăмахăн мĕн пур ăшчикне вăл икĕ йĕркерех тарăнăн каласа панă.

„Чистая проза в ее первородной напряженности и есть поэзия“.

Сйес кунĕсем Пастернакшăн чи таса поезин кунĕсем пулчĕç.

Пулашкинчен, ку савăнăç ирĕке тухна пултарулăхăн, личнăйпе общественнăй, кăмăлпа долг, ирĕкпе необходимăç пĕр пулнин савăнăçĕ.

Хăшпĕр писатĕлсем, çак савăнăçа тин пирвайхи хут туйса илнĕскерсем, вĕсен савăнма права пуррине ĕнентерсе парасшăн. Елĕк беспризорник пулнă, çав пурнăçра нихăçан макăрманскер, хальь „Я люблю“ автăрĕ пулса тăнăскер—çамрăк писатĕл *Авдеенко* савăнăç куççулĕ çинчен калаçат. Ку тĕлĕнмеле йапала мар-и?! Çав вăхăтрах „Капитальный ремонт“ автăрĕ *Соболев* йулташ кăмăл, туйăм вăл сентименталлăх мар, тесе шантарасшăн тăрăшат. Ун хыççăн поет *Луговской* та лирика пирки çаплах калат.

Çак фон çинче, савăнăç фонĕ çинче, *Йури Ольошăн* питĕ лайăх монолăгне ăнланма йăвăр мар. Вăл монолăгра Йури Ольошă çамрăклăх правишĕн тăрат. Вăл хăйĕн ăшĕнче, унта Кава-

леравăн йĕрĕсем тасалса пĕтмен пулсан та, пирĕншĕн палла мар, анчах питĕ лайăх, çĕнĕ çамрăк сыннăн сăнне йăтса çӳрет. Çав çамрăк сынна пире Олдоша вăрăм мар вăхăтрах паллаштарма пултарассине унăн испăвĕçĕ пуринчен лайăх шантарса парат.

Анчах писатĕлшĕн саванăçа туйни кăна сахал. Вăл ăна хăйĕн çырнинче палăртмала. Савăнăç ытла çамрăк кăмăл пулнăран ăна епĕр çырура палăртма вĕренеймен-ха. Кунта *Бабель* писатĕл сăмахне аса илни вырăнла пулĕ:

> „Анчах çав савăнăçа çутатакансем пирĕн хăшпĕр чух уксаклаççĕ. Хăшпĕр чух тата, пĕр-пĕр сын, тĕрĕссипе каласан, питĕ мĕскĕн етем, тытăнат сасартăк савăнăç пирки аварлама, тытăнат пакăлтатма, нăйлатма, ун пек саванакансем çине пăхма та йĕрĕнчĕклĕ пулса тăрат".

Чăнахах та епĕр, тĕрĕссипе каласан, савăнма та, савăнăç çинчен калаçма та пĕлместпĕр-ха.

*Вера Инбĕр* савăнăç пирки халиччен пирĕн поетсем мĕн çырнине сăнаса тухрĕ. Безыменски савăнăç пирки çакнашкал çырнă пулнă:

> „Ĕлĕк пире савăнтаратчĕç хĕрсен тутисем,
> Халĕ савăнтараççĕ савăт трубисем".

Сакăнтан урăх Верă Инбĕр савăнăç пирки нимĕнех те шыраса тупайман.

Савăнăç пирки епĕр поезире кăна мар, ытти литературăра та сахал çырнă. Верă Инбĕр савăнăç çинчен çырнине Пĕчĕк Совет Енциклопедире шыраса пăхнă. Паллах, унта „савăнăç" сăмах çук. Унта „оптимизм" сăмах пур. Çав сăмах çинчен енциклопедире мĕн пурĕ те 8 йĕрке кăна çырнă. Çав вăхăтрах „пессимизм" сăмах пирки 58 йĕрке çырнă пулнă. „Значит, савăнăç çинчен Пĕчĕк Совет Енциклопеди те (МСЭ) питĕ печĕккен пĕлет",—тет Верă Инбĕр.

Çакăнтан ентĕ пирĕншĕн, совет писатĕлĕсемшĕн, çакă палла: мĕн пур совет çĕршывне вăйлă хумпа çавăрса илнĕ савăнăçа пирĕн хамăрăн произведенисем урлă çутатса памала, вăл ĕçе лайăх алла илмеле. Совет писатĕлĕсем ку ĕçе тивĕçлĕ тăвĕç. Ăна епĕ шантарсах калатăп, мĕншĕн тесен кашни совет писатĕлĕ, Еренбург хыççăн, çакна калама хатĕр:

*„Рядовой совет писателе пуласси—вăл ман савăнăç, вăл ман мухтав".*

## II. ХАРСĂР ПУЛĂР![1]

Сăесра мана пуринчен хытă тĕлĕнтерекенни, ман черене чĕтрентерекенни вăл—ирĕке тухнă пултарулăхăн (творчĕствăн) музăке. Вăл музăк Колоннăлă залра 16 кун йанрарĕ. Унăн хумесем пирĕн аслă çĕршывăн инçетне саланса, унăн ирĕклĕ черçийĕ çинче пурăнакан мĕлйунсен чĕрисене хумхатрĕç.

[1] Самар хулинчи писатĕлсемпе вулакансен пухăвĕнче каланă сăмах. *Харсăр пулăр—„Надо дерзать"* тени, ăна чăвашла çапла куçарнă.

Социалисăмра кăна ҫакнашкал тулли гаммăлă сасăлану пулма пултарать, етемӗн хавaслăх йурри ҫакнашкал хӗррисӗр диапазонăлă пулма пултарать.

Револуцире ирӗке тухнă етем шухăшӗн пултарулăхне, ҫав револуци процесӗнче пулса пыракан етемлӗхӗн пысăк кулътурине пуринчен ытла ирӗке тухнă Прометей образӗ килӗшет пулсан, вара ăна ирӗке кăларакан Геракл — пролетариат пулать, мӗншӗн тесен унăн Маркспа Енгӗлс пек, Ленинпа Сталин пек ывăлӗсем пур, унăн мухтавлă хӗрӗ — Коммуниссен партийӗ пур.

Ӗлӗк сăнчăрта пулнă Прометейшăн савăнăҫ халиччен туйман кăмăл пулса тăрать, вăл ҫав кăмăла туйма унăн права пуррине вăйлăнах шантарать.

Пӗрремӗш сйесăн трибуни ҫинчен совет писателӗ *Авдейенко*, ӗлӗк беспризорник пулса та нихăҫан макăрманскер, хал савăнăҫ куҫҫулӗ ҫинчен каласать. *Соболӗв* кăмăл (чувства) сентименталлăх мар иккенне шантарса савăнăҫ прави ҫинчен каласать. Поет *Луговской* хăйӗн бархăтла сассипе лирикă интимлăх маррине шантарса, хăйӗн лирикăла ҫырма права пуррине ӗнентерессӗшӗн. Вӗсен хыҫҫăн Йури Олоша хал тӗнче реална та, тӗрӗс те пулчӗ, тесе калаканскер, ҫамрăклăх тавăрăнни ҫинчен йурлать.

Ҫапла, йулташсем, социалисăм ҫамрăклăха тавăрма пултарать. Ҫав социалисăма тăвакан ҫынсем етемлӗх историйӗнче тин пӗрремӗш хут савăнăҫ мӗн иккенне пӗлсе илчӗҫ.

Наукăпа пӗлӳлӗх йенчен пит те тарăн докладсене итлесе, писатӗлсен хумхантаракан сăмахӗсене итлесе,мӗлйунлă массăсен представитӗлӗсен темпераментлă саламӗсене итлесе, епӗ, ҫӗршывпа парти пире етем чунӗсен инженерӗсен йатне парса, пирӗн ҫине хуракан тем пек пысăк ответлăха органически тенӗ пекех туйса илтӗм.

Пирӗн ҫӗршыва хуса ҫитес тӗлӗшрен литературăн питрех те нумай тумала, — ҫакна уҫҫăн ăнланса илсен, вăл ответлăх татах та вăйлăланчӗ.

Пирӗн ҫӗршывра йумахри хăвăртлăхсем пулса пыраҫҫӗ. Кунпа мар, сехетпе ӳсет пирӗн ҫӗршыв; кунпа мар, сехетпе ӳсеҫҫӗ пирӗн геройсем, анчах писатӗлшӗн чи „харушши“ ҫакă — унăн вулаканӗ те кунпа мар, сехетпа ӳсет. Вăл писатӗле хуса ҫитет, хушăран иртсе те кайать. Писатӗлӗн тата хăвăртрах ӳсмеле. Ӳсме чарăнна писатӗл вулаканран тăрса йулса, унăн уважениине ҫухатма пултарать.

Колоннăла залăн галоркисене шавлавлăн тултарса лартнă вулакан писатӗлсен трибуни ҫинчен мӗн каланисене сисӗмлӗн итлесе ларчӗ. Унăн сасăлакан йе канашлакан сасă пулман пулсан та, вăл хăйӗн сасартăк калăнакан репликисемпе творчествă дискуҫҫине хутшăнма пăхрӗ.

Демйан Бедный Бухаринпа сăмахланă чух, вăл пирӗн хал провинци ҫук ӗнте, мӗншӗн тесен Днепропетровск вăл провинци мар тенӗ чух, харсăр вулакан галорка ҫинчен сасартăк репликă ыватрӗ.

— Вăл урăх провинци ҫинчен каларӗ.

Чи ватӑ пролетариле поета чунтан йуратат пулсан та, вӑл ҫакна калама хӑйрӗ, мӗнишӗн тесен пирӗн литературӑра провинциаллӑх халӗ те пӗтменнине вӑл лайӑх пӗлет. Ҫак реплика пӗтӗм зал алӑ ҫупрӗ. „Манкалӑ пулсан та—хамӑрӑннисемпе“ вулакан килӗшмест ӗнтӗ, уншӑн настойашчи писатӗл, писатӗлӗн пысӑк кулътурине тата маҫтӑрлӑха алла илнӗскер, пултӑр, вулакан ҫав писатӗлрен вӗренме пултартӑр.

„Провинци“ сӑмаха истори тӗп тума палӑртса хунӑн туйӑнат маншӑн.

Вӑтам Атӑл, ӗлӗк чи кайра пыракан провинци пулнӑскер, халӗ Совет сойузӗн малта пыракан районӗсенчен пӗри пулса тӑрат. Вӑл клас тӑшманӗ хирӗҫнипе вирлӗн кӗрешсе, ҫанталӑкӑн ҫтихийӑлӑ вӑйӗсемпе кӗрешсе, йалхуҫалӑх фронтӗнче калама ҫук пысӑк ҫӗнтерӳсем туса хучӗ.

Писатӗлсен сиесӗнче колхозла йалӑн ҫӗнӗ херарӑмӗ тухса сӑмах каларӗ. Кун пек хӗрарӑмсем халь пирӗн ҫӗршывра пӗрре кӑна мар. Вӑтам Атӑлра халь кун пек хӗрарӑмсем пинӗпех пур ӗнтӗ.

Вӑтам Атӑлӑн колхозла йалӗсенче ҫӗр пинлесех ӗнтӗ ҫӗнӗ актив пур, вӑл активра писатӗлӗн ҫивчӗ куҫӗ пулас етемӗн уйрӑм йенӗсене курма пултарат.

Йулашки ҫул кӑна ҫӗнӗ колхозла етем ӳссе ҫитӗнчӗ, вӑл — бригадӑ хаҫачӗн редактӑрӗ, колхозла йалӑн паллӑ ҫынни пулса тӑнӑскер, вӗсен шучӗ край тӑрӑх 25 пине ҫитет.

Вӑтам Атӑл етемсен ҫӗнӗ чунӗсен тем пек пысӑк лабораторийӗ пулса тӑчӗ. Вӑл лабораторире инженер пулса ӗҫлесси пысӑк чыс.

Ҫав чыса епӗр тивӗҫлӗ пулса ҫитеймен-ха. Пирӗн край ӗнтӗ провинци мар пулсан, пирӗн крайри литературӑ провинциаллӑха. Пӗлтӗр кӗркунне *Панферӑв* йулташ пирӗн литература ҫинчен калаҫнӑ чух „провинци“ сӑмаха асӑнчӗ, ун чухне хӑшпӗри вӑл сӑмахшӑн ӳпкелешме пӑхрӗҫ, анчах вӑл сӑмах тӗрӗсех, сиес хыҫҫӑн епӗр ӑна уҫҫӑнах ӑнланса илтӗмӗр.

Сиес совет литературин пысӑк маҫтӑрлӑхӗшӗн кӗрешес ыйтӑва калама ҫук ҫӳле ҫӗклерӗ. Пирӗн умра халь провинциаллӑха тӗп тӑвас тӗллев тӑрат. Вӑл тӗллеве пурнӑҫлас тӗлӗшрен пирӗн ҫак чӑрмавсене тӗп туса умма ҫакнашкал задачӑсем лартмала.

***1. Пӗр йенчен ҫамрӑк писатӗлсене чакару (скидкӑ) пана, тепӗр йенчен вӗсене ҫителӗклӗ пахаламан.*** Издатӗлствӑсем йенчен халиччен те-ха пысӑк либералисӑм пур. Час-часах вӗсем макулатура та кӑларса пынӑ. Сиесра епӗр хамӑр, ҫамрӑк писатӗлсем, татӑклӑн каларӑмӑр: „провинциаллӑх ҫине нимӗнле чакару та памала мар“. Вӑл чакарусем пире кирлӗ мар. Ҫамрӑк писатӗлсенчен малта пыраканнисем халь ҫакна лайӑх ӑнланаҫҫӗ, — вӗсен произведенисене хытӑ тиркесе суйласа пичетлесен тин вӗсем чӑн-чӑнах сӑмах художникӗ пулма пултараҫҫӗ.

Анчах ҫакӑнпа йунашарах епӗр ҫамрӑк автӑрсем ҫине ҫителӗклӗ ҫаврӑнса пӑхманнине, вӗсене ҫителӗклӗ пахаламаннине, лайӑх рукописҫсенех йурӑхсӑра кӑларнине куратпӑр. Ҫавӑнпа та провинциаллӑха хирӗҫ кершнипе пӗрлех ҫамрӑк писатӗлсене

лайăх, тăрăпса пăхса ӳстерессишĕн кĕрешмеле. Урăхла каласан, вĕсем иккĕшĕ те пĕр задачăн тĕрлĕ йенĕсем пулса тăраççĕ.

*2. Редактăр, рецензент, литконсуљтаци ыйтăвĕсем принципла ыйтусем.* Вăл ыйту пирĕншĕн центртинчен те çивĕччĕн тăрат, мĕншĕн тесен çамрăк писатĕлсен тĕп массипе крайсемпе облăçсенче ĕçлеме тӳрĕ килет. Горбунов йулташ хăйĕн докладĕнче каласа панă тăрăх, пĕр рецензент çырма тытăнакана çакăн пек ответ панă:

„Есĕр çыратăр: „Амăрту мĕн пур уйрăмлăха пĕтерĕ, социалисăм килсен, клас пĕтĕ". Каçарăр. Социалисăмра нумай границăсем пĕтĕç, анчах пурте-и? Çук, ман шухăшпа лашапа ĕне хушшинчи уйрăмлăх социалисăмра та пĕтес çук".

Йе çакнашкал пример:

„Есĕр çырнă произведени пуплев пуххи кăна, ăна кашни пионер кулленхи хаçатра вуласа тухма пултарат".

Пирĕн хамăрăн та крайра çакнашкал примерсем пулнă: автăр вăрăм сухаллă акăлчан çинчен çырат, редактăр кун пирки çакнашкал „замечани" тăват: „акăлчансем сухалсăр çӳреççĕ"; автăр кашкăрсем çине облавă туни çинчен çырнă, унта вăл политпай начаљникĕ кашкăра персе тивретейменни çинчен çырат; редактăр кăна хирĕç çырса хурат: „политпай начаљникĕ минимум 5 кашкăр персе вĕлермеле";

автăр пĕр ударницăн шăлĕсем сайра пулнă тесе çырат, редактăр кунпа та килĕшмест: „ударницăн шăлĕсем сайра пулма пултараймаççĕ" тет вăл.

Çакнашкал „редактăрсем", паллах, усă пама пултараймаççĕ. Редактăр вăл издатĕлствăри тĕп фигурă, ун çине пирĕн малашне пысăккăн çаврăнса пăхмала, издатĕлствăри редактăр пирки ыйтăва производствăри аслă инженер пирки лартнă пекех лартмала.

*3. Епĕр пурнăçа начар пĕлетпĕр, образ пирки сахал ĕçлетпĕр.* Пултарулăхра тенденциозлă чăнлăха, çĕнĕ пурнăçа тума пулăшакан чăнлăха обрăзласа кăтартас задачă писателе пурнăçпа çывăхран паллашма хушат. Хăшĕ-пĕри, апла пулсан, кашни писатĕл бригадă пурнăçне кăтартма тытăнат пулсассăн, обйазатељнă бригадир йе парторг пулса пăхмала, тесе шухăшлаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Писателен бригада пурнăçне лайăх пĕлмеле, анчах унан пĕр бригадă пурнăçĕпе кăна мар, нумай бригадăсен пурнăçĕне паллашмала, вăл хăйĕн лабораторийĕнче типична, характерлă, тенденциозла выраисене тупас тĕлĕшрен творчествăлă еç туса ирттермеле.

Анчах, çав вăхăтрах писатĕл ир професçионализациленессине, производствăран ир уйăрăлассипе те татăклăн кĕрешмеле.

Пирĕн вырăнти литературăн йапăхлăхĕ пуринчен малтан писатĕлсем пурнăçа пĕлменнинче. Çавăнпа та отображени вырăнне (типична вырăна тупса ăна обрăз урлă кăтартас вырăнне) шухăшлани, логикăлатни, илемлĕ литературăн уйрăмлăхне çухатни пулса тăрат, публицистика пулса тăрат.

Халĕ пирĕн епохăн калама çук лайăх кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Вăл кĕнекен йачĕ: „Чељускинцăсене епĕр йенле çăлтăмăр“. Унăн автăрĕсем—герой-љотчиксем. Вăл кĕнекене халиччен нихăçан çырман çынсем çырнă. Пирĕн чĕлхене каласан, ăна халђ тин çырма тытăнакансем çырнă. Анчах кĕнеки лайăх. Тин çырма тытăнакансем лайăх кĕнеке çырнă, мĕнле пулчĕ-ха ку? Мĕнре-ха ĕç?

Ĕç ак мĕнре. Вĕсен типична характерлă йапала шыраса лармала пулман, мĕншĕн тесен пысăк паттăрлăха палăртакан кĕрешӳ, болђшевикла тимĕр пек çирĕп выдержка—пирĕн тĕлĕнмеле çĕршывшăн чи типична, чи характерлă йапаласем.

Епĕр, çамрăк писатĕлсем, пурнăçа сахал пĕлетпĕр тата образ пирки те сахал ĕçлетпĕр.

Алексçей Толстой хăйĕн докладĕнче Гогăљăн хăйĕн рукописне иккĕмĕш хут редакциленĕ чух шухăшлани йепле образ пулса тăнине пите лайăх иљљустрацилесе пачĕ. Ку çамрăк писатĕле образ пирки ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшрен пите лайăх кăтартса паракан паха пример. Пирĕн—рукописçе 2-мĕш хут редакцилени çук-ха, пирĕн—образа тăвас тĕлĕшрен асаплăн ĕçлесе ларни çук-ха.

Анчах ку тĕлĕшрен хăшпĕр чух загибсем те пулаççĕ. Пирĕн хăшпĕр çамрăк писатĕлсем образа ытла сложнă туса, унăн образлăхне пĕтерсех лартаççĕ. Илĕпĕр пример, Лев Правдинăн час-часах çакнашкал образсем килсе тухаççĕ:

> „Ку летописçе тискер кайăк тăн-пуçлă, усал тӳрĕ йĕрлĕ чунлă пуп çырнă. Дикарйов çак летописçе вуланă, унăн çурăм хыçĕнче мĕлкесем хăйсен отрешитленнĕ кирлĕмарлăхсенче çăмламасланнă“.

Йе Возђак поетăн образĕсене илер:

> „Типсе сарăхнă курăк урине
> Çил пăтасем çапса хурат“.

Чи лайăх, вăйлă образ парасси вăл йăвăр ĕç, анчах вăл ĕçе пирĕн алла илмелех.

*4. Епĕр çителĕклĕ кулђтурăлă мар, тата сахал вĕренетпĕр.* Хăшпĕр çамрăк писатĕлсем, диамат пĕлмесĕрех лайăх кĕнекесем çыртăмăр, тесе мухтанаççĕ. Вĕсем çакна ăнланасшăн мар—диалектикăла материализăма пĕлнĕ пулсан, весем тата лайăхрах кĕнеке çырса панă пулĕччĕç.

Социализмла реализăм метăдне тĕрлĕле ăнлантарса пашш, вăл лайăх геройа кăтартас задача кăна тесе калани, çĕннине туса çирĕплетес задача хăйĕн ăшне органически пай туса киввине ишес задача та кӳртнине ăнланаймани—çаксем пурте диалектикăла материализăма пĕлменнинчен килеççĕ.

Кашни писатĕлĕн, çамрăккин пушшех, диалектикăла материализăма алла илмеле, уйрăмăнах тата Ленинпа Сталин отражени çинчен мен вĕрентнине пĕлмеле. Вăл писатĕлĕн, обйективлă действитĕлнăçа образ урлă отражени тăваканăн, задачине таранăн тăнланса илме пулăшат.

Çамрăксем хăйсем инициативлăрах пулмала. Вĕсен вĕренес тĕлĕшрен, творчества ÿсĕмĕ тĕлĕшĕнчен пур майсемпе те уса курмала, вăл майсем, возможнăçсем пирĕн тĕлĕнмеле лайăх çĕршывра вĕçĕ-хĕррисĕр.

Çамрăк писатĕл хăй умĕнчи йăвăрлăхсене самостойатĕлнă çĕнсе илмеле, унсăран вăл ÿсse пысăк писатĕл пулма пултараймаст. Епĕ ку тĕлĕшрен Паоло Йашвили йулташ сăмахĕпе пĕтĕмпех килĕшетĕп:

„Кам писатĕл йатне çăмăл илтет, çав нумайччен ăна сыхлаймаст".

*5. Епĕр политпайсемпе начар çыхăнса тăратпăр.* Писатĕлсем умне сйесра нумай счот кăларса тăратрĕç. Анчах вĕсенчен тĕп вырăнта тăраканни—совхозсенчи политпайсене кăтартасси. Пирĕн крайри литературăра ку тĕлĕшрен начар мар пуçарту пур, анчах хамăр произведенисенче политпайсене кăтартса парас задача пирĕн нумай вăйлатмала.

Политпай темисем тăрăх çырма пирĕн хăйулăрах тытăнмала. Çĕнĕ етеме епĕр политпайра, тата ун тавра пĕтĕçĕннĕ актив хушшинче часрах тупăпăр. Çакна манмала мар.

Политпай пирĕн умра парăмра йулмĕ. Политпай пире халђхи кунсен чăн-чăн чĕрĕ геройĕсемпе паллаштарĕ, вăл пире чăн-чăн тĕрĕслĕхе кăтартса парĕ. Вăл пире ходуђни геройсене мар, чăн-чăн чĕрĕ ударниксене, чăн-чăн чĕрĕ найан-кахалсене кăтартĕ. Нумайĕшне пире политпай илемлĕ литературăна йуратма, пахалама та вĕрентĕ. Илемлĕ сăмах йепле çивĕчĕ хĕçпăшал пулнине вăл практикăра кăтартса парĕ.

Пур пирĕн Ç.-Уран МТС-ĕ. Вăл чи малта пыракан МТС-ах мар. Анчах есĕр унта помполита—Тоççă Константинăвăна тупăр. Вăл 2 çул хушшинче хăйсен колхозĕсем çинчен тем чул йурăсемпе сăвăсем çырнă. Есĕр унта политпай начађникне Марков йулташа курăр. Вăл 2-мĕш бригадăра таран прорыв пулна вăхăтра пуринчен малтан Тоççăна чĕнсе илсе, ăна çав ĕçсем çинчен сăвă çырма задани панă. Тоççă унта сире çекретпа çакăн çинчен каласа пама пултарат; тепĕр прорыв вăхăтĕнче, Тоççă çук чухне, начађник хăй сăва çырма ларса пăхнă.

Политпай начађникĕсем Шолохăвпа Панферăва йепле йуратни çинчен, йепле вĕсем хирти хĕрÿ ĕç вăхăтĕнчех çак писатĕлсен кĕнекине вуласа сÿтсе-йавма вăхăт тупни çинчен манмала мар. Политпай çыннисенчен пурнăçа тăнланма та, литературăна йуратма та вĕренмеле.

* * *

Йулашкинчен çамрăк писатĕлсен ÿсĕмне чарса таракан ике тĕп чăрмав çинчен пĕр-икĕ сăмах.

Пĕр йенчен епĕр сахал вĕренетпĕр. Йепле те пулин—йе пĕр калав, йе сăвă çыратпăр та, хамăра хамăр клаççиксен вырăнне хуратпăр. Ку пĕр чăрмав, ăна хирĕç пирĕн татăклăнах кĕрешмеле.

Анчах тепĕр чăрмавĕ ак мĕнре: епĕр хăшпĕр чух тулли мар кăкăрпа сывлатпăр. Темăсене епĕр ытла хăравçăла шыратпăр. Вĕсене епĕр çĕнĕ форма, материалçа автăртан килекен форма тăхăнтарнă чух хамăра хамăр шанмастпăр. Ку пирĕн провинциаллăхăн чи кăтартулăрах форми. Ку çитменлĕхе хирĕç те кĕрешмеле, пултарулăхра харсăр пулмала.

Пирĕн çĕрпывăн болъшевикĕсем харсăр пулман пулсан, епĕр историле çитĕнӳсене тăвайматтăмăр.

Хамăрăн çурхи шыв пек тулса кайнă пултарулăхра пирĕн вырăнти литературăна вырăнти економикăла виçепе танлаштарас тесен, пирĕн, йулташсем, харсăр пулас пулат. Пирĕн, болъшевиксем йепле харсăр пулма пултараççĕ, çавăн пекех харсăр пулас пулат. Йепле пире харсăрлăхăн аслă маçтăрĕ, етемлĕхĕн савăнăçĕпе мухтавлăхĕ, Сталин йулташ çине-тăрса, тĕплĕн, харсăр ĕçлеме вĕрентет, çавăн пекех харсăр пулар.

*В. ХУДАР (ДОЛГОВ).*

# ВУТРА.

„Ех, çырăва лайăх пĕлменни пĕтерет! Пулса иртнĕ кунсем çинчен пирĕн хыççăн ӳсекен хунавсем ваљљи çырса хăварасчĕ“ —тет В. И. Краснов (Асли) çырнă „Вутра“ повеçĕн геройĕ Кĕркуç[1].

Çак сăмахсем пире пайтах шухăшлаттараççĕ. Вĕсем çинчен шухăшлави те кирлĕ. Иртнĕ кунсем çинчен çырни те чăнахах та кирлех. Мĕншĕнни халљхи вăхăтра пулса пыракан класла кĕрешĕве аса илсенех курăнат.

Кĕркуçăнни пек сăмахсене пурнăçра пĕр çын анчах каламан. Вĕсене нумай-нумай çынсем каланă. Епĕр вĕсене йе илтмен, йе илтнĕ те, маннă. „Вутра“ автăрĕ вĕсене кĕрешӳ хирĕнче илтнĕ те, нумай вăхăтлăха çырса хунă. Епĕр вĕсене вулатпăр, калакансем те хăшĕ-пĕрисем вулаççĕ

Çакăн пек сăмахсене калакансем пурнăçра чăнахах та пулнă, пур та. „Вутра“ повеçри Кĕркуç та шухăшласа кăларнă герой мар. Кĕркуç — чĕрĕ, пурнăçра пулнă çынах, тен, вăл халĕ герой пек те туйăнмаст пулĕ, анчах вăл граждан вăрçи вăхăтĕнче пирĕн мĕлйунăн шутланакан геройсенчен пĕри пулнă. Вăл граждан вăрçинче ĕçхалăхĕн ытти чĕрĕ геройĕсемпе пĕрле шурă çара хирĕç пролетари револљуци ирĕкĕшĕн хастар çапăçнă.

Пирĕн аттесем, аслă тетесем, аслă йулташсем револљуцишĕн кĕрешнине манмала мар; вĕсен кĕрешĕвĕ пирĕншĕн пысăк интереслă йапала кăна пулмаст, вăл „çĕнĕ хунавсене“, çĕнĕ ăрусене револљуциле воспитани паракан класла кĕрешӳ, халљхи пурнăçа ăнланма пулăшакан револљуцилĕ истори. Халљхи истори — социалисăм строительстви, уншăн кĕрешни. Совет влаçĕпе парти политики иртнĕ çулсенче пулнă кĕрешӳсемпе тачă çыхăнса тăрат. Иртнĕ çулсенче пулнă клас кĕрешӳне лайăх ăнлансан, халљхине те лайăх ăнланма пулат; иртнине халљхине лайăх ăнлансан, малашнехине те ăнланса илме пулат, — çакна пирĕн асра тытмала.

В. И. Краснов „Вутра“ повеçе çырнипе пысăк ĕç тунă, вăл Кĕркуç пек паттăрсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ.

„Вутра“ произведени август уйăхĕн пуçламешнеле (1918 ç.) чехсем Самар, Улљйанăвск, Хусан хулисене илнĕ вăхăта, Хĕрлĕ çар чехсемпе Пăва, Тĕрлемес, Севе таврашĕнче çапăçнине кăтартса парат. Çак кĕрешӳве чăваш ĕççыннисем те хастаррăн хутшăннă.

---

[1] В. И. Краснов (Асли)—„Вутра“. 2-мĕш хут тухнă. Шупашкар. 1932 ç. Хакĕ 20 пус. Халĕ „Вутра“ 3-мĕш изданийĕ пичетленсе тухрĕ.

„Вутра“ повĕçе вуланă чух Д. Фурманăв çырнă „Чапайĕв“ повĕç аса килет. Мĕншĕн тесен, вĕсем иккĕшĕ те граждан вăрçине кăтартса параççĕ. Вĕсен тематики пĕрре, çырма та вĕсене пĕр майлăрахах çырнă темеле.

„Вутран“ хăшпĕр вырăнĕсем мемуар пек те туйăнаççĕ. Анчах вĕсем повĕçе нихăш енчен те пăсмаççĕ.

„Вутра“ повĕçре уйрăм геройсем пур (Кĕркуç, Попов, Михайлăв, Морозăв, Керим, Сантăр, Ваççук т. ыт те), çав вăхăтрах ĕçхалăх масси тĕп вырăн йышăнса тăрат. Çак революцилĕ массăра автăр хăй те пулнă. Автăр та алла винтовкă тытса шурă генералсене, офицерсене, шурă çар салтакĕсене хирĕç хастар кĕрешнĕ. Хăшпĕр вырăнсенче автăр хăйĕн çинчен те, хăйĕн шухăшĕсем çинчен те çырат. Анчах вăл хĕçпăшалланнă, революцилĕ вăйхалпа çĕкленнĕ ĕçхалăх массисене манмаст.

„Вутра“ повĕçри ĕçхалăх массисем патша саманине таваărасшăн тăракан вăйсемпе кĕрешеççĕ. Ĕçхалăхне, Хĕрлĕ çара хирĕç пыракансем: çĕрулпучĕ, буржуй, мешчен, пуп, офицер, исправник, жандарм т. ыт. те, — пĕр сăмахпа каласан, пур контрреволюцилĕ йăрăх-йарăх; вĕсен пусмăрне аркатса çĕнĕ пурнăç тăвасшăн кĕрешекенсем: рабочисем, чухăн хресченсем, батраксем, вăтам хресченсем те вĕсемпе пĕрлех, урăхла каласан, патша саманин йунлă пусмăрĕ айĕнче асапланнă массăсем реакцилĕ вăйсене хирĕç пыраççĕ. Çак массăсем хушшинче тĕрлĕ нацирен тухнă çынсем пур. Унта: тутар, чăваш, удмурт, мари, китайĕц, вырăс, латыш т. ыт. те пур. Вĕсем тĕрлĕ чĕлхепе калаçаççĕ, тĕрлĕ чĕлхепе йурлаççĕ; сăмахран: Михайлăв чăвашла йурланă хыççăн, ана: „Йакши! Шанго! Хорош! Аван!“ тенĕ сасăсем тав тăваççĕ. (101 стр.).

Михайлăв вир акни çинчен йурлат. Унтан тутар Хассан „хăйĕн кĕтÿç йуррине“ йурлат. (102 стр.). Латышпа китайĕц та хăйсен йуррисене йурласа параççĕ.

Вак халăхсем (хресчен хушшинчен, чухăнпа вăтам сийсенчен тухнă геройсем) хăйсен йуррисене уйрăмăн йурласа панă хыççăн, пурте пĕрле революци йуррисене йурлама тытăнаççĕ.

Автăр кун çинчен: „Хăшпĕр йулташсем: — Интернационал... йурлас! терĕç“, — тет. Çак сăмахсем пурне те çавăрса илеççĕ. Çавăнпа та — „Çав хупăрах пуçтарăнса тăнă ушкăнăн пĕр вĕçĕнчен Интернационал пуçласа та йараççĕ“. (102 стр.). Интернационала 30 — 40 çын пухăнса тĕрлĕ акцентлă сасăсемпе пурте йурлаççĕ, вăл пуриншĕн те çывăх, каппин чĕри патнех пырат. Вир акни, кĕтÿ т. ыт. çинчен йурлани çак массăсенчи хресченле, нациле вăхăтсене кăтартат, вĕсен уйрăмлăхĕсем çинчен калат пулсан, пĕтĕм тĕнчери пролетарисен интернационалла йуррине пурте пĕрле хавассăн йурлани вĕсен пĕр интерес, пĕр тĕллев пуррине кăтартат. Вĕсем пурте çак йурăпа: „виличчен çапăçма хатĕр!“ теççĕ. Пĕри Интерационал çинчен: „Ех, йурри, пĕтĕм ăшчике çĕклет вĕт!“ — тесе хурат. Пурте интересленеççĕ. Çавăнпа та, командиртан çак йурра кам çырнине ыйтаççĕ. Командир ыйтнине хирĕç çапла калат: „Мĕншĕн-ха ку йурă рабочисемпе чухăн хресченсен чĕрисене хĕвел пек çутатат? Мĕншĕн

пирĕн ăна йурланă чух чĕре çĕкленет? Вăл ĕçхалăх чĕринчен çунса шăранса тухнă йурă. Ăна пĕр çын çеç çырнă пулсан та, вăл ĕçхалăхĕн ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне, шанчăкне, унăн кĕрешӳне тĕплĕн кăтартса парат. Револҗуци тăвакан рабочи клас пулмасан,— çак йурă та, ăна çыракан та пулас çук". (103 стр.).

Çапла, кĕрешӳ хыççăн канса ларакан паттăрсем вир çинчен калакан йурăран пуçласа Интернационална пĕтереççĕ.

В. И. Краснов кунта çынсен пуçĕнчи процеса кăтартнă. Вăл çынсен психикине идеологийĕ классен кĕрешĕвĕнче мĕнле улшăннине кăтартакан вăхăта илнĕ. „Вутра" геройĕсем нумайĕшĕ чăваш хресченĕсем хушшинчен тухнă, анчах вĕсем рабочи клас йертсе пынипе тĕрĕс çул çинче пыраççĕ. Хăйсем те хăшесем шахтăсенче рабочи пулса ĕçленĕ (сăмахран: Кĕркуç, Михайлăв, Нефимăв, Попов, Сантăр, автăр хăй те т. ыт. те).

„Вутра" повеçре коммуниссем те пур. Вĕсем коммуниссен парти ретне револҗуци еçне малти вырăна хурса кĕнĕ. Вĕсем партине кĕрсенех хăйсен ирĕкĕпе револҗуци тăшманĕсене хирĕç çапăçма кайнă. „Вутра" повĕçри геройсем пĕр-пĕрне ăнланаççĕ. Мĕншĕн тесен, вĕсем ĕç принципĕпе, унăн материаллăхĕпе, класлăхпа çыхăннă, вĕсен шухăшĕ пĕрре — вăл пусмăрлăх саманине тавăрса ĕçхалăх йунне йухтарма тăрăшакансене тĕппинех петересси.

Çак массăсем граждан вăрçи вăхăтĕнче сиввине те, выççине те тӳснĕ. Вĕсем çарамас та, çаррăн та çӳренĕ. Вĕсем ывăнна та. Анчах пĕрре ăнланса илнĕ шухăша, револҗуцилĕ идеала манман (шухăш массă хушшине сарăлсан, вăй пулса тăрат, тенĕ Карл Маркс та).

Автăр çак массăсем çинчен акă йепле çырат:

> „Пур йулташсем те халтан кайнă. Урасем утас тесен те утмаççĕ. Хыçалтан пулăшу çук. Калла чакас-тăвас шухăш, санах та, пуçра çук. Чакса ăçта кайас тетĕн? Ниçта та кайма çук, вилсен те çакăнта, — хисеплĕ вилĕмпе вилес шухăш чĕрене ăпплантарат". (91 стр.).
>
> „Тумтирсем пурин те çӳхе... Йулташсем шăнас мар тесе, пиллĕкĕн-улттăн пĕр çере пуçтарăнса, тĕрткеленмеле выљаса ăшăнаççĕ... Сивĕ. Кунĕпе çăмăр çинче пулнă çипиттисем типмен. Чăтас пулат". (97 стр.).
>
> „Йулташсем ывăнса минкеленнĕ пулсан та, тăшмана çĕнтернĕ майпа хытă хĕпĕртеççĕ..." (98 стр.).

Вĕсен ашшĕсем те:

> „Мĕнле пулсан та ĕçхалăх ирĕкне çухатас марччĕ... Вăл пĕтсен вара, ачам, сан киле тавранасси те петрĕ..." — теççĕ. (64 стр.).

Сирĕн пулнă вĕсем. Вĕсем нимрен те хăраман, хăйсем мĕншĕн кĕрешнине аєра тытса калапа: „епĕр мĕншĕн кĕрешнине пирĕн чĕресем лайăх пелеççĕ. Тĕреєлĕх пирен йенче! Çавăнпа та епĕр çер кисренсе, тусем тинес варрине кĕрсе ӳкес пулсан та хăраманар; тинес шыве çĕклене-çĕклене шавласа хумханнипе тусем чĕтресе тăрсан та епĕр хăраса чĕтресе ӳкес çук". (110 стр.).

Хăписем халĕ пĕчĕк йăвăрлăхсем пулсанах хăраса ӳкеççĕ. Вĕсем кăмака хыçĕнче таракансем кăшăлтатсанах таçта витĕр хăраса тараççĕ. Вĕсем хăйсен вакбуржуалă çемçелĕхĕпе строительствăна та, кĕрешĕве те, вĕренессине те манса кайаççĕ. Ун пек оппортуниссем хырăм пакăртатнине итлесе вакбуржуалă, мешченле пуçсенчен тĕрлĕрен теорисем туртса кăлараççĕ. Анчах рабочи класан партийĕ çирĕп. Вăл хăйĕн тĕп çулйĕрне çирĕп тытса пырса оппортуниссене сахал мар çапса салатрĕ. Малашне те вăл вĕсене хĕрхенсе тăмĕ.

Граждан вăрçи вăхăтĕнчи паттăр йулташсенчен пирĕн тӳсĕмлĕ кĕрешме вĕренмеле. Пирĕн пĕтĕм революцилĕ кĕрешĕвĕн пуйан опăтне массă хушшине сарса, пулас ăрусене революцилĕ воспитани памала.

Хĕрле çар паттăрĕсем ĕçхалăхне çывăх тăнă, Хĕрлĕ çарăн социалă тымарĕсем пĕтĕмпех ĕçхалăхĕнче. Çавăнпа та ĕçхалăх Хĕрлĕ çара граждан вăрçи вăхăтĕнче пулăшнă. Ку „Вутра“ повĕç страницисенчен те аван курăнат. Йалсенчи чухăнсемпе вăтамсем (вĕсен сийĕ йалсенче пĕчĕк мар) хĕрлĕ салтаксене хăнасене пăхнă пек пăхаççĕ. Автăр пĕр йала çитни çинчен çырат:

> „Пайанхи кун хĕрлĕ паттăрсем хресченсем патĕнче хăнара. Пур Совет майлă чухăнпа вăтам хресченсем те малтанах сăмах пĕтерне пек туйăнат. Умра пĕр ушкăн йулташсемпе утса пыратпăр.
>
> — Чачча, а чачча!— тесе кăшкăрат пĕр начар тумланнă вырас ачи.
>
> Пур йулташсем те пĕчĕк ачан çинçе сассине илтсен, тăпах чарăнса, ун йеппе çаврăнаççĕ. Михайлăв, ача-пăчасене йуратаканскер, ача умне кукленсе ларса:
>
> — Мĕн йатлă есĕ, ачам?— тесе пуçĕнчен сават. Ача вăтанат.
>
> — Папăпа мамă сĕт пур, терĕç, сĕт ĕçме чĕнме каларĕç,— терĕ те килне чупса кĕчĕ.
>
> Унччен те пулмарĕ, пĕчĕкçĕ, тăпăл-тăпăл пӳртĕн урамри ик чӳречинчен пĕри уçăлат.
>
> — Йулташсем, кĕрĕр-ха, кĕрĕр, сĕт хатĕрлесе хунăччĕ,— тет хуçи...“ (104 стр.).

Кил хуçи хĕрлĕ салтаксем хăналаннă чух „станцăна шуррисем илеççĕ пулĕ тесе çавтери хăрани“ çинчен, тата йалти çынсем хĕрлĕ салтаксем вађђи окоп алтса хатĕрлени çинчен каласа парат.

Ĕçхресченĕсем Хĕрлĕ çаршăн, Советшăн тăнă. Вĕсем хăйсен ывăлĕсене Хĕрлĕ çара панă, хăйсем те шуррисене хирĕç çапăçнă. В. И. Краснов „Вутра“ повĕçре çак вăхăта та кăтартнă. Вăл кăтартнă факт пите тĕлĕнмеле. Ăна вăл акă йепле кăтартат:

> „Пысăк пĕвлĕ шур сухаллă старик, урине пуртенкепе чăркаса çăпата сырнă, пиçихисĕр, кăвак кĕпи чĕркуççи патне чут çитеймест,— кăвакарнă вăрăм çӳçĕсене вĕçтерсе вăрăм шертепе лаша çинче ларакан çынсене пере-пере антарат.

— Кампа çапăçат ку, пирĕнпе çапăçмаст-ши? Пирĕннисене çапат пулсан, мушкă çине лартас, — тесе пăхаççĕ пахчари йулташсем.

Вĕсем йăнăшрĕç.

— Вăл пирĕн! Шуррисене çапат вăл, — терĕ пĕри". (92 стр.).

Çак старик 60-70 çулта пулнă. Вăл шурă офицерсемпе кĕрешнĕ. Хĕрлĕ çар йала пырса кĕрсен, çак старик хăйĕн ирĕкĕпех Хĕрлĕ çара çыранса шуррисене хирĕç вăрçма кайнă.

Ку — ĕçхресченсем Хĕрлĕ çаршăн тăнине уççăн кăтартса паракан факт. Хĕрлĕ çаран социалă тымарĕсем ĕçхалăх массипинче тарăн пулнă. Çавăнпа та, вăл 1918—1921-мĕш çулсенче тĕрлĕ контрреволюцилĕ вăйсене çапса салатрĕ.

Граждан вăрçи вăхăтĕнчи кунсем вутлă, йунлă пулнă. Еçхалахĕн йунĕ сахал мар йухнă, сахал мар йалсем, хуласем çунна, уйсем таптаннă, çулсем, кĕперсем арканнă. Нумай-нумай йулташсем хăйсен пуçĕсене çухатнă, ачисене тăлăха хăварнă. Мĕн чухлĕ халăх пĕтнĕ, мĕн чухлĕ йатсăр геройсем хăйсен пуçĕсене вăрçă хирĕсенче çухатнă? — епĕр пурне те пĕлместпĕр. Вĕсене пирĕн пĕлмеле, вĕсен паттăр çапăçăвĕсене пирĕн нихçан та манмала мар. „Вутра" повĕç пурне те кăтартса парат темĕпĕр, анчах унăн страницисем паха. Вĕсем чăваш республикинче, унăн территорийĕ çинче пулнă çапăçусем çинчен каласа параççĕ; вĕсем тата шурă çар йенче, тата Хĕрлĕ çар йенче мĕнле класла вăйсем пулнине уççăн кăтартса параççĕ, — çавăнпа та ĕнтĕ „Вутра" повĕç чăвашсен совет литературинче паха кĕнекесенчен пĕри пулса тăрат.

Анчах „Вутра" повĕçре çитменлĕхсем çук темеле мар. Унта шупкарах, шĕвĕрех вырăнсем палăраççĕ. Повĕçĕн вĕçĕ начартарах. Автăр кĕнеке вĕçĕнче граждан вăрçи çинчен сахалтарах çырат. Вăл кунта килти хыпарсем çинче ытларах чарăнса тăрат. Вĕсене повĕçĕн тĕп шăнăрĕпе çыхса пынă пулсан та, йулашки главасем шĕвĕрех тухнă. Пирĕн шутпа, классем фронтра аяла пăшал тытса çапăçни, граждан вăрçипе арканнă йалсем çинчен çырнă хыççăн, йалта советсем мĕнле тĕрекленсе, контрреволюци йулашкисемпе мĕнле кĕрешни çинчен çырмала пулнă пек туйăнат. Шурă гвардейцăсем, чехсем йышăннă çĕрсенче Совет влаçне кулаксем аркатнă. Çак вырăнсенчен контрреволюцилĕ вăйсене Хĕрлĕ çар хăваласа кăларсан, вĕсене çапса салатсан, кунта советсене çĕнĕрен организацилемеле пулнă. Çак вăхăта „Вутра" повĕçре кăтартмала пулнă.

Çапах та, уйрăм çитменлĕхсем пур пулсан та, „Вутра" хăйĕн пахалăхне çухатмаст. Вăл кирлĕ кĕнеке. Унти кĕрешĕве автăр хăйĕн пуçĕнчен шутласа кăларман. Вĕсенчен, нумайĕшĕ пурнăçра чăнахах та пулнă. Классем пĕр-пĕрне хирĕç хĕçпе, пăшалпа, тупăпа тăни — çын шутланипе пулнă йапала мар. Классем, партисем пĕр-пĕрне хирĕç пĕтĕм кĕлеткипе, пĕтĕм сăн-пуçĕпе тухса йунпа вут тăкса çапаçни те — пĕр-пĕр çын, пĕр-пĕр писатĕл шутласа кăларнă ĕç мар. Вĕсем çине маркçисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕ

йенчен пырса пăхсан, вĕсем мĕнле, мĕнле тымарсемпе çыхăнса тăни лайăхах курăнат.

Кашни клăсăн хăйне тивĕçлĕ интерес пур. Çак интерессем ĕнтĕ классен кĕрешĕвĕнчи сăлтавсем пулса тăраççĕ.

Классен кĕрешĕвĕнче пĕр-пĕрне шеллесси çук. Граждан вăрçинче те ĕç çавăн пекех тăнă, унта классем: „Йе вилĕм, йе пурнăç“ тесе кĕрешнĕ. Урăхла пулма та пултарайман. Мĕншĕн тесен, 1918—1921-мĕш çулсенче Раççейăн тĕрлĕ вырăнĕсенче пулнă граждан вăрçи вăл 1917-мĕш çулта пуçланнă револӡуцийех.

Автăр граждан вăрçи çинчен çырса кирлĕ ĕç тунă. „Пулса иртнĕ кунсем çинчен... ӳсекен хунавсем валӡӡи“ çырнă „Вутра“ повĕç класла кĕрешӳ çинчен уççăн калакан кĕнеке. Çавăнпа та вăл илемлĕ литературăри паха кĕнекесенчен пĕри пулса тăрат. Ăна колхозсенчи литература вечĕрĕсенче сӳтсе-йавма сĕнме те тивĕçлĕ.

---

*М. Й.*

# МĂРАЉКАН ДРАМАТУРГИЛĔ УТĂМĔСЕМ.

Мăраљка драматурги азбукине вĕренсе иртнĕ ĕнтĕ. Вăл сцена ĕçне, унăн спецификине ытти пирĕн çамрăк драматургсенчен нумайрах пĕлет, чипертерех чухлать. Çапах та Мăраљкан та малала нумай вĕренмеле, мĕншĕн тесен вăл халиччен çырнă хăшпĕр пьесисем çурма-фабрикат кăна-ха. Акă илер „Елнет" йатлă драмăна. Ăна „Сунталра" (1934-мĕш ç., 1-мĕш №) Вукăлăв йулташ мухтакаласа та критиклерĕ. Анчах çав критика тĕрĕс мар, вăл автăра та, вулакансене те йăнăштарать.

Елнет шывĕ çинче 1905-мĕш çулта вăрман ĕçлекенсем хушшинче, вăрман савăчĕ таврашĕнче пăлхав пулнă. Тема питĕ паха, питĕ интереслĕ. Автăрăн тĕп геройĕсем—бољшевик Морĕвпе меншевик Чекалкин—пĕри ĕçхалăхне револјуци йенне туртать, савăтса пырать; тепри револјуцийе чăрмавлать. Çакна пула драмă ытла та интереслĕ пулмала. Анчах çапах та пйесă начар, йурăхсăр теме те кирлĕ. Автăрăн тĕп çитменлĕхĕ—1905-мĕш çулхи саманана, ĕçсене, револјуци историне, калас пулать, парти историне те чăнтан витĕр пĕлменни. Çакна пула драмăн ăшчикĕ, образсем те йăнăшлă сăрланнă. Илер акă Чекалкина. Кам вăл? Мĕн тăвать вăл? Бољшевиксем, Мускавра хĕçпăшал алла илсе восстани тунă вăхăтра, прокламацисем салатаççĕ, капиталиссене хирĕç çапăçма чĕнеççĕ. Чекалкин çавăн пек прокламацисене ĕçлекенсем хушшинче курсан, улталаса илет те, кăсйине чикет, хуçасене каткартать, вĕсене бољшевиксем çинчен елеклет, доноссем тăвать, бољшевиксене арĕслĕр, тесе йăлăнать. Ĕçлекенсем шалу ӳкернине хирĕç кĕрешеççĕ, меншевик тени йалан хуçасем майлă кăна ĕçе пăтратать, йалан тĕттĕм халăха улталама, ултавлă договăр тума тăрăшать. Вăл пупсене хирĕç, тĕне хирĕç калама та хушмасть. Ку сахал-ха. Чекалкин уретниксемпе йавăçса çӳрет, каратĕлнăй отрйадра пуçлăх йевĕрлех пулать, рабочисене пăшалпа пертеттерет, „патронсене ан шеллĕр", тет, хăй те перет, хăй майлăрах аташнă çыннах нерсе вĕлерет. Чекалкин 1905 çулхи тишлă меншевик пулса тухайман. Меншевиксем пролетари револјуцишĕн мĕнпе чи сийенлĕ пулнине автăр кăтартайман. Чекалкин меншевиксен ăслайĕпе ĕçленĕ тĕслĕхсем произведенире кăштах хăшпĕр тĕлте сисĕнеççĕ пулин те (ĕçлекенсене ĕç укçи пирки хуçасемпе калаçса татăлма сĕнни т. ыт.), автăр ăна ытларах охранкă агĕнчĕ пек туса сăрланă. Шаларах кĕрсе пăхсассăн—Чекалкин тишлă провокатăр, вăл пачах етем сăн-питне çухатнă тип, çурма уголовнăй çын, черносотенца, „вообче" сăнланнă тăшман. Ăна тӳрех çапла каламала пулнă. Çак обрăз тишлă сăн мар иккенне халĕ пионерсем те чухламала ĕнтĕ. Ку, паллах, автăр хăй çыракан матерпала тĕпчесе çитерейменнине, çавăнпа вăл етемсене, пурнăçа кукăр тĕкĕр умне тăратса кăтартнине палăртать. Рабочисем

акă савăтран Хусана делегаци суйласа йараççĕ те кĕпĕрнатăр тепĕр куннех сутсăр-мĕнсĕр пур делегатсене те çактарса вĕлерет. Чăваш йалĕнче куланай пуçтараççĕ, пĕр çын куланай тӳлесе татаймаст, ăна тӳрех хурал пӳртне илсе кайса хĕнесе вĕлереççĕ. Драмăра етемсем йалан телефонпа шăнкăртаттараççĕ— телефон çыхăнăвĕ уйесре çукпа пĕрехчĕ ун чухне. Тăварларах паман-ши автăр ку вырăнсене? Уретнике хресченсем „ваше благороди“ тесе чĕнеççĕ, уретник хăй те савăт хуçине çаплах чĕнет,—халап ку. Çавăн пекех кукăр куçкĕски урлă автăр ытти типсене те сăрлат. Çапла тĕп сăнсем чалăш, акăш-макăш питкуçлă пулсан, ытти кăмăллă обрăзсем те ирĕксĕрех чăнтан тĕрĕс пулаймаççĕ. Боҏшевик Морĕв те иккĕленчĕклĕ шухăшсенчен пире хăтараймаст—те вăл чăнах та боҏшевик, те, тен, анархист йе ессер макçималис йĕвĕрлĕ револҏуционер.

Çапла етемсем ытлашши маскăлă йе иккĕлентерекен сăнлипе автăра пĕртте шанас килмест. Пйесăна вуласа тухсан автăр иртĕнсе шӳтлесе çыратˇ пек туйăнат. Çакна тата автăр йалан комеди жанрĕпе çырма тăрăшни пулăшат. Выраненĕпе драмă тӳрех йе оперетă йе сатирă тавраш пек. Паллă, трагедире те, драмăра та комедилĕ моментсем пулма пултараççĕ, анчах çав йапаласем пĕтĕм вăрăм актсем тăршшĕпе пырсан, вĕсем тата етем йунĕ шыв пек йухнă хутран пулсан (драмăра вунă çынна йахăн вилет)... килĕшӳлĕ мар; вăл макăрнине кулнипе хутăштарнийех пулса тăрат.

Мĕншĕн автăр çапла пăтранчăклă жанрпа çырнă? Мĕншĕн тесен вăл малтанах истори тĕлĕшĕпе аташса кайнă, авантараххăн йал пурнăçне, савăт пурнăçне пелмен, чăнтан тĕрĕс обрăзсем йышăнайман, çавăнпа социалисăмла реалисăм метăчĕ патне те çывхарайман; пурнăçа, çынсене чăнтан кăтартайман. Хăй политикăлă ыйтусене тĕрĕс тĕплĕ ăнланайман, пире те ăнлантарма пултарайман. Социалисăмлă реалисăмăн ăшчикĕ тĕрĕс çырасси, пурнăçа тӳрĕ сăрласа кăтартасси, нимĕнле фаҏсификаци те туманни. Ку пĕрре. Сăмахран, меншевиксем çапла Чекалкин пек кăна пулнă пулсан, кулаксем, хуçасем Мĕкĕте пек кăна пулнă пулсан, вĕсемпе ĕçхалахĕн, боҏшевиксен партийĕн кĕрешесси çăмăлтарах пулнă пулĕччĕ, çав кĕрешӳре алă-урана тăллантаракан йапала сахалтарах пулнă пулĕччĕ, партийен ĕлĕкхи çулйĕрĕ, ĕçĕсем те нумай урăхла пулнă пулĕччĕç. Ку иккĕ. Çав тăшмансем, суйа маскă, тĕрĕс мар маскă тăхăнтарнипе, вĕсене опĕрăри геройсене сăрланă пек куçа йамăхтаракан сăрсемпе сарланине пула, ыттисем те, вĕсемпе йавăçмалли, кĕрешмели типсем те, йăнăш обстановкăна кĕрсе ӳкеççĕ. Йăнăш социаллă отношенисен картине кĕрсе кайаççĕ те чăн хăйсен тивĕçлĕ обрăзне çухатаççĕ. Ку виççĕ. Кун çинчен тата нумай калама пулат. Анчах епĕр çакна кăна калар. Мăраҏкана тĕрĕссипех çитменлĕх, çак йăнăш чи малтан аташтарнă, путарнă, тирпейсĕр драмă çыртарнă. Мăраҏка çитменнине драмине васкаварлă çырса пăрахнă пулас. Чĕлхе начартарах. Диалăгсем йурăхсăр вăрăм, кĕнекесем çинчен илнĕ цитатăсем пек туйăнаççĕ. Мăраҏкан çак пйесăна тепĕр хут йусаса çырмала, нумайрах та тĕплĕрех йал пурнăçĕпе савăт пурнăçне

кăтартса, парти представителĕсен сăнĕсене тĕрĕсрех сăрласа, тĕрлĕ ытлашши кирлĕ мар йапаласене кăларса ыватса, тонне çерйозлатса, чĕлхене çивчĕлетсе, ыйтусене çителĕклĕ принципиалă çўлĕшрен çутатса çырмала. Çапла çĕнĕрен çырассинчен пăрăнмала мар, йĕрĕнмеле мар: пурсăмăр та çаплах вĕренетпĕр, кашни маçтăрах тенĕ пек малтан брак туса чăнтан лайăх йапала тума хăнăхат (паллă—çавăн пек брак пирĕн производствăн издержки, ăна йепле те пулин пирĕн чакарма тăрăшмала).

Мăраҫка чипер драмă çырма та пултаратех. Вăл драматургийĕн кирлĕлĕхĕсене çивчĕн чухлат, çўжет таврашне тĕвĕлеме, интрига таврашне тума пултарат, драматургилĕ действийе сўтĕлентерме пĕлет, чуна тăртамлантаракан конфликтсем, коллизисем, интереслă çыхăнусем, салтăнусем кăтартма пултарат.

Мăраҫка драматург пулса çитесси „Аван пурăнатпăр" пйесăран та курăнат. (Аҫманахăн 9-мĕш кĕнекинче пичетленĕ). Ку пйесă производствăлă, кампанилĕ, агитацилĕ пйесă. Вăл йал сцени çинче усă курма йурăхлă пйесă. Автăр ăна хăвăртрах кăна çырса парахнă. Çапах та ăна вăл чипер, пелсе çырнă. Вăл пысăк мар, сапаланчăк мар, тирпейлĕ, питем, конкретлă йапала çинчен калат. Вăл чăнтан çўжетлă пулмасан та, иҫҫустративлăрах кăна йапала пулсан та, вулакана та, куракана та çителĕклĕ интереслентерме пултарат. Калас пулат— çапла кампани таврашне сĕнсе çырнă пйесăсем пĕтĕмĕшпех пиçсе çитнисем вырăс чĕлхинче те çукпа пĕрех теме йурат. Паллă, кунта та питĕ чылай-ха схематисăм, кунта та образсем пулса çитеймен, çапах та вĕсем çителĕклĕ вырнаçулă пек, тĕрĕс пек. Кунта кирлĕ-кирлĕмар çукпа пĕрех, автăр економилĕ çырма хăнăхат. Кунта чăнтан чиперех картинсемпе сценăсем пур. Петтă „Пирĕн йалта хĕрсем пур" тесе йурласа йăпанни, халăх хушшинче хаçат сутакан йепле ĕçлени, йалта тырă-пулă праçникĕ туни т. ыт. те. Кунта тăн-пуçа, ăса тĕреклĕн ларса йулакан образсем те пур. (Сăмахран, автăр Уçланкин типне лайăх кăтартма пултарнă). Кунта Мăраҫка çавара выҫатакансен лăпăрка чĕлхипе сахал калаçат, геройсене кашнине хăйне уйрăм чĕлхепе калаçтарма тăрăшкалат, вăрăм диалăгсене пăрахăçлат. Кунта вăл чăнтан кулăшлă, савăнăçлă, пирĕн пурнăçа илемлетекен, кăмăла хăпартакан йапаласем кăтартма пултарат. (Вăл çак пйесăра комедилĕ жанрпа чăнтанах çырма пултарассине каллех лайăх систерет). Мĕне пĕлтереççĕ çавсем? Вĕсем Мăраҫка ўснине, драматурги техникине вĕренсе пынине, кутурă çулĕпе малала утнине витĕр кăтартаççĕ. Вĕсем вăл малашне чăнтан лайăх кирлĕ йапаласем çырма пултарассине шанчăклаççĕ.

Йулашкинчен çакна калас килет. Драмă çырасси вăл—пысăк, йăвăр ĕç. Драмă çырасси—питĕ паха, питĕ ответлă ĕç. Ахалех мар парти те, правителĕствă та çав ĕçе сăнавлă вырăна хураççĕ. Манăн шухăшпа пирĕн çамрăк драматургсем çав ĕç çине халиччен кăшт çийелтенрех пахаççĕ. Çакна пула вĕсем сасартăках пысăк йапаласем çырма тапратаççĕ те, начар драмăсем çыраççĕ, çапла вара хăйсен ĕмĕтпе кĕтмен çĕртен хуçаççĕ, çынсем умĕнче те шанчăклăхне чакараççĕ. М. Горйки

прозаиксене малтан калавсем çырма хăнăхма, унтан тин роман таврашсем çырма хушать, „пĕчĕкçĕ калав çырасси вăл — пистолет тăвасси, роман çырасси — тупă тăвасси“, тет. Çак сăмахсенчен çамрăк драматургсен çакна чухласа илмеле: малтан вĕсен йалти сценăсем, клубсем валли пĕчĕкçĕ картинсем, епизодсем, етӳдсем çырса вĕренмеле, пĕчĕкçĕ сценă хуранĕнче пиçĕнсе тухмала, драматурги теорине, сценă практикине сăнаса тишкерсе çитмеле. Вара тин Мăраӊкан „Елнечĕ“ пек пысăк драмăсем çырма тытăнмала. Унтан, паллă, драмă таврашне пичетличчен массă умĕнче нумайрах вуласа тишкермеле, опăт йĕркипе постановкă туса сăнамала.

*М. ЙЕНИК.*

# УХСАЙ ЙАККĂВĔН СĂВВИСЕМ[1].

Епĕр çĕнтерекен социалисăм ĕмĕрĕнче пурăнатпăр. Хуçалăх економикĕ тĕреклĕ вăй илсе пыни тулли сăнлăхлă поемăсем, питĕ илемлĕ-илемлĕ йурă-сăвăсем çуратат.

Ухсай поет йулашки виçĕ-тăватă çул хушшинче палăра пуçларĕ. Вăл ӳссе çитнĕ, палăрма ĕлкĕрне поет темех çук-ха. Анчах та унăн сăввисем тематика йенчен, поези маçтăрлăхĕ, обрăзсен туллилĕхĕ йенчен чылай çӳлĕ хисепре тăраççĕ. Вăл нефтăпа сывлан Çтерлитамак çинчен çырат-и, колхозри çамрăксем çинчен кĕвĕлет-и, граждăн вăрçине, Чапайĕва аса илет-и—пур çĕрте те поет хăйĕн сăмахне калат.

Ухсай çамрăк та, пултарулăхлă. Ун çинчен уççăнах, çыракансем хушшинчи йалапхи мăнкăмăллăха çĕмĕрсех, çапла калас пулат. Унăн поетла уйрăмлăхĕ, хăйлăхĕ, расналăхĕ пур, хăшпĕр утăмĕсем чылайах хăйулă. Ухсай сăввисем—Хусанкай „Ç ĕ р й ĕ р к е л ĕ в ĕ" пек ăша йулми мар. Унăн хăшпĕр поетсен рифмăшăп шăрçаланă куплечĕсем пек те мар.

„Хаљ анчахчĕ ирхине
Питĕ шăпчĕ,
Шăрататчĕ йуррине
Савнă шăпчăк". (Уйăп М.).

тесе такмакласа кайнипех пиншер çын кăмăлне хумхантармалăх поези тума çук.

Паллах ĕнтĕ, чăваш литературинче Уйăп Мишши поетăн тивĕçлĕхĕ пур. Вăл çырни—пĕтĕмпех рифмăшăн çырнă поези тесе никам та калас çук. Анчах, поетсем хушшинчи хăшпĕр хытнăйăласем çинчен калаçни йурăхлă пулĕ. Нумайĕшĕ—ваттисем те, çамрăккисем те сăвва хитре рифмăшăн кăна, унăн пĕр-пĕр çара лозунглăхĕшĕн кăна хаклама йуратаççĕ. Çавăнпа пуле хăш поетсен сăввисем ăша йулмаççĕ. Вĕсен пахалăхĕ те естрадăшăн кăна. Естрадăшăн çырнă сăвăеене епĕр йурăхсăр, пархатарсăр сăвă тесшĕн мар. Ваçанкка, Аттай, вырăссен Безыменски, Жарăв поетсем çырнă агиткăсем, йатарласа пĕр-пĕр уйрăм савăт, колхоз çинчен çырнă сăвăсем, йурăсем, частушкăсем пире кирлĕ мар вĕсем тесе, каламастпăр.

Анчах поези ахахне пĕр çакăнта кăна курни те питĕ кулăшла пулĕччĕ. Çак сăлтав пиркийех мар-ши, Хусанкайăн пысăк „Магнитту" йатлă поеми те „Магнитту çинчен литератур кăна" пулса тăчĕ. Пирĕн поезире хамăр паттăр саманана тивĕçлĕ характĕр, обрăз пани кирлĕ. Епĕр сăвă ритăмĕ, рифми çинче пайтах ĕçлетпĕр, анчах хамăра хамăр улталанатпăр, поезин чăн ахахне манса хăваратпăр. Белински критик пĕрре, Майкав поет

---

[1] Ухсай Йаккăвĕ, Сăвăсем. Пушкăртиздат, 1934 ç.

сӑввисем ҫинчен ҫырнӑ чухне: „Илемлӗ формӑсемпеле тарӑн, аслӑ кӑмӑла, шухӑша пани кирлӗ, рифмӑпа-и вӑл, йе рифмӑсӑр—пурӗ пӗрех“—тенӗ. Халӗ тата Тихӑнӑв поет писатӗлсен пӗрремӗш сьесӗнче „Ленинград поечӗсем ҫинчен“ тунӑ докладӗнче: пирӗн сӑвӑсем вӗсем—лайӑхрах, интереслӑрах куплетсем, анчах вӑл пире кирлӗ чӑн-чӑн ҫӳлӗ поези мар-ха,—терӗ. Ҫавтери талантлӑ критик вӑл сӑмахсене сӑвӑна рифмӑпа ҫырнишӗн тарӑхса мар, рифмӑпа та, анчах шухӑшсӑр ҫыракан хӑшпӗр ҫӑмӑлттайсемпӗн тарӑхса калана пулӗ.

Ухсай сӑввисенче те ҫак ҫитменлӗхсем пур-ха. Кӗнекере поетӑн малтанхи опӑчӗсем те пур. („Кӗпер“, „Географи улшӑнат“, „Глобус“ тата ыт. те). Кӗнекере поетӑн ӳсӗм ҫулӗ, унӑн йӑнӑшӗсем, тӗрлӗ ҫӗре пыра-пыра перӗннисем, анчах пӗр чарӑнмасӑр поезин паха пусмисем ҫине йерипен хӑпарса пыни курӑнсах тӑрат. Кунта поетӑн чи малтан ҫырнӑ сӑввисене те вулама („Елеватӑр“ тата ыт. те) пулат, ҫак хушӑрах поетла маҫтӑрлӑхе, шухӑш сарӑмӗ йенчен чылайах ҫӳлӗ хисепре тӑракан сӑвӑсем те пур. („Партизан“, „Тӗрек“, „Хӗре“ тата ыт. те). Акӑ, аманнӑ партизан вилес умӗн вунҫичӗ ҫулхи ывӑлӗне уйӑрӑлат:

Йулат саншӑн шӑши пытанми анкарти,
Унӑн та саланса выртат кивӗ карти.
Йулат саншӑн кӑвак тӳпери сар хӗвел,—
Илсе есӗ чикес ҫук ӑна та хӗве.
Йулат уйӑх,—ҫӗрле салатат ҫивӗтне,—
Анмӗ вӑл урамри ват йамра тӑррине.
Сана йулӗ тата йанрав тулӑски вархан.
Урӑх ним те йулаймӗ чухӑн аҫунтан,
Еп вилсен, есӗ кӗр аҫу пулнӑ рете,
Есӗ тыт аҫу тытнӑ пулемете.
Мишавай виҫейми Уралти хирҫенче
Кӑкӑрна йарханах уҫса йар ҫил ҫинче.

Поетӑн кунта емоци, образ вайӗ чылайах. „Сарлака кӑкӑрӗ арман чулӗ йӑтмала“ партизан вилет. Вӑл куҫҫулӗпе хутшӑннӑ, чарусӑр вӑйлӑ паттӑрлӑхӗпе ывӑлне пиллет. Ылттӑнпа, кӗмӗлпе мар, чӑх вӗҫсе тухайми кил-ҫуртпа мар, „пӳлме тулли тыр-пулпа“ та мар, хӑй мӗншӗн кӗрешнӗ—ҫав кӗрешӳ паттӑрлӑхнепарса пиллет.

Ухсай сӑввисем хушшинче пысӑк шухӑшлӑ сӑвӑсемех пур. Поет вырӑнӗ-вырӑнӗпе хӑйӗн шухӑшӗсене сӑвӑ техникин рамкисене кӗртсе ҫитереймест. Хӑшпӗрисем ӑна рифмӑ начар, ритм уксаклат тесе айӑп тӑвӗҫ. Анчах Ухсай поет сӑввисенче сӑвӑ техники поет шухӑшне парӑннӑ, унӑн рифми, кӗтмен хӑпа пек, таҫтан хӑйаматран килсе ӳкмен, вӗсем хӑйсемех шухӑш ҫавӑрнӑшӗнчен тухса тӗвӗленеҫҫӗ. Ҫавӑн пек ҫырасси вӑл—ҫӑмӑл ӗҫех мар. Сӑвӑсене вулатӑн та, вӗҫӗ-хӗррисӗр сарӑ тулӑ хумӗпе витӗннӗ аслӑ хирсем, Шуратӑл чарлапӗсем, Ҫтерлитамакӑн нефтӑ вышкисем, лайӑх кӑмӑллӑ, сарлака та ҫӳлӗ ҫынсем умма тухса тӑраҫҫӗ.

Ҫамрӑк поетӑн ӳсӗм ҫулӗ ҫинче ситменлехсем те пур. (Апланмала мар сӑмахсем, мӑкарах сӑмах ҫаврӑнӑҫӗсем т. ыт.). Вӗсем ҫинчен халӗ, поет ӳсме тытӑннӑ вӑхӑтра, унӑн пултапулӑхне сӑнаса тӗпчекенсем хӑйсен татӑклӑ сӑмахне калани рит те усӑлӑ пулӗччӗ.

---

# ТУПМАЛИ


*Стр.*

Çергей Миронăвич Кирăв . . . . . . . . . . . . 2

Валериан Владимирович Куйбышев . . . . . . . . . 4

**В. Паймен**—Çамрăклăх (калав) . . . . . . . . . . . 5
**М. Трубина**—Праски йăнăшĕ (калав) . . . . . . . . . 18
**Ухсай Йаккăвĕ**—Карлававри касмашкăн кайрăм (сăвă) . . . . . . 38
Çăлтăрсем (сăвă) . . . . . . . . . . 39
**Н. Çтепанов**—Пирĕн те пулĕ-ха ун пекки (калав) . . . . . 41
**Нестĕр Йанкас**—Йулашки йухха (поемă) . . . . . . . . 48
**Илле Тукташ** Вĕçленмен йурату (сăвă) . . . . . . . . 65
**Иван Ивник**—Новеллă (сăвă) . . . . . . . . . . . 67


## ПУРĂНСА ИРТТЕРНИ


**С. Елкер**—Тĕнче вăрçи кунĕсем (мемуар, малали) . . . . . . . 69


## К. В. ИВАНОВ „НАРСПИ" АВТĂРĔ


**Ухсай Йаккăвĕ**—К. В. Иванов çинчен . . . . . . . . . 94
**Д. Данилăв**—„Нарспи" . . . . . . . . . . . . . 101
**Ухсай Йаккăвĕ**— К. В. Ивановăн пичетленмен произведенийĕсем . . 105


## ПĔТĔМ СОЙУЗРИ СОВЕТ ПИСАТĔЛĔСЕН 1-МĔШ СИЕСĔ


**В. Паймен**—I. Савăнăç . . . . . . . . . . . . . . 113
II. Харсăр пулăр! . . . . . . . . . . . . 117


## ТЕОРИПЕ КРИТИКĂ


**В. Худар** (Долгов)—Вутра . . . . . . . . . . . . . 124
**М. Й.**—Мăраңкан драматургилĕ утăмĕсем . . . . . . . . 130
**М. Йеник**—Ухсай Йаккăвĕн сăввисем . . . . . . . . . 134


„Трактăр" альманахăн малтанхи 1—10 кĕнекисене кĕнĕ произведенисем—обложкăн 2—3 страницисем çинче.


ЧУВАШ[illegible] ...АЯ
...НАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чуваш... АССР
Абон. ящ. № ...



Ответлă редактăр **Н. Ваçанкка.**

Редколлеги членĕсем: **И. Кузнецов, А. Золотов Иван Мучи, Уйăп Мишши, Е. Захаров, Митта Ваçлейĕ, П. Оçипов.**

Техн. редактор Н. ЯНГАС

Сдано в набор 27|II—35 г. Подписано к печати 27|V—35 г.

Формат бум. 62×94 ½. Тираж 4000 экз. Печатн. л. 8,6.
Чувашгиз № 3 Индекс X-1 Заказ № 478.
Чувашлит № 1230. В печ. листе 52 000 зн.

Типография № 2 Чувашского Государственного Издательства в гор. Алатыре, Чувашской АССР